ж к 84.09
Т 13
9-093879

ISSN 0206 – 4261

1931 ÇУЛТАНПА ТУХАТЬ

ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ 2012

# ТĂВАН АТĂЛ

ЛИТЕРАТУРĂПА КУЛЬТУРА ТАТА ИСКУССТВО ЖУРНАЛĚ

12+

2012 ·12

Национальная библиотека ЧР
s-093879



## Юрий АЙДАШ

* * *

Паян — классикăлла хĕл кунĕ:
Хĕвел те, йăлтăр юр та пас...
Çĕнелнĕ çут çанталăк чунĕ
Юрлать нихçанхинчен хавас.

Çав юрăра — хула шăв-шавĕ,
Хир шăплăхĕ — çав юрăра.
Çерçи чĕвĕлтетни те савăк,
Вăл туй юрри пек янăрать.

Урам тулли утать те халăх,
Юлташ та пĕлĕш пек кашни;
Темле тĕлĕнмелле тăванлăх:
Пĕр пек — кулни те калаçни.

Анчах тĕлĕнмелли те çук-тăр:
Пĕр ĕç пырать çĕршывĕпе.
Пĕр ĕмĕт ялкăшать çап-çуттăн,
Пуриншĕн — пĕр кăвак тӳпе.

Çак пĕрлĕх — арканми тĕп никĕс.
Ун çирĕплĕхĕ халь пире
Вăй-хал парать утмашкăн тикĕс,
Маттур пулмашкăн пур ĕçре.

Иртни историе ăсанчĕ,
Умра — çĕн çул та çĕн инçет.
Çĕнтерӳсен çĕн асамачĕ
Малта чĕнӳллĕн йăл çиçет.

Ахальтен мар эппин хĕл кунĕ
Паян нихçанхинчен хавас —
Юрлатăр çут çанталăк чунĕ,
Хĕм саптăр йăлтăр юр та пас!..

**1986 ç.**

## Василий КОШКИН-КЕРВЕН

### ÇĔНĔ ÇУЛ ÇУНИ

Çĕнĕ çул çитсессĕн, тупата та туршăн,
Усала сиринччĕ темĕнле асам.
Савăнасчĕ тетĕп ырă шухăш пуршăн,
Çукшăн кулянмашкăн, вăхăт, ан юлсам.

Çĕнĕ çул çитсессĕн, тупата та туршăн,
Ăраскал çул туптăр кăнтăрла-çĕрле.
Савăнасчĕ манăн тус-юлташ маттуршăн,
Юрă-кĕвĕ юхтăр вĕсемпе пĕрле.

Пирĕн пурнăç — пăрнăç, нимĕн те тăваймăн,
Тĕрлĕ тĕрĕсмарлăх ĕмĕте таптать.
Аслă пӳлĕх чĕртнĕ Çĕр çинчи кăвайтăн
Пĕр танах ăшшишĕн хĕм чĕре тапать.

Хăш-пĕри пуян та теприсем — пит чухăн,
Вăрăсем çаратрĕç халăх пурлăхне.
Эх, чукун манерлĕ чăтмалла-çке чунăн,
Çын тенин чухласчĕ унăн хурлăхне.

Тантăш сăвăçсемĕр «ĕненен» ăруччĕ
Çут пуласлăха та коммуниз(ă)ма.
Халĕ «сăвăссем» те «вут çĕлен коррупци»....
Усăсăр янрать-иç курайми сăмах.

Ăмăртаççĕ тенĕн пикенсех питлетчĕç
Тĕрлĕрен тĕне те пĕтĕм тĕшмĕше.
Тен, вĕсем йӳтенĕ (тĕлĕнсех итлетĕп),
Урăхла пуплеççĕ, петĕм пĕлмĕше.

Çĕнĕ çул çитсессĕн, тупата та туршăн,
Усалли килминччĕ хурлăхлăн аса.
Савăнасчĕ тетĕп йăлтăр çăлтăр юршăн:
Хурине хуринччĕ хулăн хупласа.

Тĕлĕнтермĕш пулчĕ: таврара çап-çутă!
Тĕлĕкре-ши тетĕп, тен, ку — пуласси?
Чунăма лăпкарĕç ăшă калаçу та
Çĕнĕ çул парнийĕн — çил çунан сасси...

**2012 ç.**

Ж К 84.09
Т 13








**1931 çултанпа тухать:**

**1931 – «Трактăр»,**

**1935 – «Илемлĕ литература»,**

**1944 – «Тăван Атăл»**

# ТĂВАН АТĂЛ






ЛИТЕРАТУРĂПА КУЛЬТУРА ТАТА ИСКУССТВО ЖУРНАЛĔ

Учредительсем – ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви, "Хресчен сасси" Издательство çурчĕ

1931 çултанпа тухать

**12(650) №**
**раштав**
**20**

**Директор-тĕп редактор**
**С.Л. ПАВЛОВ**

**Попечительсен канашĕ:**
**А.Н.Магарин**
**П.П.Михайлов**
**Р.И.Петров**

http://www.atal-volga.com,
e-mail: atal-volga@mail.ru

**Рукописи не рецензируются и не возвращаются. Во всех случаях брака в экземплярах журнала обращаться в типографию издательства.**

S-093879

Национальная библиотека Чувашской Республики

Отпечатано в ИПК «Чувашия»
428019, г. Чебоксары, пр-т. И.Яковлева, 13.

© Тăван Атăл, 2012

# КĂЛАРĂМРА

## ТĂВАН АТĂЛ


### ПРОЗА

Аркадий КАЗАНОВ. Юр çийĕнчи типĕ чечек. Повесть 3

### ПОЭЗИ

Марина КАРЯГИНА. Тĕнче пăтравĕ – тарасам çинче. Сăвăсем 40

Николай ДВОРОВ. Хавхаланмасăр чунăм чăтаймасть. Сăвăсем 43

### КĔÇĔН ПРОЗА

Лидия САРИНЕ. Пĕр палатăри калаçу 45

### ЭТКЕР

Сергей ЯЛАВИН. Çул çинче. Калав 50

Юрий ЯКОВЛЕВ. С.Ялавинăн «Çул çинче» калавĕ 59

### АСА ИЛӲ

Виталий ЕНĔШ. Калама та çук ырă-çке Таçук 63

### ТЕАТР

Арсений ТАРАСОВ, Ольга ТУРКАЙ. Вĕçсе иртеççĕ кайăксем. Драма 75

### ЧЫС

Ирина КУЗЬМИНА. Ентешĕсен хисепĕ 109

Порфирий АФАНАСЬЕВ. Ачалăх туртать-и кунта. Сăвăсем 111


## СУНТАЛ


### АВТОГРАФ

Раççей Федерацийĕн наукăн тава тивĕçлĕ деятелĕ Виталий Родионов 2

### ПИРĔН ТУССЕМ

Роза ВЛАСОВА. Чăвашшăн тунсăхлакан узбек 13

### ӲНЕР

Анатолий МИТТОВ 17

### ÇĔНĔ КĔНЕКЕ – ÇĔНĔ ТĔНЧЕ 21

### «КАПКĂН» КĔТЕСĔ 22

### «СУНТАЛ» – АЧАСЕНЕ

Анастасия СЕНЬКОВА. Калавсем 24

### ÇУЛ ÇӲРЕВ

Рита АРТИ. Пальма, хăйăр та тĕве – чăваш хĕрĕн асĕнче... 29

### ТĔРĔ ПУЛТĂР ПАРНЕ 40

### 2012 ÇУЛТА ПИЧЕТЛЕННĔ ХАЙЛАВСЕМ 42



**Аркадий КАЗАНОВ**

# Юр ҫийӗнчи типӗ чечек

**Повесть**

Л. Павлов ӳкерчӗкӗ

## ИККĔМĔШ ПАЙĔ

*Мăн çын куççулĕ йывăр,*
*Питре йĕр хăварать.*
*Мăн çын куççулĕ йывăр,*
*Кам йĕнĕ – ăнланать.*
*В. ШЕМЕКЕЕВ*

### I

ПАЛТАНОВ çурт путвалĕн алăкĕ патнелле анакан картлашка çине ларчĕ. Айккинчен ăна никам та курмасть кунта: тротуар леререх, темиçе метрта, ун çумĕнчи лапсăркка тĕм турачĕсем тимĕр карлăк-решетке урлă аялалла усăннă. Вĕсем халĕ юрпа витĕннĕ те арçын пуçĕ çийĕнче хăйне май хӳтлĕх – пĕчĕк "лупас ай" – туса хунă. Тимахви ниçталла та пăхмарĕ, нимĕнпе те кăсăкланмарĕ. Ирхи сивĕ те, çӳлте тротуарпа унталла-кунталла кумакан çынсен калаçăвĕ те пăраймарĕç ăна хăйĕн шухăшĕнчен: Карнашовсен дачинчи "мирлĕ тĕл пулу" унăн ăшне йăлтах çавăрса илнĕ, пăчăртаса лартнă. Кăкăр çине йывăр çăк хунă пек. Ун айĕнче чĕри, авă, мĕнле тапăлтатать...

Çапах та тăмалла пуль: юрлă-пăрлă картлашка çинче ларма аплах мар - самаях шăнта пуçларĕ. Çитменнине, тĕлĕрсе те кайăн: çĕркаç Карнашовсемпе, Мартынпа тата унăн арăмĕпе Ангелинăпа, куçа пĕр чĕптĕм хупмасăр калаçрĕç те... Юмахри Кашкăр пулă тытма тесе хӳрине хĕллехи вакка чикнĕ евĕр çыпăçса та ларăн, тупата. Шăлаварсăр юлăн. Ну, кун пирки пит кулянмах кирлĕ мар пуль: ăпăр-тапăр кăларса тăкакан вырăнсенче халь темĕн те тупма пулать. Çав шутра - тумтир те. Шухăшĕ çапла шӳтлĕнрех çаврăннине туйса арçын ура çине тăчĕ, путвал алăкне уçрĕ.

Ĕлĕк, çак çуртра хăйсен хваттерĕнче пурăннă чухне, Палтановсем путвалта хĕл валли тĕрлĕ çимĕç упранă: çĕр улми, кишĕр, ытти. Тăварланă купăстапа хăяр, кăмпа банкисене те кунтах антарнă. Чăн та, путвалăн пĕр енче, кĕтесре, вĕри шыв пăрăхĕ вырнаçтарнă та – ăшă тăрать. Анчах тепĕр хĕрринче, алăк çумĕнче, самаях сулхăн, апат-çимĕç тытма шăпах меллĕ.

Çакăнта пурăнать халь Тимахви, Тимофей Палтанов, çитмĕлелле çывхаракан старик. Тĕрĕссипе, "старик" тенине пит йышăнасшăнах мар вăл. Хăй чăннипех ватăлса пынине ăнлансан та пĕр-пĕр ушкăнра кун пирки сăмах тапратсан айккăн-майккăн пăхкаласа çăмăлланма та пăхать: "Эсир мĕн?! Кам кунта старик? Пурте вăй питти, çамрăк-иç..."

"Бомж" сăмахпа та çавах. Çынсен путсĕрлĕхне тата хăйĕн ухмахлăхне пула (çапла, çапла, сăрнаккай, тăм писмен эсĕ, Тимахви, куна никамран та пытараймăн!) хваттерсĕр, килти пурлăхсăр тăрса юлнăскер çав "хисеплĕ" ят унăн куçа курăнман клеми-тăмхи пулса тăни пирки иккĕленмест, çав вăхăтрах... килĕш-

---

*Повеçĕн пĕрремĕш пайĕ "Тăван Атăл" журналăн 2009 çулхи 2-мĕш номерĕнче пичетленнĕ. Унта утмăл урлă каçнă Тимофей Палтановăн синкерлĕ шăпи çинчен çырса кăтартнă. Пĕччен пурăнаканскерĕн (арăмĕ вилнĕ, инçете тухса кайнă ачисемпе çыхăну çук) Шупашкар шкулĕнчи ĕçĕнчен уйрăлма тивнĕ. Пасарта суту-илӳ ĕçне пикенсе пăхать – ăнтараймасть.*

*Путсĕр çынсен, ку чухнехи вăрă-хурахсен Ефрей Феофановпа (Чышкă) унăн ушкăнĕн, серепине çаклансан Палтанов пурнăçĕ ӳппĕн-тĕппĕн çаврăнса каять.*

мест унпа. Курса-пӗлсе тӑрсан та ӑнлӑхран пӑрӑнма, тарма тӑрӑшать. Пӗртте йышӑнас килмест ҫав сӑмаха! Ӗнер вара Мартын Карнашов ӑна, дача ҫаратма пынӑскерне, кап! кӑна ярса тытрӗ те, ниҫта кайса кӗрейменнипе персе ячӗ Тимахви: "Бомж эпӗ, бомж!"

Путвала кӗнӗ-кӗмен Палтанов пысӑк сӑран сумкӑран эрех кӗленчи кӑларчӗ. Ку сумкӑна, ӑпӑр-тапӑр пухакан вырӑнта "туяннӑскере", Тимахви тӗрлӗ ҫӗре тухса ҫӳренӗ чухне яланах пӗрле илет. Пысӑк-ҫке, темӗн те чикме пулать. Карнашовсен дачинчен те тӑп тулли килмеллеччӗ те... Йӑлтах пӑрахса хӑварма тиврӗ. Эрехӗ-и? Ӗнер хайхи юнашар ялтан кайса илнӗ сӑмакуна виҫҫӗн ҫӗр каҫиччен ӗҫсе ячӗҫ вӗсем. Паян ирхине вара, "тыткӑнран" хӑтӑлсан, Палтанов чи малтан ҫав паллакан киле чавтарчӗ. Ҫавӑн пек пӑтӑрмахлӑ каҫ хыҫҫӑн ӗҫмесӗр мӗнле чӑтӑн?! Ӑш-чик пӑлханӑвне, чун ыратӑвне эрехсӗр мӗнле пусӑрӑнтарӑн?

Ҫур стакан ытларах ярса ӗҫсен ӑшра мӗн пулса иртнине тӑнланӑн арҫын пӗр хушӑ хускалмасӑр ларчӗ. Ҫук, сахалтарах пулас: кун пек чух кӑкӑра ӑшӑ-ҫемҫе хум ҫаврӑна-ҫаврӑна рехетлентерекенччӗ. Тепре тултарчӗ. Каллех итлерӗ: мӗнле? Ӑхӑ, чун лӑштӑрах кайрӗ. Ҫав вӑхӑтрах... Ах, мӗн чул пулнӑ ӗнтӗ кун пекки! Стена ҫинчи портретран ялтӑр ҫиҫкӗннӗ куҫ хӗлхемӗ вӗри вутлӑн ҫунтарса илчӗ. Неонила! Юратнӑ арӑм...

Кун пек чух Палтанов айккинелле пӑрӑнаканччӗ. Сӑн ӳкерчӗке тепӗр майлӑ ҫавӑра-ҫавӑра лартнӑ: вӑхӑтлӑха та пулин хӑтӑласчӗ Неонила ӳпкевӗнчен! Ун умӗнче тӳрре тухма ниепле те май ҫук-ҫке: йӑлтах ху айӑплӑ, Тимофей Платонович... э-э-э... Тимахви бомж. Анчах ку хутӗнче пӑрӑнмарӗ. Хайхи ҫӑк-чул чӑтма ҫук йывӑррӑн пуссан та куҫне тартмарӗ. Пӑхрӗ те пӑхрӗ портрет ҫине шӑлне ҫыртса, ӳт-пӗвне икӗ аллипе ҫатӑрласа. Сисмерӗ те – куҫӗ шывланчӗ, пит ҫӑмартисем тӑрӑх вӗри тумламсем йӑпӑртатса анчӗҫ. Вӗсене чарма та пикенмесӗр арҫын чӗркуҫленсе ларчӗ, енчен еннелле сулӑна-сулӑна уласа ячӗ...

Ку ӗнтӗ пӗрремӗш хут ҫеҫ мар-ха. Нумай куҫҫуль юхтарнӑ ҫак "керменте" пурӑнма тытӑннӑранпа. Ҫапах та кунашкалах татӑлса йӗнине ас тумасть Палтанов. Тен... Ӑхӑ, пулнӑ, пулнӑ тепре! Темиҫе ҫул каялла, ҫакӑнти чи малтанхи каҫра.

...Хваттерпе сыв пуллашса тухсан Тимахви картлашка енне пӑрӑнчӗ кӑна – хӗрарӑм сасси илтӗнчӗ:

– Халӗ ӑҫта ӗнтӗ, Платончӑ?

Кӳршӗ хӗрарӑмӗ иккен - Клавье. Нумай ҫул, ҫак ҫуртра хваттер илсе тӗпленнӗренпех пӗлеҫҫӗ пӗр-пӗрне. Неонилӑпа уйрӑмах туслӑччӗ. Хай вӑл качча кайман, ӗмӗрӗпех пӗччен ҫи. Заводра ӗҫлесе пенсие тухрӗ. Тимахви пурнӑҫӗ урлӑпирлӗ ҫаврӑнса кайсан ун патне темиҫе хутчен те пычӗ, хӑй калашле, "кӳршӗллеюлташла" асӑрхаттарма. Калаҫӑва кашнинчех шӳте ҫавӑратчӗ Палтанов, "йӗркене кӗме" шантаратчӗ. Анчах пӗррехинче, самаях хӗрӗнкӗскер, ҫитменнине, хӗрарӑм "критикине" хваттерте пурӑнакан Ефрей-Чышкӑ та итленипе аванмарланса, вӑл ҫиллессӗн татса хучӗ:

– Итле-ха, Клавдия Павловна, сӑмсуна кирлӗ-кирлӗ мар ҫӗре чикме хӑҫан пӑрахан эс? Ма пӗрехмай вӗрентме сӗкӗнен мана? Мӗн тумаллине, мӗнле пурӑнмаллине эп хамах пӗлеп. Хамах!

Хĕрарăм шартах сикрĕ. Ахаль те пĕчĕк пÿллĕскер татах хутланчĕ, Палтанов ҫине алчăравлăн пăхрĕ. Нихăҫан та урлă пулман, ĕмĕрĕпех татуллă пурăннă кÿршĕ сăмахĕсем унăн ăшне ҫунтарса илчĕҫ тейĕн. Клавье хирĕҫ чĕнмерĕ, урăх тăхтамасăр, пÿлĕмрен шăппăн тухса кайрĕ.

Ҫакăн хыҫҫăн тек пырса "чăрмантармарĕ" Палтанова. Тухса ҫÿренĕ чухне курсан та часах пăрăнса иртме васкатчĕ. Анчах кÿршипе, унăн лапчăннăҫемĕн лапчăнакан пурнăҫĕпе кăсăкланма пăрахман пулас: ĕнер-и-ха, хваттерĕн ҫĕнĕ хуҫипе Ахвиневпа сăмахланине курнăччĕ Тимахви. Халь те ăнсăртран тухман пуль кăритура, тен, ятарласах кĕтнĕ ăна?

Палтановăн ҫак самантра никампа та тĕл пулас, калаҫас килместчĕ. Пĕр шухăш, чан ҫапнăн, янлатать пуҫра: хăвăртрах шăвăнса анас, путвала кĕрсе пытанас! Ан курччăр хăйĕн хваттерĕнчен тапса кăларнă ватă тăрпалтай мĕн таран мĕскĕнленсе юлнине. Анчах Клавдия Павловнăна, ҫав ырă чуна, сăмах хушмасăр, хуравламасăр епле иртĕн-ха? Ҫитменнине, хытă кÿрентернĕччĕ ăна, халĕ те пулин каҫару ыйтас.

– Ăҫти-мĕнни... – Тимахви куҫне тартрĕ, хăйне тăтăрхарах тытма тăрăшсан та чун асапне пытараймарĕ, – путвала анап, хамăн малашнехи хваттере...

Клавьешĕн ку хыпар ҫĕнĕ мар-ха – Ахвинев пĕлтернĕччĕ. Халь ак Палтанов хăй те ҫирĕплетрĕ: чăнах та ҫапла-мĕн. Шутлама та хăрушă!

– Путвала?! Мĕн калаҫан, Тимахви! – пăлханнипе кăшкăрсах ячĕ хĕрарăм. Сасартăк сĕнчĕ: – Айта ман пата. Вырăн ҫитет.

Арҫын шÿтлеме пăхрĕ:

– Эп ватă-ҫке, Клавье...

– Шăл йĕрет тата! Айта, кĕр.

– Ҫук, ҫук! Тавтапуҫ сана. Каҫар пĕркуннехишĕн – ытла та путсĕрле пулса тухрĕ.

Ҫапла каласа Палтанов картлашкасем урлă сике-сике аялалла вăркăнчĕ. Часрах, часрах! Хайхи чун асапĕ-хурлăхĕ сарăлнăҫемĕн сарăлса, талпăнса пĕтĕм ăш-чикне тултарчĕ – халь-халь ҫурса пăрахать. Унччен "ҫĕнĕ хваттере" ҫитсе ÿкес: "ҫурăлнине" кам та пулин ан куртăрах!

Тепĕр самантран путвал чăнах та "ҫурăлса" кайрĕ – арҫын уласа-кăшкăрса макăрни унăн стенисене те чĕтрентерчĕ тейĕн.

Ҫакна аса илчĕ халь Палтанов.

Хăйĕн кун-ҫулĕ мĕнле тайăлса пыни ҫинчен ("сăмсапа ҫĕре анса тăрăнтăм вĕт, хам валли шăтăк алтса кĕресси ҫеҫ юлнăччĕ!") вăл ҫĕркаҫ дачăра Мартынпа Ангелинăна каласа пачĕ-ха. Анчах ҫак икĕ паллă "чикĕ" – хваттерсĕр тăрса юлнă кунпа ĕнерхи "вĕри ҫатма ҫинчи" курнăҫу – хушшинчи пурнăҫне туллинех уҫса кăтартмарĕ. Кăшт-кашт асăнкаласа илнипех ҫырлахрĕ. Ара, пĕр енчен, унчченхине – мĕншĕн, мĕнле майпа аялалла куснине – ăнлантарса памалли те нумай: сÿтĕлчĕ те сÿтĕлчĕ сăмах ҫăмхи ҫапла сиккеле-сиккеле. Тепĕр енчен, епле аса илĕн ăна – "тĕпĕнчи" ҫынсен йышĕнчи пурнăҫа? Намăс, чăтма ҫук намăс! "Тĕпĕнчене" – Максим Горький пьесине манман-и? Чăнах, кама кирлĕ вĕсем, аслă писатель ҫырса кăтартнăранпа пĕр ĕмĕр иртнĕ хыҫҫăн пурнăҫа тепĕр хут таврăннă "тĕпĕнчисем"? Кама кăсăклантарать вĕсен шăпи? Чăн та, Мартын ыйтма пăхрĕ-ха:

– Ну, халь... мĕнле пурнан?

Ыйтрĕ те – куçне самантрах айккинелле пăрчĕ: "мĕнле пурăнни" куç умĕнчех-çке...

Палтанов та ăнланчĕ ăна. Çапах та хуравламасăр хăвармарĕ – аллисене икĕ еннелле сарса хурлăхлăн каларĕ:

– Ак çакăн пек.

Çĕрĕпе куç хупманскер, çитменнине, эрех сĕрĕмĕпе пусăрăнса йывăрланнăскер Тимахви халь пуçне минтер çине хунă-хуман çывăрса кайрĕ. Çавăнтах, аялтан темскер тĕртсе çĕклентернĕн, вăл шарт сикрĕ, йынăшса ячĕ, унтан куçне уçса алчăравлăн пăхрĕ. Тин çеç тĕлĕкре Карнашов, тахçанхи çывăх юлташĕ, унăн аллисене сăнчăрлатчĕ. Хăй çав тери çиллес: "А-а, лекрĕн-и, вăрă! Эпĕ вăрманта кунĕ-кунĕпе çӳресе кăмпа тататăп, эсĕ ăна, ямăттине, çиекенни апла?! Çук-ук, хăтăлаймастăн текех! Акă сана!" Сăнчăр хыттăн чанклатрĕ, арçын аллине пăчăртаса-хĕстерсе лартрĕ.

Айтуру, татах-и? Тĕлĕкрен уйрăлса çитеймесĕр Палтанов пуçне пăркалантарса илчĕ. Алăк шăнкăравĕ чăнкăлтатать иккен. Ĕхлете-ĕхлете тăрса путвал алăкне çаклатнă хулăн çекĕле вĕçертрĕ.

– Мĕн çак таранчченех çывăратăр капла?

Путвала вăтăр-вăтăр пилĕк çулсенчи арçын кĕрсе тăчĕ. Хĕвел-мĕн. Çырă çӳçĕпе мăйăхĕ, кăшт усăнарах тăракан çăра куç харшисем пĕр-пĕтĕм ӳкерчĕке пĕрлешсе сăн-питне ăшшăн çутатнăран-ши – Тимур Камрова бомжсем хушшинче çапла чĕнеççĕ. Халь çав "хĕвел" тата та çутăрах, сарăрах туйăнать: темĕнле шухăш халь-халь сирпĕнсе тухасла талпăнни унăн "пайăркисене" тата ытларах хĕмлентернĕ пек. Чăнах та, Палтанов хуравласса кĕтмесĕр Камров персе ячĕ:

– Чышкă йăвине тупрăмăр!

II

Палтанов кăртах малалла туртăнчĕ.

– Чышкă? Ăçта? Мĕнле?

– Тăхтăр, веçех пĕлтереп. Пыра йĕпетмелли çук-и сирĕн? Атту...

– Пур, пур! – Путвал хуçи хăна çине кăшт тĕлĕнерех пăхрĕ пулсан та (çамрăк юлташĕ ĕçкĕ таврашĕпе пит иртĕнсех каймасть) хăй пасăр самаях пушатнă кĕленчене Хĕвеле тыттарчĕ.

Тимур çĕлĕкне хывса чӳрече янахĕ çине хучĕ, вара эрехе стакана ярса ĕçрĕ.

– У-ух! – Çăварне уçă сывлăш вĕтерсе кĕртессĕн пичĕ умĕнче алă лаппипе сулла-сулла илчĕ. Вăрăм куç харшийĕсем çамки айĕпе тӳррĕн тăсăлчĕç. – Халĕ ĕнтĕ калаçма та юрать. Ĕнер куртăм ăна. Вăл кунтан пит аякрах та пурăнмасть иккен. Анчах ячĕ пачах урăхла.

– Мĕнле апла? – Тимофей ун çине ăнланмасăр пăхрĕ.

– Сан патăнта пурăннă чухне Феофанов ятлă пулнă-и-ха вăл?

– Феофанов. Ефрей Феофанов.

– Вăт, вăт! Халĕ вара – Мефодий Якушкин. Уйрăмлăх пур-и?

Палтанов чĕнмерĕ. Çавра çил çĕклесе ывтăнтарнă евĕр, унăн пуçĕнче шухăш татăкĕсем урлă-пирлĕ вăркăнма тапратрĕç. Йĕксĕк Ефрей-Чышкă ун патĕнче суя ят-хушаматпа пурăннă! Ятарлă тĕллев тытса ĕнтĕ – усал шухăшпа. Вăрт-

тăн, васкамасăр хатĕрленнĕ ăна пурнăçлама. Юлашкинчен турĕ-турех хăй мĕн шутланине. Чим, Тимур мĕнле пит хăвăрт пĕлме пултарнă-ха ку хыпара? Ытлашши васкаса хамăра палăртас марччĕ, унсăрăн пĕтĕм ĕçе пăсса хума пулать.

– Ан пăшăрханăр, Платонччӑ, – хуравларĕ Камров. – "Разведка" йĕркеллех иртрĕ. Ку хутĕнче куçран вĕçертмерĕм "объекта".

Иртнинче чăнах та ăнтарайманччĕ вăл. Ăнсăртран, кĕтмен çĕртен асăрханипе-ши – пăртак аптраса ӳкнĕ-тĕр çав ун чухне: Феофановпа пĕр троллейбуса ларма ĕлкĕреймен.

– Тĕплĕнрех, тĕплĕнрех каласа пар!

– Паян май килчĕ пĕр троллейбуспа кайма, – сăмахне тăсрĕ хăна. – Вăл варринчи алăкран кĕчĕ, эпĕ – хыçалтинчен. Чарăнура ансан та юлмарăм унран. Чышкă çуртăн хăш подъездне кĕнине те курма ĕлкĕртĕм. Анчах ун хваттерне мĕнле пĕлмелле-ши? Вăт кунта пăртак чееленме тиврĕ.

– Мĕнле "чеелентĕн" вара?

– Мĕн мĕнли... Подъезд умĕнче ларакан çынсемпе калаçма шутларăм. Хăвăр пĕлетĕр, унашкаллисене халь тасца та курма пулать. Ĕççĕр услапсем, ĕçкĕçсем. Бомж йышшисем ĕнтĕ.

Эх, ут вĕçерĕнет – тыттарать, сăмах вĕçерĕнет – тыттармасть çав. Çăвартан тухса кайсан каялла тавăраймăн. Хăй мĕн персе янине сиссе те юлаймарĕ Тимур: бомжсене асăнни Палтанова пӳрнепе тĕллесе кăтартнă пекех пулчĕ.

Çакна Тимофей Платонович хăй те туйса илчĕ, анчах ăна-кăна палăртмарĕ. Пăлханăвне пытарса аллипе сулчĕ:

– Эс айккинелле ан пăрăн-ха, каласа пĕтер.

– Ăхă... Çав çынсем патне пырса лартăм хайхи. Мана "хăйсен йышши" вырăнне хучĕç пулмалла – тӳрех ăнлантăм. Пулăç пулăçа инçетрен курать тенĕ пек.

– Эс каллех...

– Юрĕ, юрĕ. – Тимур ăшра хăйне каллех вăрçса илчĕ: "Мĕн пулнă сана паян – Чышкăна тупнишĕн савăннипе чĕлхӳн чаракне çухатрăн-им?" – Калаçăвне пуçарма йывăрах пулмарĕ. Феофанов хыççăн шанлатса хупăннă тимĕр алăк еннелле пуçпа сĕлтсе хăвăрт такăлтатса кайрăм: "Мĕнле этем пулчĕ ку – вар виттине ернипе туалета вăйкăннă пек чавтарса иртрĕ ман çумран – чутах йăвантарса хăвармарĕ!" – Кунпа çеç çырлахмасăр, татах йĕплентĕм: – "Е савни-ерĕшке патне вĕçтерчĕ-ши?" Ушкăн йăшăл хускалса илчĕ. "Хă, савни патне!" – йĕкĕлтевлĕн ахăрса ячĕ пĕри, самаях çамрăкскер. – Каларăн та çак! Пĕччен пурăнать вăл, Якушкин Мефодий. Савни мĕнне те пĕлмест пуль, ха-ха-ха!" Çавăнтах тепри, шакла пуçлă ватă, çиллессĕн мăкăртатса илчĕ: "Хăйне такам вырăнне хурать вара – пире нихçан та сывлăх сунмасть. Тупăннă... президент!" Çапла, вут тĕртнĕн, сăмах-юмах кĕтмен çĕртен хĕрӳленсе кайрĕ. Эпĕ тек кăсăкланасыйтас темерĕм: хама кирлĕ çыннăн ячĕ-хушамачĕ паллă, ыттине пĕлме йывăрах пулмĕ. Чăнах та, кайран урăх çынсенчен ыйтса пирĕн "клиент" хăш хваттерте пурăннине те пĕлтĕм. Тăваттăмĕш хутра-мĕн.

Сăмахне вĕçлесен Тимур аслă юлташĕ çине пăхрĕ: ну, мĕн калатăр? Анчах лешĕ тӳрех шарламарĕ – сасси шухăш капламĕ витĕр шăтарса тухаймарĕ тейĕн. Чăнах, мĕн çинчен кăна шухăшлаттармасть, мĕне кăна аса илтермест пуль çав

Чышкă! Палтанов вăрăммăн сывласа ячĕ, йывăр çака сирсе пăрахнăн хул пуççийĕсене хускатса илчĕ, вара тин сăмах хушрĕ:

– Апла эппин... Маттур, маттур! Чăннипех пысăк ăнăçу. Тавтапуç сана. – Çавăнтах хăйне пӳлсе Тимофей каллех пăшăрханăçлăн ыйтрĕ: – "Йĕр" хăвармарăн-и?

– Çук, çук, Платонччă! Каларăм-çке, пурте йĕркеллех. Феофанов-Якушкин тек тухса курăнмарĕ. Чăн та, хайхи çĕнĕ "юлташсемпе" эрех ĕçме тиврĕ. Эпĕ пынă чухне шăпах кĕленче пуçланăччĕ вĕсем. Мана та чĕнчĕç – мĕнле хирĕçлĕн? Эпĕ, паллах, парăмра юлмарăм: лавккана чуптартăм...

– Те лайăх темелле ĕнтĕ куна...

– Паллашни пăсмасть пуль терĕм. Тен, кирлĕ пулĕ малашне. Хам хальлĕхе тек кайса курăнмăп унта. Витюкпа Вавила ĕçе кӳлтĕм: çурт подъездне кăтартрăм. Тен, дежурство та йĕркелĕпĕр. Ку ачасене пĕлетĕр – Хмаркинпа Юсанов. Нумай пулăшаççĕ пире.

"Разведка", "дежурство"... - Палтанов ăшра кулса илчĕ: Тимур хăйĕн "лашине" утланнă, чĕвен тăратнă. Ĕлĕкхине, хăй калашле, пурнăçне "шăнăрлантарса" тăнă ĕçе манаймасть-тăр çав. Тĕрĕссипе, манма та шутламасть. Майлă самант килсе тухтăр кăна – ăшри "милиционер" çийĕнчех сасă парать, йăпăр-япăр тӳрленсе тăрать: "Эпĕ хатĕр!" Халĕ шăпах çавнашкал вăхăт уншăн: лайăх çынна инкек кӳнĕ путсĕрсене, сĕмсĕр ултавçăсене шыраса тупмалла, явап тыттармалла. Милицири пек...

Çапла, Тимур Камров чылай çул милицире ĕçленĕ. Унта ăнсăртран лекрĕ темелле. Çамрăк чух право йĕркине сыхлакан органсен ĕç-хĕлне кăтартса паракан кĕнекесем вулама, кинофильмсем курма юратнă пулсан та хăй вĕсен геройĕсен йышне кĕрес шухăш унăн пуçне нихăçан та пырса кĕмен. Анчах çар хĕсметĕнчен таврăнсан ĕçе çийĕнчех вырнаçайманччĕ те юлташĕ сĕннипе Шупашкарăн шалти ĕçсен пайне кайрĕ. Пай пуçлăхĕ нумай каласса тăмарĕ, ĕçе илме килĕшрĕ.

Тытăнчĕ çапла Тимур милици ĕçне. Тытăнчĕ те... юратса пăрахрĕ ăна: шăпах ун валли иккен вăл! Мĕн пĕчĕкрен тӳрĕ кăмăллăн çитĕннĕскер "манăн милици мана хӳтĕлет" каларăша – пĕр аслă поэт сăмахĕсене – чăннипех ăша хыврĕ. Кулленхи ĕçре те ăна çирĕп пурнăçласа пыма – çынсене тĕрлĕ инкекре пулăшма, тĕрĕс мар айăпласран сыхлама тăрăшрĕ. Йĕксĕк-ирсĕре, вăрă-хурах таврашне вара шеллесе тăман.

Ĕçре, паллах, темĕн те пулнă. Темĕнле лару-тăрăва та лекме тивнĕ. Милицири кулленхи ĕç-пуç кĕнеке-кинори пулăмсенчен самаях уйрăлса тăни, кăткăсрах та йывăртарах пулни уççăнрах та уççăнрах курăннă. Çапах та Камров шухăшкăмăлне улăштарман: хăй суйласа илнĕ профессирен уйрăлма, юратнă ĕçрен пăрахса кайма шутламан. Анчах каярахпа милицирен чăнах та уйрăлма тиврĕ унăн. Тĕрĕссипе каласан, кăларса сирпĕтрĕç ăна унтан.

Мĕнле пулса тухрĕ-ха ку? Йышра ырă ят-сум илнĕ милиционер мĕншĕн "ытлашши" пулса тăчĕ? Тимур хăй паян кунччен те ăнланса çитереймест. Ăнланасса ăнланать-ха ĕнтĕ, сăлтавне те пĕлмест мар. Анчах çав "ăнланни-пĕлни" унăн пуçне ниепле те кĕрсе шăнăçаймасть: саккуна хирĕçле нимĕнле ĕç те тумансçке, тĕрĕслĕхшĕн, милици чысĕшĕн тăнă – уншăн айăпламалла-и вара?

Ҫакнашкал шухӑшсем час-часах аптӑратнӑ Камрова. Самани улшӑнчӗ-ха, мӗн тӑвӑн. Анчах унпа пӗрле ҫыннисем те урӑхланаҫҫӗ иккен – акӑ мӗскер уйрӑмах тӗлӗнтерет ӑна. Хӑш-пӗр ӗҫтешне пӑхать те – ӗнер пӗр майлӑ ҫаптаратчӗ те паян, курӑр-ха, палт ҫаврӑнса ӳкнӗ тепӗр еннелле. Пӗрин ҫинчен ҫапла каласа паратчӗҫ. Хӑй ӗҫре тивӗҫнӗ тӗрлӗ Мухтав-хисеп грамотине хваттерте стена ҫине тирпейлӗн ҫакса вырнаҫтарнӑ тет ҫакскер. Килен-каян умӗнче е хӑна-вӗрле пухсан кашнинчех хӑлаҫлана-хӑлаҫлана вӗсемпе мухтаннӑ пулать. Кайран вара, урӑхла вӑхӑт чашкӑрса ҫитсен, хайхи грамота таврашне картишне илсе тухнӑ, ӑпӑр-тапӑр пухакан вырӑнта иртен-ҫӳрен асӑрхатӑр тесе юриех кӑшкӑрашса ҫунтарнӑ...

Хӑйӗнпе тӳрремӗнех ҫыхӑннӑ тӗслӗхсене те аса илет Тимур-Хӗвел. Ӑна, ытлашши "тӗрӗс" ҫынна, милицирен катӗртес шухӑша шӑпах вӗсем, ҫав пӑтӑрмахлӑхирӗҫӳллӗ самантсем, ҫуратнӑ-тӑр ӗнтӗ. Тавӑрас тесе шӑл хӑйракансем пурччӗ ҫав. Мӗншӗн-и? Сӑлтавӗ-йӳтӗмӗ пухӑнсах пынӑ. Пӗррехинче хӗлле, акӑ...

Ӗҫтешӗпе каҫхи патруле тухнӑччӗ Камров ун чух. Чылай урама пӑхса ҫаврӑннӑ хыҫҫӑн вӗсен автомашини троллейбус чарӑнӑвне ҫитрӗ. Пӑхаҫҫӗ – павильон айккинче пӗр арҫын выртa парать. Айтуру, мӗн пулнӑ-ши – шӑнса вилет вӗт капла! Тимур ун патне чупса пычӗ, хул пуҫҫинчен силлесе илчӗ.

– Эй, тӑр! Мӗн улпут пек сарӑлса выртан?

– Тӑхта! – чарчӗ ӑна юлташӗ. – Малтан тӗрӗслесе пӑхар.

Камров мӗн те пулин калама ӗлкӗриччен вӑл аллине выртакан ҫын тумтирӗ айне чикрӗ, унтан-кунтан хыпашласа ухтарчӗ, вара шӑлаварӑн хыҫалти кӗсйинчен ҫӗр тенкӗлӗх икӗ укҫа туртса кӑларчӗ.

– Во-о! Халӗ вӑратма та юрать.

– Эс мӗн?! – Тимур ялтах тӳрленсе тӑчӗ. Милицире ӗҫлекенсем хушшинче ӳсӗрсен, пӗр-пӗр айӑпа кӗнӗ ҫынсен укҫине, япалисене "экспроприацилеме" юратакансем пурри ҫинчен илтмен мар-ха вӑл, анчах халӗ... ун куҫӗ умӗнчех! Тарӑхнине пытармасӑр Камров кӑшкӑрнӑ пек хыттӑн татса хучӗ:

– Мӗн хӑтланан? Чиксе хур каялла!

Халӗ ӗнтӗ ӗҫтешӗ тӗлӗнсе пӑхрӗ: ку этем... паян тин ҫуралман пулӗ те? Ҫапах та сӑмаха малтан шӳте ҫаварма хӑтланчӗ:

– Эпир ӑна вилӗмрен ҫӑлатпӑр-ҫке! Ку вара йӳнӗ япала мар. Уншӑн тӳлемелле.

Камров шӳте йышӑнмарӗ. Ӗҫтешӗ ҫинчен куҫ илмесӗр, халь-халь тапӑнас пек малалла ӳпӗнсе тепӗр хут ҫирӗппӗн каларӗ:

– Чиксе хур!

Лешӗ, Тимуртан чылай аслӑрахскер, ӑнланчӗ: ку ухмахпа пӗр чӗлхе тупайрас ҫук. Алла ҫав тери ҫӑмӑллӑн кӗнӗ укҫана хуҫине каялла "тавӑрса" пама тиврӗ. Паян кунччен те манаймасть Камров: аванмарланас е, тен, каҫару та ыйтас вырӑнне лешӗ тилӗрсе кайрӗ. Хӑйӗн умӗнче пӗр-пӗр вӑйсӑркка тӑрас тӑк ун ҫине алӑ ҫӗклеме те хӑятчӗ пуль вӑл. Анчах Тимура ҫулӑх-ха – ав, мӗнле пӑхаттир! Сӑмахӗпе вара кассах татрӗ: "Куншӑн каҫару ан кӗт!"

Чӑнах та каҫармарӗҫ. Чӑтӑмлӑхӑн та вӗҫӗ пур-тӑр ҫав. Ҫакӑн хыҫҫӑн вӑхӑт нумаях та иртмерӗ – "штата кӗскетнӗ" май Камровӑн юратнӑ ӗҫрен тухса кайма лекрӗ.

III

Кинокадрсем евĕр хăвăрттăн вĕлтлетсе иртнĕ çав пулăм-курăм ÿкерчĕкĕсен вылявне Палтанов сасси татрĕ:

– Вара мĕнле... пухăнăпăр-и?

– Пухăнас, пухăнас! Калаçса татăлас. – Кăмăл çĕкленĕвне пытармасăр Тимур-Хĕвел аслă юлташĕ çине темĕнле хавхаллăн пăхрĕ, халь-халь сывлăша вĕçсе хăпарма хатĕрленнĕ кайăк пек чăтăмсăррăн хускала-хускала илчĕ. – Атту хăçантанпа тăсăлать ку шырав операцийĕ. Часрах вĕçлемелле ăна – ярса тытмалла вĕсене, сурăх тирне пĕркеннĕ кашкăрсене!

– Юрĕ апла, пĕлтерсе тух.

Камров тухса кайсан Тимофей пĕр хушă хускалмасăр пуçне усса ларчĕ. Унтан, ерипен çĕкленсе каллĕ-маллĕ уткалама тапратрĕ. Çук, лĕштĕрккеленме юрамасть. Чăтмалла. Кăмăла хытармалла. Кирек мĕнле пулсан та бомжсен пурнăçĕнче юлашки вăхăтра чылаях çирĕпленнĕ çĕнĕ йĕркене ("çÿлти" пурнăçри тĕслĕхпе "реформа" тет ăна Тимур) май пур таран тытса пымаллах. Хăй те тепĕр чух "айккинелле" пăрăнсан та (Карнашовсен дачинче "хуçаланни" хăйех мĕне тăрать!) пуçланинчен каялла чакас марччĕ. Уйрăмах халĕ, тĕрĕсмарлăха, усаллăха хирĕç йышпа кĕрешме пикеннĕ вăхăтра. Унсăрăн – тимлĕхе çухатсан, сÿрĕкленсен, асăрханса-сыхланса ĕлкĕреймесен хальхи сивĕ чунлă тĕнчен качаллă чукмарĕ вирлĕн сулăнса шанлаттарĕ те, палт çеç сирпĕнсе кайăн. Шăмму-шаккуна пуçтарса пĕтереймĕн. Бомж таврашĕ шăпах шăл çемми мар-и уншăн. Организаци президенчĕ тесе шеллесе тăмĕ.

"Президент"?.. Ха-ха!.. Саманчĕ шÿтлемеллиех мар пулин те Палтанов куллине чараймарĕ. "Пухăнас", "операци", "организаци"... унăн шухăшне кам та пулин айккинчен "итлесе" тăрас тăк çак сăмахсене, паллах, ăнланса илеймĕ: кама пĕлтерсе тухмалла? Мĕнле организаци? Бомжсен? Ай, ан култарăрах. Анчах Палтановпа Камровшăн пĕтĕмпех уçăмлă, нимле юптару-шахвăрту та çук. Хăйсен кулленхи пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ çинчен сăмах пырать. Чăнах та пухăнаççĕ вĕсем вăхăтран вăхăта. Калаçмалли, ушкăнпа сÿтсе явмалли тупăнсах пырать. "Президент"? Кунта та, халăх калашле, чăн сăмахăн суйи çук. Çапла, Палтанов чăнах та президент, Шупашкарти хăйсен районĕнчи бомжсен президенчĕ. Тĕрĕссипе, районсен чикки пĕлтерĕшлех те мар. Палтановсен патнелле ытти вырăнсенчен те туртăнаççĕ çынсем, хăйсене "члена" илме ыйтаççĕ.

Çакă йăлтах – пĕр шутласан чăнах та ĕненмелле мар, пулма пултарайман ĕçпуç! – Камровпа иккĕшĕн чун-чĕмĕн тĕлĕнмелле харсăрлăхĕпе çыхăннă. Тимофей Платонович унпа мĕнле тĕл пулнине лайăх ас тăвать.

Пĕррехинче вăл хула катинче çурхи хĕвел ăшшипе рехетленсе ларатчĕ. Хваттерне çухатнăранпа хăйне темле айăплăн та мĕскĕнĕн туяканскер çын куçĕ умне пит курăнасшăнах марччĕ, çавăнпа канмалли вырăнсенче сак-тенкел таврашĕнчен пăрăнса иртетчĕ, улахрах çĕре, йывăç-тĕм хушшине вырнаçма тăрăшатчĕ. Халĕ те, акă вата юман çумне сĕвĕнсе ларнăччĕ. Тĕлĕрме те пуçланăччĕ. Сасартăк хăйне ятран чĕннине илтрĕ:

– Тимофей Платонович, Эсирех-и ку?

Хăш самантра ăçтан siksе тухрĕ – умра çамрăк арçын тăра парать. Шурă

шӑлавар, ҫутӑ ҫӑмӑл пушмак тӑхӑннӑ, кӗске ҫанӑллӑ кӗпине йӳле янӑ. Палтановӑн "кам ара ку?" тесе шухӑшламалла пулмарӗ: темскер ҫавӑрттарнӑн ката чӑтлӑхӗ сирӗлчӗ те, ун куҫӗ умне хӑй ӗҫленӗ шкулӑн вуннӑмӗш класӗ тухса тӑчӗ. Хыҫалти парта хушшинчен сарӑ-ҫырӑ ҫӳҫ-пуҫлӑ ачан йӑлтӑр кулли ҫиҫкӗнчӗ: Тимур Камров!

Чылай ҫул иртсен ҫапла тӗл пулчӗҫ вӗсем, учительпе унӑн вӗренекенӗ. Калаҫу тӳрех ҫыхӑнса каяймарӗ. Тимур хӑйӗн пурнӑҫӗпе паллаштарчӗ-ха, нимӗн те пытарса тӑмарӗ: милицири хӗсмечӗ, унтан мӗнле тухса кайма тивни ҫинчен веҫех каласа кӑтартрӗ. Халӗ пӗр фирмӑра сыхлавра ӗҫлет. Палтановӑн вара иртнине, усал тӗлӗкри пек хӑрушӑ та киревсӗр пулӑмсене аса илме ай-ай ҫӑмӑл пулмарӗ. Каярахпа тин, кафене кӗрсе эрех-сӑрапа хӑналаннӑ хыҫҫӑн, чунне уҫма вӑй ҫитерчӗ.

Паллах, пурнӑҫ ҫулӗ урӑхла та ҫаврӑнса кайма пултарнӑ Тимахвин. Йывӑрлӑхран тухма май шырас еннелле. Сахал-и хальхи вӑхӑтра унашкаллисем – инкек-синкеклӗ лару-тӑрӑва лексе "бомжланнисем". Пурте алла уссан, шанӑҫа ҫухатсан, синкертен хӑтӑлма вӑйне пухмасан... Шухӑшламан мар кун пирки Палтанов, анчах "тытӑнса тӑма", "ҫӗкленме" хӑйне хистесе ҫитереймерӗ – аялалла кӗмсӗртетсе анма чарӑнаймарӗ.

Ҫакӑн сӑлтавӗ, паллах, "хистейменнинче" кӑна мар, чылай анлӑрах. Йывӑр хуйхӑ пусса антарнипе халсӑрланнӑскер, кӑмӑл-туйӑм сисӗмлӗхне хавшатнӑскер Тимофей Платонович мӗн пулса иртнишӗн пӗтӗмпех хӑйне айӑпларӗ, хаяр приговор йышӑннӑн пӗр хӗрхенӳсӗр татса хучӗ: ҫав кирлӗ мана – общество пӑрахӑҫне! Йӗркеллӗ ҫынсем хушшинче пурӑнма тивӗҫлӗ мар эс текех.

Кун пек чух эрех – чи ҫывӑх тус-юлташ. Канашҫӑ та пулӑшуҫӑ. Кӗтсех тӑрать хӑйӗн тахҫанхи "клиентне". Ара, хваттерте Чышкӑпа пӗрле пурӑннӑ вӑхӑтра сахал сӑрӑхтарнӑ-и ӑна? Чӑннине калас тӑк шӑпах унран пуҫланмарӗ-ши пӗтӗм пурнӑҫа кутӑн-пуҫӑн ҫавӑрса хунӑ урӑм-сурӑмлӑх. Шел, кайран та, яка пӑр ҫине ҫара купарчапа ларса юлсан, уйрӑлаймарӗ ҫав хаяр шӗвекрен. Лешӗ вара, чее те усал аҫтаха, ырӑ тӑвас шухӑшлӑ-и? Илӗртет те астарать, сумсӑра кӑларать.

Палтанов калавӗ Камрова ҫав тери хумхантарса ячӗ. Пӗр сӑмах чӗнмесӗр итлесе ларнӑскер вӑл чунӗ кӳтнипе ура ҫине сиксе тӑчӗ, кӑкӑрне аллипе сӑтӑрасӑтӑра хаш та хаш сывларӗ. Турӑҫӑм, мӗн ку? Истори урокӗсенче мӗн ҫинчен кӑна каласа кӑтартмастчӗ пуль учитель. Тӗрлӗ вӑрҫа-харҫа та, ытти хӑрушӑ пулӑма та куҫ умне сахал мар кӑлара-кӑлара тӑратнӑ. Анчах вӗсен сасси-кӗрлевӗ тахҫан-тахҫан, кунтан инҫетре янӑран-ши – пит хускатсах кайман-тӑр чӗрене. Халӗ вара умра – этем тискерлӗхӗн пайӑр тӗслӗхӗ. Ним вӑрҫӑсӑр-мӗнсӗр, мирлӗ вӑхӑтра чип-чипер пурӑннӑ ҫӗртех чӗрӗ тамӑка кӗрсе ӳкнӗ ҫын. Ултав пусаркӑҫӗпе хытӑ лутӑрканнӑскер. Ҫут тӗнчемӗр, мӗн хӑтланатӑн эсӗ? Ма ирӗк паратӑн тӗрлӗ усал-тӗселе ҫакӑн пек пуҫтахланма?

Тимур пуҫӗнче шухӑш пӗтӗрӗнет: мӗн тумалла? Ҫапла кӑна, ним пулман пек уйрӑлса каяймӑн учительтен. Текех пӗччен хӑвараймӑн ӑна. Ҫавӑнтах шалтан, чун тӗпӗнчен, темӗнле сасӑ янкӑрса тухнӑн туйӑнчӗ: "Эс, мӗн, капла? Пачах аптраса ӳкрӗн-и? Вӑран! Пулӑшмалла Тимофей Платоновича".

Шалти ӗҫсен пайӗнчен уйрӑлман та тейӗн.

Тӳрленсе тӑчӗ Тимур ҫӗнӗ вӑй кӗнӗн, хул пуҫҫийӗсене йӑлт та ялт вылянтарса илчӗ.

– Тимофей Платонович, ҫав ултавҫӑ-хурахсем вара... ҫав-ҫавах ирӗкре-ши? – Ыйтӑвӗ пит вырӑнлах маррине туйса Камров хушса хучӗ. – Нимле сас-хура та илтмен-и кайран вӗсем ҫинчен?

– Ирӗкре пуль. Урӑх курман. Э-э... ҫук, ҫук! Чышкӑна курнӑччӗ.

– Ӑҫта?

– Пасарта. Ҫын нумай хӗвӗшетчӗ те, самантлӑха ҫеҫ асӑрхама ӗлкӗртӗм ӑна. Ҫавӑнтах таҫта ҫухалчӗ, пӑхкаларӑм – ниҫта та ҫук. Хӑй курмарӗ-ши мана?

– Вӑт мӗнле. Апла кунтах вӗсем, хуларах. Хамӑр хушӑрах. Шырамалла вӗсене, тупмалла, явап тыттармалла!

Ватӑ учитель тӗлӗнсе пӑхрӗ: мӗнле улшӑну! Кӗлпе хупланнӑ кӑвар сасартӑк хӗмленсе хӗрӳ ҫулӑм кӑларчӗ мар-и. Малтан хӑйне вӑтанӑҫлӑн тыткаланӑ, мӗн те пулин ытлашши персе ярас мар тенӗн Палтанов пурнӑҫӗ ҫинчен те асӑрханарах ҫеҫ ыйта-ыйта пӗлнӗ Камров юлашки сӑмахӗсене, авӑ, мӗнле хиврен те вирлӗн, чӑн-чӑн "милицилле" татса каларӗ! Тупа тунӑ евӗр.

Ку чӑнах та ҫапла пулса тухрӗ. Тимофей Платоновичпа тӗл пулнӑ хыҫҫӑн Тимур Ефрей Феофановпа унӑн эшкерне шыраса тупассине, сиенсӗрлетессине хӑйӗн чи пысӑк тӗллевӗ туса хучӗ. Милицири ӗҫ опычӗ пӗчӗк мар унӑн – мӗн шутланине пурнӑҫламаллах. Ку ҫеҫ-и-ха: шалти ӗҫсен органӗсенче унӑн тусюлташӗ те чылай, вӗсемпе кирек хӑш вӑхӑтра та калаҫса илме, канаш тытма пулать.

Пӗр-пӗринпе тӑтӑшах хутшӑнса Палтановпа Камров ашшӗпе ывӑлӗ пекех ҫывӑхланчӑҫ. Тимура бомжсен пурнӑҫӗ хытах кӑсӑклантарса ячӗ. Ӑна унччен те, милицире ӗҫленӗ чухне, пӗлмен мар-ха. Ара, ҫав "тӗпӗнчи" йышра вӑрӑ тавраш̆ӗ те, ытти тискерлӗх тӑвакан та ҫук мар. Тӗл пулма тивнӗ вӗсемпе. Халӗ вара, Тимофей Платонович урлӑ чылайӑшӗпе паллашса, ҫав "эреветлӗ-теветлӗ" пурнӑҫа шалтан курма-сӑнама май килчӗ.

Тӗрлӗ халӑх кунта. "Ирӗклӗ" те мӗскӗн, сӗмсӗр те сӗлкӗш, хӑюллӑ та нӑйкӑш халӑх. Такам та, темле ҫын та пур. Пурне те пӗр шая лартаймӑн, пӗр калӑппа виҫеймӗн. Кашнин хӑйӗн шӑпи. Пӗрисем килсӗр-ҫемьесӗр тӑрса юлнишӗн никама та кӳренме, тарӑхса ылханма пултараймаҫҫӗ: йӑлтах хӑйсем айӑплӑ. Ӗҫке ерсе, ӗҫлемесӗр пурӑнса пысӑк хваттерӗсене пӗчӗкреххисемпе улӑштараҫҫӗ е сутса яраҫҫӗ. Алла ҫапла ҫӑмӑллӑн кӗнӗ укҫа нумая пырать тетӗр-и? Ҫук ҫав. Ҫил ҫинчи тӗтӗм евӗр хӑвӑрт сапаланса ҫухалать. Мӗн юлнине татах улӑштарма-сутма тивет вара... Теприсене ҫурма бомж темелле-ши: выртса тӑмалли вырӑнӗ пур вӗсен, анчах ниҫта та тӗпленсе ӗҫлемен пирки укҫа урӑхла майсемпе тупма лекет: пушӑ кӗленче, сӑра-пылак шыв банки, хут-картон пухаҫҫӗ. Вӑрӑ ҫулӗ те юнашарах кун пек чух: ярса пус кӑна ун шуҫлакӗ ҫине – якӑшса кайнине сиссе те юлаймӑн. Ара, ҫимелле-ҫке, хырӑм вара ӑна-кӑна пӑхмасть, кашни кун выҫать. Палтанов пек ултав серепине ҫакланса шар куракансем тата...

Пирӗн пурнӑҫа савӑлласа кӗртнӗ ҫав "контингентпа" час-часах хутшӑннӑ май Камров пуҫӗнче пӗр шухӑш ҫине-ҫинех явӑнма тытӑннӑ: эх, бомжсене пӗрлештерсе тӑракан пӗр-пӗр тытӑм-организаци тавраш̆ӗ йӗркелес тӗк! Вара вӗсен кун-

çулĕнче лайăх еннелле улшăну тума май килĕччĕ-и, тен. Çук-ха, малтанласа унашкалах шухăшах та пулман-тăр, темĕнле канăçсăрлăх кăна, хӳтлĕхсĕр çынсен шăпишĕн пăшăрханни.

Чимĕр-ха, тен, хайсене хускатма хăтлансан мĕнле-ши: ырă шухăш тытса (усаллине йыхăрма кирлĕ мар, вăл хăех килсе йăтăнать) пĕр-пĕринпе ытларах çыхăнма, тĕл пулса канашлама тăрăшчăр. Ĕлĕкхи çавнашкал туртăмăн пархатарлă вăйвитĕмне манман-тăр-ха. Пурнăç пăтăрмахĕ çапса ӳкернĕ пулсан та асран ан кăларччăр ăна, çĕнĕрен туйса илччĕр. Ара, пурте чĕрĕ çынсем-çке: пĕр-пĕр çемьере çуралнă, кайран вĕреннĕ, ĕçленĕ... "Тĕпĕнче" пьеса сăнар Сатинăн (хальхилле бомж темелле мар-и ăна?) сăмахĕсене аса илер-ха: "Этем! Мĕнле мăнаçлă янăрать!" Вĕсем ку чухне хайсен пĕлтерĕшне çухатнă-и вара?

Ăнланман мар Камров: унăн шухăш-ĕмĕчĕ – юмах-фантастика шайĕнче. Çапах та пăрахман ăна. Мĕн тетĕр, пуçарса яма пултарчĕ-пултарчех "реформăна"!

Ĕç-пуç шӳт-кулăран пуçланчĕ.

Ун чухне çĕршывра президент суйлавĕ çывхарса çитнĕччĕ. Палтанов "хваттерне" бомжсен ушкăнĕ пĕрин юбилейне паллă тума пуçтараннă. Радио кĕрлеттерет, суйлава мĕнле хатĕрленни çинчен пĕлтерет. Ăна тимлĕн итлекен Камров юлташĕсем çине шахвăртуллăн пăхрĕ те сасартăк каласа хучĕ:

– Э-эх, хамăрăн парти пулас тăк эпир те ун ялавĕ айĕнче суйлава хутшăнмаллаччĕ!

Пухăннисем ахăрса ячĕç.

– Ну, çаптарчĕ те вара! Бомжсен партийĕ!

– Шалак-камитçĕ!

– А мĕн? – пит-куçне тата ытларах ялкăштарчĕ Тимур. – Халь мĕнле кăна парти çук пуль: сăра ĕçме юратакансен, олигарх текеннисен, пулăçсен, ĕлĕк колхоз председателĕнче ĕçленĕ çынсен... – шутласа та кăлараймăн. Шултрисене асăнса тăмăп. Эпир мĕнрен кая? Президента суйлама хамăр кандидата тăратнă пулăттăмăр...

Путвал каллех кĕрлесе кайрĕ.

– Майĕпенрех эсир! – аллине асăрхаттаруллăн çĕклерĕ "кил" хуçи. – Атту иртен-çӳрен тем шутлĕ. Ахаль те хăяккăн пăхаççĕ хăшĕсем. Тимура малалла итлер-ха. Интереслĕ ыйту хускатрĕ вăл.

Çамрăк юлташĕн шухăшне пĕлсе тăраканскер (пĕрре кăна мар канашланă) Тимофей Платонович Тимур çак калаçăва питĕ меллĕ самантра пуçласа янине лайăх ăнланать.

Тахăшĕ чăтăмсăррăн васкатрĕ:

– Итлетпĕр, итлетпĕр!

– Юрĕ, çĕршыв талккăшĕпех кармашмăпăр, – "докладне" малалла тăсрĕ Камров. Пит-куçри кулă çутине сӳнтерсе вăл юлташĕсем çине тимлĕн-шухăшлăн пăхрĕ. – Анчах хамăр хушăра тачăрах пĕрлешме пултараймастпăр-и вара? Пĕр-пĕр организаци евĕр. Тĕрĕссипе, ку ĕçе пуçăннă та эпир. Пăхăр-ха, халĕ мĕн чухлĕн пуçтарăнтăмăр. Пĕр-пĕрне лайăх пĕлетпĕр.

– Президент суйлама та пултаратпăр. Акă вăл! – Тачкам пӳ-силлĕ арçын, хайхи юбиляр, аллине Палтанов хул пуççийĕ çине хучĕ.

Самантлăха шăп пулнă путвал шартлатса çурăлчě тейěн – пурте ура çине сиксе тăчěç, шавласа кайрěç.

– Тěрěс! Платончча – пирěн президент!

– Ур-ра!

Çапла йěркеленчě бомжсен организацийě.

III

Ку хутěнче те Палтанов путвалěнче пухăнчěç.

Çуллахи ырлăха аса илни кăна çав: кирек ăçта пырсан та ларса калаçмалли вырăн тупăнать. Çын кусěнчен аяккарах каяс тесен – тархасшăн, хула тулашне тух, вăрман уçланкинчи симěс курăк çине тăсăлса выртe, тата улаххăнрах пытанма шутласан, йывăç-тěм чăтлăхне чăм. Ирěк!

Хěлле вара аплах мар. Йывăртарах. Çавăнпа хăш чухне пěр-пěр хваттере "арендăна" илме тивет. Çапла, темиçе хутчен Камров патěнче те пулнăччě. Юрать, унăн арăмě упăшкипе пěр шутлă-шухăшлă, ăнланать ăна, хирěçме мар, пулăшма тăрăшать. Поэт калашле, чăн-чăнах пěр çын пек çывăх мăшăр. Тимур фирмăра пěр талăк ěçленě хыççăн икě кун канать, çавăнпа "общество ěçě" валли вăхăт çителěклех унăн.

Тепěр тесен, пысăк йышпа сайра пуçтарăнаççě, нумай ыйтăва çынсемпе уйрăммăн тěл пулса татса параççě. Паян "конспиративлă" пухăва чылайăн килнě.

– Малтан эпě Маклая асăнма ыйтасшăн, – терě Тимофей Платонович пухăва уçнă май.

Пурте ура çине тăчěç. Сак вырăнне вěçěсене икě пукан çине хунă хулăн хăма шаплатса ўкни шартах сиктерчě, анчах никам та ăна-кăна палăртмарě. Ăмăр куçсен сивлекě сывлăша тулчě тейěн – шăплăха татах йывăрлатрě. Кашнин куçě умне çинçе пўллě те пěчěкрех сăн-питлě çамрăк çын вăркăнса тухрě. Давид Сануков! Маклай! Аллипе хăлаçланса темскер калаçать. Мěнпе çав хатер хавхаланнă-ши? Каллех пěр-пěр кěнекене "çăтса" янă-тăр. Вулама питě юратать. Хальхи вăхăтшăн ку пăртак тěлěнмеллерех те пек. Уйрăмах – "бомж" ята тивěçнě çыншăн. Авă, телевизор-компьютер мěнле йыхăрать – санăн мěн пур ыйтăвна хуравлама хатěр. Кěнеке айккинче вырттăр. Анчах куна Маклая ан калăрах.

Акă, мěн аса илеççě. Пěррехинче Давид юлташěсене шалтах тěлěнтерсе пăрахнă: лешсем сутма е усă курма юрăхлă япаласем шыраса ăпăр-тапăр ещěкěсене чакалаççě, вăл вара кěнеке çыххисем патне ыткăннă. Такама кěнеке пачах кирлě мар иккен – тухнă та пенě çўп-çаппа пěрле...

Маклайăн чи пысăк юратăвě вара – ěлěкхи паттăрла çул çўревсем. Вырăссен паллă ăсчахě-этнографě Миклухо-Маклай пурнăçěпе ěçě-хěлě çинчен, акă, сехечě-сехечěпе "лекци вулама" хатěр – ăçтан пěлет-ши çавăн чухлě? Ахальтен çыпăçнă тетěр-и ун çумне хайхи Маклай ят.

Çав çынна, пурте лайăх пěлнě Сануков-Маклая асăнма ыйтрě те халь Тимофей Платонович. Мěншěн тесен çук вăл текех çут тěнчере, çав кăмăлçах-кěнекеçě: темиçе уйăх каялла, кěркунне, вěлернě ăна. Унăн виллине вăрманта, Атăл çыранěнчи пěчěк палаткăра кăмпаçăсем тупнă. Кам, мěншěн татнă çав ырă чун кун-çулне – нимěн те паллă мар. Милици те уçса парайман тет вăрттăнлăха.

Тепĕр тесен тăрăшсах шыранă-ши, тимлесех тĕпченĕ-ши – иккĕлентерет: кама пит кăсăклантартăр бомж вилĕмĕ...

Бомжсем хушшинче хăвăрт сарăлнă сас-хура вара уçăмлăрах. Çав тискерлĕхĕн ахрăмĕ, таçтан темĕнле хăрушлăх капланса килнине систернĕн, çăханла кранклатнă: асăрханăр, сире те çитсе тăрăнтарма, касса тăкма пултарать вилĕм çави! Маклай сăмахĕсене пĕри те тепри аса илет: вăл хăйне хваттерсĕр хăварнă çынсен йĕрĕ çине ӳкнĕ-мĕн. Çавăншăн вĕлермен-ши ăна?

Ачаллах тăлăха юлнăскер Давид Шупашкарта амăшĕн качча кайман аппăшĕ патĕнче ӳснĕ. Анчах кун-çул тени улшăнчăк çав: ватă хĕрарăм вилсен каччă пĕр пĕччен тăрса юлнă. Унччен мăн аккăшĕ хӳттинче мĕнле хăтлă та канлĕччĕ! Ырлăхра пурăннă: йăлтах хатĕр – пĕçернĕ, çуса тасатнă, туянса хунă. Халь пĕтĕмпех хăйĕн тума лекет. Çитменнине, кĕтмен-туман инкек килсе çапнă – ĕççĕр тăрса юлнă. Вĕсен заводне хупнă, ун вырăнне урăх "предприяти" – савăшу центрĕ тăваççĕ тет-и. Мĕн калăн, вăл кирлĕрех-тĕр халĕ...

Кун пек чух усал-тĕселе кĕтсех тăр. Давид хула паркĕнче темиçе çамрăкпа паллашнă. Час-часах тĕл пулма тытăннă, çыхланса кайнă. Çапла сиссе те ĕлкĕреймен – вĕсен ултавне лексе хваттерне çухатнă. Унăн калавне итленĕ хыççăн Палтанов шухăшласа илнĕччĕ: "Манăнни пекех". Ăçта, мĕнле пурăнать Маклай – юлташĕсем пĕлсех каймаççĕ. Хăшĕсем "вăрттăн" пăшăлтатнă тăрăх, вăл пĕр хĕрарăм патне "киле кĕнĕ" пулать. Çулла вара "ирĕке" тухать, вăхăтăн-вăхăтăн, ăпăр-тапăр купинче тупнă пĕчĕк палаткăна çурăм хыçне кутамкаласа вăрмана та çул тытать. Унтах вĕçлерĕ, ав, пурнăçне.

– Çапла-а... – Куç умĕнчи çак курăнусене пĕтĕмлетнĕн Палтанов ассăн сывласа илчĕ. Хушса хучĕ: – Лайăх çынччĕ Маклай. Паян ун çинчен калаçăпăр пульха. Халĕ вара Тимура итлĕпĕр. Унăн çĕнĕ хыпарсем пур.

Пухăннисем пĕр-пĕрин историне – халăхра калашле, "çакнашкал пурнăç патне кам мĕнле çитсе тăнине" – лайăх пĕлеççĕ. "Çитмелли çулĕ" кашнин хăйне май, çав вăхăтрах пурне те пырса тивекенни, пĕрешкел шăпа кӳрекенни те пур. Ку вăл – самана улшăнăвĕн хура витĕмĕ. Унченхи "çыншăн çын – тус-юлташ, тăван" принцип вырăнне "укçа – хуçа, пурне те хуçать" текен ăнлану йышăнни. Палтанов та тахçанах паллаштарнă хăйĕн йывăр кун-çулĕпе. Çавăнпа халĕ Камров каласа кăтартни пурне те савăнтарса ячĕ. Феофанов-Якушкин тинех "тупăннă" иккен! Вăл ăçта пурăнни те паллă. Шавласа кайрĕç:

– Каймалла та ярса тытмалла йĕксĕке!

– Милици аллине памалла!

– Э, çу-ук! Малтан хамăрăн ла-айăх кăна калаçмалла унпа. Йывăç çине пуçхĕрлĕ çакса.

– Е çемçе вырăнтан тимĕр çекĕлпе çаклатса.

– Чарăнăр-ха, ан кĕрлĕр! – Тимофей ура çине тăчĕ. – Тӳрех пуçхĕрлĕ çакасси пирки шухăшлар мар. Пĕрремĕшĕнчен, ăна тытма çăмăл тетĕр-и? Чее тилĕ! Унăн "ĕçтешĕсене" те ан манăр. Чăн-чăн кашкăрсем! Иккĕмĕшĕнчен... – "Президент" сасси чĕтренерех тухрĕ. – Иккĕмĕшĕнчен илсен, камсем эпир иртен-çӳрен куçĕ умĕнче? Тоттă. Урамра пĕр-пĕр çынна тапăнас тăк-и? Çуйхашу-кăшкăрашу çĕкленессе кĕтсех тăр: "Бомжсем иртĕхсе кайнă! Канлĕ пурăнма памаççĕ! Васи! Ты-

тăр вĕсене!" Милици те персе çитĕ. Çук, вăрă-хурах мар эпир. Хамăрăн ĕçе, мĕн палăртнине тĕплĕн шухăшласа тăвасчĕ.

– Тĕрĕс асăрхаттарать Тимофей Платонович, – каллех калаçăва хутшăнчĕ Тимур. – Чăнах та вăрă-хурах мар эпир. Ун пек пулмастпăр та! Çав вăхăтрах...– Хайĕн шухăшĕ "пуçлăхăннинчен" пăртак раснарах, "хăюллăрах" пулнине туйса, вăл самантлăха чарăнса тăчĕ, анчах калас тенинчен чакма шутламарĕ. – Çав вăхăтрах ытлашши хăраса тăма та кирлĕ мар пуль тетĕп. Чăн-чăн кĕрешӳ пуçармалла çав эсрелсене хирĕç. Пирĕн тăшман – Чышкă йышши усал-тĕсел. Тĕрĕс каларĕç кунта: шыраса тупмалла вĕсене, тăрă шыв çине кăлармалла, тивĕçлĕ явап тыттармалла! Çынсене шар кăтартнăшăн, хĕн-асап кӳнĕшĕн тавăрмалла. Çакă пирĕн тĕп тĕллев.

– Ай, сăмахпа питĕ яка та... – пӳлчĕ ăна тахăшĕ.

Çавăнтах темиçен сасă пачĕç:

– Вĕсен пăшалĕ те кĕсьере, çĕçҫи те çивĕч...

– Маклая пуçтарнă пек – хамăра та...

Ăшĕнче хĕрӳ туйăм чăтăмсăррăн талпăнсан та юлташĕсене хуравлама васкамарĕ Тимур. Ăнланать вăл: пĕтĕмĕшле шухăш-кăмăл çĕкленсе хавхалантарсан та хăшĕ-пĕри иккĕленмесĕр пулмастех. Камров сăмахне малалла тăсрĕ:

– Килĕшетĕп сирĕнпе, чăнах та хăрушă ĕç пуçаратпăр. Чăнах та ача вăййи мар. Анчах "утлă çар атакине" чĕнместĕп эпĕ. Паллах, тĕплĕн шухăшламалла. Милиципе пĕрле ĕçлĕпĕр. Тĕрĕссипе, ăна пулăшса. Хамăр тĕллĕн вĕçне çитерейрес çук ку ĕçе. Çавăнпа айтăр-ха пайăррăн калаçса татăлар камăн мĕн тумалли çинчен.

Тин кăна ларма ĕлкĕрнĕскер, Тимур çĕнĕрен сиксе тăчĕ.

– Чимĕр-ха, Маклай тенĕрен... мĕнле манма пултартăм-ха... Милицири юлташсем пĕлтернĕччĕ: каярахпа вăрманта, Маклая вĕлернĕ вырăнта, икĕ çамрăка курнă тет.

– Вара мĕн? Кăмпа вăхăчĕ...

– Ан кĕрлĕр-ха! – Камров хĕрӳленсе кайрĕ. – Тĕлĕнмелли, акă, мĕн: вĕсем унта кĕреçе пăрахса хăварнă. Ăна мĕн тума илнĕ-ши вăрмана? Кăмпа касма?

Ку хыпар пурне те кăсăклантарса ячĕ: тен, Маклая шăпах çавсем вĕлернĕ? Милици тĕпчесе пĕлнĕ-ши?

– Вĕсене курнă çынсенчен, кăмпаçăсенчен, ыйтса пĕлнĕ тет, – хуравларĕ Камров. – Ĕçе çавăнпа вĕçленĕ пулмалла.

Юлташĕсен калаçăвне итленĕ май Палтанов шухăшласа илчĕ: "Акă, вăл, вĕрен вĕçĕ! Çухатас марччĕ ăна. Çирĕпрех ярса тытас та..." Хăвăрт ыйтрĕ:

– Хушамачĕсене ас тумастăн-и?

– Камсенне? Кăмпаçăсенне-и? Милицире каланăччĕ. Карнушовчĕ-ши? Е Карнишев. Ыйтса пĕлме пулать ăна.

– Тен, Карнашов? – хыпăнса ӳкрĕ Тимофей Платонович.

– Ăхă, ăхă, Карнашов! Аса илтĕм. – Аслă юлташĕ çине ыйтуллăн пăхрĕ. – Сирĕн паллаканни мар пуль те?

"Вĕрен вĕçĕ" тата уçăмлăрах курăннине туйса Палтанов хумханнине пытарма тăрăшрĕ: "Мартынах-ши? Е пĕр хушаматлă урăх çын?"

– Эпĕ шутланиех тĕк – ман юлташ. Ĕлĕкхи юлташ. Хайхи... дача хуçи. Тинтерех çеç тĕл пулнăччĕ унпа.

Пуху вăшăрхаса илчĕ: унашкал хыпар хăвăрт сарăлать – çав "тĕл пулу" никамшăн та вăрттăнлăх мар-мĕн.

Ăна-кăна палăртмасăр (урăх вăхăтра пулас тăк шӳтлесе илме те хирĕç мар) путвал хуçи кĕсье телефонĕ кăларчĕ те айккинерех пăрăнса тăчĕ. Мартынсен дачинче "лекнĕренпе" вăл юлташĕпе пĕрре те çыхăнман. Ун чухне çĕрĕпех "чуна уçнă" – урăх мĕн шăнкăравламалли пур. Карнашовсен хăйсен пурнăçĕ, Палтановăн – хăйĕн. Халĕ вăт калаçмалли килсе тухрĕ. Питĕ кирлĕ ыйтупа.

– Мартын, салам! – терĕ вăл хăлхара юлташĕн "Итлетĕп. Карнашов" сăмахĕсем янăраса кайсан. Хăйне темле хытарсан та сасси пăлхануллăнрах тухрĕ.

– Тимахви, эсĕ-и?! Ай, маттур! Ай, тавтапуçах! Мĕнле шăнкăравлама пĕлтĕн капла? Эпир вара сан телефон номерне ыйтса илме ăс çитереймен.

– Пĕр ĕç килсе тухрĕ те – çыхăнас терĕм.

– Ĕçпе-и? Ахаль пулсан шăнкăравламастăнччĕ-и?

– Ну...

– Эс нулатса ан тăр! Айта, юхтар кунталла. Кĕтетпĕр сана. Ав, Ангелина та мĕнле ăшталанать.

– Юрать, килĕшеп. Пырап. Анчах унччен ман ыйтса пĕлмелли пур. Тулĕк ыйтăвĕ пăртак... мĕнтерех. Хăраса ан ӳк.

– Яра пар!

– Эсир иртнĕ кĕркунне вăрмана кăмпана кайсан Атăл хĕрринче çын вилли тупнă тет. Çавă тĕрĕс-и?

Тимофей малтанах асăрхаттарчĕ пулсан та кун пеккинех кĕтменччĕ унран Мартын. Пăхăр-ха, çын вилли кăсăклантарать ăна. Мĕншĕн? Чим, сывах-и вăл, чирлемен-и?

– Çук, çук, ан иккĕлен, ухмаха ермен эпĕ, – унăн шухăшне туйса-итлесе тăнăн каласа хучĕ Палтанов.

– Тĕлĕнтертĕн те вара!

– Эс хуравла, хуравла: çапла е çук?

– Чăнах та пулнăччĕ, çапла. Тупнăччĕ. Анчах...

– Тавтапуç! Ыттине кайран ăнлантарса парăпăр, – хăпартланса társaларĕ Тимофей Платонович. – Иккĕн пыратпăр.

Юлташĕ шӳтлемесĕр чăтаймарĕ:

– Çĕнĕ арăмпа-и?

– Ах, ашкăнчăк! Мĕнле чăтса пурăнать тӳлĕк сана Ангелина.

## IV

Акă мĕн каласа пачĕç Карнашовсем.

Çамрăкранпах кăмпана çӳреме юратаканскер Мартын Шупашкарта пурăнма тытăнсан та пăрахман çав йăлана. Хăйсен дачин йĕри-тавралăхĕнчи таçта-таçта çити тăсăлакан вăрмана тăтăшах каять. Хăй калашле, тухса кĕрет. Кăмпа вырăнĕсене аванах пĕлсе çитнĕ. Хăш-пĕр кăмпана кашни çулах пĕр çĕрте тупатăн. Кĕтсех ларать тейĕн сана. Тепри вара, калăпăр, тунката кăмпи вырăнне улăш-

тарсах тӑрать. Кӑҫал, акӑ, ӑна пӗр-пӗр ҫырмара татса савӑнатӑн, тепӗр ҫулхине персе ҫитетӗн те унта – ҫук вӑл, тухман. Урӑх вырӑнта шырама тивет.

Атӑл ҫыранӗ хӗрринчи самаях вӑрӑм лапамран вара кирек хӑҫан та пушӑ алӑпа таврӑнмастӑн. Тӗрлӗ вӑхӑтра тӗрлӗ кӑмпа ӳсет унта. Вӑт ҫавӑнта ҫул тытрӗҫ Мартынпа арӑмӗ вӑл кун ирех. Анчах кӑмпа татасси пулмарӗ. Пӗр уҫланкӑна тухма тӑнӑччӗ кӑна – пӗчӗк шурӑ палатка курӑнса кайрӗ. Ватӑ хыр ҫумне тӗршӗнтернӗ ӑна.

– Айта, пӑрӑнар кунтан, такам-ха унта, – упӑшкине аллинчен ҫатӑрласа пӑшӑлтатрӗ Ангелина.

Каялла пӑртак кайсан Мартын чарӑнса тӑчӗ.

– Тӑхта-ха, ма таратпӑр капла? Тен, ҫывӑхарах пырса пӑхӑпӑр? – арӑмӗ пекех шӑппӑн каларӗ Карнашов. Тӗрӗссипе, унӑн хӑйӗн те ӑшӗ вырӑнта мар, анчах темскерле сисчӳ туйӑмӗ туртать ӑна палатка еннелле, унта таврӑнма хистет. Кун пекки унччен те пулкаланӑ: иккӗленӳллӗ пӗр-пӗр шухӑш кӗтмен-туман ҫӗртен тӳрре тухсан Ангелина "ай-уй, ӑрӑмҫӑ пуль эс, Мартын?" тенине пӗрре ҫеҫ мар илтнӗ.

– Аюк, теветкелленес мар. Хӑратӑп...

– Мӗн хӑрамалли? Тӑр кӑнтӑрла вӗт. Айта, айта.

Вӗсем палатка патне ҫывхарса пынӑччӗ ӗнтӗ, сасартӑк ун айккинчен, юман хыҫӗнчен, иккӗн сиксе тухрӗҫ те унталла-кунталла шиклӗн пӑхса илчӗҫ, инҫех мар йывӑҫ тӗмӗ хускалнине курса чӑтлӑхалла вирхӗнчӗҫ.

Хутланса ларнӑ Мартынпа арӑмӗ ерипен ҫӗкленчӗҫ, тавралӑха тӑнласа хускалмасӑр тӑчӗҫ. Ҫавӑнтах Ангелина сасси тавралӑха ҫурса ячӗ:

– Ай, Мартын!

Хӗрарӑм йывӑҫ туратне сирсе палатка еннелле пӑхса илме ӗлкӗрнӗ иккен. Унта вара...

– Ҫапла, унта виле выртнӑ, – сӑмахне вӗҫлесе пынӑ май ассӑн сывласа каларӗ кил хуҫи.

– Чӗре ҫурӑлса тухатчӗ пуль ун чух, – хушса хучӗ Ангелина Васильевна. – Паян кун та куҫ умӗнче ҫав сехметлӗ ӳкерчӗк. Ҫамрӑк ҫын, апӑрша...

– Апла ҫавсем... тарнисем... вӗлернӗ пулса тухать Маклая? – терӗ Палтанов калаҫӑва пӗтӗмлетнӗн.

Аса илӳ ӑшне путнӑскер Мартын Осипович шухӑшӗпе ҫав-ҫавах инҫетре, Атӑл хӗрринче-мӗн:

– Вӗсем-и, урӑххисем-и – пӗлместӗп, анчах ӑна ун чухне мар, темиҫе кун маларах чиксе пӑрахни паллӑ.

– Мӗнле апла? – харӑссӑн тенӗ пек ыйтрӗҫ Тимахвипе Тимур.

– Тӳрех курӑнчӗ ку. Ӳчӗпе тумтирӗ ҫинчи юн типсе хуралнӑ. Пит-куҫне кӑткӑ, ытти хурт-кӑпшанкӑ сырса илнӗ. Тепӗр енчен, милици ҫыннисем те ҫирӗплетрӗҫ куна.

– Вӗсене хӑвӑр пӗлтертӗр-и?

– Вӑрмантанах телефонпа шӑнкӑравларӑм, – хуравларӗ Карнашов. – Чӑн та, пит часах ҫитеймерӗҫ. Кӗтме тиврӗ. Вӑрмана ӑҫтан кӗмеллине, мӗнле ҫулпа килмеллине, хӑш вырӑна пымаллине пӗлтерсе тӑтӑм.

– Матту-ур! – ырламасӑр чӑтаймарӗ Палтанов... – Тепри пулсан...

– Паллах, пăрахса кайма та пултарнă эпир. Лек-ха çавăн пек историне. Милиципе çыхлан...

– Апла тăк... ку иккĕшĕ ма пынă-ши вара унта çав кун? – калаçу юххине тĕп çула куçарма пикенчĕ Камров.

– Вăт ку питĕ кăсăклă! – Карнашов пӳлĕм тăрăх уткалама тапратрĕ. – Милици версийĕ çапла: Самукова çав çамрăксемех вĕлернĕ-тĕр... Хушамачĕ çаплаччĕ вĕт? Çапла... Хăйсемех е такам хушнипе вилене пытарма шут тытнă пулмалла. Йĕр ан юлтăр тесе. Çавăнпа килнĕ-тĕр вăрмана тепĕр хут. Шăтăк чавма тытăннă. Анчах эпир пыни чăрмантарнă-ши? Инçех мар ытти кăмпаçăсен сассисем те илтĕнетчĕç çав - пĕр-пĕрне чĕнсе кăшкăратчĕç. Çын куçĕ умне курăнас мар тенĕ пуль хайхи... чун иллисем. Кĕреçине те пăрахса хăварнă.

– Кĕреçе? Чим-ха! – Карнашовсем каланине пĕр сăмах сиктерми тимлĕн итленĕ май Камров вăрманти тискерлĕхе ума уçăмлăрах та уçăмлăрах кăларать. Анчах ăшĕнче хайне вăрçса илчĕ: шалти ĕçсен пайĕнче кĕреçепе мĕншĕн тĕплĕнрех кăсăкланмарĕ-ха? Шăпах кирлĕ пулса тухрĕ, ак. Мартынран ыйтрĕ: – Ăна милици çыннисем илсе кайнăччĕ-ши?

– Çапла, илсе кайрĕç. Полиэтилен миххе чикнине ас тăватăп.

– Юрĕ, ыйтса пĕлĕп. Аври çинче алă-пӳрне йĕрĕсем юлма тивĕçлĕ.

– Вара эсрехунсене ярса тытасси çеç юлать, – кăшт тăрăхлавлăнрах хушса хучĕ Тимофей Платонович. Çавăнтах куллине сирчĕ. – Кирек мĕнле пулсан та – тупмаллах вĕсене. Милици шырамасть тĕк – хамăрăн шырамалла. Мартын, Ангелина, калăр-ха: ас туса юлнă-и эсир вĕсене? Мĕнле вĕсем? Ну, çӳллĕшĕ, сăн-пичĕ...

– Ма ас тумасп? Çиччас... – Карнашов куçне хупрĕ те ăна ерипен уçнă май çутă пайăркине савăнăçлăн çиçтерчĕ. – Пĕри - вăрăмкка... Ăхă... Вĕлтрен талккăмĕн тепĕр енче тăратчĕ те, сăн-пичĕ унăн уçăмлах палăратчĕ. Ямпашка теççĕ пирĕн енче ун пеккине. Тепри... Ку лешĕнчен чылай лутакарах. Мăнтăркка. Хырăмĕ панк кăнтарса тăрать.

– Чисти Дон Кихотпа Санчо Пансо! – упăшкине пӳлсех янлаттарчĕ Ангелина Васильевна, испан çыравçин Сервантесăн паллă романĕн геройĕсене аса илсе. Пурте кулса ячĕç.

– Чарăнăр-ха! – аллипе сулчĕ Палтанов. Кил хуçисене васкатрĕ. – Малалла, малалла! Çӳçĕ мĕнлеччĕ? Уйрăм паллăсем...

Ку хутĕнче Ангелина малтан калаçса кайрĕ:

– Тăсланкин çӳçĕ тĕм хураччĕ. Тата...– Вăл упăшки еннелле çаврăнчĕ. – Кăтраччĕ пулас. Çапла-и? Çӳçне час-часах кастармасть пулмалла – вăрăммăн усăнса аннăччĕ.

– Çапла, чикан евĕрччĕ вăл,– арăмĕпе килĕшсе пуçне сĕлтрĕ Мартын Осипович. – Теприне илсен... Кĕске çӳçлĕ, хĕсĕкрех куçлă. Măйĕ хулăн.

– Феномен! – персе ячĕ Камров. – Кĕске хушăрах çакăн чухлĕ ас туса юлма – ай-ай...

– Манас тесен те манаймăн! Халь тепĕр хут çиçĕм çиçсе çутатрĕ тейĕн. – Ангелина Васильевна хĕрелнĕ питне сăмса тутрипе сăтăрса илчĕ.

– Ăнланмалла. Çавсемех пуль, – хăй тĕллĕн калаçса илчĕ Палтанов. Çавăнтах, ăша пысăк савăнăç капланнине туйса, пĕтĕм пĕвĕпе хыттăн туртăнчĕ, ирĕклĕн-

вăраммăн сывласа ячĕ. Юлташĕсем ыйтуллăн пăхнине курсан та ăнлантарма васкамарĕ.

Чи малтан Карнашов чăтаймарĕ:

– Эс мĕскер ват кăркка лек хăпартланса кайрăн çак? Мĕн пулчĕ? Е пирĕн пĕлме юрамасть-и?

– Халех, халех! Пăртак тăхтар-ха. – Палтанов Камров енне çаврăнчĕ. – Тимур, акă мĕн, Милицире хайхи фоторобот текеннине тăваççех пуль-ха. Анчах халь... Итле-ха, эсĕ лайăх ўкереттĕн вĕт шкулта. Атя, малтан хамăр туса пăхатпăр ăна, э? Куçпа курасчĕ, мĕнле пулса тухĕç çав вăрман хурахĕсем.

– Эп хирĕç мар!

Камров ўкерме тытăнчĕ. Карнашовсем каласа пынăçемĕн вăл малтан чăсмаккин сăнне хут çине кăларчĕ, ун хыççăн кутамаса сăрлама пикенчĕ. Мартынпа Ангелина кăшт урăхларах кăтартма, хушма е хуратма сĕнеççĕ те – улăштарать, тўрлете-тўрлете хурать, хуратать. Çапла, сăн ўкерчĕксем тикĕсленсе, уçăланса пычĕç-пычĕç те – ялтăрт "чĕрĕлсе" тăчĕç: Палтанов чылай хушă пĕлнĕ, куллен-кун тенĕ пек курнăçнă çынсем!

– Ну, мĕнле? – пуçне унталла-кунталла пăркаларĕ художник.

– Лайăх! Каснă-лартнă çавсем, – ырларĕç ăна Карнашовсем.

Тимофей Платонович хуравĕ пурне те тĕлĕнтерсе пăрахрĕ:

– Чăннипех лайăх! Уçамлă. Ман шухăш-тавçăру шăт та пат çирĕпленчĕ. Халĕ ĕнтĕ сире пĕлтерме те юрать. Кусем, – Палтанов сĕтел çинчи ўкерчĕксем çине аллипе тĕллесе кăтартрĕ, – пирĕн тĕп тăшманăн - Феофанов-Якушкинăн ушкăнĕнчен, унăн пулăшуçисем, тĕрĕсрех каласан, йыттисем. Пĕчĕкки – Çимук, тăрнаккайии – Кĕркури. Хушамачĕсене пĕлместĕп. Кăсăкланман.

Калаçу хĕрсе кайрĕ. Авă, мĕнле иккен! Маклай хваттерне те вĕсемех "прихватизацилени" пирки иккĕленмелле-и текех? Ахальтен уйăрас çук тĕнчерен çав кăмăлçаха. Кирлĕ мар çĕре сăмсине чиксе шăв-шав ан çĕклетĕр тесе хупланă ĕнтĕ çăварне. Апла тăк "мирлĕ" меслетсемпе кăна çырлахса лармаççĕ хурахсем. Чăрмав-мĕн сиксе тухсан ăна сирмешкĕн, çула ирĕклетмешкĕн нимĕн умĕнче те чарăнса тăмаççĕ. Вилĕ вăл чĕрĕ çынран нумай шанчăкларах: шарламасть, çăхав çĕклесе чупмасть.

– Курнă эпĕ вĕсене! – сасартăк сасă пачĕ Камров.

Пурте ун еннелле çаврăнчĕç.

– Ăçта? Хăçан?

– Ўкернĕ чухнех ăша темскер тăрмаланине туйрăм: пĕлнĕ-палланă çынсем пек, анчах камсем – пуçа нимĕн те килмерĕ. Халь тепĕр хут тимлесе лартăм та... пĕлетĕр-и, ăçта курнă? Тимофей Платонович, сирĕн путвал çывăхĕнче! Виççĕн ларатчĕç тенкел çинче.

– Виççĕн? – Палтанов кăртах çĕкленчĕ. – Ăна, виççĕмĕшне, ас тăватăн-и? Тăхта, хамах калатăп: Кĕркури пекех тăсланкă, çинçешке. Сарă кăтра çўçлĕ... Çапла-и?

– Ăхă. – Тимур тĕлĕннипе çăварне карса пăрахрĕ. – Ăçтан пĕлетĕр?

– Вăл та Чышкă ушкăнĕнчен. Эрхип ятлă. Виççĕн çўретчĕç ман хваттере Феофанов патне.

– Итлĕр-ха. – Чылай хушă чĕнмесĕр ларнă Карнашов сĕтеле пўрнисемпе шакăлтаттарса илчĕ. – Сирĕн, сыщиксен, çак хыпар хыççăн нимĕнле ыйту та çуралмарĕ-и?

– Çуралчĕ, Мартын Осипович, çуралчĕ! – Камров кил хуçин шухăшне тўрех ăнланчĕ. – Ытахальтен явăнса çўремеççĕ вĕсем путвал таврашĕнче. Тимофей Платонович унта пурăннине пĕлеççĕ. Апла пулсан... ăна хирĕçле пĕр-пĕр усал шухăш тытман-ши?

Палтановăн çăра сухаллă янахне çатăрланă алли талтах сикрĕ.

– Мĕ-ĕн?! Мĕн калаçатăр эсир, юлташсем? Пулма пултараймасть!

– Йăнăшатăр, Тимофей Платонович, – шухăшне малалла тăсрĕ Тимур. – Эпир пĕр-пĕринпе хутшăннине, унта-кунта çўренине, пухăна-пухăна калаçнине асăрхамасăр хăвармаççĕ тетĕр-им? Кам пĕлет, тен, вĕсен çыннисем бомжсем хушшинче те пур. Вăт тивĕçтереççĕ те вĕсем кирлĕ хыпар-хăнарпа. Эсир вĕсен киревсĕрлĕхне тўссе курнă, нумай пĕлетĕр. Çапла вара...

– Ай, хăрушă! – хыпса илчĕ Ангелина Васильевна. – Апла... Тимофей Платонович, сана та... çук, çук! Теветкелленме юрамасть. Куç пурăнма пирĕн пата.

– Чăнах, чăнах! – арăмĕпе килĕшсе пуçне сĕлтрĕ Мартын. – Унчченех сĕннĕччĕ сана.

Палтанов каллех хирĕçлесшĕн пулнине курса Камров хăвăрт каласа хучĕ:

– Ăмма, лайăх шухăш! Ку вариантпа çывăх вăхăтрах усă курма пултаратпăр. Анчах хальлĕхе тăхтар, Тимофей Платонович лерех, хăй калашле, упа шăтăкĕнчех пурăнтăр. Çапла кирлĕ. Шухăшсем пур. Сыхăлăха вара чăнах та ўстермелле пирĕн.

Вăл çав кунах милицине кайса Феофанов–Якушкинпа тата унăн кĕрчĕпе çыхăннă пĕтĕм хыпарпа паллаштарчĕ.

## VI

Трифон Шахранков, вăтам çулсенчи хытанка та шуранка арçын, шарт сиксе вăранчĕ, тарласа кайнă мăйне аллипе сăтăра-сăтăра илчĕ. Мĕн амакĕ? Каллех çав Палтанов! Тĕлĕкре вăл, çĕршĕнкĕ тунката, ăна майран çатăрласа тытрĕ те пăвса лартрĕ. Хĕремесленсе кайнăскер усал йытăлла хăрăлтатать: "Йăлтах сана пула! Йăлтах санран пуçланчĕ!" Юрать, сĕтел çинчи кивĕ патефон сасă пачĕ – ĕлĕкхи юрă тăсăмлăн сăрхăнса тухрĕ. Ăна илтсен Палтанов (ячĕ Тимофейччĕши – манса кайнă) кăртах каялла çаврăнчĕ. Ун аллинчен вĕçерĕннĕ Трифон урайне патлатса ўкрĕ...

У-ух, вĕлерсе пăрахатчĕ пуль, сăрттай! Мĕнле урса кайнă! Шкулта пĕрле нумаях та ĕçлеменччĕ унпа, анчах ăша темшĕн кĕрсе юлнă çав учитель. Те хирĕçсе пурăннăран. Ара, сĕре чăрсăрланса, сĕмсĕрленсе çитрĕ. Унченхи кивĕ пурнăçшăн тапаçланать, куштан, хальхине йышăнасшăн мар. Юлашкинчен тата асăрхаттарнине йышăнмасăр чĕрре кĕчĕ, ăна, директора, кăкăртан ярса тытрĕ. Хальхи тĕлĕкри пек...

Мĕн, каллех леш патефон? Çук иккен, телефон шăнкăртатать. Тĕлĕкри юрра малалла тăснăн унăн кĕвĕллĕ сасси вăратнă-мĕн Трифона.

– Итлетĕп! – Кам шăнкăравланине аппарат çинче çуталнă номер тăрăх ăнланса урăх нимĕн те шарламарĕ Шахранков.

– Канашламалли пурччĕ, – илтĕнчĕ йăпăлти сасă. – Миçере?

Трифон сехетне пăхрĕ.

– Пиллĕкре.

Çапла кĕскен темиçе сăмахпа калаçса çыхăнма килĕшсе татăлнă вĕсем Мефодий Якушкинпа, тĕрме "университечĕ" хыççăн "Чышкă" ята тивĕçнĕскерпе.

Вун çичĕ сехетчен вăхăт пур-ха. Шухăшсене пĕр çĕререх пуçтарас. Кăнтăрлахи апат хыççăн пăртак канса илес тесе диван пуçĕ çине таяннăччĕ те тĕлĕк курмаллах тĕлĕрсе кайнă, хăямат. Унашкалах "ирĕкленмелле" мар-ха. Кашни самантрах "çӳлтен" шăнкăравлама е "хăйсем" çитсе кĕме пултараççĕ. Тĕрĕссипе, "фирмăн" пĕтĕм тытăмне пĕлсех каймасть Шахранков (пĕлме те кирлĕ мар!). Тӳрремĕн темиçе çынпа çеç çыхăннă. Пĕтĕм йыша пĕрлештерекен вăрăм пусман пĕр картлашки эппин. Çапах та – пуçлăх. Унăн хăйĕн пăхăнаканĕсем пур. Çав шутра – Чышкă ушкăнĕ те.

Тĕлĕнмелле иккен вăл пурнăç тени. Таçталла та кукăртать сан çулна. Шутлама пултарнă-и эсĕ, Трифон Артемьевич, çак "кукăра" çитсе çапăнасса? Паллах, çук. Тĕлĕкре те тĕлленмен. Халĕ вара ним те мар палтăртататăн унăн пакăç авăрĕнче – хăнăхнă. Унччен, самана улшăннă чухне, митинг-пухусенче еплерех янăрашаттăнччĕ: "Тăван халăх ирĕклĕхĕшĕн! Унăн телейлĕ пуласлăхĕшĕн!" Халĕ вара "телейлĕ пуласлăх" шантарнă çынсене улталаса çарататăн, ватăсен, пĕччен пурăнакансен хваттерĕсене турта-турта илетĕн.

Шкул директорĕнчен кăларсан (çав Палтанов йышшисемех тăрăшрĕç пулмалла) Шахранков пĕр вăхăт ниçта та ĕçлемерĕ. Шкула тек чун туртмарĕ. Шăпах çавăн чухне "укçаллă" ĕç сĕнчĕç те ăна: тахçанхи юлташĕ, çĕнĕ пурнăçра хăвăрт майлашăнма ĕлкĕрнĕскер, çакăнта, хăй ĕçлекен сĕтел-пукан комбинатне – акционер обществине ертсе килчĕ. Хут тăрăх Трифон кадрсемпе ĕçлекен инженер, ĕçĕ вара – хайхи "фирма" "хĕсметĕнче".

... Урама тухсан Шахранков чарăнса тăчĕ, сигарет чĕртнĕ май яланхи йăлапа куç айĕн йĕри-тавралла хăвăрт пăхса çаврăнчĕ. Вăхăт иртнĕçемĕн çак сыхлăх туйăмĕ чакмалла, сĕвĕрĕлмелле пекчĕ ĕнтĕ: ĕç йĕркеленсе-ипленсе çитнĕ, тикĕсех мар пулсан та таптарать хăйĕн майĕпе – мĕн хăрамалли пур? Анчах чун лăпланас, кунĕленес вырăнне пушшех канăçсăрланать, ытларах та ытларах вĕркет. Шуйланчăк шухăшсем çине-çинех капланаççĕ. Юлашки вăхăтра – уйрăмах. Çитменнине - паянхи тĕлĕк. Мĕне пĕлтерет вăл? Ырра мар-тăр, ырра мар. Палтанов мĕнле çулăхрĕ. Мĕскĕн "таваруçă"! Лешĕ тата, çăтăх Чышкă, ырă хыпар пĕлтересшĕн çунать тетĕр-и? Иккĕлентерет. Темскер сиксе тухнă-ха - сассинченех палăрчĕ. Юрĕ, каяс - курăпăр унта.

Якушкина автобус-троллейбус чарăнăвĕнче асăрхаса Шахранков юнашарти сквера кĕчĕ, хăйĕн яланхи вырăнне – тĕм хушшинчи сарлака тенкел çине пырса ларчĕ. Кĕçех Чышкă та çитрĕ. Ĕлĕк, Палтанов патĕнче пурăннă чухне, ун сухалĕ вăрăмччĕ, кăкăр çине сапаланса аннăччĕ, халĕ ăна тирпейлĕн касса тикĕсленĕ.

– Ну? – сывлăх суннă хыççăн хăйĕн "çумĕ" çине тинкерӳллĕн пăхрĕ Трифон. – Мĕнпе савăнтаран ку хутĕнче?

"Каçăркка! – шухăшласа илчĕ Якушкин "пуçлăхĕн" тăрăхларах пичĕ мăн кăмăллăн караннине курса.– Хăвна кам вырăнне хуратăн-ши? Шутласан, мансăр

никам та мар вĕт эсĕ. Нуль! Пĕтĕм хура ĕçе кам тăвать? Эпĕ. Эсĕ вара – ырă ят илтекенни. Курнăçланас марччĕ хăть. Анчах хуравĕнче ăна-кăна палăртмарĕ: чăркăшса лармалли вăхăт мар халь.

– Каçарăр та, савăнмалли çукрах, Трифон Артемьевич.

"Савăнмалли çукрах"?! Çулăм чĕлхи тăсăлса кĕнĕн ăш-чикĕ тăрук вĕриленсе кайнине туйрĕ Шахранков. Чышкă хуравĕ чун пылакĕ пулас çуккине ăнлансан та "çутăраххине" шаннăччĕ вăл: тен, уссăрах пăшăрханать? Тен, паçăрхи ухмахла тĕлĕк хăратса пăрахрĕ? Темскерех сиксе тухман-тăр-ха.

– Япăххи вара... пур-и?

– Палтанов...

– Палтанов?! – Шахранков хăйне чараймарĕ, кăтăрсах кайрĕ. – Каллех Палтанов! Мĕн, паян пĕтĕм пурнăçа вăл хупласа хунă-им? Унсăр, çав лапра çапкаланчăксăр, пĕр утăм та тăваймастпăр-и?

"Çумĕ" тĕлĕнсе пăхнине курса Трифон тăпах чарăнчĕ, аллипе сулчĕ.

– Юрĕ, темех мар. Мĕн каласшăнччĕ?

– Палтанов тавра темскер тĕвĕленет унта.– "Пуçлăх" каллех "çурăлса" каймĕ-и тесе ун енне йăпăрт пăхса илчĕ Чышкă, лешĕ нимĕн те шарламаннине кура сăмахне малалла тăсрĕ. – Ăнланса пĕтерме йывăр. Бомжсен асли вăл. Президент теççĕ ăна.

– Президент? – Шахранков ахăлтатса ярасшăнччĕ пулас та темĕнле шухăш килсе кĕнипе тутине тăрăхлавлăн йĕрĕлтернипех çырлахрĕ. – Тупнă апла хăйне тивĕçлĕ вырăн: бомжсен президенчĕ! Патши! Лайăх янăрать вĕт, э?

Якушкин шӳте йышăнмарĕ.

– Кулмалли, чăнах та, пур ĕнтĕ. Чăнах та, ухмахла. Анчах ку, ман шутпа, çиелти выляв кăна. Вăйă вылямаççĕ вĕсем. Бомжсене пуха-пуха калаçаççĕ. Темĕн сӳтсе яваççĕ.

– Ку пире хăш енчен пырса тивет?

– Тӳрремĕнех!

– Мĕнле майпа?

– Çав пуху-канашлусенче вĕсем хăйсене инкек кӳнĕ, сăмахран, хваттерсĕр тăратса хăварнă, çынсене тавăрасси çинчен вирлĕн калаçаççĕ тет.

– Вăт ку кăсăклă!

– Кăсăклă çеç-и – хăрушă! Пире хирĕç тăрасшăн-çке. Пăхăр-ха, милици мар, прокуратура мар, çав лăпăр-лапăр! Хăçан пулнă вăл бомж травашĕ тепĕр хут çын шутне кĕме мекеçленни! Ку çеç-и-ха!..

– Мĕскер тата? – Ырă мара сиссе чĕри хăравçăллăн пăчăртана-пăчăртана илнине туйсан та Шахранков хăйне "пуçлăхла", çирĕппрех тытма тăрăшрĕ.

– Бомжсен хушшинче сас-хура çӳрет: Палтановсем вăрманти леш "ĕç" пирки çав-çавах чакаланаççĕ тет.

– Чим-ха, чим! Мĕнле "чакаланаççĕ"? Милици ĕçе хупнă вĕт-ха.

– Хупасса хупнă та... – Якушкин тытăнса тăчĕ: пĕтĕмпех каламалла-ши? Юрĕ, пытарас мар, атту тем сиксе тухасси пур кайран, хамах айăплă пулса юлăп. – Хăйсен юлташне, хайхи Маклай текеннине, кам вĕлернине тĕпчесе пĕлесшĕн пулать.

Трифон тенкел хăмине çатăрласа тытрĕ.

– Ну, хыпарсем те вара сан! Пĕри тепринчен начартарах. Апла пире хирĕç вăрçă пуçланă.

– Çапла пулса тухать.

Шухăшĕсем ниçта кайса кĕрейми явăннипе Шахранков куçне хупрĕ. Акă, вăл тĕп хăрушлăх! Вилĕмпе çыхăннăскер. Манас тесен те манаймăн, ăшран кăларса ывăтаймăн. Çав Маклай хăйĕн икĕ пӳлĕмлĕ хваттерне пĕчĕкреххипе улăштарма шут тытнă. Чышкăпа унăн шакалĕсем суя фирма ячĕпе витĕнсе илсе çитернĕ ăна çав шухăш патне. Унăн паспорчĕпе, ытти докуменчĕпе усă курса хваттерне сутса янă. Укçи, паллах, Маклая лекмен. Кайран вăл тăна кĕнĕ, çĕмĕрĕлме пуçланă, хăратма та пикеннĕ. Ыйтрĕ вара Шахранковран Якушкин: мĕн тумалла? Ун пек анра-сухраран темĕн те кĕтме пулать. Мĕн тумаллине Чышкă хăех пĕлнĕ, "пуçлăх" ирĕк пани çеç кирлĕ пулнă ăна. Хуравлама тиврĕ Шахранковăн: "Юрать": Чышкă вĕшлисем вара Маклай хыççăн вăрмана йĕрлесе кайнă...

Çапла, çав пысăк преступленишĕн эсĕ те тӳрремĕнех айăплă, Шахранков господин!

Халĕ вара Палтановпа каллех çавнашкалах пулса пырать мар-и? Анчах ку хутĕнче вăл нумай кăткăсрах, йывăртарах. Тăшманĕ те лешĕн пек айванкка кӳсе мар, хура-шур витĕр тухса пиçĕхнĕскер, хăйĕн кун-çулĕн кукăр-макăрĕшĕн, çамрăк юлташĕн вилĕмĕшĕн айăплисене тавăрма тĕллев тытнăскер.

Вăл халь чи пысăк хăрушлăх вĕсемшĕн. Ăна "пуçтармаллах". Унсăрăн, тĕлĕкри пек, хăй ярса тытĕ мăйран. Мĕнле кăшкăрашрĕ! Халĕ те хăлхара: "Йăлтах сана пула!" Чышкă унăн пурнăçĕн шкул хыççăнхи тапхăрĕ çинчен каласа кăтартнăччĕ-ха. Чăннипех çапла пулса тухать: унпа, директорпа, хирĕççен, çиллине ниçта кайса чикеймесĕр пăрахса кайнă вăл ĕçĕнчен. Чалăшнăçемĕн чалăшнă вара ун пурнăçĕ, тӳнсех аннă. Халĕ çĕнĕрен çĕкленесшĕн-и? Ура çине тăрасшăн-и?

Чăнах та, мĕн тумалла? Ыйтăва татса памаллах. Халех, пĕр тăхтамасăр. Эх, май килес тĕк, ĕлĕкхи пек ирĕклĕ пулас тăк çакăнта сехĕрленсе ларма-и – таçта çити тĕнче хĕрринелле тапса сикĕччĕ Трифон: тĕп пулăр эсир, Якушкинсемпе Палтановсем, тамăк шăтăкне кĕрĕслетсе анăр! Анчах ăçта тарса пытанайăн? Хытă алăра вĕт. Йăпăр-япăр вĕçерĕнеймĕн унран. Каялла çул çук. Кирек мĕнле пулсан та малаллах тапаçланмалла.

– Вара, Трифон Артемьевич? – татрĕ Чышкă Шахранков шухăшне.

"Пуçлăх" иртнинчи пекех кĕскен хуравларĕ:

– Юрать.

## VI

– Ну, мĕнле? – Хваттере кĕрсе тăнă икĕ çамрăка алă парса диван çине лартрĕ Тимур.

Пĕр хăни, пăлатнарах çан-çурăмлă Витюк – Виталий Хмаркин, пысăк чакăр куçне кăмăллăн-шахвăртуллăн çиçтерсе кăкăр кĕсйинчен хут пакет туртса кăларчĕ. Кил хуçи пакета пуçхĕрлĕ тытса силлерĕ те, сĕтел çине сăн ӳкерчĕксем йăпăр-р тухса ӳксе сапаланчĕç.

– А-а, хамăр ял! – Якушкина курса шӳтлĕн каларĕ Камров. – Тепри вара...

Кухньăран аллине чей стаканĕ тытнă Палтанов тухрĕ. Тĕл пулăва маларах çитнĕскер вăл чейпе хăналанма та ĕлкĕрнĕ.

– Салам, ачасем! Тепри кам тетĕр-и? Ай, тĕнче! Ай, мерекке! – Тимофей Платонович стаканне лартрĕ те сăн ӳкерчĕкне хăвăрт ярса тытрĕ. – Кама куратăп!

– Паллаканни-им? – виççĕн харăс тайăлчĕç ун еннелле.

– Паллаканни çеç-и. – Питĕ лайăх пĕлекенни! Шкулта пĕрле ĕçленĕ унпа. Пирĕн директорччĕ. Трифон... э-э... Артемьевич Шахранков. Тимур, ас тăватăн-и, сана каласа панăччĕ ун пирки.

– Çапла, çапла! Чăнах та тĕлĕнтермĕш. Пăхăр-ха, Чышкăпа юнашар лара парать, ваçка. Кам шухăшлама пултарнă! Ну, тавтапуçах, тусăмсем! Çав тери пысăк ĕç турăр. Çав тери кирлĕ хыпар илсе килтĕр.

– Чи малтанах акă, кама тав тумалла! – Витюк хăйĕн юлташне – хура вăрăм çӳçлĕ, хĕрачанни евĕр илемлĕ куç харшиллĕ Вавил Юсанова хулпуççинчен тытса ыталарĕ. Килнĕренпе те сăмах чĕнменскер, лешĕ именчĕклĕн кулса илчĕ. – Чăн-чăн разведчик!

Палтановпа Камров паян вĕсене, иккĕшне, питĕ яваплă ĕç хушнă: Чышкă хыççăн йĕрлесе вăл кампа-кампа тĕл пулнине пĕлмелле, май килсен, меллĕ самант тупăнсан фотоаппаратпа ӳкерсе илмелле. "Çар заданийĕ" уйрăмах Вавила килĕшнĕ. Ашшĕнчен, хулари паллă фотокорреспондентран, вĕренсе мĕн ачаран сăн ӳкерме хăнăхнă вăл. Анчах кунашкалли пулманччĕ-ха! Пырса: "Юлташсем, пăхăр-ха кунталла, кулăр хаваслăнрах, тимлĕн сăнăр фотоаппаратран кайăк пăр-р! вĕçсе тухнине", – тесе калаймастăн-çке. Калаçма терĕ-ха – курăнма та юрамасть. Вăрттăн ӳкерсе илмелле тенкел çинче ларакан икĕ çынна. Вĕсем вара, ав, мĕнле сыхлануллă, ун-кун пăхкаласа çеç лараççĕ. Питĕ асăрханаллă пулмалла.

Çапах та аптраса ӳкмерĕç Вавилпа Витюк. Фотоаппарат лайăх ("класс!" тет ăна хуçи), тенкел патне çывхарма кирлĕ мар, инçетренех ӳкерме пулать. Улах вырăна, çуркуннене хатĕрленсе тинтерех çеç куснă йывăç турачĕсен купи ăшне кĕрсе вырнаçрĕç "разведчиксем". Ытти вара – Юсанов ĕçĕ. Чылай ӳкере-ӳкере илчĕ вăл "объект-субъектсене".

– Шахранков вара? – ыйтрĕ Палтанов. – Ăна çаплипех... ирĕке ямарăр пуль те?

– Тимофей Платонович! – кӳренӳллĕ сасăпа хуравлама тăчĕ Хмаркин, анчах лешĕ ăна пӳлчĕ:

– Юрĕ, юрĕ, пĕлетĕп эсир ĕçе вĕçне çитермесĕр таврăнас çуккине. Манăн та тав сăмахĕ калассի çеç юлать сире.

Чăнах та, Вавила сăн ӳкерчĕксем пичетлесе хатĕрлеме ярса Витюк объекта сĕтел-пукан комбинатне çитичченех куçран вĕçертмесĕр ăсатрĕ. "Йăви" паллă – ыттине каярахпа пĕлĕç.

Камров Хмаркинпа тата Юсановпа милицире ĕçленĕ вăхăтра çывăх паллашнă. Тĕрĕссипе, унччен те пĕлмен мар-ха вĕсене: юнашар çуртра пурăннă май картишĕнче, урамра час-часах тĕл пулнă, анчах çулĕсем тĕрлĕрен пирки (Тимур аслăрах) хутшăнсах кайман. Каярахпа, çитĕнсе пынăçемĕн, çамрăксем пĕр-пĕрин патнелле ытларах та ытларах туртăнма тытăннă – туслашнă. Милицире чухне Камров çамрăк юлташĕсене ĕçе вырнаçма та пулăшнăччĕ. Йĕркелĕх хуралçисен ретне тăрас шухăша та пĕрре çеç мар хускатнă: Тимур хăйĕн ĕçĕ çинчен

кала-кала кăтартни каччăсен чун-чĕрине хытах тапратнă. Шел, аслă юлташĕн милицирен тухса кайма тивсен çав ĕмĕте пурнăçлассине каярахри вăхăта хăварма лекнĕ. Çапах та ăна тĕппипех пăрахман. Хăйсен хальхи ĕçне – Камров сĕннипе бомжсен организацине пулăшнине, Витюкпа Вавил милицири хĕсмет умĕнхи хатĕрленӳ тапхăрĕ теççĕ.

– Камăн мĕнле шухăш çуралчĕ? Мĕнле сĕнӳ пур? – Хмаркинпа Юсанов илсе килнĕ ырă хыпар çĕнĕ вăй кĕртнĕн, ăшри тахçанхи кĕрешӳ туйăмне вăратса çĕклентернĕн Палтанов юлташĕсем çине алхапăллăн пăхрĕ. Тимур темскер каласшăн хускалнине курса аллипе сулчĕ. – Çук-ха, эс тăхта. Çамрăксене итлер малтан.

Хмаркин пуçне ялтах çĕклерĕ.

– Эпир... тархасшăн. Анчах шухăшĕ-мĕнĕ...

– Аса илĕр-ха: куçа мĕн те пулин уйрăмах тăрăнмарĕ-и? Хăйсене тыткаланинче, сăмахран.

– А-а... Ну, пĕр япала. Ман шутпа, Шахранков хайхи Чышкăн хуçи пулмалла – хăйне асли пек тыткаларĕ.

– Эп тата... – Юсанов та калаçăва хутшăнчĕ. – Кирлĕ-и ку, кирлĕ мар-и...

– Эс кала, кала!– хавхалантарма васкарĕ ăна Тимур.

– Шахранков текенни питĕ хăраса ӳкнĕ пек туйăнчĕ. Пит-куçĕ сиккелет те сиккелет, кадра ниепле те кĕресшĕн мар. Çапах та вĕçертмерĕм ăна, ӳкертĕм-ӳкертĕмех. - Вавил кулса ячĕ: малтанхи вăтанăç туйăмĕ иртсе пычĕ курăнать.

– Пăхăр–ха, чăн-чăн психологсем! – Палтанов та куçне кăмăллăн йăлтăртаттарчĕ. – Кирлĕ, кашни пĕчĕк япала кирлĕ халь пире. Маттур! Эс вара, Тимур...

– Ман шутпа, Чышкă лайăх мар хыпарпа пынă тĕл пулăва. Вăт çавăнпа сехĕрлентерсе ӳкернĕ пуль лешне. Анчах вĕсем темскер каварлашаççĕ пуль теп. Çавăнпа, Тимофей Платонович, сирĕн вăхăтлăха "çухалмалла" пулать.

– Мĕнле "çухалмалла"?

– Ас тăватăр-и, Карнашовсем патĕнче хускатнăччĕ ку ыйтăва. Çав вăхăт çитрĕ темелле. Темиçе кун кайса пурăнăр унта. Эпир вара тĕрĕслĕпĕр: сире шыраса чупкалама тытăнĕç-и вĕсем, çук-и. Кун пирки милици çыннисемпе калаçса татăлнă.

Тепĕр кунхине кăнтăрла çитеспе Палтанов "килĕнчен" тухрĕ. Инçе çула кайма хатĕрленнĕн ăшă тăхăннă хăй. Çурăмĕ çинче – кутамкка. Самантлăха чарăнса тăчĕ, йĕри-тавралла пăхса çаврăнчĕ, вара автобус-троллейбус чарăнăвĕ еннелле уттарчĕ.

"Ăхă, акă пĕри!" – Камров, çăмăл автомашинăра юлташĕпе, милицире пĕрле ĕçленĕ Клим Чирков лейтенантпа, лараканскер, Якушкин "адъютантне" Çимука асăрхарĕ. Лешĕ тимĕр карта юпи çумне тайăнса сăра ĕçетчĕ те Палтанова курсанах кĕленчене юр çине вăркăнтарчĕ, кĕсье карас телефонĕ кăларса таçта шăнкăравларĕ. Те çийĕнчех хуравламарĕç ăна, те ыйтăвне васкавлăн татса параймарĕç – Çимук сăмахласа пĕтернĕ çĕре Тимофей Платонович çынсем хушшине кĕрсе çухалчĕ.

"Адъютант" урама чупса тухрĕ, унталла-кунталла пăхкаларĕ, юлашкинчен çурт йĕри-тавра та çаврăнса килчĕ – усси пулмарĕ, "мулкач" ниçта та курăнмарĕ. Пач çухалчĕ. Чышкă вара хытарсах каланăччĕ: куçран ан вĕçертĕр! Теле-

фонпа шăнкăравласа тăмалла марччĕ, хăямат. Старик çывăха кăна тухнă пулсан тем марччĕ-ха: лавккана-и унта, урăх çĕре-и. Халь вара тулли кутамкка уртса янă. Пĕр-пĕр дачник пек. Нивушлĕ аяккарах кайма тухнă? Вăт канашласа илмелле пулчĕ Чышкăпа. Тьху! - Çимук хытса пăрланнă юр муклашкине урипе тапса сирпĕнтерчĕ.

Халь мĕн тумалла ĕнтĕ? Эх, тахçанах пуçтармалла пулнă çав. Чĕр тăшманçке вăл. Хăрушă тăшман. Май килсен кирек хăш вăхăтра сутма, пӳрнепе тĕллесе кăтартма пултарать: "Акă вĕсем, мана кил-çуртсăр хăварнă эсреметсем!" Миçе хутчен аса илтермен пуль кун çинчен Чышкăна – яхăнне те ямасть. Хĕрхенетши? Унашкал туйăм пĕр пĕрчĕк те çук-ха унăн. Пĕлсе пĕтер. Халĕ вара хӳрине хĕстернĕ пулас-ха – хирĕç мар. Ирĕк пачĕ. Анчах малтан сăнама хушрĕ. Теветкеллĕ пулсан та (хăй вăхăтĕнче Палтанов хваттерне Феофанов-Якушкин патне сахал çӳренĕ-и – такам та курнă-тăр) ку таврана унччен те киле-киле çаврăнман мар-ха. Халиччен пĕччен пурăннă Палтанов патне юлашки вăхăтра темшĕн çынсем час-часах пухăнаççĕ. Камсем? Мĕн тĕллевпе? Темле сас-хура та çӳрет. "Ĕç" тума ан чăрмантарччăрах...

"Ĕç тума"... Калама çăмăл. Чышкă ахальтен хăрамасть пуль – пуç çине хураха яр пĕлĕт капланнине туять-и? Апла тăк пушшех васкамалла. Анчах ку Палтанова йăпăр-япăрах йăвантараймăн. Маклай мар вăл. Лешĕ, айванкка, пиклетсе те ĕлкĕреймерĕ. Чăн та, аса илсен чун халĕ те сӳлетет, тăр-тăр чĕтренет: вилес умĕн куçĕпе Çимука тĕллерĕ те... Турăçăм, мĕн ку? Таçтан шалтан, куç тĕпĕнчен, вут-хĕм сапса сирпĕнтерчĕ, çавăнтах куççуль тумламĕсем йăрăлтатса тухрĕç...

Хăрушă ӳкерчĕке сирсе ывăтаслăн Çимук пуçне силлесе илчĕ. Халь вара каллех çавнашкаллине курма тивĕ-и? Тен, килĕшес мар? Çук, каялла чакаймăн текех. Ирĕк памĕç. Пĕр вараланнă тăк... Анчах ку ватă кашкăрĕ мана лайăх пĕлет, хăйне мĕнле "ырă" тунине манман, паллах. Уççăн пыраймăн ун патне. Юрĕ, шухăшлăпăр. Халь ăçталла юрттарчĕ-ши ку сӳлкке?

...Лару-тăру малалла мĕнле аталанса кайĕ-ши тесе Камровпа Чирков автомашинăран тухма васкамарĕç. Кунта вĕсен çыннисем татах пур, тĕрлĕ çĕре вырнаçнă. Темĕнле кĕтменлĕхех сиксе тухас çук. Çимука Тимофей Платонович хыççăн каясран чăрмантарма та хатĕрленнĕччĕ. Шĕкĕр Турра, унсăрах йĕркеллĕ пулса тухрĕ. Ай-вай, ку мĕскер тата? Якушкинăн тепĕр икĕ вĕшли – Кĕркурипе Эрхип! Телефонпа калаçнă хыççăн хуçи янă-ши? Тӳрех Çимукпа аллисене сулла-сулла хĕрсех калаçма тытăнчĕç. Тепĕртакран уйрăлчĕç: Эрхипе "дежурствăна" хăварса Çимукпа Кĕркури пăрахса кайрĕç.

Камров хăйĕн "агенчĕпе" тĕл пулма васкарĕ: тахçантанпах пĕлекен пĕр бомж вăл ыйтнипе паян çак картишне "хурала" килме килĕшнĕ.

– Салам, Прохор! – Тимур гаражсен хушшине кĕрсе самаях çулланнă арçынпа калаçу пуçарчĕ. – Хыпар пур-и?

– Пур!

– Ну, ну!

– Темиçе сăмах илтме май килчĕ. Пĕри – Тимофей Платонович пирки. Ăна часрах тупмалла теççĕ.

– Ăнланмалла.

– Унтан темĕнле операцие асăнчĕç. "Вăраха ямалла мар" тенĕ пек ăнлантăм.

– Тавтапуç.

Камров автомашинăна кĕрсе ларчĕ.

– Карнашовсем патне!

VII

Карнашовсен хваттерне кĕнĕ-кĕмен Тимур шўтлĕн-хавхаллăн ыйтрĕ:

– Ăçта вăл пирĕн таркăн? Чĕрех-и?

– Чĕрех, чĕрех! Мĕн пултăр мана. – Тимофей Платонович кил хуçи хыççăн алăк патне иртрĕ.

– Лере вара сире шыраса хăшкăлчĕç. Уйрăмах леш самăркки, çавраќа питли.

– А-а, Çимук!

– Вăт, вăт! Тарăхнипе çурăлса каятчĕ пуль. Кайран тепĕр икĕ чанккама пĕрĕхтерсе çитрĕ. Каллех эсир лайăх пĕлекеннисем. Çапла вара...– Камров чарăнса тăчĕ, Палтанов çине тинкерўллĕн пăхрĕ. – Çапла вара сăнав иртттерсе – сире "тартса" – тĕрĕс турăмăр эпир. Чышкă сирĕнпе хытă кăсăкланни çирĕпленчĕ. Кăшт çухалтăр кăна – авă, мĕнле хыпăнса ўкрĕç. Ахальтен-ши?

– Кунпа мĕн каласшăн эс?

– Сирĕн киле таврăнма юрамасть – акă мĕн.

Сăмах мĕн çинчен пынине ăнлансан та Тимофей Платонович ыйтмасăр чăтаймарĕ:

– Мĕншĕн?

– Кун пирки иртнинчех сăмах пулнăччĕ ĕнтĕ. Тўрех "Сире вĕлерме хатĕрленеççĕ" теме хал çитерейменрĕ Тимур. – Куна Клим Нестерович та çирĕплетме пултарать.

– Чăнах та çапла, Тимофей Платонович. – Ахаль те яштакскер Чирков çурта пек тўрленсе тăчĕ. – Хăвăрах ăнланатăр, хăрушлăх пысăк. Тĕллев тытнă тăк, каçарăр та, ăна пурнăçламасăр чарăнас çук вĕсем. Çавăнпа сирĕн пурăнакан вырăна улăштарма тивет. Вăхăтлăха ĕнтĕ. Хурахсене сиенсĕрлетиччен.

Палтанов аптăравлăн пăхкаларĕ.

– Апла эп халь сунарçăсем хăвалакан тискер кайăк вырăнĕнче? Тĕнче тамаши! Мĕн кăна тўсмерĕм пуль, анчах кунашкаллине курманччĕ-ха. Бомжа кăларни çитмест – пуçĕпех пĕтересшĕн!

– Тимахви! – хул пуççинчен ыталарĕ Мартын. – Лăплан. Ытлашши ан хуçăл. Тĕрĕс калаççĕ: сан хальлĕхе кунтан тухма юрамасть.

– Çук, çук, ниçта та каймастăн, Тимофей Платонович. Пурăн кунтах, – арăмĕ те кăлăк чăххи евĕр кускалама тапратрĕ.

Сăмаха пĕтĕмлетнĕн Чирков татса каларĕ:

– Килĕшрĕмĕр-и, Тимофей Платонович? Ытти – милици ĕçĕ. Хамăрах тăватпăр.

– Çук! – сасартăк пўлчĕ ăна Палтанов. – Килĕшместĕп!

Чăр пăхрĕç пурте ун çине.

– Мĕнле апла? Куратăр вĕт-ха...

Палтанов ăшра хирĕçлев хумĕ чашкăрса хăпарнине туять. Ĕлĕкхи, бомж

пурнăçĕ хутлатса лартичченхи пекех чăрсăррăн шăртланасшăн. Кĕрешĕве чĕннĕн туллин капланать.

– Куратăп, юлташсем. Лайăх чухлатăп. Анчах текех мĕскĕнленес килмест. Çитет! Ахаль те кунĕн-çĕрĕн чĕтресе пурăнатпăр: пĕри юнать, тепри чышать... Татах нумай чăтмалла-и? Хӳтĕленмелле мар вĕсенчен, хăйсене тапăнмалла. Нивушлĕ чарма çук çав эсрел таврашне?

Ӳпкев йĕппи чи малтанах хăйне (милицие!) тăраннине туйса Чирков хураввличчен шухăшласа илчĕ: ĕç-пуç мĕнле пыни çинчен кĕскен те пулин пĕлтермелле мар-ши?

– Сăмахăр тĕрĕсех, Тимофей Платонович. Хăвăртрах ярса тытмалла çав вăрă-хурах ушкăнне. Çапла тăватпăр та! Анчах тепĕр чухне васкани усă кӳмест – тăхтама тивет. Мĕн тума май килнине илсен... Сирĕнпе пĕр ĕçе кӳлĕнтĕмĕр те – пытарса тăмастăп. Çынсен хваттерĕсенеултавлă майпа "прихватизацилекен" "фирма" йĕрĕ çине ӳкнĕ эпир. Чылай тĕслĕхе уçса палăртнă. Эсир пулăшнипе Якушкин ушкăнĕ кампа çыхăннине пĕлме пултартăмăр. Маклай текен Давид Санукова кам вĕлерни те уçăмланать.

– Кам?! – пĕр харăссăн хашлатса ячĕç тăваттăн.

– Хальлĕхе татсах калаймастăп, анчах эсир шутланă çынах – Семен Квахтулин пуль тетпĕр. Çимук. Вăрманта тупнă кĕреçе аври çинчи пӳрне йĕрĕсем шăпах унăн пулнине çирĕплетме май килчĕ. Мартын Осиповичпа Ангелина Васильевна фоторобботсем тума пулăшрĕç. – Лейтенант кил хуçисем еннелле тайăлса илчĕ. – Çапах та ку йăлтах – малтанласа палăртнă тăрăх. Паллах, малалла татах сахал мар ĕçлеме, çĕнĕрен те çĕнĕрен тĕпчеме тивĕ. Пĕлменни сахал мар. Халĕ вара...

– Халĕ вара... пĕрлех ĕçлĕпĕр! – Чирков сăмахĕсене хăйĕн шухăшĕпе малаллла тăсрĕ Палтанов. – Пире "отставкăна" яма иртерех-ха. Кирлĕ эпир милицие. Ĕçе хăвăртлатма та, хурахсене ярса тытма та пулăшма пултаратпăр.

Клим хăйĕннех:

– Ăнланăр-ха, хăрушлăх пысăк.

– Мĕнле калаççĕ-ха: кашкăртан хăрасан...

– Кусем кашкăр йышши çеç мар!

– Итлĕр-ха, юлташсем. – Палтанов тавлашнăçемĕн хĕрӳленес вырăнне кунĕленсе пычĕ. – Айтăр, шутласа пăхар. Мана çухатнипе тăшман çырлахĕ тетĕр-и? Паллах, çук. Шырама пăрахмĕ. Апла тăк пытаннин мĕн усси? Çапла пĕр-пĕрне йĕрлесе пурăнăпăр-и?

– Мĕн сĕнесшĕн вара эсир? – тӳсеймерĕ Камров.

– "Тĕнчене" тухмалла ман. Курăнмалла. Тăшман эпĕ нимĕн те пĕлмес тесе шутлатăр.

– Каларăмăр-çке: хăрушă.

– Хăрушă-и, хăрушă мар-и – хурахсене, ман шутпа, çапла ярса тытма пулать.

– Санăн пурнăçупа теветкелленме пултараймастпăр! – Чирков та вĕриленме пуçларĕ.

– Паллах, сыхланма лекет ĕнтĕ. Юлташсемпе пĕрле пулма тăрăшăп. Хăшнепĕрне "хваттере" те ярăп.

– Ай, питĕ çăмăл-çке! – Лейтенант пӳлĕм тăрăх утса çаврăнчĕ. – Унта-кунта тухса çӳремесĕр пур пĕр пурăнаймастăр. Вĕсем вара сире куçран вĕçертмĕç. Пĕччен юлнă саманта кĕтсе илĕç-илĕçех. Эсир темле асăрхансан та. Çук, çук, путвала таврăнма юрамасть сирĕн.

– Апла... ăçта пурăнас манăн?

– Тимахви, эс мĕскер? – ӳпкевлĕн пăхрĕ Мартын. Татах темскер каласшăнччĕ те, ăна Камров пӳлчĕ:

– Клим, тен, хула тулашне тухмалла пирĕн? – Юлташĕн шухăш юххине пĕр пăрăнчăка та сиктермесĕр туйса-сăнаса лараканскер вăл лайăх ăнланать: Чышкăсене тепĕр преступлени тунă чухне тытса чармалла, анчах Палтанова хăрушлăха кĕртсе ӳкермесĕр. Урăхла май шырамалла.

Лейтенант тӳрех ăнкараймарĕ:

– Хула тулашне. Ăçта?

– Пĕр-пĕр дачăна. Тимофей Платонович унта пурăнма куçнă тесе сăмах сарас.

Дача! Темĕнле савăнăçлă хыпар илтнĕн пурте кĕпĕр хускалса илчĕç. Чăнах та-çке! Мĕнле малтанах тавçăрса илеймерĕмĕр-ха? Тăшман валли капкăн лартма шăпах меллĕ унта.

Кил хуçи шахвăртуллăн хушса хучĕ:

– Тимахвин вара лайăх пĕлекен, хăй пурăнса курнă дача пур. Çывăхрах, хула çумĕнчех.

Саманчĕ хаваслах мар пулсан та кашнин пит-куçĕнче кулă ялтлатрĕ: Палтанов Карнашовсен дачине "оккупацилени" çинчен хыпар Чирков хăлхине те кĕме ĕлкĕрнĕ. Лейтенант куна пытармарĕ, кил хуçисене пăхса шӳтлĕрех ыйтрĕ:

– Тимофей Платоновича унта тепĕр хут кĕме ирĕк памăр-ши?

– Паратпăр, паратпăр, тархасшăн! Ырă çынсем валли ним те шел мар. – Чирков пекех çăмăлçах калаçма тăрăшрĕ пулсан та пăлханăвне лăплантараймарĕ Мартын. – Анчах темле пулĕ ĕнтĕ. Хăрушлăх çав-çавах пур-çке.

– Ан пăшăрханăр, пĕччен хăвармастпăр Тимофей Платоновича. Эпир те унпа пĕрле пулатпăр. – Чирков Палтанов енне çаврăнчĕ. – Хăвăр вара мĕн шутлатăр, Тимофей Платонович? Ку вариантпа килĕшме пулать-и?

– Ма килĕшес мар? Эпĕ хатĕр.

– Апла тăк ĕçе тытăнар!

...Камров "агенчĕ" Прохор пальто çухине тăратрĕ: çанталăк сивех мар пулсан та нӳрлĕ çил самаях шăнтать. Тимур ăна каллех тепĕр задани пачĕ: темрен хăраса ӳкнĕ Палтанов паллакан пĕр çын дачине тарса кайнă, унта пытанса пурăнать тесе хыпар сармалла. Мĕнле килĕшмĕн? Камрова вăл нумайранпа пĕлет: тахçан, чылай çул каялла, унăн ашшĕпе Шупашкарта электроаппаратура заводĕнче пĕрле ĕçленĕ. Ку çеç те мар. Маклайпа туслăччĕ Прохор, ăна хăйĕн ывăлĕ вырăннех хуратчĕ. Çав юмарт çынна вĕлернĕ тенине илтсен чутах чирлесе кайманччĕ: ахаль те вăйсăр чĕри темскерпе хĕстернĕн ыратма пуçларĕ. Тепĕр хыпарĕ кăштах лăплантарчĕ: чун иллисене çывăх вăхăтрах тытма май пур иккен. Тимур çак ĕçре пулăшма ыйтрĕ.

Палтанов путвалĕ патнелле çывхарнă чухне Прохор ӳсĕре печĕ: тайкалана-

тайкалана утнӑ май кӗсьерен сӑра кӗленчи кӑларчӗ, чарӑнса ӑна ҫаварӗнченех ӗҫме тытӑнчӗ. Куҫ айккипе асӑрхарӗ: юнашарти лавкка алкумӗн чӳречинчен вӑрӑмкка арҫын пӑхать. Ай-вай-вай, паллаканни вӗт ку! Ӗнер ҫеҫ курнӑччӗ ӑна ҫакӑнта. Тепӗр тӑсмакпа пӗрле килнӗччӗ. Хытӑ пӑсӑрлантарчӗҫ виҫҫӗмӗшне, ахаль те ниҫта кайса кӗрейми ӑшталанакан чӑмӑрккана. Ҫапла, ҫапла, Эрхип ку! Камров каласа-сӑнласа кӑтартнӑ хыҫҫӑн виҫҫӗшне те лайӑх ас туса ӑша хывнӑ.

Паян каллех "постра" эппин. Палтанова кӗтет пуль ӗнтӗ. Ӑшӑрах вырӑна кӗрсе вырнаҫнӑ. Урамра аплах мар ҫав. Ҫын куҫӗнчен те аяккарах капла.

Прохор ҫывӑхри хыҫлӑ тенкел патне пычӗ. Ӗнер те ҫакӑнта кӑштӑртатнӑччӗ вӑл: лавккаран кӑлара-кӑлара пӑрахакан картун курупкасене сӳтсе купалатчӗ, майлаштарса ҫыхатчӗ (вӗсене укҫалла йышӑнакан ятарлӑ пункт пур). Вӑт ҫавӑн чухне пӑртак тӑнлама май килнӗччӗ хайхи "тройка" калаҫӑвне. Халӗ мӗнле пурнӑҫламалла-ши Тимур ыйтнине? Ай, ӑнать мар-и? Эрхип лавккаран тухрӗ, кунталла килет. Прохор ӗнер пӑрахса хӑварнӑ курупкасене салатма тапратрӗ.

– Итле-ха, – сасартӑк илтӗнчӗ пуҫ ҫинче Эрхип сасси.

Прохор ерипен ҫӗкленчӗ.

– Мана-и?

– Сана, сана!

– Ну, мӗн? – Прохор сулӑнса илчӗ: "ӳсӗр"-ҫке.

– Эс кунта час-часах пулатни?

– Кашни кун! Ку – ман территори, ман патшалӑх. – Ҫапла кларӗ те тӗлӗнсе шухӑшларӗ Прохор: малтан хатӗрленмесӗр-тумасӑрах мӗнле пит "яка" ҫавӑрса хума пултарчӗ-ха ҫапла? Ӗлӗк художество пултарулӑх спектаклӗсенче вылянӑ "артист" вӑранчӗ-ши? Ара, камӑн рольне кӑна вылямн пуль: Ухтеркке, Айтар, Йӑкӑнат...

– Мату-ур! Чӑн-чӑн патша апла эс.

– Патша? Ҫук, тӗрӗс мар. Патша-президент вӑл, ав, унта! – Прохор путвал еннелле аллипе сӗлтсе кӑтартрӗ. – Эпӗ пӗччен, хам тӗллӗн. Никама та пӑхӑнмастӑп.

– Эс Палтанов пирки-и? Шӑпах ӑна, президента, курмаллаччӗ ман. Таҫта кайнӑши – кӗтеп, кӗтеп...

– Кӗтсе илеймӗн! Пурӑнмасть вӑл кунта текех. Тарнӑ. Хӑравҫӑ!

– Ак япала! Мӗн пулнӑ? Ӑҫта кайнӑ?

– Таҫта дачӑна пурӑнма куҫнӑ тет-и. Чим-ха! - Прохор сасартӑк ҫаврӑнса Эрхипа куртка ҫаннинчен ярса тытрӗ. – Эс мӗскер вӑлтан манран капла?

– Питӗ кирлӗччӗ вӑл мана. Анчах ку сан хӑлху валли мар! – Эрхип карт туртӑнса аллине вӗҫертрӗ. – Дачи ӑҫтине пӗлместни?

– Мӗнле калас...– Прохор пушӑ сӑра кӗленчине тенкел айне лартрӗ. – Э-эх, сӑра пӗтнӗ...

– Тен, эрех? – ун шахвӑртӑвне тӳрех ӑнланчӗ Эрхип.

– Хирӗҫ мар. Пуҫ ҫурӑлса тухать.

"Хуралҫӑ" лавккаран шурӑ эрех илсе килчӗ. Ҫуршар стакан ярса ӗҫнӗ хыҫҫӑн Прохор калаҫӑва малалла тӑсрӗ:

– Эпӗ чӑн тӗрӗсне калама пултараймастӑп...

– Эс мӗн, куласшӑн-и манран? – Эрхип бомж патне ҫывхарчӗ, ун ҫийӗн ыйту палли пек авӑнчӗ.

– Каласа пӗтерме пар! – Шикленет пулсан та (ним те мар ҫапса пӑрахма пултарать ку ҫурмаккай!) хайне хытӑрах тытма тӑрӑшрӗ Прохор. – Палтанов ҫинчен пӗлекен юлташ пур ман.

– Ӑҫта вӑл?

– Кайса чӗнме пултарап.

– Эс... – Эрхип кӑраланса каллех темскер каласшӑнччӗ пулас та – аллине сулчӗ. – Юрӗ. Анчах... асту!

Прохор часах аллӑ пилӗк–утмӑл ҫулсенчи тапчам арҫынна – ҫак ӗҫ пирки малтанах каласса татӑлнӑ юлташне – илсе килчӗ. Хайӗнчен мӗн кӗтнине лайӑх пӗлет те (Прохор веҫех ӑнлантарса панӑ) хайхискер ыйтса-мӗн тӑмарӗ, тӳрех ӑнлантарма пуҫларӗ:

– Унта автобус ҫӳрет, анчах халь рейс ҫук, тепӗр икӗ сехетрен тин пулать. Ҫуран та кайма май пур, тӳртен ҫырма урлӑ каҫса. Анчах эпӗ вӑл дачӑна вырӑна ҫитмесӗрех кӑтартма пултаратӑп.

– Мӗнле апла?

– Ҫырман ку енчен те лайӑх курӑнать вӑл.

– Апла тӑк – кайрӑмӑр!

Чӑнах, нумаях та утмарӗҫ, хула хӗрринчи пӗчӗк ката витӗр тухса хайхи ҫырана ҫитсе те тӑчӗҫ. Леш енчи сӗвек сӑрта, вӗллесем лартса тухнӑ евӗр, дача ҫурчӗсем сырса илнӗ.

– Хӑшӗ? – чӑтӑмсӑррӑн ыйтрӗ Эрхип.

Ертӳҫӗ хуравламасӑр аллине ун еннелле тӑсрӗ.

– А-а... – Эрхип ӑна кӗсйинчен укҫа кӑларса тыттарчӗ.

Лешӗ "ҫемҫелчӗ":

– Авӑ сылтӑм енче ҫӳлелле, сӑрталла дачӑсен речӗ тӑсӑлать. Аял енчен шутласан виҫҫӗмӗш пӳрт. Хӗрлӗ тӑрӑллӑ. Куратӑр-и?

Бомжпа сыв пуллашсан Эрхип телефонпа Якушкин патне шӑнкӑравларӗ:

– Пурте йӗркеллӗ. Часах ҫитетӗп. Ыттисене пухӑр.

## VIII

Дачӑра "хӑнасене" кӗтсе илме тӗплӗн хатӗрленчӗҫ. Вӗсем кӑнтӑрла мар, каҫхине килме пултарасса чухласан та (тепӗр тесен, куна татса калама йывӑр – ӑҫтан пӗлен вӑрӑ-хурах шухӑшне?) милици ҫыннисем ир-ирех ҫитсе вырнаҫрӗҫ. Пурин пирки те калаҫса татӑлнӑ. Кашнин хӑйӗн вырӑнӗ, хӑйӗн ӗҫӗ. Карнашовсем хӑйсем те килнӗччӗ, анчах Клим Чирков вӗсене каялла кайма ӳкӗте кӗртрӗ.

Ҫуркунне хӑйӗн ӗҫне тӑватех ҫав: юр самаях пусӑраннӑ. Нумаях пулмасть хӑй ҫак дачӑра "хуҫаланнӑ" чухне Палтанов тӗлӗнсе сӑнанӑччӗ: юр пӳрте йӗритавра хупласа хунӑ, пӗр енчи стена пачах курӑнмасть. Халӗ – йӑлтах урӑхла: пӳрт юр айӗнчен ҫӗкленсе тухнӑ тейӗн. Хурлӑхан тӗмӗсем капӑррӑн кӑнтарнӑ. Унччен вӗсем пурри-ҫукки палӑрмастчӗ те – пӗтӗмпех кӗрт айӗнчеччӗ.

Тимофей Платонович алкумӗнчен тухрӗ, пуҫ тӑррине усӑнса аннӑ катӑркас туратне сирсе (пӳрт тӑрринчи юр аялалла шӑвӑнса хускатнӑ-ши ӑна вырӑнтан?) кӑкӑр туллин сывласа илчӗ. Тӗлӗнтермӗш япала, савӑнмалли халӗ нимӗн те ҫук темелле, пачах урӑхла: хурахсем ӑна пурнӑҫран уйӑрма шут тытнӑ, анчах

вăл чунне йывăррăн пусăрăнтарса тăнă катрам йăшăкланса, хухса пынине туйрĕ. Ку çеç-и? Чылай çул сумсăрлăхра çатăлтатнă чĕрене тахçанхи, хисеплĕ вăхăтри пурнăç варкăшĕ киле-киле çупăрлать мар-и? Ăшри леш хирĕçлев-кĕрешӳ хумĕ, тинтерех кăна-ха Карнашовсем патĕнче çĕкленнĕскер, каялла чакса çухалман иккен, çав-çавах чăнкă тăрать, хăюллăн вылянать.

Ку мĕскер тата? Палтанов юр çинчи лакăм вырăнсене асăрхарĕ. Йĕр вĕт ку. Унăн, Тимахвин, йĕрĕ! Юр хуплана пулсан та аванах палăрать. Дачăран айккинелле, çырма еннелле пăраннă. Пĕркун Карнашовран тарса пытанма хăтланнăччĕ çапла...

Малашне нумаях тытăнса тăрайрас çук-ха ку йĕр, çанталăк ăшăтнăçемĕн ирĕлекен юрпа пĕрле часах çухалĕ куçран. Анчах çакăнта пулса иртни Тимахви асĕнчен нихăçан та тухмĕ.

Дачăсем тăрăх унччен пĕрре те çӳремен Палтанов. Çав пĕлсе-палласах кайман бомжсемпе çыхланчĕ мар-и, мур илесшĕ! Уйрăмах мунча илĕртрĕ ăна, ухмаха. Чăн-чăн мунча (ял мунчи!) кĕрсе курманни нумай пулатчĕ çав – юлашки хут хăçан çăвăнни-çапăннине аса та илеймĕн. Вăт лекрĕ намăс капкăнне, ват супнă! Лешсем, ăна ертсе-астарса кайнă "туссем", таçта çухалчĕç, Тимахвие пĕччене хăварчĕç...

Палтанов шухăшне Чирков татрĕ. Операци ертӳçи телефонпа шăнкăравлание итленĕ хыççăн вăл юлташĕсене çапла пĕлтерчĕ:

– Хыпар илтĕм. Пирĕн дачăна çырма леш енчен сăнаççĕ тет. Çавăнпа питĕ асăрханаллă пулас. Тула тухса курăнас мар. Тимофей Платонович вара çӳреме пултарать: пăхчăр, ăнланччăр – вăл кунта пĕчченех.

... Ĕнер Эрхиппа тĕл пулса калаçнă хыççăн Чышкă хăйĕн çыннисемпе канашласа пăхма шут тытрĕ.

– Темле... Ытла та пит яка пулса пырать пек ку ĕç. Мĕн шухăшлатăр? - тимлĕн тинкерчĕ вăл ыттисене.

– Каккуй "яка"! – хирĕçлеме пăхрĕ Эрхип. – Палтанова çухатрăмăр, аран-аран тупма май килчĕ вĕт.

– Вăт, вăт! Çакă иккĕлентерет те: хăварт тупăнчĕ!

– Ара...

– Нимĕн "ари" те çук! – Пуçлăх сассине хăпартрĕ. – Ыйту мĕнле тăнине пурте ăнланатпăр: е çав услапа тĕп тăватпăр, е вăл пулăшнипе пире хамăра çаклатаççĕ. Çавăнпа йăнăшма юрамасть. Тĕрĕслемелле те тĕрĕслемелле. Чим-ха! – Вăл каллех Эрхип енне çаврăнчĕ. – Тен, хайхи çырма хĕррине кайса пăхăпăр? Сăнăпăр унтан, э? Бинокль илес.

Çапла майпа пырса çитнĕ вĕсем паян "сăнав пунктне": Якушкин малтан каяс-шăнах марччĕ: теветкелленме кирлех-ши? Анчах шухăшласа илчĕ: хăв куçупа курни лайăхрах, шанчăклăрах. Çимукпа Кĕркурие ката çумĕнчи çуртсем патĕнче хăварса çыран хĕррине иккĕн кайрĕç. Чышкă бинокльпе чылайччен пăхса сăнарĕ. Пурте йĕркеллех пек. Дачăра нимĕнле хускану та курăнмасть. Тимахви, чăнахах та кунта иккен. Сивĕрен-тĕр (çара пуçăн, свитер вĕççĕн çеç тухнă!) хул пуççисене чĕтрентере-чĕтрентере илет. Мĕн тăвасшăн-ши? Хă, сӳсленчĕк! Ун-

кун пӑхкаларӗ те аллинчи эрех кӗленчине улмуҫҫисем хушшине вӑркӑнтарчӗ. Пушшине ӗнтӗ. Пӗчченех сӑрхӑнтарать апла, сӑхӑ пыр. Ӗлӗкхи пекех...

Палтанов пӳрте кӗрсе кайсан та бинокльтен тӳрех хаймарӗ Якушкин. Дача ҫав ҫавах чӗмсӗр. Мӑрьерен палкакан ҫӑра тӗтӗм ҫеҫ пӳрт ҫийӗн явӑна-явӑна хӑпарать.

– Халь мӗн шухӑшлатӑр? – каллех паҫӑрхи ыйтӑва пачӗ Чышкӑ пурте пӗрле пухӑнсан.

– Тек тӑсма юрамасть! – терӗ Кӗркури. – Кӗҫӗрех каймалла.

– Килӗшетӗп, – пуҫне пӗкрӗ Ҫимук. – Анчах ман тепӗр шухӑш пур.

– Мӗнле шухӑш?

– Каҫчен кӗтмелле те мар. Халех каймалла та...

– Эс, мӗн хӑлаҫланан! Тӑр кӑнтӑрлах-и? – хирӗҫлерӗ Эрхип.

Ҫимук хӑйӗн шухӑшне малалла тӑсрӗ:

– Ҫӗрле Палтанов ҫывӑрма выртать. Ҫапла-и? Мӗнле вӑратан ӑна? Тӑр час-рах, алӑка уҫ, сана вӗлерме килтӗмӗр тесе-и? Кӑнтӑрла вара алӑка питӗрсех те лармасть-и, тен. Куртӑмӑр вӗт-ха, туха-туха кӗрет.

Якушкин пӗтӗмлетсе калама васкамарӗ. Унталла та кунтлла шутарчӗ шухӑшне, апла та, капла та виҫе-виҫе пӑхрӗ ӑна. Икӗ варианчӗн те лайӑх енӗ те, япӑххи те пур. Тӗрӗс ӗнтӗ, ҫӗрле кӑткӑсрах. Ку дача ҫуртне халиччен кӗрсе курман: мӗнле унта, сӗтел-пуканӗ ӑҫта, кравать таврашӗ хӑш енче? Кӑнтӑрла вара пӗтӗмпех курӑнать. Чӑн та, ҫав шутра... Вӗсем дачӑна пыни те. Ҫитменнине, Палтанов вӗсене лайӑх пӗлет. Курас тӑк аякранах палласа илӗ... Ҫук, кӑнтӑр кунӗнчех хӑтланас мар. Каҫа хӑварас. Анчах та пит тӗттӗмленичченех кӗтме юрамасть пуль.

Ҫапла каларӗ Чышкӑ "тройкӑна". Килӗшсе татӑлчӗҫ. Хуларан Якушкин автомашинипе тухаҫҫӗ. Ӑна вӑл ют хушаматпа проката-вӑхӑтлӑха усӑ курма илнӗ. Дачӑсемпе вӑрман чиккине ҫитсен хулапа пӗрлешнӗ ял масарӗ патӗнче чарӑнаҫҫӗ. Ҫимук, Кӗркурипе Эрхип дачӑна каяҫҫӗ. Пуҫлӑх вӗсене машинӑра кӗтет.

... – Ҫула тухрӗҫ! – илтрӗ Чирков телефон "кӗпҫине" хӑлха патне тытсан. Операци ертӳҫин сасси. – Кӗтсе илме хатӗрленӗр.

– Пурте харпӑр хӑйӗн вырӑнне! Хатӗр пулӑр. "Хӑнасем" килеҫҫӗ! – хушу пачӗ лейтенант пӳртпе алкумӗнче, ытти ҫӗрте вырнаҫнӑ юлташӗсене.

Пӗр хушӑ унта та кунта пӑшӑлтатнӑ, кӑштӑртатнӑ сасӑсем илтӗнчӗҫ, унтан дача шӑпланчӗ. Пӗр чӗрӗ чун та ҫук тейӗн. Сӗтел ҫинче краҫҫын лампи ҫунать. Унпа юнашар – пуҫланӑ эрех кӗленчи, стакан. Турилкке тулли тӑварланӑ хӑяр татӑкӗсем. Дача "хуҫи" хӑй ӳсӗрӗлсе кайнӑ пулмалла – кравать ҫине йӑваннӑ, утиялпа витӗннӗ: милици ҫыннисем тӳшек питне ансӑрлатса, ӑна кивӗ татӑккӗсӗкпе тултарса ҫын кӗлетки евӗр майлаштарнӑ, "пуҫне" Палтанов ҫӗлӗкне тӑхӑнтартнӑ. Кунашкал "маскировка" ҫӗнӗ япала мар-ха ӗнтӗ, ӑна кинофильмсенче час-часах курма пулать, анчах вӑл чи малтан пуҫа килчӗ темелле-и – ҫӗнни нимӗнех те шутласа кӑлараймарӗҫ. Ҫитменнине, вӑхӑчӗ те васкатрӗ. Юрӗ, чи кирли-усси пултӑр, ӗҫӗ ӑнтӑр, чун иллисене самантлӑха улталама май патӑр.

... – Ҫитрӗҫ. Виҫҫӗн хапхаран кӗреҫҫӗ, – сасӑ пачӗ Чирков телефонӗ.

Ҫимук, Кӗркурипе Эрхип пӳрт патнелле асӑрхануллӑн ҫывхарчӗҫ. Таврара

шăп. Çил кăна йывăç турачĕсене айкашуллăн силлентере-силлентере илет. Дача чӳречинчен вăйсăр çутă курăнать: çурта-ши? Электричество пулас тăк кун пек кăна мар, вăйлăрах çутатмалла. Апла Палтанов çывăрмасть. Юрĕ, ăна-кăна пăхса тăмăпăр. Йĕрки паллă: "ĕç" тăваканĕ – Çимук. "Специалист". Пӳрте малтан вăл кĕрет. Ун хыççăн кĕтмен-туман япала сиксе тухасран сыхласа – Кĕркури. Эрхип тулта, алăк умĕнче юлать.

Палтанов дача алăкне питĕрмен иккен. Тăмана хăраххи темерăн – тимлĕхне пачах çухатнă-ши? Е ӳсĕр выртать? Алкумне йăпшăнса кĕчĕç. Тĕттĕмленсех çитеймен те – пӳрт алăкĕ лайăхах курăнать. Малалла!

Çимук алăка урипе тапса уçрĕ те, Кĕркурипе иккĕшĕ шалалла вирхĕнчĕç. Пӳрчĕ пысăках мар-мĕн. Сĕтел, пĕчĕк кăмака. Малти стена çумĕнче – çывăрма майлаштарнă сарлака диван. Акă вăл Палтанов! Хăтăлатăп терĕн пуль те – пысăк йăнăш турăн. Ме сана, туян! Ухмаха ернĕн тилĕрсе, усаллăн хĕремесленсе ("хăюланма" тесе Чышкă автомашинăра эрех те ĕçтернĕччĕ) Çимук малалла ярса пусрĕ те çĕçĕпе вырăн çинчи "Палтанова" пĕтĕм вăйран тăрăнтарчĕ.

Çавăнтах пӳрт ăш-чикки çил-тăваллăн çаврăнса-пăтранса кайрĕ. Кăмакапа шкап хушшинчи чаршав хыçне пытаннă Чирковпа Камров тата икĕ милиционер сиксе тухрĕç. Тимур Çимук çине çӳлевĕçле ывтăнчĕ, ăна çамкинчен пуçпа çапса аллисене пăрса лартрĕ. Анчах лешĕ, мечĕк пек чăмăркка та якаскер, мекĕрленсе хыттăн туртăнчĕ те сылтăм аллинчен çав-çавах яман çĕççе Камров еннелле тăсрĕ. Тимур айккинелле сулăнчĕ-ха, анчах пĕрех пăрăнса ĕлкĕреймерĕ: çĕçĕ хулне шăтарса кĕчĕ. Ыратнине пăхмасăр, шăлне çыртса Камров тăшманне пусса антарчĕ. Ăна пулăшма ыткăннă Чирков Çимук аллине атă кĕлипе пусарса таптарĕ – юнлă çĕçĕ урайне çатлатса ӳкрĕ...

Аллине сăнчăрланă Кĕркури урайĕнче ахлатса выртать: ăна Чирков алăкран кĕнĕ-кĕмен çапса ӳкернĕ.

Алăк уçăлчĕ те – пӳрте Эрхипа тĕртсе кĕртрĕç. Вăл та нимĕн ăнкарма ĕлкĕреймен – крыльцан икĕ енне пытанса тăнă милиционерсен аллине лекнĕ.

Якушкин-Чышкă вара тарса хăтăлма хăтланнă. Инçетерех пулсан та дача енчен темĕнле шăв-шав илтĕннĕн туйăнса кайнă ăна. Шартах сикнĕ. Нивушлĕ чее ултав серепине çакланма тиврĕ? Апла тăк... Хайхискер автомашинăран тухса масарти вил тăприсем хушшипе шăвăнма шутланă. Тарайман – сывлăшра янăраса кайнă сăмахсем чарса тăратнă:

– Мефодий Якушкин, тăрăр!

Таçтан килсе чарăннă машинăран сирпĕнсе тухнă хура маскăллă çынсем ун патнелле чавтарнă. Мĕн тумалла? Тарса пытанаймăн. Ята-хушамата пĕрех пĕлеççĕ. Йĕрленĕ иккен. Серепене илĕртсе кĕртнĕ. Луччĕ парăнмалла.

Якушкина та дачăна илсе килчĕç. Унтан пурне те хулана ăсатрĕç.

Çав каçах Чышкă ушкăнĕ çыхăннă "фирмăн" нумай çыннине, вăл шутра Трифон Шахранкова та, арестленĕ.

X

Тимофей Палтанов ирех вăранчĕ те пахчана тухрĕ. Çутăлса çитеймен-ха, анчах тухăç вучахри шĕл кăвар пек хĕп-хĕрлĕ: часах унтан хĕвел шăвăнса çĕкленĕ

те çĕнĕ кун пуçланни çинчен пĕлтерсе çӳлерех те çӳлерех хăпарĕ. Çĕр çине тинкерсе пăхнă май вăл Тимахвирен тӳп-тӳррĕн ыйтассăн туйăнать: "Ну, шухăш-кăмăл мĕнлерех санăн паян, Тимофей Платонович?"

Мĕнле хуравланă пулăттăн ăна, Палтанов юлташ? Акă çапла: "Çак çĕнĕ кун пурнăçăма çĕнĕ çулпа яма картасса шанатăп". "Тем, ытлашши курнăçланса, вĕçкĕнленсе кайнă пек капла – чухламастăн-и? Пурнăç вăл, хăв пĕлен..". "Пĕлетĕп, çапах та шухăш-кăмăлăмпа эп халь иртнипе малашнехин чиккинче."

Хăйĕнпе хăй çапла калаçнă май Палтанов чунĕ, чăн та, ăшшăн-хăтлăн çĕкленнине туять. Ку ĕнтĕ – мĕскĕнлĕхĕнчен хăтăлса çын тивĕçлĕхĕпе килĕшӳллĕ пурăнма ăнтăласси – халь тин çеç пуçланман-ха, анчах ĕнерхи пулăм-курăм ăна тата уççăнрах палăртрĕ.

– Эсир мĕскер капла, урам юппине пырса лекнĕ пек, тăратăр? – илтĕнчĕ хыçалта Камров сасси.

"Тĕрĕс, тĕрĕс, чăнах та çул юппинче эпĕ, анчах ăçталла каймаллишĕн пăшăрханмастăп – паллă вăл", – шухăшласа илчĕ Палтанов. Сасăпах хуравларĕ:

– Вăрантăм та урăх çывăраймарăм. – Çавăнтах пăлхануллăн ыйтрĕ. – Сурану мĕнле?

– Аптрамасть. Пăртак туртать те...

– Больницăна каймаллаччĕ, ахалех килĕшмерĕн.

– Паян кайса çыхтаратăп тепĕр хут.

Телее, çĕçĕ шăмма тивмен, анчах ӳте самаях тарăн шăтарнă-мĕн. Камрова больницăна илсе каясшăнччĕ те – яхăнне те ямарĕ. Тимофей Платонович дачăра çĕр каçма шутланине пĕлсен вăл та юлчĕ.

Палтанов сехетне пăхрĕ.

– Мунча хутма иртерех-ха, кăштах тăхтар. Ĕлкĕрĕпĕр.

Каçхине Карнашовсем патне телефонпа шăнкăравланăччĕ вăл – дачăра мĕн пулса иртнине йăлт сăнласа кăтартрĕ. Хăй унта çывăрма юласси çинчен те пĕлтерчĕ. Мартынпа Ангелина ыран дачăна килме хатĕрленеççĕ-мĕн.

– Апла мунча хутас мар-и ман? Пысăк ĕç тунă хыççăн юлташсене те савăнтарас. Эсир килнĕ çĕре пултаратăп, - сĕнчĕ Тимофей.

Карнашов шӳтлĕн йĕпленчĕ:

– Ну, сĕмсĕр те вара эсĕ! Пирĕн дачăра чăн-чăн хуçа пулса тăрасшăн-и?

– Ирĕк памасан...

– Юрĕ, юрĕ, хут. Опыт пур сан. Ыран пенси кунĕ пирĕн, çавăнпа ирех пырай-мастпăр. – Çавăнтах шахвăртуллăн каласа хучĕ. – Анчах юман вуттине ытлашши нумай ан çунтар. Перекетле.

– Вăт хыт кукар!

Иккĕшĕ те кулса ячĕç.

Камровпа Палтанов пӳрте кĕчĕç. Калаçу каллех каçхи тĕркешӳ тавра пычĕ: ăшран тухмасть вăл, сасси-шавĕ хăлхаран каймасть. Тимофей хăрушах мар вырăнта, иккĕмĕш хутра ларнă-ха, ăна ниçта та хутшăнтармарĕç. Тимурăн вăт... Леш ăçтиçукран, авă, мĕнле шар курма тиврĕ унăн! Палтанов вырăнне... Тимахви пурнăçне татма хатĕрленĕ çĕçĕ ăна пырса тăрăннă...

Палтанов Чышкăна аса илчĕ. Нумайранпа – хваттерсĕр тăрса юлнăранпах! – куçа-куçăн тĕл пулманччĕ вăл Феофанов-Якушкинпа. Малтан шутланăччĕ: курсан тытса чарайĕ-ши хăйне? Ытла та пысăк айăплă-çке вăл Тимахви умĕнче! Ĕмĕр кaçарми çылăхра.

Анчах "тытса чараймалла марри" нимĕн те пулмарĕ.

Иккĕмĕш хутран анса пӳрте кĕрсен чи малтан ăна – Чышкăна – асăрхарĕ Палтанов. Лешĕ те пуçне ялт çĕклерĕ, хăйĕн çине халь-халь темĕнле йывăр япала йăтăнса анассинчен хăранăн хутланса ларчĕ. Унăн эшкерĕсем картах каялла туртăнчĕç, усаллăн-шиклĕн чарăлнă куçĕсемпе Тимахвие тăрăнчĕç. Турăçăм! Хăйсем тĕп тума килнĕ этем, акă, вăл – чĕрĕ-сывă! Вĕсем вара çĕнтерӳ савăнăçĕпе киленес вырăнне капкăнра авкаланаççĕ.

Ăш-чикĕ хытса-сивĕнсе ларчĕ тейĕн: хаяр йытă пек сиксе ӳкес, тытса туллас, кăшкăрса вăрçас вырăнне Палтанов "кашкăр кĕртне" йĕрĕнчĕклĕн пăхса çаврăннипех çырлахрĕ, пĕр сăмах чĕнмесĕр пӳртрен каялла тухрĕ.

Хăçан, хăш самантра кукăрăлнă-ши çак вупăрсен çулĕ, ашшĕ-амăшĕ çуратса тĕнчене кăларнă чухне ырлăха пилленĕ çул? Хăй вăхăтĕнче вĕсемпе кулленкун тенĕ пек курнăçнă пулсан та кун çинчен кăсăклансах кайман Палтанов. Халĕ вара, "бомжлăхри" пурнăçа какăричченех ас тивсе-тутанса курнăскер, çавăн сăлтавĕсене чи малтанах самана сивлекĕпе, чун пархатарне укçа хупласа сăнсăрлатнипе çыхăнтарать.

– Тен, пухăнса калаçăпăр? – шухăш таппине сирсе тăрук ыйтрĕ вăл.

Камров тĕлĕнсе пăхрĕ: пĕтĕм кăмăл-туйăм ĕнерхи пăтăрмахлă-хумхануллă пулăмсемпе тулнă вăхăтра мĕн çинчен шутлатăр эсир, Тимофей Платонович?! Çавăнтах хăйне хăтăрса тăкрĕ: эс мĕн? Аслă юлташун чун-чĕре вĕçевĕ ăçталла талпăннине туймастăн-им? Хамăр тунă ĕçсем çинчен ыттисене – операцие тӳрремĕнех хутшăнман юлташĕсене те каласа парасшăн вăл. Пĕлтермелли вара темĕн чухлех. Бомжсен организацийĕ Чышкă ушкăнне тăрă шыв çине кăларма, сиенсĕрлетме пулăшрĕ – савăнмалли, мăнаçланмалли хыпар мар-и-ха? Куна ĕнер операци ертӳçи те палăртрĕ, пулăшушăн тав турĕ.

– Килĕшетĕп! – терĕ Тимур. – Пухăнатпăр.

Çакнашкал шухăш-кăмăл чăнлăхне çирĕплетнĕн Камров телефонĕ çинçе кĕвĕллĕн чĕнкĕлтетсе ячĕ.

– Мĕнле унта? – илтĕнчĕ Чирков сасси. – Сурану...

– Йĕркеллех. Ан пăшăрхан. Тимофей Платонович мунча хутса ячĕ, ак.

– Мунча? Ăнланса пĕтерейменрĕм.

– Карнашовсен мунча пур кунта, дачăра. Май пулсан кĕме кил.

– Пыратăп! – хаваслăн каларĕ Клим. – Хăш-пĕр юлташа та чĕнсен...

– Яра пар! Ăшалăпăр пурне те. Мартын Осипович, хайхи дача хуçи, юман вутти нумайрах çунтарма хушнă тет-и. Палтанов чышать те чышать çав тимĕр пек янравлă пуленкесене. Ăшши такама та çитмелле. Сирĕн унта мĕнле? – Тимур шухăшне урăх еннелле пăрчĕ.

– Хыпарсем лайăх! Çавăнпа шăнкăравлатăп та. Чи малтанах саламлатăп сана.

– Мĕн ячĕпе?

– Сана каллех милицире ĕçлеме илеççĕ. Пуçлăх хушăва паян ирхине алă пуснă.

– Ур-ра! Тавтапуç. Савăнтартăн. Тĕрĕслĕх хăйĕн вăйне çухатманнине çирĕплетсе патăн. Чим-ха, юрру лайăх та... Ку ĕç-пуç вара?

– Э-э, аса илтĕн-и? Пĕтĕмпех пĕлтереймĕп. Следстви пырать. Анчах, тăхта, хăш-пĕр самант пирки. Леш Çимук текенни... Маклая чăнах та вăл вĕлернĕ. Çĕççи те çавах. Сана чикни...

– Ай, лайăх!

– Мĕн лайăх? Сана чикни-и?

– Тьху, калан та çак! Тĕрĕссине тупни тетĕп.

Мартын Карнашов дачăра пĕр харăс çакăн чухлĕ çын пуханнине ас тумасть. Пулман та ун пекки! Пасар... Çук, ярмăркка. Çĕрпӳ ярмăркки. Малтан, дача валли çĕр илнĕ чухне, тăван-пĕтен йышлăн пуçтарăнатчĕ-ха. Пулăшатчĕç. Çапах та кун чухлех пулман-тăр. Мунча вара пурне те килĕшнĕ. Вĕри! Шыв сапатăн та – чăшăл-л! тăвать хĕрнĕ чул, пăр-р! чашкăрса çитет сан патна ăшши. Милĕкĕ тĕрлĕрен: хурăн, юман, çăка... Акă ăçта вăл, ырлăх!

– Юман вутти çав! – куçне хĕссе илчĕ Тимахви ăшши панă май.

– Çапла, çапла. Маттур! Малашне санах чĕнеп ăна хатĕрлеме, – парăмра юлмарĕ Мартын та.

– Эпĕ хирĕç мар. Халь вара... Айта, вырт: ăшаласа илем сан хыткан купарчуна!

Кам автобуспа, кам милици машинисемпе, кам хăйĕн автомобилĕпе кайма пуçтарăнса тухсан дача – пыл хурчĕсем евĕр сĕрленĕ çурт (мунча хыççăн хăналанмалли те тупăнчĕ) - пушанса юлчĕ. Палтанов кăшт тытăнса тăчĕ.

– Тавтапуç сире пуриншĕн те, – терĕ вăл Мартынпа арăмне пĕр ытама илсе.

– Тен, пирĕн пата кайăпăр? – иртнĕ тĕл пулусенчи шухăшне çĕнĕрен хускатрĕ Ангелина Васильевна.

– Хальлĕхе – çук-ха. Кайран куç курĕ. Пурнăçăм йĕркеленсе каймĕ-ши малашне? Милицире, ав, хваттер ыйтăвне пуçарма май пурри çинчен те калаçрĕç. Мĕн пулĕ ĕнтĕ.

Иртнинчи пекех, Палтанов хыççăн куç илмесĕр пăхса юлчĕç Карнашовсем. Акă, вăл хапха патне çитрĕ, ăна уçсан çаврăнса алă сулса сывпуллашрĕ. Унтан айккинелле пăрăнса куçран çухалчĕ.

Автомашина сасси илтĕнчĕ. Тимур Камров ĕнтĕ - вăл кĕтме пулнăччĕ.

Чие йывăççĕ айккинче типĕ чечек тунисем çав-çавах тем çӳллĕш кăнтарса параççĕ. Мартын вĕсем патне пычĕ. Ай-ай, кунта юр ирĕлнĕ иккен те, çĕнĕ хунавсем шăтса тухнă. Хăйсем лутра кăна-ха, йĕп вĕçĕ пек шĕвĕркке. Чечек каллех çĕнĕ пурнăç пуçлать. Çанталăк ăшăтнă май ӳссе çĕкленĕ, çеçке çурĕ. Тимофей Палтанов кун-çулĕ те çапла çĕнĕрен чĕрĕлмĕ-ши?



## Марина КАРЯГИНА

# Тĕнче пăтравĕ – тарасам çинче

**ЕТКЕР**

Еткер тесен, хĕрхӳн килет аса:
Йăхран юлни – пĕртен-пĕр тараса...

Пуш тарасам, ыратăн шайлашу,
Ытла кичем çил аллинчи ташшу.

Унпа виçме ман кĕмĕлĕм те çук,
Сутма-илме пит кăмăлăм та çук...

Ăс кĕриччен çапла тесеттĕм эп –
Пĕлмен ку тăнлă тараса теме:

Çапла, еткерĕм, ылтăнсăр хуçу,
Айван, апла ун шевлине ху çут!

---

Марина Федоровна КАРЯГИНА Патăрьел районĕнчи Кивĕ Ахпӳрт ялĕнче 1969 çулхи юпа уйăхĕн 16-мĕшĕнче çуралнă.

Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухнă. 1992 çултанпа Чăваш телевиденийĕнче ĕçлет. Хăй хатĕрлесе пыракан кăларăмсемпе чылай телефестивале хутшăннă, лауреат ятне тивĕçнĕ.

Пĕрремĕш кĕнеки 1995 çулта "Хум пăшăлтатăвĕ" ятпа пичетленсе тухнă. Паянхи куна вăл 10 ытла кĕнеке авторĕ. Паллăраххисем: "Тăваткăл тĕлĕксем", "Талай хули", "Чĕрĕлĕх ташши", "Хура тумлă арçын", "Юрăсăр уй", "Çур çĕр варринчи хĕвел", «Ылтăн панулми».

2009 çулта Çамрăксен театрĕ унăн пьесипе "Шурă тумлă çар" спектакль лартнă.

Вăл Çамрăксен патшалăх, Митта Ваçлейĕ, Ç.Элкер ячĕллĕ премисен лауреачĕ. Раççей писателĕсен союзĕн членĕ.

Пĕлменччĕ чыс мĕн чухлĕ тăрасса –
Йăлт татса пачĕ тĕрĕс тараса.

Кам калĕ чăн сăмахăн виçине? –
Хурса виçетĕп тарасам çине.

Тĕнче пăтравĕ – тарасам çинче:
Тухас килмест ман çынлăх чиккинчен!

Асаттемрен юлни – çак тараса...
Мĕнпе хаклам мулран паха ăса?

**СĂНЧĂРТИ КИМĔ**

Лăскать ăна тăвăл, пĕр шелсĕр силлет –
Кăкарăннă кимĕ çĕнесшĕн çилле.
Хумсем арасланчĕç, хумсем арăслан –
Вăл ăмăрт пек ăмăр, çунат сарасла.

Те уçлăх кисренчĕ хумсен тĕпĕнче,
Эй, тинĕс! Халь тин эс – ху пĕтĕм тĕнче!
Пĕр пĕчĕкçĕ кимĕ тулать сăнчăрне –
Вăл ирĕкшĕн хатĕр теме çĕнтерме.

Тертлентĕм ирччен сăнчăрти кимĕлле.
Хĕвел хĕлĕхленнĕ – çĕн кун кĕвĕлет...
Вĕçерĕннĕ кимĕ! Вĕçевĕ – инçе:
Вăл хай-мĕн силленĕ çиллес тинĕсе!

**ПАЛЛАМАН САВНИ**

Йăл кулли те ун хĕн-хурлă,
Шăп тăни те урăхла:
Шар хĕвеллĕ кун тем курнă
Тўпери шур уйăхла –

Пур та, çук та пек пĕр харăс.
Çакă пурлăх-çуклăхра
Ăшăм вĕçĕмсĕр вăркарĕ –
Пеклĕх евĕр уçлăхра.

Пек марри ăçта? Пĕлместĕп:
Мĕскерпе танлаштарам?
Палламан савниçĕм, эс те
Çывăх – хам пек пулнăран...

**ТЕЛЕЙ**

Кĕтнĕ телей пурçăн çиппĕн çинçĕш пек! –
Çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ йĕр инçĕш пек! –
Йĕкĕлтемĕш çупкам-çупкам исĕм пек! –
Савни куçне иленекен çиçĕм пек! –
Чул çулакан вичкĕн çилсен ĕçĕ пек! –
Çивĕчленсе çитнĕ çĕçĕ вĕçĕ пек! –
Пўрнĕ телей шăл çĕмĕрсе кĕчĕ пек.

**АТТЕ–АННЕ**

Çак сăмахпа ўсме вĕреннĕ эп,
Вăл маншăн – тăнăçлăх, тĕрек, хисеп,
Ун хевтипе ўксессĕн те – вĕçетĕп,
Çунат тарасипе йăлтах виçетĕп:
Унччен хисемшĕн хам вĕçлес ĕçе те,
Ўлĕмхисемшĕн тивнĕ тивĕçе те.
Чĕрем çинче – тĕсне яман пичечĕ:
АТТЕ–АННЕ.

Çак сăмахпа хыпса çунатăп эп,
Вăл – çĕр хытти, çĕре çăлан тўпе,
Ун хевтипе эп – тинĕс – хум çуратăп,
Кирлех пулсан, хура тĕсе шуратăп,
Пехилĕпе çăлтăрлăха çăратăп:
Хальччен тупман вăрттăнлăха шыратăп,
Тупам кăна – хĕвел çине çыратăп:
АТТЕ–АННЕ.

**ПУЛТАРАСЛĂХ ХĂВАТ**

Чунсăрлантăр тăван,
çулсăрлантăр çанталăк –
Унталла-кунталла хутлаттартăр
çĕн талăк.
Кĕркунне çулçилле яр! хыпса яр!
çунмалăх
Эс кăна пĕр суймасăр май пар. Эс кăна...

Урăхлантăр савни, улталатăр улмалăх:
Улмисем – улшăнса –
шăнтса яччăр кулмалăх.
Лăх-лăх-лăх лăхлатса ахрăмланĕ
пулманлăх –
Эс кăна тулăхлан!
Лайăхлан эс кăна...

Тĕрĕсленччĕр туссем,
турăсем чураланччăр –
Тӳпепе калаçма чĕртĕп сăвă кăвайчĕ.
Çăва мар та – пуш хир, çăварта –
кăчăр-кăчăр...
Эс кăна чĕр саспа пăшăлтат. Эс кăна...

Чеелентĕр çăтмах – тамăка вăл тăнлатăр:
Ку телейшĕн тӳрех унталла утмалла-тăр,
Тӳресен пуплевне пуп чаппа
ылтăнлатăр –
Эс ан чак, халăхри пултараслăх хăват.

**СУЙЛАВ**

Çуралтăм эп телей суйла-суйла:
Сана, йăх-несĕлĕм! Çĕршыв, сана та!
Чи хĕмлĕ сăмахпа сăйла-сăйла
ӳстертĕр те – сӳнми вутпа çунатăп.

Чи кунĕ урхамахăм та пур ман –
Чи хăлăхсăр урхамаха кӳлетĕп:
Юнри еткерлĕх мĕнлине курма
Тавра çула тухам – киле килетĕп.

Ютра утрав пек çӳл тӳпе – уй мар,
Çурла-им уйăх – çиçейми мăка тăк?
Тăван тӳпе тулăххине туйма
Каллех инçе çинçе çула тухатăп.

Хĕвел пайăркинче – тĕнче йĕрки.
Хăй пиçнинчен хăй тĕлĕнчĕ çырлалăх!..
Çӳренĕ çул – пилленĕ пир тĕрки
Эрешлесе "çĕршыв" тесе çырмалăх.

Эп килтĕм тĕнчене суйла-суйла...
Аçа çапин ман йăх çынран кая тăк!
Тăван çĕршывăм туртăмне туйма
Тĕнче хĕрне çити тухса каятăп.

**ĂМĂРТ КАЙĂК ПĔР-ПĔЧЧЕН ВĔÇЕТ...**

Мăшăр-мăшăр ăмăрт кайăк мар,
Хăмăр-хăмăр пĕлĕт куписем...
Ютшăнман эп. Ан та айăпла –
Харăс вĕçеймесĕр ху писен.

Ăмăрту-им пурнăç? Ту-им кун?
Çиллĕ уйăм – çӳллĕ тӳпере:
Ăмăртаймăп... Тăлăх туйăм ку.
Çунатли нумай та, май – пĕрре:

Ăмăрт кайăк пĕр-пĕччен вĕçет.
Хăвăрт-хăвăрт пĕлĕтĕн куçать.
Мĕн пулнишĕн вăхăт чăн виçе,
Мĕн пурришĕн вăхăт чăн хуçа –

хăвăрт-хăвăрт пĕлĕтĕн куçать.
Пуласси – шарт çыртнă тутинче.
Прахăç тейĕн – вĕлт юлать хыçа
Ăмăрт кайăк куçĕнчи тĕнче...

**ПĂР ÇИ**

Кантăк пӳллĕ çут тĕнче! Пăр çи!
Кантаракан вут пек – куç шăрçи.
Кăтăрăттăм пăрĕ ванасла –
Кантăк витĕр Турă сăнасла...

Тем те курăнать пуль çав кăвар куçа...
Ĕмĕр иртсе кайĕ пăр çинче шуса...

**ЫЛТĂН КĔРКУННЕ**

Вĕтĕр-вĕтĕр çумăрччен
Кун – тĕссен уявĕ-тĕр!
Чун юлмарĕ ман – черчен:
Çил тивсе кăшт савĕ те...

Кур та тĕлĕн те çутал:
Кун – чуччу вĕçевĕллĕ!
"Пуç çине укça çутар!" –
терĕ çил çын еверлĕ:

Кĕр çитсессĕн Çӳл Хуçан
Уçăлать-мĕн енчĕкĕ.
Вĕçсе ӳкрĕ ывăçа
Вăхăт лӳчĕркенчĕкĕ...

**Николай ДВОРОВ (Шемексем)**

# Хавхаланмасăр чунăм чăтаймасть



## РАШТАВ СИВВИ

Раштав сивви, ай, хытă чĕпĕтет –
Ачашраххи тÿсес те çук ăна.
Çавах та чунăм уншăн хĕпĕртет, –
Уçăлтарать вăл пит-куçа, сăна.

Курсамăрччĕ: епле хитре тĕнче –
Тавралăх шурă-шурă кĕрĕкпе.
Юр пĕрчисем хĕвелĕн питĕнче
Йăлтăртатаççĕ хаклă мерчен пек.

Пĕртте шăнмаççĕ тейĕн çерçисем
Чĕвĕлтетеççĕ çывăхри садра.
Телейлĕн çеç çиçеççĕ куçĕсем
Пĕрне-пĕри юратнă самантра.

Тÿп-тÿрĕ йĕр çурса çÿл тÿпене
Çул тытрĕ тĕтĕм шурă мăрьеren.
Ура сасси каять пит инçене –
Йăлтах-çке ку çанталăк сивĕрен.

## ÇĂЛТĂР ÇУНАТЬ ТŸПЕРЕ

Çутă çăлтăр çунать тÿпере
Илĕртÿллĕн мана куç хĕссе.
Ун пекки тÿпере те пĕрре,
Вăл вылясшăн пулни – хăй хисеп.

Эп пĕлетĕп: вăл маншăн çунать
Çуттипе ман çула çутатса.
Кăмăлтан ырлăх-сывлăх сунать,
Ырă пур пулăма çывхартса.

Хăрас çук эп кĕрхи каçсенче
Çĕтесрен сĕмлĕхри сукмакран.
Çăлтăр хĕмĕ вылять куçсенче,
Пуласси курăнать аякран.

## ÇУНТĂР ÇĂЛТĂР

Каç пулсассăн йăлтăр-йăлтăр
Çунтăр тÿпери çут çăлтăр.
Парнелетĕр çутине
Икĕ çамрăк чĕрене.

Çăлтăр пĕр сÿнмесĕр çунтăр,
Юрату, телей вăл сунтăр
Вĕри юнлă яшсене,
Шеп пулас мăшăрсене.

Пĕр-пĕрне савса вылянчăр
Савнă хĕрĕпе сар каччă
Çутă çăлтăр тĕнчинче –
Шурă хурăн хÿттинче.

---

**Николай ДВОРОВ (ШЕМЕКСЕМ)** Тутарстанри Пăва районĕнчи Элшел ялĕнче çуралнă. Хусанти ял хуçалăх институтĕнче аслă пĕлÿ илнĕ, колхозра тĕп инженерта, председательте ĕçленĕ, шкулта ачасене вĕрентнĕ. «Кун-çул таппи», «Савăнăç куççулĕ», «Шанăç», «Пурнăç урапи» кĕнекесем кăларнă.

**ХĔЛ ИЛЕМĔ**

Шурă мамăк евĕр шурă
Юр выртать, ав, урамра.
Лăс укаллă çамрăк хурăн
Ялтăрать хитрен умра.

Çут çанталăк ырă, уçă...
Йыхăрать хăй ытамне.
Ухăнса утса пыруçăн
Эп туяп ун илемне.

Ачасем епле хаваслă
Ярăнаççĕ ту çинчен.
Шăнкăрав пек уçă саслăн
Янăрать хитре тĕнче.

Ав, сунарçă уй-хир урлă
Çул тытать вăрман енне.
Унăн çулĕ тарăн юрлă –
Юр çусаччĕ-çке ĕнер.

**КĔРКУННЕ**

Çуркунне сип-симĕс тумлă йывăç,
Кĕркунне – пыл пек пылак палан.
Эп ăна татса илеп пĕр ывăç, –
Вăл – эмел, сипетлĕ ялала.

Кĕркунне ăçтан илме пултарнă
Йывăçсем кун пек хитре тума?
Асамат кĕперĕ çеç пултарнă
Кăмăлтан сăрĕсене пама.

**КĔТНĔ ХĔЛ**

Ĕнер кăна тавралăха сăнарăм:
Кĕрхи сив кун тăратчĕ таврара.
Паян ирех ăш ыйхăран ман арăм
Вăратрĕ темшĕн вăхăтсăр вара.

Сăмах хушмасть, ун сăнĕ савăк темшĕн,
Мана хистет пăхмашкăн урама.
Куратăп: ку сайра пулать этемшĕн,
Мерченлĕ тум туяннă хурама.

Умра выртать ялтра сăн-питлĕ тинĕс,
Таса кристалл ăна ниме тăмасть.
Пĕр хум та, пĕр тумхах та çук,
тип-тикĕс,
Хавхаланмасăр чунăм чăтаймасть.

Куçа илет çут сăнĕпе хĕл кунĕ
Ăна тахçан кĕтсеттĕмĕр эпир.
Çанталăкăн-çке пур хăйĕн саккунĕ
Ăна сăмахсăр пăхăнар, эппин.

– Сисмен те, хĕл килсе те çитнĕ, – тетĕп, –
Хăй кĕттĕрччех пулсассăн та вăрах.
Ăна курса тата мĕскер кĕтетĕп? –
Тухасчĕ урама ман хăвăртрах.

**ХĔЛ ЙĔПЕННĔ**
**УРИНЕ СИЛЛЕТ**

Сивĕ кантăк тĕрĕ эрешлерĕ,
Çут мерчен пек, йăлтăркка тĕспе.
Вăл манпа чăнах та-ши шӳтлерĕ? –
Эп тăратăп пек унта хĕçпе.

Ман умра, халапри пек, виç пуçлă
Чашкăрса выртать хура çĕлен.
Хăй хăрушă, хĕмленен вут куçлă –
Вĕсенчен: хĕлхем çĕклем-çĕклем.

Юнашар вăрман. Çут юханшывĕ
Инçене авкаланса иртет.
Сивĕ, сивĕ! Тен, кĕпер те хывĕ
Ман валли çыр урлă çак тĕлте?

Пĕр кĕтмен çĕртен хĕвел те тухрĕ,
Тĕреллĕ эреш çухалчĕ йăлт.
Паллă: сиввĕн вăйĕ – халĕ хухрĕ,
Кĕтнĕ пек, ав, сывлăш илчĕ йăл.

Кантăк ăшăнса йăлтах тасалчĕ:
Урампа тек çуркунне килет.
Сивĕ кун паян кунччен усалччĕ,
Халь – йĕпеннĕ урине силлет.

## Лидия САРИНЕ

# Пӗр палатӑри калаҫу

### Калав

Ҫапла иккен кунта: кунӗ те вӑрӑм, ҫӗр те часах иртмест. Ахаль чухне вӑхӑта сиссе те юлаймастӑн. Уйрӑмах ҫурхи кунсенче. Хӗртсе хӗвел пӑхать. Кайӑксем юрлаҫҫӗ. Чӑречерен пӑхса тӑратӑн. Республикӑри офтальмологи больницинче эпир. Выртса та ывӑнатӑн, ларса та. Коридора тухатӑн, унта та халӑх туллиех. Кашни кун сахалтан та ҫирӗм-вӑтӑр ҫынтан кая мар. Пурте куҫпа чирлекенсем. Кашниех тарӑн шухӑша путнӑ. Ахаль каламан-ҫке, куҫсӑр пуличчен... Кунта пурне те йышӑнаҫҫӗ. Мӗншӗн тесен операци тунӑшӑн сахал мар укҫа кирлӗ-ҫке. Укҫа ҫуккисен ӑҫта кайса кӗмелле-ха?! Суккӑр юлмалла-и ӗмӗрлӗхех?! Мухтав Турра, кӑнтӑр поселокӗнче, Ашмарин урамӗнче, ҫынсене тӳлевсӗр операцисем тӑваҫҫӗ. Чи кӑткӑссине ӑста хирургсем хутшӑнаҫҫӗ. Чирлисем хӑйсен хушшинче Дмитрий Геннадьевич тӗп врач ҫинчен пӑшӑлтатса калаҫнине те пӗрре мар илтме тӳр килчӗ. Ӑста тухтӑрсенчен пӗри-ҫке.

Палатӑра улттӑн эпир. Ултӑ ҫын. Ултӑ шӑпа. Кунта пуйӑс ҫинчи пек. Палламан ҫынна пӗтӗм чуна уҫма пулать. Калаҫнӑ. Вӑхӑт ҫитсен анса юлнӑ. Кунта та ҫаплах. Вӑхӑтӑн-вӑхӑтӑн пуплетӗн. Хӑш чухне шухӑшпа таҫта. Ӑна никам та пӗлмест. Ӑша никам та кӗрсе кураймасть. Кун пек самантсенче кирек кам та хӑйне хӑй кӑна юлать. Мӗнле-ши унта, чун-чӗрере?

Йывӑҫ кравать пуҫӗсем Лисук кинемипе хире-хирӗҫех пирӗн. Пӗчӗк шӑм-шаклӑ, тӗксӗмрех ӳтлӗ Лисук кравать хӗррине ларнӑ, пӗр ҫӗрелле пӑхнӑ та малти шӑлӗсемпе симӗс хӑяр кӑшлать. Шухӑшӗпе пачах кунта мар вӑл. Хӑй те пӗчӗккӗ, янахӗ те ачанни евӗр унӑн. Хӑярне шӑтӑрт-шӑтӑрт тутарнӑ май ун ҫине пӑхма кӑшт кулӑшла пек те. Кун пек шӑплӑха эпӗ нумаях чӑтса лараймастӑп.

– Мӗн ҫинчен шухӑшлатӑн, Лисук кинеми? – тетӗп. – Мӗн шухӑшне кайрӑн-ха?

– Ӗмӗр иртсе кайрӗ. Так. Ахаль... – тет вӑтӑ ҫын урайнелле пӑхса.

– Ачӑр-пӑчӑр пулӗ-ха?

– Ҫук манӑн никам та. Хӑр пӗччен пурӑнатӑп.

Малалла ытлашши вӑлтмастӑп. Ахаль те йывӑр шухӑшӗсем хупласа илнӗ ҫыннӑн чунне хускатас килмест. Палатӑра шӑп.

– Куҫӑрсене эмел ямалла! – алӑка уҫса пурне те асӑрхаттарчӗ

медсестра. Чĕриклетекен краватьсенчен тăрса палатăран тухатпăр, майĕпен утатпăр.

Етĕрне районĕнче, çывăхри ялта çуралса ӳснĕ Лисук. Амăшĕ çамрăклах çĕре кĕнĕ. Хĕрача ашшĕпе ӳснĕ. Тепре авланас темен. Аслисем çитĕнсе пынăçемĕн хулана тухса кайнă. Кĕçĕнни пулнă май пĕтĕм килти ĕç-пуç Лисук çине тиеннĕ. Ашшĕ хăш чухне çĕрĕпе те таврăнман, ирхине хĕрĕнкĕ килнĕ. Вăхăтне начар ирттермен арçын. Çавах та килти хуçалăха тытса пыма çăмăл пулман ĕнтĕ. Ăнман пурнăçĕшĕн пĕтĕм айăпне, хăйĕн çиллине кĕçĕн хĕрĕ çине тăкнă. Мĕскĕн Лисук пахчана тухса ĕсĕкленĕ.

Ӳссе çитĕннĕ хĕр пĕррехинче вăйăран кая юлса килнĕ. Тантăшĕсенчен ниепле те уйрălас килмест-çке. Урса кайнă ашшĕ ăна вĕлтĕренпе вĕтеленĕ. Çамрăксемпе юрласа савăнасси яланлăхах пĕтсе ларнă. Сахал калаçнă. Ытларах пĕччен пулма тăрăшнă. Шкул пĕтернĕ хыççăн вăл стройкăра тертленнĕ. Пĕррехинче шăнса чирленĕ. Тухтăрсене те пĕлтерме васкаман. Пĕрле ĕçлекенсем тăрăшнипе кăна Лисука больницăна ăсатаççĕ. Нумайччен сипленĕ ăна. Больницăран сывалса тухать, каллех йывăр ĕç пуçланать. Ĕçрен таврăннă чухне Лисук таса уйра чарăна-чарăна тăнă, çӳллĕ пĕлĕтелле пăхса вăрахчен тĕмсĕлсе хăйĕнпе хăй калаçнă, куççулĕпе чыхăннă... Çак пурнăçра хăйне валли пĕр савăнăç та, ăшăлăх та, ачашлăх та курманскер, Турăран шав йăлăнса ыйтнă: «Эй, Турă, Турă! Мана никам та ан пăхтăр. Турă мана арçын ан патăр. Мана никам та кирлĕ мар».

Пĕрремĕш ĕç укçи илсенех Лисук сахăр туянать. Тăраничченсахăр çисе курасчĕ тет. Çакă, паллах, ашшĕне килĕшмен. «Пĕр кило сахăра икĕ-виçĕ кунтах çисе яратăн!» – сиввĕн мăкăртатнă вăл. «Сахăрне хамăн укçапа илнĕ. Мĕн чухлĕ çиес тетĕп – çавăн чухлĕ çиетĕп», – хăраса тăмасăрах хирĕç калянă хĕрĕ. «Пӳрт тăрри витмелле, кĕлете юсамалла, выльăх апачĕ çитмест...»

Тек чăтса пурăнаймасть Лисук, Шупашкара тухса каять. Малтанхи вăхăтра тăванĕсем усраççĕ ăна. Пир-авăр комбинатне ĕçлеме вырнаçать. Общежити параççĕ. Ĕмĕрне ĕçлесе ирттерет. Пĕр йĕкĕте те куçран пăхма хăяймасть. Никама та çывăха ямасть. Ватлăхра хваттерлĕ пулать Елизавета Григорьевна.

Каçхине çывăрас умĕн пурте халачĕсене хываççĕ палатăра. Аялти кĕпе вĕçсĕн çывăрма выртаççĕ.

– Ай-яй, эпир кун пек чĕнтĕрлĕ кĕпесене ĕлĕк тăхăнаттăмăр. Питĕ модăра пулнăччĕ вĕсем, – Лисук çине пăхса тĕлĕнет Валюша. – Халĕ никам çинче те курман эп кунашкал сорочкăсене. Ах, хитреччĕ-ĕ-ĕ!

– Ĕлĕк илсе тултарнă та, çамрăк чухне, халь тăхăнса пĕтермелле ĕнтĕ, – тет Лисук кинеми. – Атя, мана юрать, кун пекки те.

– Шел, – тет Валюша утиялне пилĕк таран витсе. – Кунашкал капăр çи-пуçа упăшка умĕнче тăхăнмалла пулнă. Халь кам курать?

– Çапла пуль те... Халь тин мĕн тăвăн? – Минтерне тирпейлĕн майласа хурать кинеми. – Шăпа çапла килчĕ пуль. Унран иртейместĕн теççĕ те...

Пĕр вăхăт пĕри те чĕнмест. Нихăшĕн те ыйхă та килмест. Хăшĕ турăх ĕçет, тепри панулми чăмлать.

– Да, – маччаналла пăхать Валюша. – Çуралсанах çырса хураççĕ тет те çав. Чăнах-ши?

– Халь ўкĕнетĕн-и вăхăтĕнче çемьеллĕ пулайманшăн? – хăйса ыйтрăм кинемирен кăштахран.

– Аллă çулта качча каймаллаччĕ манăн. Питĕ илес текенни пурччĕ. Тем пекех йăлăнчĕ. Хамăн та пĕрле пулас килетчĕ унпа. Кашнинчех темĕн чăрмантарса, чарса пычĕ. Çырăнма каяс кун урана хуçрăм. Вăл кĕтнĕ-кĕтнĕ те – кайнă. Тарăхнипе урăххине качча илнĕ.

– Шăпаран ниçта та тарса хăтăлаймастăн, – ал сулать манпа юнашар кравать çинче выртакан Феодосия Егоровна. – Эпĕ иккĕ качча кайрăм. Тем пек аван пурăннă пулсан та. Хĕрĕм те икĕ хутчен качча кайрĕ. Иккĕшĕ те лайăх. Пĕр хирĕçмесĕр, вăрçмасăр ачисем çитĕнсе çитсен уйрăлчĕç. Хăшĕ айăплă вĕсенчен? Хĕрĕм е кĕрў – паллă мар. Кĕрў тепре авланчĕ. Хĕрĕм, Люда, тепре качча тухрĕ. Хăнк та çук. Тĕлĕнсе каймалла вĕт! Шăпа тени пурах-тăр.

– Эпĕ таса уйра пĕччен утнă чухне хĕвеле хирĕç тăрса Турăран ыйтрăм: «Мана арçын ан пар! – терĕм. – Турă итлерĕ», – хаш! сывлать Лисук кинеми. – Хамах айăплă. Аттерен хăрани пĕтерчĕ.

* * *

Валюшăн кравачĕ Лисук кинемипе юнашар. Вăл ĕнтĕ ыран-паян больницăран тухма ĕмĕтленет. Çавăнпа та кăмăлĕ çĕкленўллĕ. Пĕр вĕçĕм кĕсье телефонĕпе ывăлĕпе калаçать. Хыттăн кулать. Валюша Çĕмĕрле хулинчен. Мăшăрĕпе питĕ килĕштерсе пурăнаççĕ-мĕн. Хăшĕ ĕçрен маларах таврăнать – çав апат хатĕрлет. Ачисене çитĕнтернĕ чухне çăмăлах пулман вĕсене. Анчах юратнă чĕресем пĕр-пĕрне ăнланса, яланах пулăшса пынă. Хунямăшĕпе те пурăннă пĕр вăхăт. Лешĕ мăнукĕсене пит пăхсах ларман иккен. Тутлă çиме кăмăлланă. Капăр тумланма, хăна-вĕрлене çўреме юратнă. Ытларах хăйшĕн пурăннă. Çавăнпа та пулĕ Валюша калаçăвне тăнласан, вăл хунямăшне питех хисеплени туйăнмасть. Темле каламалла. Хунямăшĕпе кинĕ хушшинчи хутшăнусем нихăçан та тикĕс те яка пулман. Ун пекки кашни çемьере тенĕ пекех. Е кинĕ усал, е хунямăшĕ пўтсĕр. Пĕрисем кинĕсене кăшлаççĕ. Тепĕр çĕрте пачах урăхла, кинĕсем хунямăшĕсене ташлаттараççĕ. Чи пĕлтерĕшли вăл мар, кинĕпе ывăлĕ, е кĕрўшĕпе хĕрĕ лайăх пурăнччăр. Çамрăксем шăкăл-шăкăл пурăнсан çеç аттеаннесен чĕрисем лăпкă. Вăл енчен Вальăна ăннă тесен те юрать. Мăшăрĕ нихăçан та ĕçсе килмест. Пирус тавращне çăвара та хыпмасть. Ĕçке-мĕне кайсан сĕтел хушшинче кăштах, ячĕшĕн тенĕн, ларать. Пĕрер черкке ĕçет те Валюшăна хăлхинчен акăлчанла пăшăлтатать, унтан килне тухса утать. Телевизор пăхса выртать вара. Валя-и? Валюша хăй каласа панине ĕненсен сысна çури пек çухăракан пуличченех юрлать, киле чи кая юлса пуçтарăнать. Киле таврăнсан упăшки çумне пырса ларать, пĕр пилĕк-ултă юрă юрлать. Сасси янăравлă унăн. Унтан упăшки ăна хывăнтарать, вырăн çине вырттарать. Вĕри чей туса парать. Валюша ăна пĕррех тĕксе ярать, чей çĕре шăпăртататать.... Хăй вырăн çине тўп! кайса ўкет. Ирччен пĕр вăранми çывăрать. Ĕçлессе вăл лавккара сутуçăра ĕçлет.

Çĕмĕрлене пырсан-тусан кĕрсе тухма сĕнет. Ырă кăмăллă. Çынсемпе пуплеме юратакан хĕрарăм. Нимĕн те калаймăн. Телейĕ те хăйпе пĕрлех.

* * *

Александра Васильевнăна çиччĕмĕш палатăран пирĕн пата, саккăрмĕшне, куçарчĕç. Унăн кравачĕ чӳрече патĕнче. Унччен унта Хутар ялĕнчен пĕр хĕрарăм сипленчĕ. Хĕрĕх çул ытла фермăра вăй хунă Анна Алексеевна курми пулса ларма пуçланă. Ытла йывăр йăтнă, ырми-канми тертленнĕ вăл. Хăй çинчен шутлама та пултарайман. Ĕç те ĕç. Кашни кун виçĕ сехетре тăрса фермăна васканă. Вăхăтра тухтăрсем патне кайнă пулсан... Вăхăчĕ ăçта-ха унта? Вăхăт нихăçан та çук чăваш хĕрарăмĕн. Куçĕ курми пулсан тин хайхи вăхăт та тупăнать. Ăста тухтăрсем тăрăшнипе унăн хăрах куçне çăлса хăвараççĕ çавах та.

Ун вырăнне куçнă Санюк аппа вара ыттисенчен хăйĕн çынлăхĕпе уйрăмах палăрса тăрать. Хăй начар курать пулин те ыттисем пирки пăшăрханать. Хăй пултарнă таран пулăшма, усăллă канашсем пама тăрăшать.

Çамрăк чухне ăна Шура тесе чĕннĕ тантăшĕсем. Унăн тухтăр пулас килнĕ çав тери. Чирлĕ çынсене сиплес тенĕ. Куçĕ начар курнине пула тухтăр пулас ĕмĕчĕ пурнăçланаймасть унăн. Апла пулин те больницăна санитаркăна вырнаçать. Чăлт шурă халат ытла та килĕшнĕ çав  хĕре. Александра Васильевна Ильинкăра çуралса ӳснĕ. Ильинка тесен Чăвашра пĕлмен çын та çук пулĕ. Юмахри пек илемлĕ, асамлă вырăн. Хăй вăхăтĕнче унта кану çурчĕ пулнă. Таçтан та канма пынă. Халĕ ĕнтĕ унта – ачасене çуллахи вăхăтра канмалли лагерь.

Вăрман çывăхĕнче ӳснĕ Санюк аппа пире тĕрлĕ тамаша каласа кăтартрĕ. Пĕчĕкренпех вăрмана чупнă вăл. Пĕррехинче амăшĕпе кăмпана каяççĕ. Утсан-утсан пĕр айлăмлă вырăна пырса тухаççĕ. Кăмпа! Хăть çавапа çул. Кăмпа татма тытăнаççĕ кăна – пăхаççĕ – йĕри-тавра çĕленсем. Пĕр-пĕрин çумне явăнса, çыхланса ларнă, урапа пек çап-çаврака! Марье аппан çӳçĕ вирелле тăрать. Пĕтрĕмĕр! Ку хайхи хăйсен шăтăкне хĕл каçма кĕрсе вырнаçас умĕнхи «туй» пулнине ăнланса илет. Ĕнтĕ мĕн тумалла?! Мĕнле тухса пĕтмелле ку çĕленсен авăрĕнчен? Кун пек чухне çĕлене пырса ан перĕн. Унсăрăн.... Амăшĕ пилĕкултă çулти Шурăна хул айне хĕстерет, утма тăрать те çавăнтах пĕр енне чалăшса кайса кĕçех ӳкмест. Аптăранă хĕрарăм чĕтреме ерет, хăранипе сасси çĕтет. Тăхтама юрамасть. Çĕленсем ытла та тискер. Хайхи Марье  кунтăкри кăмпине çĕре силлет, пĕчĕк хĕрне унта кĕртсе лартать, çурăмĕ хыçне çакать. Пĕр патак тупать те ура пусмалăх вырăн туса, кашни утасне асаплăн, питĕ майĕпен, асăрханса утма пуçлать. Çав çĕленсем патĕнчен тăрмашса тухнă çĕре пĕтĕм вăйран каять. Пĕчĕк Шурка хăрама та пĕлмен ахăр. Вăл вăрмантах ӳснĕ тесен те юрать. Нихăçан та амăшĕнчен юлман. Çырла, кăмпа татнă, йĕкел пуçтарнă. Ача – ачах ĕнтĕ. Унăн çырла татасси килмест. Унта чупать, кунта чупать: чĕрĕп курать, калтана хăвалать. Талтти-чалтти сиккелет, амăшĕнчен татăлса юлать. Курах каять хайхи пысăк та çăмламас чĕрĕ чуна: леш хăмла çырли тататъ те – çăварне хыпать.

– Анне! Анне! – каялла чупать ача.

– Шура! Хĕрĕм! Ăçта çухалса çӳретĕн?! – хăтăрать амăшĕ. – Тек вăрмана илсе килместĕп сана. Итлеместĕн-çке пĕрре те.

Шĕвĕр пӳрнипе тĕллесе Шура амăшне хыпăнчăклăн ăнлантарасшăн:

– Унта... Аха, ав, çавăнта, пĕр «мужик» çырла çиет. Анне! Ак çапла çăварне карнă, чăмламасăрах çăтса ярать, – хашка-хашка каласа кăтартать хĕр ача. – Хăй çăмламас кĕрĕк тăхăннă. Икĕ ура çинче тăрать. Ах! Ох! Ой-ой!

– Ай-уй, ачам, вăл упа ĕнтĕ! – куçĕсем чарăлаççĕ амăшĕн. – Атя, хăвăртрах тарар кунтан. Эй, тур-ту-ур! Тем курса пĕтер...

– Упа? – тĕлĕнет Шура. – Упа вăл тăватă уран утмасть-и вара, йытă пек, анне?

– Атя, чупар! Хытă ан калаç, – ачине çавăтать Марье. – Упа вăл, тем тесен те упа.

– Шутларăм çав, – пакăлтатать ача. – Çулла мĕншĕн кĕрĕк тăхăннă ку «мужик» тесе. Юрать мана курмарĕ. Курнă пулсан çисе яратчĕ пуль?

Амăшĕпе хĕрĕ çаврăнса пăхмасăр чупаççĕ вăрман хĕрринелле. Шура такăнса ӳкет, чĕркуççине шăйăрттарнисене те уяса тăмасть.

Амăшĕ каласа кăтартнине те астăвать Санюк аппа. Ку ĕç 1915-мĕш çулсенче пулнă. Хĕрсем çырлана каяççĕ. Ăнсăртран упа тĕлне пулаççĕ. Пурте тапса сикеççĕ. Пĕрне упа ярса тытать. Ыттисем яла чупса çитеççĕ. Ялти халăх пуртă, сенĕк, пăшал çĕклесе чупаççĕ. Нумайччен шыраççĕ. Мари вăрманне шала кĕреççĕ. Шырасан-шырасан упа шăтăкне тупаççĕ. Хуçи çук. Шăтăкне мăн йывăç тымарĕпе хупласа хăварнă-мĕн. Ăна арçынсем аран-аран сиреççĕ. Хĕрачана çăлаççĕ. «Шывсăр мĕнле чăтрăн?» – тесе ыйтсан хăйне упа çырла çитерни çинчен каласа кăтартнă тыткăнран хăтăлнăскер.

---



*Лидия САРИНЕ Канаш районĕнчи Аслăялта çуралнă. Литературăна кĕриччен чылай çĕрте ĕçленĕ. 1984 çулта «Тăварлă хурăн шывĕ» калав çырса кăларсанах ача-пăча çĕнĕ çыравçи килессине вулакансем тӳрех туйса илнĕ. Çитĕннисене те унăн хайлавĕсем килĕшеççĕ. Уйрăмах хĕрарăм сăнарне вăл ăста калăплать.*

## Сергей ЯЛАВИН

# Çул çинче



Л. Павлов ӳкерчĕкĕсем

### Калав

Ваттисем вилсе пыраççĕ, вĕсен вырăнне ачасем çуралаççĕ, ӳссе çитĕнсен – каччăсем авланаççĕ, хĕрĕсем качча каяççĕ. Çапла вăл пурнăç.

Урам тăрăх çарран чупса çӳренине, тусĕсемпе пуканелле выляннине Улькка паянхи пек астăвать. Çамрăк ĕмĕр – савăнăçлă вăхăт ма çав тери час иртет-ши вăл? Пиччĕшĕ авланнă чухне Улькка 15 те тултарман. Туйне пит вăйлă туса ирттерчĕç. Унтанпа çак иртнĕ виçĕ çул хушшинче Улькка хĕр пулса çитрĕ. Иртнĕ эрнере ăна кӳршĕ ялти Карачăм ывăлне Миккулкана килĕшрĕç. Икĕ çул аслă-рах вăл Ульккаçран, хитре те, ăслă та теççĕ, анчах амăшĕ усал. Епле пулсан та ĕнтĕ Улькка каймастăп тесе татса калаймарĕ. Миккулка çине куç хӳрипе вăтанкаласа пăхса илчĕ те пичĕ пĕçерсе кайнипе пуçне лăш усса "сирĕн сăмахран иртейместĕп, кирек те мĕнле тăвăр" тесе йăвашшăн каласа хучĕ юратнă ашшĕпе амăшне. Çамрăк чĕри siксе тухас пек тапать, вĕри юн çан-çурăмне йĕппе чикнĕ пек чиккелет. Çав вăхăтра амăшĕ ăна "ан кай, кăçаллăха тăр" тесен, вăл ăна – хирĕç. Кăшкăрса пăрахма хатĕр. Ульккаçшăн Миккулка пек хитре ача таврара та çук. Пăхăр-ха унăн ункă пек явăнса тăра-кан сарă кăтрисене, пăхăр-ха унăн кулса тăракан сенкер куçĕсене, унăн килĕшӳллĕ сăн-питне, кам тиркеме пултарĕ ăна?

Тунти кун илме килеççĕ. Тата виçĕ кун кăна вĕт, виçĕ кунтан Ульккаçăн çĕнĕ пурнăç пуçланать. Мĕнле пурнăç-ши вăл, телейлĕ пулĕ-ши? Савăнăçлă ирттерĕ-ши вăл пурнăçа? Амăшĕ усал, хаяр теççĕ те, Ульккаçăн амăшĕпе пурăнмалла мар вĕт. Миккулка, унăн пулас упăшки çеç ăнăçлă, йĕркеллĕ пултăр. Унпа килĕштерсе пурăнсан савăнăçĕ те, ытти те пулĕ.

Э-эх! вăрăм-çке кунĕ те! Тăвату кун тăвату эрне пек туйăнчĕ. Халĕ тата виçĕ кун кĕтмелле. Çунат пулсан, вĕçсе кайĕччĕ Мик-

ЭТКЕР

кулка патне! Ашшĕ те, амăшĕ те, никам та ан систĕрччĕ. Пĕр-ик сăмах кăна калаçса килĕччĕ Ульккаç Миккулкапа. Инçе те мар вĕт, ултă çухрăм кăна вĕсен хушшисем.

Ултă çухрăм вĕсене уйăрса тăрать.

Аккăшĕпе пит килĕштерсе пурăнаççĕ вĕсем. Халь вăл – ялĕнче. Ачи пур, тепри – варта. Вăйăран кĕнĕ чух Ульккаç ăна хапха уçса кĕртетчĕ, каччăпа ларнине курсан та никама та каласа паман. Туя чĕнес пулать ăна. Вун сакăр çул кĕтнĕ савăнăçлă туйран çав ылтăн аккăшне хăварма юрать-и? Çу-у-к, Ульккаç ăна чĕнме хăй каять. Ашшĕ чĕннех пултăр, Ульккаç ăна ыттисенчен уйрăм, ятарласа кайса чĕнет. Вăхăт час иртет, тата юратнă аккăшĕпе те калаçас килет.

– Анчах кампа каяс?

Шурă саттин тутăрне майралла туртса çыхрĕ те чупса тухрĕ урама. Шурă кĕпепе, шап-шурă тутăрпа чисти лĕпĕш пекех ĕнтĕ. Шурă лĕпĕшсем вĕçсе çӳреççĕ вĕт-ха? Ульккаç та çавсем пекех. Пĕр самантра Пăльуксен хапхи умне вĕçсе çитрĕ те сасартăк çухалчĕ. Лĕпĕш вăл темле пĕчĕк çурăкран та кĕрсе кайма пултарать. Хапха сасси илтĕнмерĕ – уçă пулнă пулас. Пăльук килте çук – çӳлти касса тăла тӳме чĕнсе кайнă ăна.

– Мĕн тăвас?

Аккăшĕ патне çитме пилĕк çухрăм. Ульккаç çулне аван пĕлет, кантăрла иртни нумай пулмасть-ха.

– Е-ей, пĕччен каяймастăп-им? Ача мар-çке?



Амăшĕ кĕлетре çăнăх аллать. Унăн та пуçĕ тĕк тăмасть, хĕрне качча парасси çинчен шухăшлать вăл. Хуньамăшĕпе килĕштерĕç-ши? Миккулка кĕрӳ усал марши? Е пĕрер çул тăрсан та юранă пулĕччĕ-и, тен? Çук, çук, халь ĕнтĕ ун çинчен шухăшлама юрамасть. Çынсем кулĕç. Килĕшнĕ ĕнтĕ – ĕç пĕтнĕ. Туя аван, яла тĕлĕнтермелле туса ирттерес пулать. Ульккаç чупса çитнĕ вăхăтра çавăн çинчен шухăшланă вăл.

– Акка патне паянах каяс терĕм ĕнтĕ эпĕ, анне, – терĕ вăл кĕлет алăкĕнчен кĕрсенех.

– Паян каçа юлмăн-ши? Ыран каймăна, ыран ирхине авантарах пулĕ? – тавăрса каларĕ ăна çемçе сасăпа амăшĕ. – Микуç патне кайса тулла пăсса çеç килчĕ. Аçу та çав, – хушса хучĕ вăл ала тĕпне юлнă сăсăла валашкана ярса. – Пăх, мĕн чул сăсăл юлать.

– Сăсăлне пăрах-ха эсĕ. Ман вăл

шухӑш мар: акка патне каяс шухӑш. Пӗртен-пӗр аккана хам туйран хӑвармастӑп.

– Аҫу пасар майӗ кӗрсе тухӗ-ха. Шӑмат пасарне каятех вӑл.

– Манӑн унпа калаҫмалли пур.

– Апла пулсан кай, кай, ачам. Кампа каяс тетӗн? – Вӑл ҫӳпҫерен ҫӑнӑх илчӗ те алине тултарчӗ. Ӗҫчен алӑра ҫӑнӑхлӑ алӑ выляса ҫеҫ тӑрать. Мамӑк пек ҫемҫе ҫӑнӑх валашкана юхать.

– Пальук килте ҫук, пӗчченех каймалла пулать. Эпӗ унта наччас чупса ҫитӗп, – терӗ Улькkаҫ, амӑшне йӑпатса.

– Кай эппин, кай апла пулсан. Каҫа хирӗҫ ан тух, ыран килӗн.

Улькkаҫ тухса кайсанах амӑшӗн пуҫне ҫав паҫӑрхи шухӑшах ҫавӑрса илет. Хӑйӗн хӗр чухнехи ӗмӗрне аса илет вӑл. Ӑна хайне те ҫураҫса, малтан килӗшсе пит чаплӑ туйпа пачӗҫ. Ҫирӗм пӗр ҫул пурӑнать ӗнтӗ упӑшкипе. Пит килӗштерсе пурӑнаҫҫӗ. Упӑшки ӗҫмест, ҫынпа харкашмасть, ӗҫкӗ вӑхӑтӗнче лӑпкӑ тытать хӑйне. Улькkаҫ – вӗсен чи асли, ун хыҫҫӑн тӑватӑ ача вилчӗ. Тепӗр пӗчӗк хӗрӗ – Хресчук – урамра ҫеҫ выляса ҫӳрет, вуннӑ та тултарман-ха. Вӑхӑт хӑй ӗҫнех пӗлет. Улькkаҫа качча пама та вӑхӑт ҫитрӗ. Пирвайхи хӗрӗн туйне те начар тусан вара мӗнле пулать-ха вӑл? Ҫу-у-к, пӗр 20-30 витре сӑра вӗретес пулать, эрехне хатӗрлемелле. Тата ыттисем те кирлӗ. Ӗҫ нумай, чӑрмавӗ мӑй таран.

Амӑшӗ ҫӑнӑх алласа пӗтернӗ ҫӗре Улькkаҫ вӑрман патнелле ҫывхарса пырать. Инҫетрен ешӗл курӑк ӑшӗнче вӑл шурӑ лӗпӗш пекех вӗлтӗртетсе пырать.

Ҫанталӑк ӑшӑ, ака уйӑхӗнчи пек сивӗ ҫил те ҫук, хӗвелӗ те чиперех хӗртсе пӑхать. Ҫу уйӑхӗн илемне кам пӗлмест? Ун пек илемлӗ, хитре уйӑх тата мӗнле? Вӑрӑмрах чечек-курӑксем Улькkаҫа пуҫ таяҫҫӗ, унӑн пылчӑкпа вараланнӑ урисене ыталаса чуп тӑваҫҫӗ. Утма ҫӑмӑл пултӑр тесе вӑл хӑй килте ҫӗлесе тунӑ "санталине" уринчен хывса аллине тытнӑ. Акӑ пӗчӗк ҫырма юхса выртать. Ҫӑл шывӗ, тӑп-тӑрӑ шыв, урана шӑнтать. Шыв ҫинче тепӗр Улькkаҫ ӑна пӑхать те мерчен пек шӑлӗсене кӑтартса кулать, Улькkаҫ пӗшкӗнсен вӑл та пӗшкӗнет. Сивӗ шывпа питне ҫурӗ, тутӑрпа шӑлса утрӗ малалла.

Вӑрман витӗр тухсан – ялӗ. Вӑрман хушши икӗ ҫухрӑм. Аккӑшпе курса калаҫас килет, ҫавӑнпа васкаса утать Улькkаҫ. Ҫӳллӗ ҫамрӑк кӑкӑрсем утнӑ майӑн силленсе пыраҫҫӗ. Вӗсен хушшинче – ал туни хулӑнӑш хура ҫиттуни. Улькkаҫ питне ҫунӑ вӑхӑтра пӗшкӗннипе вӑл унта пырса выртнӑ. Шурӑ кӗпе ҫинче хура ҫӳҫ таҫтан уйрӑлса тӑрать, вӗҫӗнчи хӗрлӗ ленттӑ саппунӗ патнех ҫитнӗ. Тутӑрне аллинче тытса пырать, ҫиттунине те ҫӑмӑллӑн кӑна тытса хыҫалалла ывӑтса ячӗ.

Хирте те уҫӑ сывлӑш, пур енчен те тутлӑ шӑршӑ кӗрет, вӑрманта тата авантарах. Тарӑнрах сывласан ҫӑра сывлӑшпа сӑмса шӑтӑкӗсем кӑтӑкланаҫҫӗ. Акӑ, вӑрман турттаракан ҫул, акӑ, ҫулла ҫуран ҫӳрекенни.

– Тӳрӗрен каяс.

...Йывӑҫсем пӗр-пӗринпе пӑшӑлтатса юмах яраҫҫӗ. Мӗн кӑна курман-ши ҫакӑ ватӑ юмансем! Вӗсем мӗн курнине каласа та пӗтерме ҫук пулӗ? Ак ҫакӑ, хӗрринчи ватӑ юман, миҫе ҫӗр ҫул пурнать вӑл тӗнчере? Вӑрман хуралҫи, вутӑпа тытсан, ӗлӗк хресченсене ричакпа хӗненисене те курнӑ вӑл, каччӑпа хӗр ун айӗнче мӗнле сӑмахсем калаҫнине те илтнӗ вӑл, тӗнчере ытти чӗрӗ чунсем "пурнӑҫшӑн" епле кӗрешнине те астӑвать вӑл. Ҫавӑнпа вӑл хӑй ҫумӗнче ларакан ҫамрӑкрах

юмана курни-илтни çинчен тайăла-тайăла пăшăлтатса ăна çеç, хăйне уйрăм, никам ăнланайман чĕлхепе вăрттăн каласа парать.

Тĕрлĕ вĕçен кайăксем те пытаникле выляççĕ, пурте илтмеллех кăшкăрса савăнаççĕ. Улькkaçа выляма чĕнеççĕ вĕсем. Анчах Улькkaçăн вăхăт çук, аккăш патне çитес часрах. Шаларах кĕрсен пĕр вăхăтра чĕри темле шикленнĕ пек пулчĕ те (вăрманта пĕччен ялан çапла вăл), анчах вăл нумая пымарĕ. Миккулкăна аса илсенех чĕри хăвăртрах тапма пуçларĕ.

– Мĕн ĕçлет-ши халь вăл? Вăт вăл кунта пулсан...

Вăрманта курăк вăрăм та нÿрлĕ. Арки вĕçĕ ан йĕпентĕр тесе Улькkaç кĕпине çÿлелле туртса хĕстерчĕ. Авă, уçланкă, сулахаялла – пĕлтĕр вăрман каснă вырăн. Пĕчĕкренпех вăрман çумĕнче ÿссе Улькkaç вăрмана аван пĕлет.

Уçланкăра чечексем нумай пулаканччĕ.

Çак вырăна пĕчĕк чухне миçе хут çырла пуçтарма килнĕ пуль? Çырла пит нумай пулать, пуç пÿрне пек шултăра çырласем.

– Кук-ку – кук-ку, кук-ку! – Малта инçетре хускатса ячĕ куккук хăйĕн хурлăхлă кĕввине. – Кук-ку, кук-ку!

Улькkaçăн итлеме вăхăт çук, вăл ытарайми илемлĕ, чечексем пухать. Е-ех! Чечексем! Илемлĕ-çке вăрманта, çын таптаман, çамрăк чечексем! Темле тĕсли те пур. Ах мур, такам мурĕ таптанă пĕр çамрăк хитре чечеке, çĕр çумнех çыпăçтарса хăварнă. Улькkaç ăна тăратса лартрĕ.

– Эпĕ пулман пулсан – пĕтеттĕн вĕт!

Йывăççем хăрушшăн, чуна сĕвĕртсе пĕр-пĕринпе темĕскер çинчен васкаса калаçса илчĕç те хашлатса хуйхăрса ячĕç. Улькkaç ăна аванах илтрĕ, çавăнпа та вăл (хăй те пĕлмест темме) салхуланчĕ. Вать вăрăм чăрăш та унпа пĕрле: хăшш! тесе хыттăнах хуйхăрчĕ – çил тухни. Чăрăш çÿçĕсене çил турама тытăнчĕ. Таçта-а-а инçетре аслати кăлтăртатрĕ, сасартăк чарăнчĕ.

– Кук-ку, кук-ку! – Çывхарнăçемĕн çывхарать куккук сасси – кук-ку!

Шиклентерет çапах та. Иккĕн пулсан калаçса йăпанăттăн, – пĕччен.

«Хресчука илмеллеччĕ иккен», – шухăшлать Улькkaç чĕри тапнине итлесе – килте пулмарĕ!

Мăшăрланас пулать, тĕнчи çапла. Авă, вĕçен кайăксем те пурте паллашнă, икшерĕн-виçшерĕн савăнса вĕçсе çÿреççĕ... Иккĕн килĕштерсе пурăннине мĕн çитет?

– Виç кунтан – туй!

Мĕнле кăна кайăк çук-ши çак вăрманта, мĕнле кăна юрă юрламаççĕ-ши вĕсем? Пĕр куккук çеç хурлăхлă авăтса ларать.

– Кук-ку, кук-ку! – сасси унăн вăрманăн тепĕр енне кайса калле вĕçсе килет. Улькkaçăн кампа та пулин сăмах хушас килет.

– Миçе çул пурăнатăп тата эпĕ çак çутă тĕнчере? Каласа пар, куккук тус! – шăнкăрав пек уçă сассипе кăшкăрса ыйтать Улькkaç. – Кала тĕрĕссипе!

– Кук-ку, кук-ку, – терĕ те чарăнчĕ куккукĕ.

– Э-эй, мĕн пĕлен эсĕ! – çилленчĕ Улькkaç ăна, – анчах унăн çилленмелли çук куккука. Тен, Улькkaçран та малтан урăх çын ыйтнă-и унтан? Е тата теçетке-пе каласа парать пуль? Улькkaç пурăнма халь çеç тытăнать вĕт-ха! Икĕ çул

мар, çирĕм икĕ çул та çителĕклĕ мар-ха ăна. Çĕр çул пурăнĕччĕ вăл Миккулкапа, е ытларах та. Ĕмĕр вилмесĕр савăнса пурăнас килет Ульккаçăн. Куккук сасси те хурлăхлăн мар, тепле савăнăçлăн илтĕнет халь. Ытти вĕçен кайăксем (туй тăваççĕ пулас) чарăнаймасăр юрлаççĕ.

Хăрăк турат çине пырса пусрĕ те урине ыраттарчĕ Ульккаç.

– Эй, мур. Такамĕ пăрахнă!

Йывăç тĕпĕ çине ларса хăпăл-хапăл "санталине" тăхăнчĕ те васкаса çăмăллăн утма тытăнчĕ.

Хăш-пĕр турат ăна кĕпи аркинчен тытса чарать.

– Ларса кан, ан кай малалла.

Тата çирĕм çухрăм утсан та ывăнас çук Ульккаç.

– Кук-ку, кук-ку! – чарăнаймасть куккук.

– Пит, пит-аван, пит-пит-аван! – темĕскер мухтать пĕр пĕчĕк кайăк хăйĕн çинçе илемлĕ сассипе – пит аван, пит! Хăйĕн вăрманта ирĕк пурнăçне мухтать пулмалла.

– Асту, асту! – шанмасть тепри. – Асту!

Вăрман тепĕр хут кашласа ячĕ, инçетре тепĕр хут аслати сасси илтĕнчĕ.

Хăрăк туратсем пуссанах шартлатса хуçăлаççĕ те, вăл сасă ура айĕнчен тухсанах таçта сарăлать.

Темле сасă илтĕннĕ пек пулчĕ... Пăхкалать йĕри-тавра Ульккаç – никам та çук.

– Е-е, вăрман çапла улталать вăл, – тесе йăпатать хăйне хăй Ульккаç.

Вăрман вĕçĕ инçе мар ĕнтĕ, çав кукăртан пăрăнсанах вĕçĕ курăнать.

– Ас-ту-у! Ас-ту! – темĕнскер çинчен астутарасшăн пĕр вĕçен кайăк.

Вăрман хĕрри инçе мар пулсан та, темле хăрушшăн туйăнса кайрĕ. Вăл хăй пĕчченех...

Вĕçен кайăксем нумай та, вĕсем мĕн пулăшаяççĕ. Хăйне шиклентерекен шухăшне Миккулка çинчен шухăшласа татах сирсе ярать Ульккаç. Сасăсăр хăрушă ан пултăр тесе юрласа ячĕ:

"Чă-ăн тӳ-ӳ-пе-ри-и çи-ич çă-ăлтă-ăр та-а,

Чă-ăн тӳ-ӳ-пе-ри-и çи-и-ич çăлтă-ă-ă-ăр!" – йывăç купăс сасси пек вăрмана саланать Ульккаçăн çинçе сасси.

Эх, Миккулка! Ульккаç мĕн шухăшланине пĕлетĕн-ши эсĕ? Сисетĕн-ши эсĕ Ульккаçăн чĕри епле тапнине? Сиксе тухас пек тапать ун çамрăк чĕри. Çамрăк ӳт савни аллине кĕтет. Эх, вăрман, хитре-çке эсĕ çу уйăхĕнче, ешĕл вăрман!

## 2

Икĕ çул та сакăр уйăх уя тухса курман Ерхип. Пĕр çул çурă çакăн пек таса, тутлă шăршăллă вăрман сывлăшĕпе сывламан Урттемей. Çавăнпа вĕсем иккĕш те, хура кураксем шăрăхра çăварĕсене карса сывланă пек, çăвар тулли сывлаççĕ вăрманти таса сывлăша. Ерхип чăнтăхса кайрĕ:

– Кха, кха, кха! – кăвакарса кайичченех ӳсĕрет вăл. – Кха, кха, тьху-у! – сурса кăларать çăра сурчăкне.

Сăн-пичĕ унăн питшăлли тĕслĕ шурă, пысăк, çуталса тăракан хĕрелнĕ куçĕсем темле анса ларнипе çамки ытла малалла тухса тăнă пек. Васкаса утнипе

тата çуркуннехи хӗвел те хӗртнипе унӑн хӑмӑр çӳçӗсем пайӑрка-пайӑрка çапçутӑ курӑнаççӗ. Сайра хӑмӑр мӑйӑхӗсем те киттай çыннин пек аялалла усӑнса унӑн юнсӑр çӳхе тутисене хуплаççӗ, хулӑн, сарлака çурӑмлӑ мӑн Урттемей çумӗнче вӑл шалча пек çеç курӑнса ларать. Аллисем çип-çинçе – шӑмӑ кӑна. Ӗлӗкех ӳсӗркелетчӗ вӑл, халь çак иртнӗ çул çурӑ хушшинче пушшех начарланчӗ ун сывлӑхӗ. Кӑларма та халь ӑна чирӗ пирки кӑларнӑ, срокне тултариччен ларас пулсан тата тӑватӑ уйӑх ытларах лармаллаччӗ.

– Кха, кха, кха! – пӗтӗм кӑкӑрне пушӑ пичке пек кӗмсӗртеттерсе ӳсӗрет вӑл.

– Чарӑн, чорт! – кӑшкӑрса пӑрахрӗ ӑна пӗлӗте тем пек тилмӗрсе пӑхса выртакан юлташӗ Урттемей ун еннелле пуçне çавӑрса. – Кӗххӗмлетсе вӑрман тӗсне ярса ларатӑн, тӑмана. Пӑх, вӑрман епле илемлӗ тумланнӑ, сывлӑшӗ епле тутлӑ, сывласа тӑранма çук, сывла! Çӑт çӑвару тулли!

– Çӑмӑр та килет вӑн, – ним сӑмах тупаймасӑр йӑвашшӑн каласа хучӗ курпунне кӑларса пӗкӗ пек авӑнса ларакан Ерхип. Урттемей сасси ӑна темме çиллентерет.

– Килин. Килтӗр. Çумӑртан хӑракан пултӑн-и?

– Çу-у-к, хӑраса мар та...

– Çутӑр, йӗпеттӗр çӑмӑр. Ман намӑса çуса тасаттӑр! Айӑплӑ çын вӗт эпӗ, пысӑк айӑплӑ! – терӗ вӑл хытӑ сасӑпа Ерхип ӑна айӑпа кӗртнӗ пек. Вӑрӑммӑн хуйхӑрса сывласа ячӗ. – Киле арӑм патне, ачасем патне таврӑнап-çке! – хускатса ячӗ вӑл пӗр самант чӗнмесӗр шухӑшласа выртнӑ хыççӑн. – Епле кӗтет-ши мана арӑм? Ӗлӗкхи пекех юратать-ши вӑл мана, е? Эс мӗнле шухӑшлан, Ерхип?

– Темӗн... Хӗрарӑм вӑл чӗлхипе кӗтет те... Кха, кха, кха!

– А-а, чорт, эсӗ те савӑнӑçлӑ мар исмаçça!

– Мӗн йӗркепе савӑнмалла-ха манӑн?

– Киле таврӑнатӑп вӗт, мӗлке пуç, киле – ӑнланатни çавна?

– Эпӗ сан пек сывӑ çын мар. Мана пурпӗр. Хӑть кунта, хӑть килте вил. Нумай пурӑнаймастӑп ӗнтӗ эпӗ.

– Н-та-а!.. Нумая тӑсаймӑн темӗн. Анчах епле пулсан та çут тӗнче савӑнтаратех вӑл. Пӑх-ха эсӗ: кунӗ, кунӗ мӗнле, ытарма çук илемлӗ! – терӗ вӑл хӑяккӑн çаврӑнса выртса. – Кала тӗрӗссипе, вилессӳ килет-и?

– Çук, чирлӗ пулсан та пурнас килет, – тавӑрса калать Ерхип. – Пӗртте вилес килмест.

– Тоттӑ. Манӑн паян юрлас килет, йӗрес килет, такама тытса хӗнес килет! Виçӗ çула яхӑн вӗт... сахал вӑхӑт мар вӑл, виçӗ çул, виçӗ çул... – Иккӗш те тарӑн шухӑша кайса шӑп пулчӗç. Вӑрманти вӗçен кайӑксем пӗр-пӗринпе калаçса савӑннине тилмӗрсе итлеççӗ. Çӳлте, хура пӗлӗтсем хушшинче, хурчӑка çунатне сарса вӗçсе çӳрет.

Уçланкӑра выртакан икӗ çынна тилмӗрсе пӑхать вӑл, пӗрмай çавсен тӗлӗнче çаврӑнать, инçетрен мӗн иккенне паллаймасть.

– Кук-ку! Кук-ку! – таçта инçетрен сасӑ парать куккукӗ. Урттемей сасартӑк сиксе тӑчӗ те Ерхип çине çиллессӗн пӑхса илчӗ, унтан кӗсйинчен тапак енчӗкне кӑларса (арӑм парни) чикаркка чӗркеме пуçларӗ.

– Çӑварни иртсен пӗр çыру илтӗм. Арӑмран, – хускатса ячӗ Ерхип еннелле

тепĕр хут пăхса Урттемей. Халь унăн куçĕсем темле чеен пăхаççĕ. Кулнă пек туйăнаççĕ унăн кушак куçĕ пек чăпар куçĕсем, анчах хăй вăл кулмасть. Шăрпăкне сĕрчĕ те пўрне хулăнăш чикарккине тивертрĕ.

– Шеллеп тесе çырать. Мĕнле пек сана, Ерхип?

– Шеллени аван ĕнтĕ вăл.

– Ыйткалана, чăлаха, чирлĕ çынна шеллеççĕ ăна! Вăт, калăпăр, сан пеккине! – Кукăртарах хулăн пўрнине тăсса кăтартрĕ вăл. – Эпĕ чăлах тавраш мар, шеллени те кирлĕ мар мана! – Унтан çăвар тулли тĕтĕм сывласа илчĕ те, мăрье пек çўлелле вĕрсе кăларчĕ. – Юрату кирлĕ мана, шеллў мар, ю-ра-ту-у! Ăнланатни?

– Пурпĕрех мар-и вăл? – ăнланаймасть Ерхип.

– Ыттишĕн епле пулĕ те, маншăн апла мар.

Ерхип, шăналăк пек хура хутаççине салтса типсе кайнă çăкăр татăкĕ илчĕ те шап-шур пуличчен тăвар сапса чаплаттарса çиме пуçларĕ. Чăмланă чух унăн янах шăммисем, чавса шăмми пек хирĕлсе тухса унăн ахаль те илемсĕр, сархайнă сăн-питне сăнсăрлатаççĕ.

– Вилсен час çĕрес мар тетĕн-им? Хе-хе-хе.

Ерхип ăна хирĕç нимĕн те чĕнмерĕ, шăмарса çеç шывланса, пўрленсе тăракан куçĕсемпе пăхса илчĕ. Урттемей çынна тăрăхлама юратнине пĕлет вăл, камĕрта пĕрле ларнă чухне хăнăхнă Ерхип.

Чух сывласа ларакан çак Ерхип çын вĕлернĕ тесен никам та шанас çук, анчах вăл тĕрĕс: çын вĕлернĕшĕн ларнă вăл тĕрмере. Ĕçкĕре... ĕçкĕпе пулнă. Сăмах çине сăмах, тавлашса хирĕçсе кайнă, çапăçма тытăннă. Аллине хуçăк турта епле çакланнине астăваймасть вăл (пит ўсĕр пулнă). Мирун "Ах!" тесе тĕшĕрĕлсе аннине çеç астăвать. Унтан сут, сут хыççăн – тĕрме.

Урттемей – лаша вăрри. Хуçа патĕнче, пуян çын патĕнче тарçăра ĕçлесе пурăнатчĕ вăл. Пĕрре çапла хуçипе вăрçăнсан ăна çилленсе çитнĕ те çĕрле ун рысак лашине вăрласа тарнă. «Кун патĕнче ĕçлесе пурăнсан нихçан та çын шутне кĕрес çук, – тенĕ вăл. – Вăрлас!»

Хăшĕ темиçе лаша вăрлать – çакланмасть, ку малтанхинчех çакланчĕ. Ялне таврăнсан малтан ăна ялĕпе ислетрĕç, унтан аллисене хыçалалла çыхса халăх пўртне хупса хучĕç. Унтан – сут, сут хыççăн – тĕрмене. Икĕ çул та сакăр уйăх хушшинче арăмĕ пĕрре, пасар майĕ, кĕрсе тухрĕ.

– Шеллетĕп сана, – тет. «Хм. Шел-ле-тĕп!»

Урттемей чикарккине туртса пĕтерчĕ те юлашки хут çăвар тулли йўçĕ хаяр тапак тĕтĕмне ĕмсе илсен чикаркки тĕпне ывăтса ячĕ. Вутлă чикаркки сывлăшра пĕкĕ пек кукăр туса ешĕл курăк çине кайса ўкрĕ.

– Е-ех, аван-çке вăрманта! Аван вĕт, е?

– Мĕн аванни пур вара?

– Тĕрмере аван-им? Кай эппин каялла.

– Ан асăн, тархасшăн, ан асăн ун çинчен! Кха, кха, кха! Кхе, кхе, кхе! Тьфу-у! – сурса пăрахать Ерхип хура сурчăкне.

Вăхăтран вăхăта килекен ăшă çил тутлă шăршă ытам тулли парса хăварчĕ.

– Мейĕр, шел мар.

Урттемей, тутлă сывлăша ытараймасăр, пĕтĕм кăкăрĕпе сывлать, çăм тухса тулнă сăмси шăтăкĕсене пуç пӳрне кĕрет – пысăк шăтăксем. Аслати авăтни илтĕнсе кайрĕ – хĕвел анăç енчен хура пĕлĕт хупласа илет. Хĕвеле хупласшăн пулас, унталла васкать.

Пĕр ушкăн чĕкеç вĕсем мĕн шухăшланине килсе пăхса кайрĕç, аялтанах, шалча пек ларакан Ерхип пуçне кăшт кăна сĕртĕнетчĕç.

– Мĕн тейĕç-ши мана ялта? Арăм мĕн тейĕ-ши е?

– Мĕн теччĕр... ристана мĕн теччĕр... ристан тейĕç, тата мĕн калаччăр? – чаплаттарать çăкăрне Ерхип.

Урттемей тепĕр май, хырăмĕ çине, çаврăнса выртрĕ, çĕтĕк шăлаварлă хулăн урисем пĕрене пек выртаççĕ. Вăл икĕ аллине те чăмăртаса чăмăркка çине янаххипе тайăнчĕ те чăтлăхалла пăхса выртать.

– Кук-ку, кук-ку! – таçта кулянса авăтса ларать куккук. Пĕрре çывăхрах, çумра пекех илтĕнет, тепре пит инçе пек туйăнать.

– Кук-ку, кук-ку!..

Урттемей хăй кунта выртать пулсан та, шухăшĕ, чĕри – килте. Ĕçшĕн, хресчен ĕçĕшĕн аллисем, çак пуслăх пек хулăн аллисем кĕçтеççĕ. Пĕр çул та ултă уйăх каннă юнĕ вылять, арăмĕпе тăвата çул çеç пурăннă, халь вăй питти çын – вăтăр виççĕре.

Ларнăранпа хĕрарăм курман. Киле таврăнсан, çак аллисемпе, хулăн аллисемпе ыталать вăл арăмне, ыталать те чуп тăвать, икĕ çул ытла хĕрарăм курман. Анчах... анчах арăмĕ мĕнле пăхĕ ун çине? Йышăнмасан ăна? Ма ларнă вăхăтра килсе чуна пусармарĕ вăл? Ялта ун патне кĕтӳç çӳрет тени илтĕнчĕ. Тĕрĕс те-и, тен? Шанма çук, Урттемей выçă кашкăр пек шăлне шăтăртаттарса илчĕ.

Ерхип хутаçне çыхать – çисе тăраннă. Арки çинчи тĕпренчĕксене типшĕм алли çине пухрĕ те çăварне пысăк карса тĕпренчĕксене сапрĕ.

– Ну, сăпаççипă Турра, тăрантăм.

– Ывăнас ан пул урăх! Çĕрĕпе, ниçта чарăнма... – каласа пĕтерейменрĕ сăмахне Урттемей, вăрманта юрланă сасă, хĕр сасси:

"Чăн тӳ-пе-ри çич çă-лтă-р та-а,

Чăн тӳ-у-пе-ри çич çă-ăл-тă-ă-р!.."

– Утăпăр майпе,– тăма тытăнать Ерхип хутаççине çурăм хыçне çакса, – çитĕ кану!

– Чарăн! Сассу ан пултăр! – Аллипе юнаса кăшкăрса пăрахрĕ ăна Урттемей. – Итле!!

Ерхип хăранипе йăпшăнса ларчĕ. Урттемей çине тĕлĕнсе пăхать. Лешĕ куçĕсене хăпартмасăр сасă илтĕннĕ çĕрелле пĕр сиккеленмесĕр тилмĕрсе пăхать, хăмаç пек хĕрелсе кайрĕ, пăхать, куçĕсене илмесĕр пăхать малалла.

Чечексемпе илемленнĕ уçланкăна шурă кĕпеллĕ лĕпĕш пек шурă хĕр, калама çук хитре хĕр, вăйă кĕвви каласа тухать. Урттемей пĕр шуралать, пĕр хĕрелет; кушак шăши тухнине сыхласа выртнă пек, пĕр сиккеленмесĕр хăрушшăн пăхать вăл Ульккаçа. Мĕнле шухăшсем "ухтараççĕ-ши" унăн арпус пек çаврака пуçне? Çăварĕнче сурчăкĕ типнипе вăл тутисене ĕне пек çулласа илчĕ.

Нумайччен пăхса выртрĕ вăл ним чĕнмесĕр, пĕр сиккеленмесĕр. Ерхип унтан тĕлĕннĕ, вăл ăна пăхать, ун шухăшне ăнланасшăн.

– Мĕн пулнă кăна?

Тăма хăтланчĕ Урттемей, каллех выртрĕ. Куçĕ умĕнче вăрăм курăк кансĕрлесе ларать, вăл ăна темшĕн чĕтрекен аллипе татса ывăтса ячĕ пĕр айккинелле. Шăши сыхлакан кушак пекех, пиншакĕ те сарă...

– Мĕн пулнă кăна?

Вăрманта вĕçен кайăксем пĕр-пĕринпе хăйсен чĕлхипе калаçса савăнаççĕ. Вăрман савăнать, вăрман шавлать.

– Кук-ку, кук-ку!.. Асту! Асту! Асту! – илĕртет такама пĕр вĕçен кайăкĕ.

Улькка сасси шăпчăк сасси пек янрать вăрманта.

Акă, вăл чечек татма пĕшкĕнчĕ те, унăн çамрăк кăкрисем тата ытларах палăрма пуçларĕç, çиттуни çĕре тивет, чечексемпе чуптăвать.

– Аха! – терĕ Урттемей. – Аха...

Улькка ним пĕлмесĕр, нимĕн шухăшламасăр васкаса утма пуçларĕ. Ешĕл курăк ăшĕнче шурă лĕпĕш пекех курăнать Улькка.

Урттемей siksе тăчĕ. Ерхип ун шухăшне сисрĕ пулмалла.

– Мĕн кирлĕ мара... Урттемей! Урттемей! – тесе кăшкăрса юлчĕ вăл. Нумай кирлĕ-им Ерхипе? Урттемей кăшт тĕртсенех йăванса юлчĕ Ерхип.

Улькка унталла-кунталла çаврăнкаласа пăхрĕ те йывăççсен хушшинчен ун патнелле пĕр çын, хăрушă çын пынине курах кайрĕ.

– Ай! – кăшкăрса ячĕ вăл шăнкăрав пек сассипе. Умĕнче чечексем выртаççĕ, кам пăрахнă, кам татса пăрахнă вĕсене? Астумасть вăл хăранипе хăех аллинчи чечекне пăрахнине. Сенкер куçĕсем унăн тем пысăкăш, анчах темме курми пулчĕç. Пуçĕ çаврăнса кайнипе вăл чут çĕре ўкетчĕ, халь те йывăçран тытса ĕлкĕрчĕ.

– Ай Турă, мĕнле çын ку? Мĕн тăвасшăн ку этем, тискер кайăк манерлĕ этем? Тарас пулать, чупас пулать... – Анчах вăл виç-тăват чалăш та чупаймарĕ – такам кĕлещепе хĕстернĕ пек хĕстерсе илчĕ.

– Кăравул! Рас... – кăшкăраймарĕ – ун çăварне хупланă. Такам ăна ыталаса илнĕ, кăкăрне йăвалать, питне чуптăвать.

Тапаланать, чăх чĕппи хурчка аллинче çапкаланнă пек çапкаланать Улькка, анчах Урттемей аллисем тимĕр кĕлеще пек. Çавра çил-и, тăвăл-и ăна çĕре çĕклесе çапрĕ. Чĕри siksе тухас пек тапать.

– Ах, о-ох! – хаяр сассипе кăшкăрса ячĕ вăл.

– Ан кăшкăр, чорт! – илтет вăл хăлхи айĕнчех...

Тепĕр ирхине ирех ял çынни вăрманпа пынă чух инçетренех ватă юман çинче шап-шурă япала çакăнса тăнине курать.

– Çын вĕт ку, çын!

Çав ватă юман тĕлĕнче çăхансем çаврăнса вĕçсе çўреççĕ.

– Хĕр вĕт ку, хĕр!

Хăранипе пырса пăхмасăр яла чупать. Ватă юман турачĕ çинче çакăнса тăраканни Улькка пулнă. Намăса чăтаймасăр вăл çакăнса вилнĕ.

1929 ç.

**Юрий ЯКОВЛЕВ**

# С. Ялавинăн «Çул çинче» калавĕ

Кашни произведени вулакантан, А.П. Чехов калашле, «чун хусканавĕ» ыйтать. Анчах сăваплă вăйăма чăн-чăн илемлĕ произведенирен кăна кĕтме пулать.

Литературăна темăпа идея шайĕнче кăна тишкернĕшĕн критиксене час-часах ÿпкелеççĕ. Ку, тен, тĕрĕс те, анчах çак çитменлĕх критиксенчен кăна килмест — вĕсем тишкерекен произведенисем те чылай чух ăшăх, вĕсенче темле «путас» тесен те «путма» çук.

Шкулта та, вузра та 20-мĕш çулсенчи мĕнле литературăна вĕрентеççĕ-ха пире? Социализмла реализм типĕтсе-хăртса пĕтернĕ ăс-тăн апачĕ лекет ытларах шкул ачисемпе студентсене. Паллах, ун пек апат анмасть, чĕре патне пымасть.

20-мĕш çулсенчи чăваш литературине тĕсеме тытăниччен эпĕ те вăл вăхăтра урăхла литература пулма пултарассине шанман. Çав тапхăрти литературăна тишкере пуçласан вара куç умне чăн та пысăк литература тухса тăчĕ. Вулакансене сĕнекен «Çул çинче» калав Тутар Пролетари Писателĕсен Хусанти чăваш секцийĕн «Утăм» ятлă 2-мĕш альманахĕнче 1929 çулта пичетленсе тухнă.

Калав авторĕ Сергей Ялавин манăçа тухнă тесен те йăнăш пулас çук. Вăл пăтранчăк саманари кăткăс писатель, кăткăс çын. Вулакан ун çинчен Хв. Уйрăн «Саламов пурнăçĕ пире мĕне вĕрентет» эссине вуласа пĕлме пултарать. Хв. Уяр хăй калана тăрăх, Саламов прототипĕ Ялавин пулнă. «Эп астăвасса чăваш литературинче ун пек чаплă çын та çукчĕ пуль», — çырать ун çинчен писатель.

«Çул çинче» калавра лартнă философипе гуманизм проблемисен тата стиль уйрăмлăхĕсен тарăнăшне уçса парас тĕллевпе эпир калава илем-сăнарлăх тĕлĕшĕнчен пăхса тухасшăн. «Çапла ĕнтĕ, илемлĕ хайлава илес пулсан, эпир чи малтан ĕç-пуç йĕркипе мар, çав ĕç-пуçа мĕнле сăлтавланипе интересленетпĕр», — тесе çырнă Виктор Шкловский. 20-мĕш çулсенчи калавсенче ăнсăртлăх стиль мелĕ пулнă, анчах çак мелпе вырăнсăр усă курни нумай чухне калавсене илемлĕх тÿпине çитме чăрмантарнă. «Çул çинче» калаври сюжет та ăнсăртлăх стильне никĕсленсе хывăннă, анчах ăнсăртлăх кунта чăн-чăн илемлĕх мелĕ, мĕншĕн тесен писатель ăна произведени содержанийĕпе те тарăннăн сăлтавланă. Калавăн пĕрремĕш пуплевĕнчех писатель философиллĕ пысăк тема хускатать: «Ваттисем вилсе пыраççĕ, вĕсем вырăнне ачасем çуралаççĕ, ÿссе çитĕнсен каччăсем авланаççĕ, хĕрсем качча каяççĕ. Çапла вăл пурнăç».

Çак тема — пурнăçпа вилĕм — пĕтĕм произведени тăршшĕпех тăсăлать. Акă, Ульккӑç хăй миçе çул пурăнассине пĕлесшĕн куккукран ыйтать, такам таптанă чечеке тăратса лартса ăна «эпĕ пулман пулсан пĕтеттĕн вĕт» тет. Урттемейпе Ерхип та пурнăçпа вилĕм çинчен калаçаççĕ т. ыт. те. Çак витĕр тема

калаври кӑткӑс ыйтупа — ҫын шӑпипе таччӑн ҫыхӑннӑ. Мӗнле майпа ӑнлантарать-ха автор Ульккаҫӑн телейсӗр шӑпине? Лӗпӗш — калаври символла сӑнар: С. Ялавин лӗпӗшпе хӗр сӑнарне пӗрлештерет. Лӗпӗш сӑнарӗ калавра икӗ майлӑ кӑмӑл-туйӑм ҫуратать: пӗр енчен вӑл савӑнӑҫлӑ хӗр пурнӑҫне туйса тӑма май парать, тепӗр енчен лӗпӗш хӑрушлӑха кӗрсе ӳкме пултарасси, кашни самантрах уншӑн кун-ҫул вӗҫленме пултарасси паллӑ. Ҫакӑ «лӗпӗш пек шурӑ хӗр» сӑнарӗ калава йывӑр кӑмӑлпа тултарать, калаври ӗҫ-пуҫа та сӑлтавлать. Кунсӑр пуҫне, автор Ульккаҫ хыҫҫӑн вӗсен ҫемйинче тӑватӑ ача вилни ҫинчен пӗлтерни Ульккаҫӑн та вӗсене май ӑраскал пулма пултарасса систерет. Калавра ҫавӑн пек пайӑрмсем пайтах, вӗсем сюжета, сюжет-сӑнар, сюжет-символ пӗлтерӗшлӗ тӑваҫҫӗ.

20-мӗш ҫулсенчи калавсенче, паянхи чылай калавра та писательсем ытларах герой чӗлхипе мар, автор чӗлхипе усӑ курма кӑмӑлласҫӗ пулсан, С. Ялавинӑн «Ҫул ҫинче» калавӗнче вара автор чӗлхинче те геройсем сисӗнсе тӑраҫҫӗ. Калавра, тӗпрен илсен, виҫӗ чӗлхе сийӗ уйӑрма пулать: автор-калавҫӑ сийӗ, Ульккаҫ сийӗ, Урттемей сийӗ. Вӗсем кашни уйрӑммӑн мар, пӗр-пӗринпе килӗшӳллӗн ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ. Калав Ульккаҫпа ҫыхӑннӑ чух лексика, интонаци, кӗвӗлӗх тӗлӗшӗнчен пӗрре, Урттемейпе ҫыхӑннӑ чух — урӑх. Вӗсем хирехирӗҫле субъективла сферӑсем йӗркелеҫҫӗ. Акӑ, илер-ха Урттемее сӑнласа кӑтартакан пӗр сыпӑка:

«...Урттемей пӗр шуралать, пӗр хӗрелет, кушак шӑши тухнине сыхласа выртнӑ пек, пӗр сиккеленмесӗр хӑрушшӑн пӑхать вӑл Ульккаҫа. Мӗнле шухӑшсем «ухтараҫҫӗ-ши» унӑн арпус пек ҫавракa пуҫне? Ҫӑварӗнче сурчӑкӗ типнипе вӑл тутисене ӗне пек ҫулласа илчӗ. Нумайччен пӑхса выртрӗ вӑл ним чӗнмесӗр, пӗр сиккеленмесӗр. Тӑма хӑтланчӗ Урттемей, каллех выртрӗ. Куҫӗ умӗнче вӑрӑм курӑк кансӗрлесе ларать, ӑна темшӗн чӗтрекен аллипе татса ывӑтса ячӗ пӗр айккинелле. Шӑши сыхлакан кушак пекех, пиншакӗ те сӑрӑ...»

Урттемее сӑнлакан эпитетсем, паллӑ ячӗсем ун характерне уҫӑмлӑн сӑнласа катартма май параҫҫӗ. Писатель калавра уйрӑмах Урттемей сӑнарӗн пӗр енне — унра тӗп вырӑн йышӑнса тӑракан аркатуллӑ вӑя, выльӑхлӑха палӑртать: «...Тапкаланать, чӑх чӗппи хурчӑка аллинче ҫапкаланнӑ пек ҫапкаланать Ульккаҫ, анчах Урттемей аллисем кӗлеще пек. Ҫавра ҫил-и, тӑвӑл-и ӑна ҫӗре ҫӗклесе ҫапрӗ». Унтан маларах Урттемейпе Ерхип уҫланкӑра выртнӑ вӑхӑтра «ҫӳлте, хура пӗлӗтсем хушшинче хурчӑка ҫунатне сарса вӗҫсе ҫӳрет». Калавра хурчӑка кӑна мар, хура кураксем те («ҫавӑнпа вӗсем иккӗш те, хура кураксем шӑрӑхра ҫӑварӗсене карса сывланӑ пек, ҫӑвар тулли сывлаҫҫӗ вӑрманти таса сывлӑша»), кушак та («Халь унӑн (Урттемейӗн) куҫӗсем темле чеен пӑхаҫҫӗ. Кулнӑ пек туйӑнаҫҫӗ унӑн кушак куҫӗ пек чӑпар куҫӗсем, анчах хӑй вӑл кулмасть») вилӗме сӑнарламалли мел. Ҫавӑн пекех вӑл Урттемейре ҫынлӑх ҫуккине кӑтартать, вӑл тӑвас тискер ӗҫе сӑлтавлать. Илемлӗ пайӑрмсем кашни хӑй тӗллӗн те Урттемей чӑртмахлӑхне ҫеҫ мар, унӑн характерне пӗтӗмӗшле сӑнлама май параҫҫӗ. Тӗслӗхрен: «пӳрне хулӑнӑш чикарккине тивертрӗ», «ҫӗтӗк шӑлаварлӑ хулӑн урисем пӗрене пек выртаҫҫӗ», «ҫак пуслӑх пек хулӑн аллисем» т. ыт. те.

Каласа панин «тонĕ» вăл е ку сфера витĕмĕнчен килет. Акă, тĕслĕхе, Улькаç сфери: «...Е-ех! вăрăм-çке кунĕ те! Тăватă кун тăватă эрне пек туйăнчĕ. Халĕ тата виçĕ кун кĕтмелле. Çунат пулсан, вĕçсе кайĕччĕ Микулкка патне! Ашшĕ те, амăшĕ те, никам та ан систĕрччĕ. Пĕр-икĕ сăмах калаçса килĕччĕ Улькаç Миккулкапа. Инçе те мар вĕт, ултă çухрăм кăна вĕсен хушшисем. Ултă çухрăм вĕсене уйăрса тăрать...» Çак сыпăк уйрăм эмоци сĕмĕпе палăрса тăрать. Кăшкăруллă предложени («Е-ех! вăрăм-çке...») çамрăк хĕр ӳкĕнĕвне, хистевлĕ пуплевсем ун ĕмĕтне кăтартаççĕ. Калуллă предложенисенче те уйрăм интонаци — хумхану, канăçсăрлăх, ӳкĕнӳ палăрать. Çавна кăтартса пама икĕ хут калани (повтор) май парать: ултă çухрăма палăртса калани ăша вĕçтерет. Савăнăç туйăмĕпе юнашарах тепĕр туйăм — йывăр сисĕм, синкерлĕх пурри ăна тулли пулма май памасть. «Çул çинче» калавра савăнăçпа ырă мар туйăмсем çыхăнни калавăн пĕрремĕш йĕркисенче тенĕ пекех пуçланать. Ырă мар туйăмсем, ӳссе пырса, юлашкинчен савăнăçлă кăмăла хупласа хураççĕ. Лĕпĕш вĕçевне аса илтернĕн çăмăллăн янракан музыка ăшчике хумхатса яракан йывăр, канăçсăр музыкăпа улшăнать. Çав туйăмсен çӳлти пусăмĕнче вĕлтĕркке кĕвĕллĕ музыка хутран-ситрен кăна вăйсăррăн янрать, ун вырăнне повествовани хуллен, кашни саманчĕпе тамăкланса шăвать. Ретардаци (сюжет аталанăвне чарса тăни) меслечĕ персонажăн тӳрремĕн курăнман кăмăл еккине палăртма, вулаканра кирлĕ пек кăмăл-туйăм çуратма май парать. Произведенири сисĕмлĕхе писатель каласа парса мар, тĕрлĕ илемлĕх мелĕсемпе кăтартса парса вулакан патне илсе çитерме пултарать. «Çул çинче» калавра С. Ялавин композицие тĕпе хурса çырать. Вăл, агитка поэтикине килĕштерекен калавçăсем пек, сăнарсене аякран сăнласа кăтартнипе мар, вĕсене шалтан çутатса кăтартма кăмăллать, çавăнпа повествование субъективизацилеме вăл пуплевпе конструктивлă формăсемпе анлă усă курать. Калавра писатель кăмăл улшăнăвĕсене çут çанталăк ӳкерчĕкĕсемпе çыхăнтарать кăна мар, пейзажа вăл персонаж куçĕпе курнă евĕр çырса кăтартать. Калăпăр, ватă юман çамрăкрах юмана курни-илтни çинчен тайăла-тайăла пăшăлтатса каласа пани, «вĕçен кайăксем пĕр-пĕрне кăшкăрса, пурте илтмеллех кăшкăрса савăнаççĕ» тесе çырса кăтартни т. ыт. те геройăн ăшри кăмăл-туйăмĕнчен тухса тăрать. Автор калавра тĕрлĕ ăслайсемпе усă курать, вĕсемпе вăл пулнă-пулман мар, пĕлсе, тĕп тĕллеве пăхăнтарса усă курать. Акă, автор-калавçă событи шайне тӳрремĕн кĕрсе каять: «Ех, Миккулка! Улькаç мĕн шухăшланине пĕлетĕн-ши эсĕ? Сисетĕн-ши эсĕ Улькаçăн чĕрийĕ епле тапнине! Сиксе тухас пек тапать ун çамрăк чĕри. Çамрăк ӳт савни аллине кĕтет...»

20-мĕш çулсенчи калавсенче кун пеккисене сахал мар курма пулать, анчах вăл нумай чух калав пĕрлĕхне пăснипе çаврăнса тухать. «Çул çинче» калавра вара вăл вырăнлă, мĕншĕн тесен вăл ун умĕнхи эмоци — синкерлĕх туйăмĕн аталанăвĕ çинче никĕсленет. Çапла майпа хăй енчен те тĕп событие сăлтавлать. «Ощущение цельности рассказа во многом зависит от достаточности, убедительности и эмоциальной силы мотивировочной части», — тесе çырать С. Антонов «Я читаю рассказ» кĕнекере. 20-мĕш çулсенчи калавра та, хальхи калавçăсем те час-часах событие тĕплĕн ăнлантарса чăрманманнине асăрхатăн

пулсан, «Çул çинче» калавра пĕтĕм илемлĕ текстах пысăк «напряжениллĕ», «сывламан» вырăнсем кунта çук. Çакăн пек «напряжение» калав тăршшĕпех тытса пыма произведени икĕ майлă çыхăнусенче йĕркеленни — сцеплени тата хирĕçлени — май парать. Акă, Трубина Марфин «Хĕрлĕ галстук» калавĕнче те пĕр пулăм тепринчен тухса пырать тесе калама пулать, анчах писательница улшăнусене илемлĕх мелĕсемпе çирĕплетмен: пĕр ĕç тепĕр ĕçпе улшăнассине автор йăлтах хăй аллине илнĕ.

С. Ялавин вара калаври ĕçсен аталанăвне шалтан сăлтавлать: çĕнĕ тема пуçланас умĕн ăна хатĕрлекен «сасăсем» тĕп «кĕвĕ» çумне хутшăнаççĕ. Мĕнле майпа сăлтавлать-ха автор, калăпăр, Улькkaç çинчен каласа пынине татса Урттемейпе Ерхип çине куçнине?(Калас пулать, повествование татнин те кунта художествăллă функцийĕ пур, вăл ытти функцисемпе пĕрлех Улькkaçăн çулĕ татăлассине систерет). Çĕнĕ темăна кĕртме, чи малтанах, синкерлĕ кăмăл-туйăм пулăшать. Тĕслĕхшĕн: «...Йăвăçсем хăрушшăн, чуна сĕвĕртсе пĕр-пĕринпе темскер çинчен васкаса калаçса илчĕç те хашлатса хуйхăрса ячĕç. Улькkaç аванах илтрĕ, çавăнпа вăл та (хăй те пĕлмест темме) салхуланчĕ. Ватă вăрăм чăрăш та унпа пĕрле хашш! тесе хыттăнах хуйхăрчĕ — çил тухнă. Чăрăш çўçĕсене çил турама тытăнчĕ. Та-çта-а-а инçетре аслати кăлтăртатрĕ те сасартăк чарăнчĕ.

Ку-ку, кук-ку! çывхарнăçемĕн çывхарать куккук сасси — ку-ку! шиклентерет çавах та. Иккĕн пулсан калаçса йăпанаттăн, пĕччен...» Ку сыпăкра ахаль нейтраллă лексика мар, автор салху кăмăла çуратма пултаракан сăмахсемпе усă курать («Хăрушшăн», «чуна сĕвĕртсе» т. ыт. те), междометипе евĕрлев сăмахĕсем те çав тĕллевех пурнăçлаççĕ. Вĕсем салху туйăма палăртаççĕ, çав туйăм, кăшт тăхтасан, çынпа çыхăнать. Куккук Улькkaç миçе çул пурăнассине ыйтнă хыççăн икĕ хут çеç авăтсан, автор тӳрĕ пуплевпе «тен, Улькkaçран малтан урăх çын ыйтнă-и» тесе, кайран Улькkaçа «темле сасă илтĕннĕ пек пулчĕ» тесе çырать. Çапла майпа писатель Улькkaç çинчен пыракан повествование сасартăк татса мар, майĕпен, малтанах хатĕрлесе куçарать.

Калавра С. Ялавин ăшри пуплевĕн тĕрлĕ кăткăс формисемпе усă курать, автор повествование пайăр мар тӳрĕ пуплеве, персонажсен монологне çăмăллăнах куçарать. Çавăн пек çыру техники сăнарсен психологине кăмăл хусканăвĕ таранах кăтартса пама май парать.

«Çул çинче» калав — пĕрре вуласа тухса лăпланмалли йышши мар, çĕнĕ шухăшсемпе ассоциацисем шыраса ун патне вĕçĕмсĕр таврăнма пулать.

*Трофим Иванович Иванов–Таçук иртнĕ ĕмĕрти 60 – 70 çулсенче палăрнă сатирик. Унăн кулăшла калавĕсемпе сăввисем, фельетонĕсем "Талпиçен" (1965), "Хĕлĕх ала" (1969), "Курман-илтмен çынсем мар" (1971, 1980), "Çĕнĕ милĕк" (1978) кĕнекесенче пичетленнĕ. Çыравçă вилнĕренпе кăçал 40 çул çитрĕ.*



## Виталий ЕНĔШ

# Калама та çук ырă-çке Таçук

1965 çулхине кун-çул мана Пушкăртстанри Авăркас районĕн тĕп ялне, Тăлпас салине, илсе çитерчĕ. Эпĕ унта "Çĕршыв çулĕ" ятлă хаçат редакцийĕнче ĕçе пикентĕм. Ĕçĕм-хĕлĕм вырăсларан чăвашла куçарассиччĕ. Çавă хаçат вырăсла, чăвашла тата тутарла эрнесеренех виçшер хутчен тухса тăратчĕ. Чăваш хаçатне кăларса тăрас ĕçе виççĕн — А.С. Савельев, Н.Л. Леонтьев тата эпĕ — туса тăраттăмăр. Вăл хаçатра тар мĕн чухлĕ юхтарнине халь калама та йывăр. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен А.Савельевпа Н.Леонтьев ĕçленĕ хушăрах аслă шкулсенче вĕренетчĕç, вăхăчĕ çитсен пĕри Стерлитамакри института, тепри Хусанти университета каятчĕç. Вара эпĕ хаçат редакторĕн чăвашла куçарас енĕпе ĕçлекен заместителĕ те, "машинистка" та, корректор та хамах пулса тăраттăм. Ман алă витĕр çапла эрнесеренех куçарса машинкăпа пичетленĕ очерксемпе тĕрленчĕксем, тĕрлĕ пĕлтерӳпе сăвă-калавсем сакăр вун-сакăр вун пилĕк страница таранах иртетчĕç.

Çырнă хайлавăмăрсене виççĕн тан, ăмăртмалла тенĕ пек, Шупашкара "Ялав", "Тăван Атăл", "Капкăн" журналсене ярса параттăмăр.

Пыра киле эпир виççĕмĕр те капкăнçăсем пулса кайрăмăр. Эпир ярса панă сăвă-калавсене, вĕсем юрăхлă пулнипе пулманнине пĕлтерсе, тĕпрен илсен иккĕн, Н.Волковпа Т.Иванов-Таçук хурав парса тăратчĕç. Трофим Иванович Иванов-Таçук çырнисем пире ытларах килĕшетчĕç. Вăл сăвă-калав пичете мĕншĕн юрăхлă пулманнине вăлтса тăмасăр, тӳрремĕнех тата пит кĕскен çыратчĕ, çав хушăрах хавхалану кӳмелли сăмахсем калама та манмастчĕ. Унран эпир нихăçан та çакнашкалтарах çырусем илмен: "Хисеплĕ Енĕш юлташ! Шел пулин те, сан хайлаву пичете каяймарĕ. Саламппа..."

Тĕрлĕ сăлтава пула Таçукран илнĕ çырусем ман сыхланса юлаймарĕç. Çавăнпа та вăл Н.Леонтьев ячĕпе янă хăш-пĕр çырăва илсе

кӑтартатӑп. Ҫав ҫырусенче Таҫукӑн ырӑ та уҫӑ, ҫавӑн пекех тӳрӗ кӑмӑлӗ лайӑх палӑрать.

"Хисеплӗ Леонтьев юлташ!

Ҫыхӑну тытма шутлани аван. Эсир ярса панӑ калаҫусене пичете ярайманӑмӑр. Анчах эсир ҫырма пултарасси уҫҫӑнах курӑнать. Ҫырсах тӑрӑр, ҫӗнӗрен материалсем кӗтетпӗр.

Салампа — Т. Иванов-Таҫук.

24.X.1962."

"Леонтьев тусӑм!

Ҫыру ҫитрӗ. Ҫыхӑну тытма чунтан хавас. Халь килнӗ ҫыру — тӗлӗнсе каймалла пуян! Сӑввисем ытарма ҫук, хаваслансах усӑ курма тӑрӑшӑп, ыттисем те хирӗҫех пулас ҫук! Халь ҫапла калас килет: санӑн сӑвӑсем кӑна ҫырмалла иккен. "Капкӑн" журналӑн чи активлӑ поэчӗ пуласса чун-чӗререн шанса тӑратӑп.

Салампа — Т. Иванов-Таҫук.

Ҫыр!"

Куратӑр-и, малтанхи ҫырӑвӗнче Трофим Иванович аякри Пушкӑртстанра пурӑнакан ҫамрӑк автора ҫурма официаллӑ хыпар-ҫыру ҫырса ярать: "Хисеплӗ Леонтьев юлташ!" — тет. Апла пулин те хӑйӗн иккӗмӗш ҫырӑвӗнчех аякри пултаруллӑ та ҫамрӑк автора "Леонтьев тусӑм!" тесе ӑна ҫунат хушма пулӑшать.

Ҫавнашкал ҫырусене, хавхалану ҫунатне сарма пулӑшакансене, эпӗ хам мӗн чухлӗ илмен-ши Трофим Ивановичран! Вӑл каярахпа Николай Леонтьев патне ҫырнӑ ҫырӑвӗсене вуласан вара тӗлӗнмеллипех тӗлӗнсе каятӑн:

"Ҫырманни нумай пулса кайрӗ, — тет Трофим Иванович аякри тусӗнчен каҫару ыйтнӑн, — темле пӗр-пӗрне манса кайнӑ пекех пулса тухрӗ-ха ку. Ҫитес номерсем валли эсӗ ярса панисенчен суйласа илесшӗн-ха. Тӳрех калас пулать, хӑш-пӗрисем пичете юрӑхлах мар вара. Вӑл сӑвӑсем ҫинче эс тарламан пулмалла. Шухӑшӗ енчен тиркемеллех мар та, литература кӑлтӑкӗсем нумай. Вӗсене пичетлейместпӗр пулмалла. "Тӳме" сӑвӑ ҫитес номере каять.

Салампа — Т. Иванов-Таҫук."

"Николай!

"Ырра мар" сӑвӑ лайӑх. Пичетлетпӗр. Куҫарусем каймаҫҫӗ. Ун пек япалапа юлташла калатӑп, ан та хӑтлан. Ярса панӑ Гамзатов сӑввисем "Капкӑн" валли мар. "Йӑрӑ арӑм" ҫӗнӗ мар, эсӗ вӑл шухӑша "кивҫен" илнӗ. Ҫапла-и? Лайӑх калавсем кӗтетӗп.

Салампа — Т. Иванов-Таҫук.

8.IV.196..."

Ҫӳлерех илсе кӑтартнӑ ҫырусене Таҫук Леонтьев патне хӑш ҫул яни паллӑ мар. Апла пулин те малалла вулӑпӑр.

"Хисеплӗ Микулай!"

"Чечек евӗр шанчӗ шанчӑк" ман шанчӑка хӑпартрӗ. Эсӗ сӑвӑсем ҫырассипе пысӑк ҫитӗнӳ туса хунӑ унта. Акӑ мӗн, шӑллӑм, эсӗ вӑл сӑвва тепӗр икӗ-виҫӗ куплет хушса, ӑнланмалларах туса яр ман пата. Авторӗ, паллах, яланах лайӑх ӑнланать хӑй сӑввине.

Эпĕ те ăнлантăм-ха та, вулакансем тавçăрса илĕç-ши? Пурхиле: "Урăх пире çăра кирлĕ мар" тесе сиксех тавлашнине кăтартса памасан, сулмаклах пулмасть. Пĕрремĕш куплет хыççăн тепĕр темиçе куплетпа (2-3, 4 таран) çирĕплетсе парасчĕ.

Кĕтетĕп.

Салам пурне те! Александр мĕншĕн шăпăрт ларать унта?

Т. Иванов-Таçук.

22.XI.1966. \ 5493."

Пысăк мар, пит кĕске çырăвĕсене илсе кăтартнипех Трофим Ивановичăн ырă кăмăллă та хаваслă сăнĕ куç умне анлăн тухса тăрать. Аякри-аякри, хăй куçа-куçăн курса паллашайман çынпа çырăвĕсем урлă тăван ывăлĕпе калаçнă пекех калаçмасть-им-ха вăл Н.Леонтьевпа? "Александр мĕншĕн шăпăрт ларать унта?" — тесе вăл А. Савельев-Сас пирки ыйтса пĕлме те ӳркенмест. Ку вăл: "Эс Александр Савельева ас илтер-ха. Вăл та çыртăрччĕ", — тесе каланиех ĕнтĕ.

Пирĕн Таçук йышши пиччемĕрсем вышкайсăр хытă ĕçлени вара 1966 çулхи чӳк уйăхĕн çирĕм иккĕмĕш кунĕ тĕлне редакцирен авторсем патне миçе çыру кайниннчен те пĕлме пулать: "\ 5493". Эппин, пилĕк пин те тăват çĕр тăхăрвун виçĕ çыру çырнă капкăнçăсем. Вăл вăхăтра "Капкăн" журналта пĕтĕмпе те улттăн çеç ĕçленĕ: тĕп редактор — В.Яковлев (Тоймак), яваплă секретарь — Н.Волков, çырусен пайĕн пуçлăхĕ — Н.Амурцев, литература пайĕн пуçлăхĕ — Т. Иванов-Таçук, художник Г.Я. Яковлев тата техничка-курьер. Тĕп редакторпа курьер, çавăн пекех художник авторсем патне çыру-хурав ярса чăрманман. Çавăнпа та чи йывăр та "хура" ĕçе, тĕпрен илсен, виçĕ çын туса пынă. Чи йывăрри унта акă мĕн: вĕл-вĕл вĕçсе килекен шучĕ çук фельетонсемпе элек-çăхав таврашне тĕплĕн вуласа тухмалла, мĕнмĕн çырнине тĕрĕслеме вырăнсене ярса памалла, тĕрĕсленĕ хыççăн вырăнсенчен мĕн-мĕн пĕлтернисемпе фельетонсен авторĕсене паллаштармалла... Капкăнçăн ĕçĕ — икĕ вĕçлĕ сăнă: тĕрĕс те тĕплĕ çырсан ун пĕр вĕçĕ айăплине витĕрех тивет (обком органĕ-çке-ха), тĕрĕс мар çырсан — çыраканнине суд тенкелĕ те кĕтме пултарать (кун пек чух обком та пулăшсах каяймасть).

Трофим Иванович хам пата янă çырусем мĕнлерех пулнине илсе кăтартаймастăп. Ман пата та вăл Н.Леонтьев патне янă çырусем пекреххисенех ярса тăнă: ырламалине — ырланă, тата лайăхрах çырма хавхалантарнă, начаррисене — куçкĕретех хурланă. Апла пулин те 1970 çулхи утă уйăхĕн ăшă, хĕвеллĕ, ырă кунĕнче илнĕ çыруран пĕрне илсе кăтартмасăр пултараймастăп. Вăл хаклă çырăва эп хальчченех пăхмасăр пĕлетĕп:

"Аякри хаклă Виталий шăллăм! — тенĕччĕ вăл çырура. — Эпир, хальхи капкăнçăсем, ватăлнăран шултăркаса кайма пуçларăмăр. Пире санашкал хастар çамрăксем сывлăш пек кирлĕ. Çавăнпа та, пĕрле ларса, арăмупа канашла та Шупашкара, пирĕн пата, ĕçе килме пултарассипе пултараяс çуккине çийĕнчех пĕлтер. Тӳрех калатăп: пирĕн кунта хваттер проблеми пулмасть. Гонорарне вара эс кĕреçепе хырнă пекех илме тытăнăн.

Шутла! Çиччĕ виç те — пĕрре кас!

Саламп — Т. Иванов-Таçук."

Ку çыру мана, Шупашкартан пин çухрăмри тутар аулĕнче тухса тăракан хаçатăн çамрăк тăлмачне, мĕнлерех пăлхантарса янине калама та йывăр. "Мĕн тумалла?



А.Таçук ялти юлташĕсемпе (варринчи)

Каймалла-и куçса Шупашкара е кунтах, тĕпленсе çитнĕ вырăнтах, пурăнмалла?.." Çакнашкал ыйтусене, вĕсен сăпсисем сăхсах тăнине пула канăçлăхăма çухатмаллипех çухатрăм. Манăн аллăмпа урама, хурçă сăнчăр пек, пĕр япала тăлламаллипех тăлласа лартрĕ: вăл — аслă пĕлĕвĕм çукки. "Коммунизм ялавĕн" тĕп редакторĕ Н.Якимов хăйсен хаçатне чĕнсен те куçса кайма мана аслă пĕлӳ çуккиех тытса чарнăччĕ: сакăр класс пĕтернипех инçете кармашма çук-çке-ха.

Темиçе кун хушши тĕкне татма вĕри шыва янă чăх евĕр ăшăрханса, вĕриленсе пурăнтăм та тӳсеймерĕм, мăшăрăма, Нина ятлăскерне, виçĕ ачаллăскерне, татăклăн каларăм:

— Пуçтарăнас пулать, — терĕм. — Каймалла кунтан.

— Ăçта каймалла?

— Шупашкара! — терĕм каллех. — Ĕçе чĕнеççĕ. "Капкăна". Çавăнта каймалла, тăванăм.

Ку хыпар шалкăмĕ арăма пĕр хушă сăмах хушаймиех туса лартрĕ. Вара вăл манпа прокурор айăплă çынпа калаçнă пекех пуплеме тытăнчĕ:

— Анчахрах, темиçе çул каялла кăна, илнĕ хавттере пăрахсах каймалла-и?

— Çапла.

— Ачамăрсене, виççĕшне, Шупашкарта ăçта вырнаçтарăпăр?

— Ялта, — терĕм, — аттеçĕм кил-çуртĕнче пурăнăпăр.

Арăмăн пит-куçĕ темлерех пулса кайрĕ, куçĕнчен шултра тумламсем йăраланса тухрĕç те аллинчи Андрей ывăлăм çине патлатсах тумлама тытăнчĕç. Вăл, виçтăват уйăхри ача, хавассăн тапкаланса илчĕ.

— Ав, — терĕм мăшăрăма шӳтлекеленçи пулса, — ав, аллунти ывăлу та хаваслананать, Шупашкаралла тапаланать. Халь лайăх шутла та — татăклă сăмахна кала.

Каç еннелле тин арăм мана: "Йĕппи ăçталла, — терĕ, — çиппи те çавăнталлах пултăр эппин..."




В.Емельянов шаржĕ



Эпĕ Шупашкара çитсе тĕплениччен "Капкăнра" хăш-пĕр улшăнусем пулса иртнĕччĕ ĕнтĕ. Çырусем пайĕнче ĕçленĕ Нил Амурцев, ĕмĕрлĕхех куçне хупса, леш тĕнчене куçса кайнă-мĕн. Ун вырăнне манашкалах çамрăк Николай Иванов, Çĕрпÿ районĕнчи Тĕрер ял каччи, ĕçлеме тытăннă. Хăйсем "шултăркама" тытăннă пирки Таçук ман пата тĕрĕсех çырнă. Тĕп редакторăн, В. Яковлев-Тоймакăн, пенсие тухма вăхăт çитнĕ. Трофим Иванович, чĕрепе аптăраканскер, больницăна час-часах кайса выртатчĕ, Н.Волковăн — çиекен чир, вырăсла каласан, рак. Мана çакă ветерансем, хăйсен шанăçĕ вырăнне хурсах, ĕç лашине кÿлсе лартнă пекех туса хучĕç. Эпĕ, литература пайне йышăннăскер, пуçларăм çамрăк вăй-халăма шеллемесĕр тертленме. Ĕçленине кура "Капкăнри" ĕçпе вăрçă ветеранĕсем пире, икĕ çамрăка, пулăшсах, вĕрентсех тăратчĕç.

Çырусем, çырусем... Вĕсене пĕр кун е ик-виç кун хурав памасанах купа сĕтелĕм çинче куç умĕнчех çĕкленсе, ÿссе пыратчĕ. Вĕсене киле илсе кайса хуравсем çырса ларни, вăхăт çитменнине пула "Капкăн" конверчĕсем çине адрессене Нина мăшăрăм çырса ларни те пайтах пулман-им-ха?

Трофим Ивановичпа эпир, пĕр пÿлĕмрех ĕçлесе ларнăскерсем, пурнăçри кăлтăксăлтавсем пирки мĕн чухлĕ пуплемен пулĕ. "Ан пăшăрхан, — тетчĕ вăл чунĕ уçăлса кайнă хушăра, — сана эп çамкун тарне те, ăс-хакăлун тарне те кăларттаратăп пуль. Шăллăм, тертленмесĕр, нушаланмасăр ăсталăхăн ăйăрĕ алла вĕренмест. Ăна çăварлăхне те памалла, кутлăхне те... Нухайккине вара ăна валли мар, хăвна валли тытса çÿре чи малтан..."

Вăл вăхăтра эпир ĕç укçипе гонорар таврашне уйăхра виç-тăватă хутчен те илеттĕмĕр.

Çапла вара эпĕ, ĕнер çеç райхаçатăн "дервишĕ" пулнăскер, хам сисмесĕрех "улпута" тухса кайрăм. Апла пулин те мана ватă капкăнçăсем сăпка çакса çăвара

ёмкёч хыптарса паман. Чи кăткăс та тĕрĕссине шыраса тупма йывăр çырусем — уйрăмах анонимкăсем — тӳрех ман ума пыра-пыра выртатчĕç. Пĕлместĕп, вĕсене мана юриех, тĕрĕслесе пăхмалла паман-ши тетĕп халь. Вăл çырусен вĕçне-хĕрне тухас тĕллевпе вырăнсене çитсен вара ĕçкĕçсемпе ĕçкелекен пек тыткаланă хама, ухмахсемпе — ухмах пек, ытла ăслисемпе — ăслă çын пек... Мĕншĕн апла пулнă-ха? Мĕншĕн тесен: "Эпĕ — Енĕш, эпĕ "Капкăнран"! — тесе кăкăра çапса çӳренипе тĕрĕссине пĕлме çук. Ун пек çӳреме пуçласанах çынсем е кирлĕ-кирлĕ мар сăмах çеç ваклама тытăнаççĕ, е, сăлтав тупса, тарса çухалаççĕ — çавă кăна. Вара çырури тĕрлĕ-тĕрлĕ фактсемпе урам варринче пĕчченех тăрса юлатăн.

Пĕррехинче ман алла хăрушла ĕç-пуçсен историйĕ лекрĕ. Ăна та пулин мана пĕр каçлăха çеç пачĕç. Вуласа тухрăм çавна, фельетон та çырса кăлартăм. Фельетон ятне те, çыннисене те юриех асăнмастăп халь. Мĕншĕн тесен вĕсен халь ĕнтĕ мăнукĕсен мăнукĕсем те пур пуль. Аслашшĕсемпе асламăшĕсемшĕн вĕсен мĕн-ма пите хĕретмелле-ха?..

Фельетон тухнă хыççăн çур уйăх пек вăхăт иртсен, кăнтăрлахи апат хыççăн хамăн ĕç пӳлĕмне таврăнсан, Трофим Иванович мана калать:

— Эсĕ кĕпепех çуралнă пулмалла? — тет.

— Ма?

— Телейлĕ эс, — тет Таçук тем вăлткаласа. — Эс апата тухса кайрăн çеç — фельетонун тĕп геройĕ килсе кĕчĕ. Сана шырать: "Тав тумалла-ха ман ăна", — текелет. Вăл мĕнле тав тума пултарнине эсĕ чухлаймастăн-ха.

— Вăл этем тĕрмере кирпĕч шутлама тивĕç вĕт-ха, — терĕм эп Трофим Ивановича. — Тен, йăнăшатăн эс?

— Эп йăнăшатăп-и? — куçран чăр пăхрĕ те мана, кĕсйинчен пилĕк пуслăх укçа туртса кăларса сĕтел çине хучĕ. — Çак мĕн япала?

— Укçа, — тетĕп.

— Миçе пуслăхли?

— Пилĕк пуслăхли.

— Эсĕ ăна, пилĕк пуса, лайăх пĕлетĕн. Эпĕ те лешне, фельетон геройне, лайăх паллатăп. Ăна, шăллăм, çак пилĕк пусран та лайăххрах пĕлетĕп. Çавăнпа та атя-ха...

Трофим Иванович мана вăйпа тенĕ пекех тĕп редактор пӳлĕмне çавăтса кĕчĕ, Василий Яковлевича хăй мĕн курни-илтнине евитлерĕ. Яковлев-Тоймак тӳрех шалти ĕçсен министрĕпе çыхăнчĕ. Лешĕ тĕпчесе пĕлме, вара редакцие хăех шăнкăравлама пулчĕ. Чăн та, министр вăрах кĕттермерĕ. Вăл пĕлтернĕ тăрăх, фельетон геройĕ Пичет çуртне ниепле те пыма пултарайман имĕш, вăл камерăра пĕччενех ларать иккен. Кунта Трофим Иванович, хĕрсе кайнăскер, телефон трубкине хăй илчĕ те хăй кам пулнине, фельетон геройне хăçантанпа пĕлнине питĕ тĕплĕн ăнлантарчĕ. Министра: "Эсир хăвăр ведомствăн мундирне хӳтĕлени çеç ку!" — терĕ юлашкинчен.

Министр, каярахпа шăнкăравлама пулса, трубкăна каллех хучĕ. Пĕр сехете яхăн кĕтсе лартăмăр. Акă, эпир кĕтнĕ шăнкăрав. Министр калаçать. Тĕрĕс мар информаци панăшăн каçару ыйтать хăй. Фельетон геройĕ, чире персе, эмелсем туянма тесе тĕрмерен вăхăтлăха ыйтса тухма пултарнă темле майпа. Паллах, ирĕке ăна пĕччен кăларман. Ятарлă милиционер пулнă унпа пĕрле.

Унччен Володарский урамĕнчи Пичет çурчĕ тĕлне çитсен фельетон геройĕ:

"Çакӑнта ман çывӑх туссем ӗçлеççӗ. Çавсем патне кӗрсе тухма ирӗк парсамччӗ. Сывпуллашасчӗ ман вӗсемпе. Вӗсене урӑх эп те курайӑп, те вуçех кураймӑп", — текелесе хуралçӑ-милиционера ӳкӗте кӗртнӗ те, ытти-хытти вара малалла каламасӑрах паллӑ.

Трофим Иванович редакцие пырса кӗриччен вӑрман хуçалӑхӗнче те, колхоз пуçлӑхӗнче те ӗçленӗскер, авторсемпе пӗр чӗлхе тупма ӑстаччӗ. Ятламаллисене килӗштермесӗр мар, ырӑ кӑмӑлпа ятлатчӗ. Нумай та вӑрӑм çыракансене вӑл ялан пӗрешкел калатчӗ: "Ну, мӑкӑрлантарса тултарнӑ та иккен эс кунта! — текелетчӗ. — Ну, тӑванӑм, шӗветмеллипех шӗветсе янӑ эс!.."

Аслӑ пӗлӳ çукки пирки эп ӗмӗрӗпех пӑшӑрханса пурӑнтӑм, анчах та халӑх пит хапӑллакан журналӑмра камсем пулнине, камсем калӑпланине тӗпчесе пӑхрӑм та — тӗлӗнсе икӗ алла шарт çапрӑм: аслӑ пӗлӳллисем пӑч-пач кӑна иккен. Капкӑнçӑсенчен пӗрисене аслӑ пӗлӳ илме вӑрçӑ чӑрмантарнӑ, теприсене юхӑннӑ хуçалӑхсене ура çине тӑратассишӗн çулӗ-çулӗпех тӑрӑшни ура хунӑ. Ман Петя ятлӑ тӑван пиччем, сӑмахран, хӑй ӗмӗрӗнче виç-тӑватӑ хутчен те çӗнетрӗ пӳртне. Сӑлтавӗ — ачисем çулсеренех йышланса пынинче, вӗсем пӗчӗкçӗ пӳртсенче шӑнӑçайми пулнинче. "Капкӑн" редакцийӗнче чи нумай вӗреннийӗ унӑн редакторӗ В. Яковлев-Тоймак кӑначчӗ, ыттисем пурте, çав шутрах эпӗ те, — çутта тухса çитейменччӗ. Анчах та вӗсене пурне те пӗрлештерекенни çакӑччӗ: пурнӑç тути-масине, халӑхӑн тертнушине лайӑх пӗлни. Хӑй вӑхӑтӗнче "Правда" хаçат корреспондентӗнче, парти обкомӗн идеологи секретарӗнче ӗçленӗскере "хывӑхпа" улталама май çукчӗ. Амурцевсемпе Волковсем, Таçуксемпе Тоймаксем хавхалантарса тӑнӑ ушкӑнсем районсенче пуринче те пулнӑ. Çавӑнпа та Нил Скворцов, Георгий Янкай, Никон Пушкин, Вениамин Петров, Николай Тихонов, Петӗр Вашават, Матвей Сакмаров тата ытти капкӑнçӑсем хӑйсем пурӑнакан районсенчен кулленех сас парса тӑратчӗç. В.Петров хӑй аякри Пушкӑртстанран пулнӑ пулсан та Т. Иванов-Таçукпа тачӑ çыхӑну тытса пурӑннине эпӗ лайӑх пӗлетӗп. Вӑл та Н.Амурцевран, Таçукран çырусем ялан илсе тӑратчӗ.

Çав хушӑрах Шупашкарти "ӗçлеме чӑрмантаракансем" те сахал марччӗ. Вӗсем — аслӑ пӗлӳллӗскерсем, ни чӑвашла, ни вырӑсла йӗркеллӗ çырайманскерсем, анчах ытти çыравçӑсенчен хӑйсене нимрен те катӑк мар тесе шутлаканскерсем, апла пулин те самай çӳллӗ пукансем çине улӑхса ларнӑскерсем. Трофим Ивановича вӗсем кулленех вӑрттӑнла-кӗрттӗмле меслетпе пакетсемпе папкӑсем тыттаратыттара хӑвaратчӗç. Вӗсенчен хӑшӗ те пулин кӗрсе тухсанах:

— Ӗçлеме чӑрмантаракансенчен тепри килсе кайрӗ, — текелетчӗ Трофим Иванович. — Вӗсен япалисене тӳрлете-тӳрлете ман шӑлӑмсем тахçанах шанса кайрӗç ӗнтӗ. Ме, шӑллӑм, çитес номере валли хатӗрлесе пар унӑн опусне. Пире кунта темле чинсен лӑпӑр-лапӑрӗсемпе аппаланса пурӑнма лартман-иç. Пирӗн тӗллев — халӑх ывӑлӗ-хӗрӗсен сӑвви-калавӗсемпе ӗçлесси, талантсене шыраса тупса вӗсене çул уçса парасси...

Хама Трофим Иванович панӑ "ӗçлеме чӑрмантараканӑн" малтанхи пакетӗнче пуррине алласа тухсан эпӗ аптӑрасах кайрӑм:

— Кӑна пичете епле хатӗрлемелле? — ыйтрӑм Таçукран.

— Ма? — ыйтрӗ вӑл.

— Ытла пĕр ним те çук-çке-ха.

— Çав япаласем хушшинче пĕр нимне шыраса тупасси — санăн ĕçӳ-тивĕçӳ, — терĕ çеç Трофим Иванович.

— Ĕçлеме чăрмантараканни çырнинчен нимĕн те тăрса юлмасан вара епле? Вăрçмĕ-и?

— Авторăн ячĕпе хушаматне йăнăш ан çыр, калавĕсенчи персонажсен ячĕсене сыхласа хăвар, вара пурте йĕркеллех пулать: çур литр кĕртсе лартса хăварма та пултарать.

Çакна асту: хатĕрлесе çитерсен эс авторне ним те ан шарла, ун хатĕр хайлавне хама пар, ăна эп хамах кăтартăп.

Ĕçлеме чăрмантаракансен "штачĕ" Шупашкарта самаях пысăкчĕ. Вĕсен хушамачĕсемлĕ сăвви-калавĕсем журналта тăтăшах кун çути курса тăратчĕç. Амурцевсемпе Волковсем, Таçуксемпе Енĕшсем хатĕрлесе кăларнă хайлавсем пурăна киле, çулсем иртнĕ май, вĕсен самаях пухăнатчĕç. Вара вĕсем, ним пулман пекех, кĕнеке издательствинелле çул тытатчĕç, кĕнекесем те кăларатчĕç. Каярахпа пĕчĕкçĕ казуссем пулса иртетчĕç. Çапла эпĕ пĕрне самай ху-улăн кĕнеке хатĕрлесе патăм. Унăн калăпăшĕ машинкăпа пичетленĕ хыççăн 700 страница ытла пулчĕ. Унăн кĕнеки пичетленсе тухнине те эпĕ çын урлă кăна пĕлтĕм. Ăна уçкаласа пăхрăм та хыççалта "Книга издана в авторской редакции" тесе çырнине асăрхарăм. Казус мар-имха çакă? Тĕрĕс, ку вăл çĕр процентлă казусах мар, казус вăл — çавнашкал кĕнекесен авторĕсемех Писательсен союзĕн членĕсем пулса тăнинче. Ку ĕнтĕ сăмах май калани, çула май аса илни çеç пултăр.

Халĕ каллех "Капкăна" таврăнăпăр. Пушкăртстанра пурăннă вăхăтрах, отпускамĕне тухнă тапхăрта, Шупашкара çитсе курма тăрăшаттăм. Малтанхи хут килсенех эпĕ Трофим Ивановичпа паллашса çывăх тăван пек явăçса кайнăччĕ. Ман Шупашкарта çĕр каçма вырăн çуккине пĕлсен вăл мана хăй патне, Атăл леш енчи Сосновкăна, илсе кайрĕ. Пырса кĕтĕмĕр пысăках мар йывăç çурта. Тĕлĕнмеллипех тĕлĕнсе кайрăм: пӳрт тулли ача-пăча хĕвĕшет. Калăн çав, ача-пăчи яслийĕ тейĕн. Таçукăн пит тараватмăшăрĕ, Антонина Прохоровна, пире хирĕçренех таçта тухса кайрĕ:

— Эп çиччас килеп, — терĕ те вăл Канаш районĕнчи Ачча ялĕн диалекчĕпе. — Эс,Таçук, хаклă хăна килнĕ ятпа, тен, лешне мĕн тăвасшăн пулăн. Ан шыра. Хальлĕхе çук лешĕ.

Лартăмăр сĕтел хушшине. Трофим Иванович пĕр хушă пикенсех пуплерĕ, хăй капкăнçа епле тухни пирки тĕплĕн каласа пачĕ:

— Чим, — терĕ кăштахран, — мĕн-ма типĕлле пуплес? Пĕлнĕ пул! Антонина аппу лешĕн пирки "çук" терĕ пулсан — таçта пур вăл.

Вара пуçларĕ «лешне» шырама. Пĕтĕмпех ухтарса тухрĕ. Çенĕкре те, пӳртре те, лаçра та пырса тĕкĕнмен кĕтес хăвармарĕ. Часах Антонина Петровна та курăнса кайрĕ.

— Эс хăнана халĕ те сăйламан-им, Таçук? — ыйтрĕ вăл.

— Шыраса тупаймарăм-ха, — мăк-мак тукаларĕ Трофим Иванович.

— А ăна ма шырамаллаччĕ сан? Сервант çинче даракан графин еннелле аллуна тăсмаллаччĕ кăна.

Графина Антонина Прохоровна туп-тулли тултарнă та вăл пушă пекех курăнса тăрать. Эх, пуçларĕ Таçук хăйне хăй ятлама:

— Эпĕ çарта разведчик пулнă вăт-ха! — текелет. — Çакăн хыççăн мĕн разведчикĕ вара эп?! Тьфу темелли çеç юлать ман хам пирки.

"Капкăнри" чи кăткăс ĕç вăл килекен çырусенче тĕрĕсси пуррипе çуккине вĕçне çитиех тĕрĕслесе, тĕпчесе пĕлесси пулнă. Хăш чух çапла та пулкалатчĕ: вăл е ку ял корреспонденчĕ, "Капкăнра" сахал мар пичетленнĕскер, хайĕн фельетонне парса хăварать:

— Кунта çĕр проценчĕпех тĕрĕс, — текелесе кăкăрне çапса илме те пултарать.

Çавнашкал "çĕр процентлисене" шаннине пулах Трофим Ивановичăн пĕррехинче, шартлама сивĕре, Елчĕк районĕнчи Лаш Таяпана çитиех кайса килме тиврĕ. Çитмĕлмĕш çулсен пуçламăшĕнче техника хальхи пекех хĕвĕшмен. Район пуçлăхĕсем те вырăнсене хĕлле хыçлă çунапа, çулла тăрантаспа кая-кая килетчĕç.

Таçук Елчĕк енчен эрнерен тин çаврăнса çитрĕ.

— Ахалех шаннă эп "çĕр процентлă" тĕрĕслĕхе, — терĕ вăл пăшăрханса. — Мĕнлерех çынсен ятне вараларăмăр.

Ман хамăн та çав сăлтавпах Етĕрне районĕнчи Ямаш таврашне кайса килме тӳрĕ килчĕ. Шупашкартан Етĕрнене автобуспа, Етĕрнерен Ямашалла — çула май каякан ГАЗикпе, чи кирлĕ вырăна — мотоциклпа, Ямашран Шупашкара — самолетпа, "Кукурузник" текеннипе. "Çĕр процентлă" тĕрĕслĕхе шаннине пулах манăн та Етĕрне енче питĕме самаях хĕретме тиврĕ.

Çавнашкал фельетонах тепрехинче Комсомольски районĕнчен килнĕччĕ. Шкулта вĕрентекенсем, упăшкипе арăмĕ, ашшĕ-амăшне мунчана хăваласа кăларса янă имĕш. Ку фельетона районти çут ĕç пайĕнче ĕçлекенсенчен пĕри панăран ăна пичете Н.Иванов хатĕрленĕччĕ. Фельетон кун çути курнă хыççăн Мускавран, "Учительская газета" ятлă хаçатран çав кăларăмăн ятарлă корреспонденчĕ килсе кĕчĕ редакцие. Тĕп редактор çукран Мускав хăнипе манăн пуплесе ларма тиврĕ.

— Фельетона кун çути кăтартиччен сиртен хăшĕ те пулин вырăна çитсе пăхнă-и? — пăвăртмаллипех пăвăртать хăна.

Фельетон хатĕрлесе кăлараканни Н.Иванов пулнăран тăхтаса тăмасăр ăна чĕнтĕмĕр. Пиртен нихăшĕ те Комсомольски енне кайса чăрманман, çавăнпа мăкмак кăна туса, хулпуççисене сиктеркелесе лартăмăр.

— Пĕлетре, — прокурор пекех хастар кастарать Мускав корреспонденчĕ, — учительсен ашшĕ-амăшĕ мĕнле мунчара пурăннине?

— ?! — ним те шарламастпăр вĕт.

— Вĕсен мунчин калăпăшĕ — виçĕ метр сарлакăш, тăватă метр тăршшĕ. Эппин, шур мунча. Çав мунча çумĕнчех — тĕртсе лартнă вĕр çĕн пӳрт. Эх, маначчĕ, Мускав шереметне, унашкал мунчапа пӳрт! Ялти çынсем халь учительсене питлемеççĕ, сире, капкăнçăсене, хăвăра питлеççĕ.

Ку ĕнтĕ: "Çапма пĕлмен пушă каяллах пырса тивет", — тениех пулчĕ курăнать. Питĕ шел те, суд ларăвĕсене чĕнтернисем те пулкаланă пирĕнпе.

"Капкăн" гонорарĕ чи пысăккиччĕ. Çĕршыври вăтам ĕç укçи уйăхра çĕр çирĕм тенкĕ пулсан, журналăн пĕр страници те çĕр çирĕмччĕ. Таçук манран пĕррехинче ыйтать:

— Пĕлетне, пире мĕншĕн тӳлеççĕ çавăн чухлĕ укçа? — тет, вара ыйтăвне хăех

хуравлать. — "Капкăн" вăл — сиенлĕ цех. Сиенлĕ цехсенче тăрмашакансене сĕт параççĕ, пире — гонорар.

Çитмĕлмĕш çулсен пуçламăшĕнче çӳлтен пĕрмаях пĕр йышши кăтарту килсе тăратчĕ: "Журналăн тиражне кирек епле пулсан та сыхласа хăвармалла, унăн хисепне май килнĕ таран ӳстерсех пымалла..."

Ваттисем (Тоймаксем, Волковсем, Таçуксем) шухăша путма тытăнчĕç. — "Капкăн" ахаль те килсерен тенĕ пекех саланать, — пĕтĕмлетӳ турĕ пухусенчен пĕринче Василий Яковлевич, — утмăл пине çитрĕ, унран тата ытларах ӳстерме, ахăртнех, резервсем тăрса юлмарĕç пуль.

— Кашни киле икшер экземпляр çырăнтарсан çеç резерв тупăнма пултарать, — хушса хучĕ Трофим Иванович татăклăн...

Темлерен темле пуçăма чăрсăр шухăш пырса кĕчĕ. Вара, шухăшăмпа паллаштарас тесе, Трофим Ивановичпа калаçса пăхма шутларăм чи малтан. Унран çапла ыйтрăм:

— Совет Союзĕнче чăвашсем пурăнман вырăнпа область ăçта та пулсан пур-и? — терĕм.

— Çук. Ав, Казахстанра кăна вĕсем çирĕм пин ытла, — Тюмень облаçĕнче, Омскпа Томск енĕсенче, Мускавра — пур çĕрте чăваш пайтах. Вара мĕн тумалла, шăллăм?

— Вĕсем патне "Капкăна" çитермелле.

— Епле майпа?

— Мелĕ, меслечĕ йывăрах мар, апла пулин те самаях тарлама тивет. Чăваш вăл кирек ăçта пурăнсан та кулăша çывăх тăрать.

— Вара?

— Вăт, сăмахран, Казахстанра "Ара" (Тĕкĕлтура) ятлă журнал казахла та, вырăсла та тухса тăрать.

— Вăт, Трофим Иванович, казахсен çав "Ара" журналне хамăр пата хăнана чĕнмелле. Парас "Арана" хамăр журналта пĕр-икĕ страница. Ӳкерчĕксем пулччăр унта, сăвăсемпе калавсем, шӳтсем...

— Вара, вара, вара?! — хĕрсех пычĕ Таçук.

— Малтан казахсене хăнана чĕнĕпĕр, кайран "Капкăна" вĕсем патне ярăпăр. "Аран" вырăсла тухакан вариантне илсе тăракансем хушшинче, ахăртнех, чăвашсем çук мар. Вăт вĕсем илĕç те "Тĕкĕлтурана" алла, вара Шупашкарта та кулăш журналĕ пуррине пĕлĕç.

Чылайччен çамкине шăлкаласа ларчĕ Таçук, вара тăчĕ те ман сĕтел умне пырса тăчĕ:

— Вăт ку шухăша санне Эврика теме юрать, — ырларĕ Трофим Иванович. — Хăв шутласа кăларнă япалапа хăвах хăтланса пăх-ха...

Вăл вăхăтра союзлă республикăсенче пуринче те кулăш журналĕсем тухса тăратчĕç. Çапла "Капкăнăн" пĕтĕмĕшле хисепĕ 101000 экземпляра та çитнĕччĕ 1979 çулхине, анчах та хут çитменнине пула тăватă пин çынна журнал илсе тăма çырăннă укçана каялла тавăрса пачĕç. Çапла вара журналăн хисепĕ 97 пинрен малалла иртсе кураймарĕ.

Авторсемпе ĕçлесси пĕр кун та чарăнман. Журналăн витĕмлĕхне ӳстерес тесе

аслă ăру çыннисем — Амурцевсемпе Волковсем, Тоймаксемпе Таçуксем — ытлă-çитлех вăй хуратчĕç. Вăл вăхăтра "Капкăна" куçкĕрет хирĕç тăракан пуçлăхсем çукчĕ. Хальхи пек астăватăп. Никита Волков, журналăн ответлă секретарĕ, йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕç министерствин пуçлăхĕпе калаçать:

— Эпир паян редколлегин аслă ларăвне ирттересшĕн, — тет сăмахсене пит уçăмлăн тата-тата, ăнланмалла калаçа. — Вăл ларура йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçре асăрханă çитменлĕхсене питлекен фельетона сӳтсе яватпăр. Ларăва эпир сире те чĕнесшĕн.

Йăла ыйтăвĕсен министрĕ хăй пыраймасси пирки, вăхăт çукки пирки калама пуçларĕ пулас та:

— Ăнланмалла, — терĕ Волков тӳрремĕнех, — министрăн хăй ведомствинчи ĕçсемпе интересленме вăхăт çук тейĕпĕр. Мĕнех, кун пирки пирĕн çӳлтисене пĕлтерме ирĕксĕрех тивет.

Çапла каларĕ те трубкăна шак хучĕ. Палăртнă вăхăт тĕлне редколлегин ларăвĕ пуçланас умĕн чылай маларах министр персе те çитрĕ.

— Маттур пирĕн Никита Михайлович Волков, — терĕ аллисене кăмăллăн сăтăркаласа Трофим Иванович.

Таçуксем вăхăтĕнчи "Капкăн" пуçлăхĕсем хăйсен авторĕсемшĕн тăрăшни пирки каламалли сăмахăм та пур. Районсенче пурăнакан авторсене вырăнсенче хăйсене йĕркеллĕ тытма, вĕсене панă удостоверенисемпе вырăнлă усă курма вĕрентсех тăратчĕç. Шупашкарта пурăнаканнисене, ĕçсĕртерех тăрса юлнисене, журнал кăларас ĕçе тӳррем-ĕнех явăçтарнă. Вĕсем, ун чухнехи самай паллă çынсем, шучĕ çук çырусен авторĕсене, вĕсен хайлавĕсене хак парса çырусем çыратчĕç. Пĕр çырăва тĕплĕ пăхса тухса ответ панăшăн редакци вĕсене кашни çыру пуçнех пĕрер тенкĕ паратчĕ. Çавă штатра тăман ĕçченсен шутĕнче А.Ĕçхĕл, Н.Черепанова, С.Абаш, Н.Никитин, И.Малгай, В.Щелыванов тата ыттисем те пулнă. Хуравĕ-отвечĕсем айне вĕсем кашниех "Редакци хушнипе" тесе çыратчĕç те алă пусатчĕç. Редакци çапла çыхăну тытнин уссийĕ питĕ пысăкчĕ: пĕр çын та вăхăтра ответ илмесĕр тăрса юлман.

Эпир çамрăк вăхăтра пире çĕршыв Алтайри, Казахстанри тата ытти вырăнсенчи çерем çĕрсене уçма кайма йыхрав парсах тăратчĕ. Саманасем кăшăл тапранчĕç те çĕнĕ çĕрсене кайма тытăнчĕç. Вăл вăхăтра ялтан эteme тухса кайма май çукчĕ: паспорт пулман, çитменнине тата ăна йăпăр-япăрах паман. Паспорт илсе ялти йывăрлăхран тухса тарас тĕллевпе те тухса кайрĕç самант... тĕрлĕ çĕрелле.

Алтай еннелле чăваш çамрăкĕсем те нумай кайнă. Вĕсем мĕнле ĕçленине тĕпчеме те ырлама Çыравçăсен союзĕнче Иван Малкая яма йышăннă пулнă. Инçе çула тухас умĕн Иван Григорьевич "Капкăнран" хăйĕн гонорарне илме кăмăл тунă. Ăна ăсатма тусĕсем пухăннă. Çавна май И.Малкай пирки сăвă та çӳретчĕ халăхра:

Сикрĕç-тухрĕç "Капкăнран"
Виççĕн тан,
Ăсатаççĕ Малкая
Алтая...

Трофим Иванович каласа панă тăрăх, ун чухне тусĕсем Малкая Алтаях çитерейmen иккен. Ресторанта хĕмленнĕ хыççăн вĕсем Иван Григорьевича Шупашкар районĕнчи хир пуссине илсе çитерсе тухнă та калані:

— Ну, Иван, тулӑ пусси еплерех? — ыйтнӑ вӗсем.

— Тинӗс пекех хумханать, — тенӗ лешӗ хавасланса.

— Алтайри тулӑ пусси те ҫавӑн пекех хумханать, — теҫҫӗ поэта тусӗсем. — Тулӑ пучахӗ хылчӑклӑ-и?

— Хылчӑклӑ. Тӑрӑнать тата.

— Алтайри пучах та самаях тӑрӑнать. Ҫакӑ хире, тулӑ пуссине, лайӑх сӑна та мӗн-мӗн курнине паянах сӑвӑласа ҫырса кӑтартма тытӑн. Алтай кунтах вӑл, Иван-тӑван, унта ҫитиех кайса мӗскер тӑван, мӗн-ма чӑрманан?

Трофим Иванович шӳтлемесӗрех калатчӗ:

— Кирек епле гонорарпа та — пысӑк-и вӑл е пӗчӗк — пӗлсе усӑ курмалла: унсӑрӑн Алтая ҫитме ҫук, — тетчӗ. — Эпӗ хам укҫа-тенке пӗр пус илми киле ҫитерсе паратӑп.

Ҫырнӑ япала килӗшмен чух Трофим Иванович пӗр сӑмах калатчӗ: "Шӗвӗ". Атеизма "аталантарсах" ӗнтӗ кӗнеке издательстви ҫулсерен тӗне хирӗҫле кӗнекесем кӑларса тӑратчӗ. Ҫавӑ кӗнекесенче тухнӑ сӑвӑ-калавсем пурте "шӗвӗ" пулнине ҫирӗплетсех пама ӑс нумаях кирлӗ мар. Хӑйне чӑн-чӑн ҫирӗп атеист вырӑннех хурса пурӑннӑ пӗр шеремечӗ. "Ӳсӗр пуп" ятлӑ хайлав ҫырса кӑларнӑччӗ. Тухнӑ кӗнекене сӳтсе явнӑ, ӑна хак панӑ чух "ӳсӗр пупа" каҫса кайсах ырлама тытӑнчӗҫ. Обкомран пыни те ырлать ӑна, ыттисем те алӑ ҫупса ларманни кӑна.

Эпӗ те тӳсеймерӗм.

Малтанах, Шупашкарта пурӑнма хваттер шыраса тупиччен, Трофим Иванович-па Антонина Прохоровна мана хӑйсем патӗнче уйӑх ытла тытса усрарӗҫ. Ачисем-пех пӗрле ҫинӗ эп, вӗсемпе пӗрлех выртса та ҫывӑрнӑ.

Трофим Иванович ир-ирех тӑратчӗ, каллӗ-маллӗ утса ҫӳресе, сулмаклӑ та янӑравлӑ, калас шухӑша тӗлме тӗл килекен рифмӑсем шыратчӗ вӑл ун пек чух. Рифма таврашне Таҫук хама та шыраттарман мар.

— Эс, шӑллӑм, рифмӑсене каламбурлӑраххисене шыра, — текелетчӗ. — Каламбурлӑ маррисене тупма эп хам та пит ӑста. Мӗнле каланӑ-ха Минаев: "Даже к финским скалам бурым обращаюсь с каламбуром", — тенӗ мар-и-ха, ҫавнашкаллисене шыра, ачамми...

1972 ҫул. Ҫанталӑк кӗрхи сывлӑшпа сывлама тытӑнчӗ. Ӗҫ кунӗ вӗҫленнӗ ӗнтӗ. Редакци пӳлӗмӗнче пурпӗрех ӗҫ малалла пырать. Трофим Иванович, тин кӑна больницӑран тухнӑскер, хӑйне пит аван туйни пирки савӑнсах каласа парать. Ҫамрӑк чухнехисене аса илсе ларчӗ чылайччен. "Эпир ҫамрӑк чух акӑ еплерех ташлаттӑмӑр" текелесе пит тӑрӑшсах ташласа кӑтартрӗ. Ура хуҫса, алӑ ҫупсах ташларӗ. Ҫавӑн чухне пӗрремӗш хут ӑнлантӑм та туйса илтӗм: лайӑх пӗлсе ташлаканӑн пушмак кӗллийӗсем те кӗвӗллӗ-ҫемӗллӗ иккен: тӑкӑрт-тӑкӑрт, тӑп-тап! Шакӑрттин-шакӑрттин, шӑк-шак!...

Тепӗр ирхине вара хурлӑхлӑ хыпар вӗҫсе ҫитрӗ: Таҫук вилнӗ, ӗмӗрлӗхех куҫне хупнӑ иккен... Трофим Ивановича ырӑпа аса илсе ҫырмалли, паллах, ман нумай. Пӗтӗмпех ҫыраймӑп. Вӑл хамӑртан уйрӑлса кайни маншӑн чип-чипер, хытӑ вӗҫсе пынӑ кайӑк ҫӗр ҫине сасартӑк, чул пек персе аннӑ евӗрех туйӑнчӗ ун чух, ҫав 1972 ҫулхине, халӗ те ҫавӑн евӗрлех туйӑнать.

«Калама та ҫук ырӑ-ҫке Таҫук», – тетчӗҫ шӳтлесе. Ҫапла, «Капкӑн» журналта ӗҫлесе те чунӗ хытманччӗ унӑн.

**Арсений ТАРАСОВ**
**Ольга ТУРКАЙ**

# Вĕçсе иртеççĕ кайăксем

### Икĕ пайлă драма

ПЬЕСĂРИ ÇЫНСЕМ:
МАЭСТРО – композитор
МИККИ – çамрăк композитор, тинтерех çеç консерватори пĕтерсе килнĕскер
ВЛАДИЯР – юрăç
ЭЛЕОНОРА – Владияр арăмĕ
ТАЯ – Маэстро кӳрши пулнăскер
ЛАДА – çамрăк юрăç

**Пьесăри ĕçсем хальхи вăхăтра пысăкрах хулара пулса иртеççĕ.**

**ПĔРРЕМĔШ ПАЙ**
**Пĕрремĕш курăну**

**Бар. Тирпейсĕрскер, йĕрки çукрах. Сĕтелсем хушшинче çынсем пăт-пат кăна. Ӳсĕрсем. Кунтах Маэстропа Микки. Сăмахламаççĕ: те каласса пĕтернӗ, те радиопа янракан юрра итлеççĕ. Юрри – Маэстро кĕвĕленĕскер, Владияр юрлать. Микки чăнласах та итлет. Маэстро стакана эрех тултарать.**

МИККИ. Да-а... Çырасчĕ çакнашкал пĕр юрă. Владияр та маттур. Турри сассине пани кăна мар, юрлама пĕлет. Юрра туять.

МАЭСТРО *(самаях сӳрĕккĕн, кăмăлсăррăн. Хĕрĕнкĕ пулни уçăмлăнах палăрать)*. Владияр, Владияр, Владияр... Радио, телевизор... Ир те каç... Кунта та, çак лупас айĕ пек бар хăраххинче те – *(йӳççĕн кулса)* "паянхи чи çутă çăлтăр", "чăваш шăпчăкĕ". Чи çӳллĕ тӳпере вĕçет иккен Владияр. *(Пĕр вăхăт чĕнмест.)* Мĕнех, эппин унăн пурте йĕркеллĕ. Ăнăçлах пултăр! *(Тĕппипех ĕçет.)*

МИККИ. Мĕншĕн йĕркеллĕ ан пултăр унăн? Халăх ăна юратать. Концерчĕсене йăтăнать кăна. Эппин, укçаллă. Машина туяннă терĕç тин кăна. Çĕнĕ хваттере куçнă. Эпĕ çакна çеç ăнланмастăп: мĕншĕн композиторне çав чыс лекмест?

МАЭСТРО. Мана машина кирлĕ мар, Микки. Хваттерĕме те улăштарас çук. Нихăçан та! Вăл маншăн хамăн ӳт пекех пулса тăнă. Эп пурпĕрех Владияршăн кăмăллă. Унăн ырлăхне ăмсанмастăп та,

*2006 çулта Чăваш академи драма театрĕнче лартнă. Режиссерĕ – СССР халăх артисчĕ, РФ Патшалăх премийĕн лауреачĕ Валерий Яковлев*

кĕвĕçместĕп те. Хампа пайлашма та ыйтмастăп. Эпĕ хам ятарласа ăна ырă пултăр тесе тăрăшнă. Унăн пурте йĕркеллех пулсан, эппин... *(Сасартăках чарăнать.)* Атя, Микки, манăн чун канăçĕ çитнишĕн ĕçетпĕр. *(Стаканне тултарать.)* Владиярăн ăнăçлăхĕ - тепĕр çыншăн ырлăх, манăн ăнăçу – манăн йăпанăвăм. Урăх мана ним те кирлĕ мар.

**Шаккаççĕ. Ĕçеççĕ.**

МИККИ. Паллах. Унашкал юрăсемпе такам та чапа тухма пултарать. Ытлашши вăй хумасăрах.

МАЭСТРО *(пӳлсе, хыттăнрах)*. Мана такам та кирлĕ мар, мана Владияр кăна кирлĕ!

МИККИ. Каçарăр, Маэстро, эпĕ пĕрре те Владияра хурласа каласшăн марччĕ. Çапах та сирĕнсĕр Владияр та Владияр пулайман пулĕччĕ. Юрăç чапĕ, халăх юратăвĕ – вăл чи малтан пĕрех репертуар, юрăсем. *(Сасартăках шăпланчĕ те кăмăллăн кулса ячĕ.)* Эрех пуça кайрĕ пулмалла: сире ăнлантарма пуçларăм. Айванла, паллах. Каçарăр. Владияр сирĕнсĕр, сирĕн юррăрсемсĕр Владияр пулас çуккине тата сирĕн умăрта хăй парăмрине туйса тăма кирли çинчен кăна каласшăнччĕ.

МАЭСТРО. Хм... Парăм... Мĕнле парăм çинчен калаçан эсĕ, Микки, паянхи саманара? Кивçен укçана та тӳрех тавăрса парас килмест, кайран манăçать те илменнĕнех, пач урăхла – ху кивçен панăн туйăнма пуçлать. Халь чыс, интеллигентлăх çук. Кирлĕ мар! Халь чавса кирлĕ! Шĕвĕр чавса тата çивĕч шăл. А-а-а... кун пирки калаçмастăп тесеччĕ хама. Эх, Микки, Микки... Эс тепĕр чух мана пĕр Сенттине аса илтеретĕн. Астăватăн-и "Нарспине"? "Чипер ача Сентти пур..." А санăн, Микки, псевдоним илнĕ-илнех, "Сентти" ят илмеллеччĕ. Лайăх янăрать. Атту "Микки" темле хамăрла мар пек. Пĕри-пĕри, ак, "Микки" çумне "маус" çыпăçтарса хурать те, пулса тăран вара "Микки маус" шăши чĕппилле.

МИККИ. Ачаран çапла чĕннĕ те. Хальччен йĕкĕлтемен-ха. Йĕкĕлтес пулсан та – кӳренес çук.

МАЭСТРО *(хăй тĕллĕн)*. Шап-шурă, тап-таса хут çине хитре, илемлĕ, шăрçаласа çырас килет. Кăшт йăнăшсанах ластикпе сăтăрса тасатан. Çын та ахальтен мар вĕт çутă, таса кĕвве ытларах хаклать. Хăйĕн пурнăç тăршшинче вараланнине тасалăхпа тултарса, хупласа хурса çук тăвасшăн. *(Миккине)* Упраса хăвар хăвăн тасалăхна, Микки. Вара эс пулатăн. Чăн-чăнни пулатăн. Анчах та çирĕп пул. Чунĕ варланнă çынсем тепри таса пулнине юратмаççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсене вăл чунне сутнине аса илтерсе тăрать. *(Стаканне тултарать.)* Саншăн! Санăн пуласлăхушăн! Эпĕ те тахçан сан пекех айван та тасаччĕ. Шел. Çирĕплĕх çитмерĕ. (Шалт тутарчĕ.)

МИККИ. Эп пĕлместĕп, кам вăл Владияр, мĕнле çын? Манăн ăна хаклама тивĕçĕм те çук-тăр, çапах та эпĕ унпа сирĕнпе çывăхланнă пек çывăхланаяс çук, ахăртнех. Темле питĕ яка çын пек туйăнать вăл мана. Эсир вара маншăн, Маэстро...

МАЭСТРО. Пĕлетĕп, Турă! *(Кулать.)* Ха-ха-ха! Кăна эпĕ илтнĕ, Микки. Каçар, ӳсĕрле хăтланатăп. Эпĕ самаях ӳсĕрĕлсе кайрăм пулмалла. "Эпĕ ӳсĕр, ха-ха-ха! Кулатăп ухмахла..." О-о! Çынсем пăхаççĕ. Микки, сана намăс кăтартас килмест манăн, çылăха кĕретĕп, атя, эсĕ каях, тепĕр эрнерен-и е кăштахран йĕркене кĕрсе

çитетĕп те тĕл пулăпăр. Халь каях. Эпĕ кӳренместĕп, çилленместĕп. Маншăн пăшăрханма та кирлĕ мар, пурте йĕркеллех пулать. Ман сана хам çинчен çапах та лайăхпа шухăшлаттарас килет. Эп кăштах ларатăп та вара каятăп. Хамах. Эсĕ кай.

МИККИ. Чăрмантармастăп пулсан, кунтах юласшăн. Анчах та тек ĕçме кирлех мар пуль тетĕп.

МАЭСТРО. Во-во! Эсĕ мана Турă вырăнне картасшăн. Турăсем вара ĕçмеççĕ.

МИККИ. Чунĕ ыратнă чухне тем тăваççĕ вĕсем – Турăсем? Никам та курман вĕт. Тен, ĕçеççĕ те?

МАЭСТРО. Ха-ха-ха!.. Каласа хутăн та. *(Микки çине питĕ тимлĕн пăхса илчĕ.)* Чун пирки, Микки... ну юрĕ, ку ӳсĕрле калаçу пулмалла мар.

МИККИ. Анчах та эсир Владияра унăн чапĕшĕн, пурнăçĕ ăннишĕн ăмсанса ĕçетĕр пулсан...

МАЭСТРО. Ну-ка, ну-ка... Малалла кала-ха...

МИККИ. Каçарăр, паллах, хам йăнăшнине эпĕ хам та туятăп, çапах та концертра Владияр сире сцена çине питĕ хистесех чĕнсен те эсир тухмарăр тата халĕ Владиярăн чаплă банкетĕнче ларас чух çакăнта ларнине мана ăнланма кăштах кăткăсрах.

МАЭСТРО. О-о, Микки!.. Санăн, чăнласах та, тепрер черкке ямаллаччĕ пулĕ, вара мана кунашкалах алсатуль пек тавăрса силлесле ыйтусем çуралман пулĕччĕç санăн. Эсĕ мана урăлтарса ятăн халĕ, каçар та, эпĕ тепрер сыпкăм тăватăп. Манăн халь ӳсĕр пулас килет. *(Ĕçет.)* Ăмсанатăп-и эпĕ Владияра? Пур кăштах пĕр сăлтава пула. Анчах ун çинчен халь сана ăнлантармастăп. Хăçан та пулсан. Хăçан та пулсан... А банкет тенĕрен... *(Çăмăлраххăн)* Санăн банкетна эпĕ, Микки, чĕнмесĕр пырăп. Ун чухне, паллах, хальхи пек ĕçсе лартмăп. Хама йĕркеллĕ тытăп. Рояле сутатăп та вĕр çĕнĕ костюм туянăп. Лĕпĕш çакса ярăп – бабочка! Чăн-чăн маэстро пулса пырса кĕрĕп. Сумлă, стайлă. Владияр банкетĕнче мĕн тăвас манăн? Хăвах чухламалла, камсем унта. Мĕн, вĕсене Владияр питех кирлĕ тесе шутлатăн-и? Паллах, кирлĕ ĕнтĕ ĕçкисенче, банкечĕсенче килентерме, савăнтарма. Ку банкетра вĕсем Владиярпа мар, хăйсем хушшинче хутшăнаççĕ, хăйсен ĕçĕсене тăваççĕ: сутаççĕ, туянаççĕ – укçа, мул пайлаççĕ. А ĕçсе лартма, хăвах куран, эпĕ çак лупас айĕнче те пултаратăп. Ку бар – манăн çăлăнăç, манăн йăпану, манăçу. Манăн чи лайăх юрăсем шăпах çакăнта çуралнă. Владиярăн савăнăçĕ – унăн савăнăçĕ. Ан тив, савăнтăр. Вăл ăна чăнласах тивĕç. Вăл – çĕнтерӳçĕ. Çĕнтерӳçĕсене сут тумаççĕ. Питех пĕлессӳ килсен вара, кĕçех кунта персе çитет вăл. Манпа пĕрле ĕçсе ларма мар, паллах. Мана чĕнме. *(Кăшт тăхтанă хыççăн)* Ятне те пулин тумаллах унăн. Хальлĕхе. Манăн вара паян хамăн пĕчченлĕхрен тухас килмест. Ним çинчен шухăшламасăр шăппăн кăна кĕвĕ итлесе ларас килет. Пĕлетĕн-и, Микки, манăн халĕ пĕчĕкçĕ кăна юханшыв пулса уй-хирсемпе, вăрмансемпе юхас килет. Манăн хумсем çинче хĕвел вылять, эпĕ хам та хăмăш тунисемпе вылятăп, варкăш çил вĕсене сĕртĕнсе хальччен никам илтмен асамлă кĕвĕ калать. *(Кĕвĕ ĕнĕрлеме пуçлать.)* Эх, çамрăк çыннăм, ĕмĕр иртет... Юханшыв пулса кураймасăрах ĕмĕр иртет. Питех те шел. Шел.

**Бара Владиярпа Элеонора пырса кĕреççĕ. Шукăль çи-пуçпа хăйсем. Сăнĕсенче маларах кăмăллах мар калаçу пулни палăрать.**

МАЭСТРО. Мĕн терĕм паçăр сана? Вăт çапла... пÿлчĕç юханшыв çулне.

ВЛАДИЯР *(кÿренчĕклĕ сасăпа, выляннăрах)*. Турăçăм, Маэстро!.. Ну тинех, тинех тупăнчĕ. Эпир ăна шыратпăр, а вăл кунта... *("Çак шăпăр шăтăкĕнче" тенĕ пек)* Паянхи кун санăн çакăнта лармалла-и? Пĕлетĕн вĕт, уявĕ вăл манăн кăна мар, пирĕн уяв! Пĕрлехи уяв! Аван мар хăтланатăн, Маэстро, аван мар... Сцена çине тухманни те аван мар. Халăх курасшăн вĕт, кам ун валли çапла хитре юрăсем çырать. Сан ятпа алă çупасшăн.

МАЭСТРО. Сцена çинче сана пĕччене те тăвăр пуль терĕм.

ВЛАДИЯР. Да, да... Мана простор кирлĕ, паллах. Анчах та хам композиторшăн эпĕ кăштах хĕсĕннĕ те пулăттăм.

МАЭСТРО. Манăн никама та хĕсес килмест.

ВЛАДИЯР. Ну çитĕ, Маэстро, пуш сăмах вĕçтерсе. Атя пуçтарăн, кайрăмăр. Мĕнлерех çынсем паян унта... Ахальлисем мар. Сана та кирлĕ пулма пултарĕç вĕсем. Атя, атя, кайрăмăр. Официант-и кунта? Счетне хама тÿлеп.

МАЭСТРО. *(Владияр каланине илтмест те тейĕн, ăна пÿлсех Микки енне çаврăнса)*. Микки, ку – Элеонора. *(Элеонорăна)* Паллашăр, ак ку – Микки. Çамрăк композитор. Тин çеç консерватори пĕтерсе килнĕ. Санкт-Петербургран. Унăн ятне малашне илтĕн-ха. Вăл эпĕ кăна мар.

ЭЛЕОНОРА *(Миккине алă парса)*. Шанатăп.

ВЛАДИЯР *(курнăçланса, çаплах хăйĕнне персе)*. Маэстро, эсĕ пирĕншĕн Турă пекех, хăвах пĕлетĕн вĕт-ха. Эпĕ санăн умна чĕркуçленсе кĕлтума хатĕр. Чĕркуçленем-и? *(Пусăрăнчăк сасăпа)* Эп сана тархаслатăп, Ваня, санăн унта пулмаллах. Курăнса кăна ил. Самантлăха... Атту мана ăнланмĕç.

**Маэстро Владияр умĕнчен пăрăнать. Элеонора умне пырать.**

МАЭСТРО. Каçар, Элеонора, эпĕ сирĕн савăк кăмăлăра пĕрре те пăсас теменччĕ. Каçар. Айăплă. Анчах та хам урлă утса каçаймастăп. *(Алăк патнелле утма тăрать.)*

ЭЛЕОНОРА. Тен, çапах та?..

МАЭСТРО. Сана кирлĕ-и вăл, питех кирлĕ-и сана эпĕ унта пыни?

ВЛАДИЯР. Сана хăвна кирлĕ пулма пултараççĕ вĕсем. Унта – завод директорĕсем, банкирсем. Хула мэрийĕнчен пур. *(Сехетне пăхса илет.)* О-о! Хăвăртрах, Ваня! Кутăнлашса тăни, ман шутпа, халь пĕртте вырăнлă мар. Тата хăçан çывăхланма пултарăн эсĕ вĕсемпе? Кайрăмăр, кайрăмăр!

МАЭСТРО. Мĕншĕн манăн такамсен куçĕнчен пăхмалла? Камсем вĕсем? Мĕнех, пулччăрах банкир, директор... Вара?.. Мĕншĕн манăн пурнăç вĕсенчен килмелле? Мĕн, пурнăç хуçисем-им вĕсем? Кам, Турă-и вĕсене çапла тивĕç панă? Турри пире панă! Сана, Владияр! Мана! Ак çак Миккине! Эпир вĕсене кирлĕ. Савăнма! Пурнăçне тулли тума! Киленÿллĕ тума! Хамăр хака пĕлес пулать. Хамăра хаклас пулать. Вĕсен умĕнче кĕлмĕçленсе йĕрĕнтермест те-и сире?

ВЛАДИЯР. Хак, хак тетĕн... Мĕнле хак пирки калаçатăн эсĕ? Пăхса ил ху тавра, ăçта ларатăн эсĕ? Камсемпе? Йĕрĕнмелле!

МАЭСТРО *(барти халăх енне пуç сĕлтсе)*. Э-э... тăванăм, эсĕ йăнăшатăн. Вĕсем шăпах сана хаклакансем. Сана итлекенсем. Санăн концертусене укçа тÿлесе çÿрекенсем. Кассетусене туянакансем. Вĕсем сана çапла хакламасан çакнашкал шап-

шурă костюмсемпе çӳреттĕн-ши? Вĕсене халăх теççĕ. Эсĕ халăхран йĕрĕнесшĕн.

ВЛАДИЯР. Çитĕ ăсланса! Кампа хутшăнса пурăнан, çапла пулан. Шăпах санăн халăху каланăччĕ пулас. Кĕлмĕçпе хутшăнсан кĕлмĕçрех юлатăн. Эпĕ сана кăштах пулăшас тенĕччĕ. Тав туса. Кирлĕ мар пулсан хăвăн ирĕк – эпĕ сана шанс панă. Тек йăлăнмастăп.

МАЭСТРО. Кайса йăлăнах хăвăн банкиру-директорусенчен. Тен, пилĕк пус пăрахса парĕç. Кĕлмĕç укçи. Пырна ан лартăр!

ЭЛЕОНОРА. Кунашкал майлă самантсем тăтăш пулмаççĕ вĕсем, чăнахах та, Ваня. Ăнлан. Тата хăçанччен çаплах нишлĕ пурнасшăн эсĕ? Халь урăх самана. Владик тĕрĕсне калать.

МАЭСТРО. Тĕрĕсне калать е кирлине? Ак Миккине илсе кайăр банкета. Ăна пулăшчăр вĕсем. Ăна пулăшни вăл – наци малашлăхĕшĕн мĕн те пулин туниех. Сăваплă тивĕç.

ВЛАДИЯР. Ытлашши ан хĕр-ха, Ваня, кăштах шăпрах. Пăха пуçларĕç. Палласа илсен аван мар. Аван мар.

МАЭСТРО *(тарăхуллăраххăн)*. Сире кирлĕ пулĕ вĕсем, мана – çук. Мана *(барта ларакансем енне кăтартса)* ак камсем кирлĕ. Вĕсем! Вĕсем пирĕн юрăсене итлемесен пирĕн юрăсем сывлăша чĕтретни çеç. *(Бар варринерех иртет.)* Тавсси, тăвансем! Ĕçетри, çиетри? Пурнатри? Пурнатпăр-ха! Юрлатпăр-и? Юрлатпăр! *(Юрласа ярать.)*

Вĕç, вĕç, куккук,
Вĕç, куккук,
Вăрман хĕрне çитиччен...

**Маэстро юрланă май барти халăх юрра ярса илет. Малтанласа пĕр-икĕ сасă хутшăнать, кĕçех – тепри. Тата тепри. Самантранах çав тери хăватлăн, хор юрланăн янрама пуçлать. Пурте çав тери тăрăшса, чунтан юрлаççĕ. Владиярпа Элеонора хытса тăраççĕ. Микки ытларах вĕсене сăнать.**

ВЛАДИЯР *(хăй тĕллĕнрех пек)*. Турăçăм! Пĕтнĕ-çке вăл йăлтах, йăлтах пĕтнĕ. Мĕн шайне анса ларнă. Эп ăна çакнашкалах картран тухса ӳкнĕ тесе шутламан. Пыманни ахăртнех лайăхрах та. Намăс курасси кăначчĕ. *(Каллех сехетне пăхать.)* Çитет! Кайрăмăр! Кайрăмăр! *(Сасартăках Микки енне çаврăнса)* Тен, чăнласах пыран пирĕнпе пĕрле? Ятна астăваймарăм – Никифор? Юрăсем çырас кăмăллă пулсан, кирлĕ те пулма пултарăн малашне.

МИККИ. Микки.

ВЛАДИЯР. Хм, оригиналлă ят.

**Владияр Элеонорăна хулран çавăтать. Элеонора вырăнтан та тапранмасть.**

ВЛАДИЯР. Эсĕ мĕскер?

ЭЛЕОНОРА *(тăна кĕнĕн)*. Тăхта! Пĕр самант!

ВЛАДИЯР *(тарăхарарах)*. Мĕн тăхтамалли пур кунта? Пĕр-пĕр мыскарана лекес килет-и-мĕн? Турă сыхлатăрах.

ЭЛЕОНОРА. *(хăй тĕллĕнрех)*. Эпĕ ăна нихăçан та çакăн пек ирĕклĕ курман. Çакăн пек ирĕклĕ пулма пултарать тесе те шутламан. Ирĕклĕ пулма вăй кирлĕ. Шалти хăват.

ВЛАДИЯР *(тарăхсах)*. Тен, эсĕ те кунтах юлас кăмăллă? Тен, пĕрлех юрлама

та хатĕр? Каçар, манăн вăхăт çук, ахаль те эпĕ кунта килсе нумай çухатрăм. Ахăртнех, вăхăт кăна та мар. Эпĕ сана урамра кĕтетĕп. *(Тухса каять.)*

**Маэстро çаплах юрлать. Кăштахран сасартăках юрлама чарăнать те хăйне сĕннĕ стакана шалтах ĕçсе ярать. Унтан Элеонора патне утса пырать.**

МАЭСТРО. Каллех намăс кăтартрăм-и сана? Каçар.

ЭЛЕОНОРА. Мана? Намăс? Мана мар, хăвна намăс кăтартатăн эсĕ, Ваня. Хăвна. Кăштах сумлăрах пулма вăхăт çитнĕ-тĕр ĕнтĕ. Çитет-тĕр айван ача пулса.

МАЭСТРО. Айванлăхра – тасалăх. Çутăлăх. Шăпах çав таса айванлăха çухатнă та эпир. Пурте ăслă, сумлă курăнасшăн. Пурте хăйне укçа енчĕкĕ пек туясшăн. Пушă чунсем!

ЭЛЕОНОРА. Чунпа тутă пулаймастăн. Халь урăх вăхăт. Урăх самана. Эсĕ çаплах ĕнерхи кунпа пурăнатăн.

МАЭСТРО. Эпĕ ĕнерхи кунпа пурăнатăп. Тĕрĕс калатăн. Çапла, манăн ĕнерхи кунах тавăрас килет.

ЭЛЕОНОРА *(темшĕн сасартăках хĕрсе).* Ĕнерхи кун иртнĕ, пĕтнĕ, çухалнă. Çук вăл текех. Çук! Ăна манас пулать. Манăçас пулать. Манмасан, вăл паян пурăнма чăрмантарать. Паян! Çак самантра! Пурнăç вăл пĕрре килет. Ăна çынла пурăнса ирттерес килет. Асапланса мар. Ыррăн! Канăçлăн! Тулли пурнăçпа! Мĕскĕнле мар! Нишлĕлĕхре мар! Мар! Мар! Мар! Эсĕ никама та телейлĕ тăваймастăн. Эсĕ пурнăç çынни мар! Нихăçан та пулаймастăн. Владик сана тĕрĕс калать, вăл сана шанăç парать. Эсĕ ăна йышăнасшăн мар. Унпа усă курасшăн мар. Санăн çавăнпа нихăçан та нимĕн те пулмасть. Нимле йĕркеллĕ хваттер те, нимле машина та, çителĕклĕ укçа та. Турăçăм!.. Ăна ырă пурнăç сĕнеççĕ, вăл сурать. Эсĕ никама та нихçан та телейлĕ тăваймастăн, Ваня. Ăнланса ил çакна пĕрре. Улăштар хăвна. Кăштах пусар хăвăн мăнкăмăллăхна. Çĕр çине ан!

МАЭСТРО. Эсĕ мана пĕлместĕн иккен, хальччен те манăн чуна ăнланса илеймен-мĕн, Элеонора. Эпĕ хамăн чуна çеç упраса хăварасшăн. Чу-на!.. Мана урăх нимĕн те кирлĕ мар. *(Пăрахса каять.)*

МИККИ *(Элеонорăна).* Эсир каçарăр Маэстрона банкета пыманшăн. Вăл тусовка çынни мар. Вăл чăн-чăн пултарулăх çынни. Сирĕн çинчен, Владияр çинчен те, питĕ ырласа каласа пачĕ мана. Питĕ кăмăллпа. Эсир ан кӳренĕр ăна, ан çилленĕр. Тархасшăн. Вăл питĕ лайăх çын. Питĕ пысăк чунлă çын. Вăл – талант. Пысăк талант! Ан кӳренсемĕр, тархасшăн. Вăл урăхларах çын. Таса çын.

ЭЛЕОНОРА. Ан пăшăрханăр. Эпир ăна питĕ лайăх пĕлетпĕр, *(тăхтаса)* хаклатпăр. *(Хăвăрттăн утса каять. Унтан тăруках çаврăнать.)* Эпĕ савăнатăп унăн çавнашкал юлташ, кăмăллă, лайăх юлташ тупăннăшăн. Тавах сана, Микки. Тавах. *(Вăртах çаврăнать те пуçне пĕкерех хăвăрттăн тухса каять.)*

**Иккĕмĕш курăну**

**Эрне иртсен. Маэстро хваттерĕ. Йĕрки çукрах. Кравать çинче Маэстро выртать. Тая урайĕнче сапаланса выртакан хутсене, япаласене пуçтарать. Сăнпичĕпе, кĕлеткипе илемлĕ хĕрарăм.**

ТАЯ *(хăй тĕллĕн калаçать.)* Эх, мĕнлерех арçынччĕ! Сăмах чĕнме вăтанмал-

лаччĕ. Пĕтет вĕт, куç умĕнчех пĕтет. Çав ниме тăман лĕпĕшшĕн чуна çав териех çунтарма юрать-и вара? Ăнланмастăп. Çук, ăнланмастăп.

МАЭСТРО *(йăшăлтатса)*. А-а, кĕвĕçетĕн çапах та?..

**Тая шарт сикет. Маэстро енне çаврăнать.**

ТАЯ. Чей вĕретнĕччĕ, ĕçетĕр-и? Е кофе?

МАЭСТРО *(йывăррăн)*. Кăштах юлман-и унта? *(Йынăшса илет.)* О-о-о, пуçăм!.. Паян мĕн кун?

ТАЯ. Эрне кун.

МАЭСТРО. Эрне кун? Ун чухне те эрне кунччĕ пулас.

ТАЯ. Çапла, шăп эрне.

МАЭСТРО. Ним пĕлми, ним туйми сывăрнă пек. Ним те астумастăп. Пуçра та шурă хут листи пек.

ТАЯ. Ăçтан астăвăр-ши ĕнтĕ? Вил ӳсĕр. Ку манер çапла тăн çухатмалăхах ĕçсе супни пулманччĕ-ха.

МАЭСТРО. Мĕнле вара эрне тăршшипе те урăлайман эпĕ? Шыв ĕçнипех ӳсĕрĕлнĕ-им?

ТАЯ. Шыв... Вăн, кухньăра лараççĕ сан шывусем. Шăкăрин. Ятарласа пуçтарса пытăм кĕленчисене. Тăна кĕрсе çитсен шутлаттарма тесе.

МАЭСТРО. Чылаях-и-мĕн?

ТАЯ. Кайса шутла.

МАЭСТРО. Шутламалăхах пулсан, эппин пĕрре-иккĕ çеç мар ĕнтĕ. Вилсе кайма та пултарнă вĕт. Хăратан эс капла, Тая.

ТАЯ. Хăратрăн çав, хăратрăн. Вилсе каясран туяннă та. Пĕр паллă çыравçах çапла кăнса выртнă тет те, хĕрĕсем мухмăра памасăр. Подъезчĕ умĕнчех татăлса аннă. Петр Петрович ăс пачĕ.

МАЭСТРО. Петр Петрович? А-а, вăл мĕнле пурăнать тата? Хăй юрринех юрлать пуль? Пăрахман-и ăнсăртран? Сана çаплах качча йыхăрать-и? *(Хăй тĕллĕн)* Пăрахман, паллах. Унашкал çынсем вылянмаççĕ. Çирĕп çын вăл Петр Петрович. Шанчăклă. А юрри унăн, Тая, лайăх юрă. Тĕрĕс юрă. Эс ахалех сивлетĕн ăна, Тая. Петр Петровичах качча тухмалла та санăн лăпкăн кăна, чиперрĕн канăç пурнăçпа киленсе пурăнмалла. Хăвăн шăпуна ытахаль таптатăн. Эпĕ пĕтнĕ çын. Эрне урăлаймастăп пулсан, эппин пуçĕпех пĕтнĕ. Эп сана Петр Петрович пирки чăнне калап. Эсĕ çав тери лайăх арăм пулнă пулăттăн. Шăпах арçын телейĕ. Эп вара арçын мар. Арăмĕ пăрахса кайнă арçын вăл арçын мар.

ТАЯ. Мĕнле арăм пăрахса каять вĕт.

МАЭСТРО *(самаях хаяртараххăн)*. Тая!..

ТАЯ. Вăт, вăт... Çавăнпа пĕтетĕн те. Виçĕ çул ĕнтĕ ăсна пуçтарса çитерейместĕн. Çав лĕпĕшшĕн... Пĕле тăркачах вăл мĕнлине...

МАЭСТРО *(пӳлсех)*. Тая!

ТАЯ. Юрĕ, юрĕ, шарламăп. Хăв мана Петр Петровичпа тĕкнĕрен кăна. Текех ун пирки калаçмалла мар тесе сăмах татнă пулин те.

МАЭСТРО. Хăвна хĕрхенсе калатăп. Телей суннăран çеç. Эп пĕрех никама та телейлĕ тăваяс çук. Манăн никама та ырă тăвас тесе тăрăшма юрамасть – эп ырă тăвас тени яланах начарпа çаврăнса тухать.

ТАЯ. Кам мĕнле ăнланать вĕт телее.

МАЭСТРО. Петр Петрович вара вăйлă çын. Ун пеккисемшĕн хĕрарăмсем çемьерен тухса каяççĕ.

ТАЯ. Шав пĕр юрă санăн, йăлăхтармасть те-и? Вăт çĕнĕ кĕввĕр мана килĕшнĕччĕ.

МАЭСТРО *(тĕлĕнсе).* Мĕнле çĕнĕ кĕвĕ?

ТАЯ. Мĕн "мĕнле"? Ӳсĕрле темиçе хут та кĕвĕлеме хăтланса пăхрăн вĕт. Пуçламăшĕ хăвна та килĕшет терĕн. Кун пекки сан нихăçан та пулман тесе самаях кумрăн-иç кĕтесрен кĕтесе. Кăшт та астумастăн-и вара?

МАЭСТРО. Вара? Вара?

ТАЯ. Чăнласах та пит аван пулса тухнăччĕ.

**Маэстро сиксе тăчĕ те хучĕсене ухтара пуçларĕ. Пĕр-икĕ листине тимлесе тишкерчĕ, вулама хăтланчĕ. Мĕн çырнине уйăраймарĕ курăнать те тарăхнипе лутăркаласа пăрахрĕ.**

МАЭСТРО. Ых-х!.. Ним те астумастăп. Нимĕн те! Мĕнле кĕвĕ пулнă-ши?

ТАЯ. Ăçтан астăвăн ĕнтĕ, кăштах ĕçлетĕн те – черкке. Тата кăштах – каллех черкке. Кайран тӳнсех кайрăн. Рояльне каланă çĕртех. Вилсех кайрăн пулĕ тесе чун юлманччĕ. Микки аран лăплантартăм, тет.

МАЭСТРО. Эппин, çапах та ăна Микки илтнĕ?

ТАЯ. Вăл каярахпа тин çитрĕ çав. Эпĕ сана вырăн çине илсе хурас тесе тăрмашнă чухне çеç.

МАЭСТРО. Ых-х!.. Тепĕр хут ĕçсе лартмалла пулать-и, тен, аса килĕ?

ТАЯ. Хам та çав, магнитофонне маларах яма тăн çитерейменнен. Малашне ăслăрах пулăп-ха ĕнтĕ.

МАЭТРО. Эс çырса илнĕ?

ТАЯ. Ун чухне мар çав.

МАЭСТРО. Ну-ка, ну-ка...

**Маэстро магнитофона ярать. Çырăнни:**

"Тая, эсĕ çав тери чунлăскерĕм манăн. Тавах сана пăрахманшăн, пĕчĕк ачана пăхнă пек пăхса пурăннăшăн. Эпир тахçан кӳршĕлле пурăнни маншăн мĕн тери телейлĕ çаврăнса тухрĕ, тавах сана. Эсĕ – манăн çăлăнăçăм. Эпĕ, паллах, айван, ухмах. Сана качча илмесĕр. Анчах ăнланма тăрăшсам, пĕр кӳренӳсĕр, манăн сана пĕрре те телейсĕр тăвас килмест. Пурнăçна пăсса кăна хума пултаратăп вĕт. Вăл таврăнĕ те... Вăл таврăнатех. Эпĕ пĕлеп. Çавăнпа кĕтетĕп. Кăна каласа эп сана кӳрентертĕм, паллах. Эсĕ текех килме те пăрахăн. Анчах та, Тая, ăнлансам, эсĕ ăслă хĕрарăм вĕт, манăн сана кăна каламаллахчĕ. Пĕлетĕп, эсĕ ун çинчен пачах урăхла шухăшлатăн, тен, кураймастăн та пулĕ, анчах... Мĕн манпа хуçаланать – манăн тĕлсĕр шăпам-и, çут çанталăк-и – пĕлместĕп, анчах эп унсăр пултараймастăп. Чим, Тая, шăнкăравлаççĕ вĕт алăка, шăнкăравлаççĕ! Вăл? Тая, ма уçмастăн? Çук! Эп хам уçатăп! Эп алăка яриех уçатăп, Э... *(Пленка пĕтрĕ.)*

ТАЯ. Малалла çырман. Каçар, вăй çитереймерĕм.

**Маэстро питне аллипе хупласа ларать. Пĕр хускалмасăр. Тая, сасартăках ватăлса ларнăн, карчăк евĕр кăштăртатса пӳлĕмрен тухать.**

ТАЯ САССИ. Яшка пĕçернĕ унта. Салат холодильникре. Сивĕлле ан çийĕр. Мухмăр чĕртес тесен – буфетра. Кăштах юлнăччĕ. Сире çитет.

МАЭСТРО. Эпĕ йăлтах урăлса кайрăм халь. Тек кирлĕ мар. Пĕр тумлам та.

ТАЯ САССИ. Микки килме пулнăччĕ. Эпĕ, тен, каярахпа кĕрсе тухăп. Çумаллисем пуçтарăннăччĕ-ха кăштах.

МАЭСТРО. Эпĕ хамах.

ТАЯ САССИ. Таса кĕпӳсем шифоньерта. Сулахай çӳлĕк çинче. Симĕссин тӳмине лартнă.

МАЭСТРО. Тавах, Тая. Эсĕ мана каçар. *(Хăй тĕллĕн калаçнă манер).* Те тĕрĕс тăватăп эпĕ, те тĕрĕс мар – хам çеç мар, манăн Турри те пăтрашăнса, арпашăнса кайрĕ пулĕ ĕнтĕ. Хам телее хам та уйăрса илейми пултăм-тăр.

**Алăк хупăннă сасă. Лифт сасси. Маэстро пĕр вăхăт çаплах хытса ларчĕ, унтан йывăррăн тăрса ваннăйне иртрĕ. Шыв юхнă сасă. Вăл вăйланса пырать. Кĕçех ăна Владияр юрлани улăштарчĕ. Шăнкăрав сасси. Маэстро алăк патнелле утрĕ. Аллинче – йĕпе кĕпе. Микки кĕрет.**

МИККИ. О-о-о! Пĕлмеççĕ çав пирĕн телевиденире лайăх кино тума. Пĕрремĕш кадр шăпах çакă пулмалла та: Маэстро кĕпе çаннисене тавăрнă, чăм шыва ӳкнĕ, çӳçĕсем тăрмаланнă. Вăл ваннăйран хăйĕн çума пуçланă кĕпине йăтса тухать. Тухать те камера енне тимлĕн пăхса утать: "Сирĕн асаплă шăпăра хамăн юррăмсемпе çутатма, çак вараланса, пылчăкланса пĕтнĕ пурнăçа тасатма килтĕм эпĕ". Атту ӳкереççĕ: хула урамĕ, машина... Водителĕ магнитофон ярать – Маэстро юррин пĕр куплечĕ. Диктор: "Ку юрра пĕлмен çын та çук пулĕ. Вăл пире терт-асапăмăрсене мантарать, кăмăла уçать, хĕвел шевли пек çутатса ăшăтса ярать, пурăнма хавхалантарать..." Шаблон! Ку акă – чăн пурнăç!

МАЭСТРО. Санăн кăмăлсем уçăлнă чечекрен те чеченрех пулас-ха. Асăрхаттаратăп, талпиçенпе юнашар каялла хупăнмалла ан пултăр.

МИККИ. Манăн чечек ĕнерех куçне яри уçнă.

МАЭСТРО. Ĕнер эпĕ ăна курма пултарайман – айăплă.

МИККИ. Ăна текех никам та хупаймĕ. Мĕншĕн тесен: пĕрремĕшĕ – Маэстрона ырă-сывă курма хавас, тепĕр сăлтавĕ – эпĕ çĕнĕ юрă çырнă.

МАЭСТРО. Эппин, харăсах икĕ "Шампански" уçма юрать. Э-э, çук, шампань эрех кăна çырлахтараймĕ-тĕр. Коньяк патнех чупма тивет. Çавăн пек ăнăçушăн, паллах, коньяк. Çапла пуль, Микки? Ăнăçăва паллă тумасан вăл тепре килмессе те пултарать.

МИККИ *(çав тери пусăрăнчăклăн).* Эпĕ чейпе те çырлахма пултаратăп.

МАЭСТРО. Ну, вăт... Тинтерех çеç куçне уçнă чечен чечек хупăнчĕ те. Ну, юрĕ, эп шӳтлесе кăна вĕт. Эп ĕçсе тăраннă. Пулни-иртнишĕн айăплă. Каçару ыйтмастăп, сана асăрхаттарса хунăччĕ. Сан валли вара урок пултăр: çемçешке, ним тĕллевсĕр, ăнтăлусăр пурăнакан çын мĕнлерех пĕтсе ларма пултарать. Картса хур.

МИККИ. Лайăх композитор пулас тени, хитре юрăсем çырас тени тĕллев мар-им?

МАЭСТРО. Кам валли çырасшăн юррусене?

МИККИ. Мĕнле кам валли? Халăх валли, паллах.

МАЭСТРО. Халăх, халăх... Эсĕ те илтсе тултарнă пулас хăш-пĕр интеллигент хăраххисене. Вĕсем юратаççĕ халăх пирки чĕлхе хуçма. Хăйсен мĕн пур-ши чăнласах халăх валли туни? Халăх вăл пирĕнсĕрех çĕршер, пиншер çул пурăннă, малашне те пурăнĕ. Юрланă, юрлĕ те. Хамăршăн ĕçлетпĕр эпир тĕрĕссипе. Хамăр-

шăн. Хамăр чуншăн. Пирĕн чун асапĕсене, шухăш-туйăмсене ăнланма, хаклама пултаракан тепĕр чуна шыратпăр. Халăх вăл кĕтӳ мар – уйрăм çынсем. Уйрăм çынна шăппăн каланă сăмаха вара тĕнче илтме пултарать.

МИККИ. Сире юратаççĕ, хисеплеççĕ, хаклаççĕ.

МАЭСТРО. Маншăн, Микки, тăванăм, "аççĕ", "еççĕ" пысăк пĕлтерĕшлĕ мар текех. Çамрăк чух, пытармастăп, эпĕ те чапшăн та, ятшăн та, халăх юраттăр тесе те çуннă, ăнтăлнă. Ыттисене кĕвĕçни те, ăмсанни те, вĕчĕрхенни те – пурте пулнă. Пĕррехинче ăнланса илнĕ те кăвапаран çӳлерех сикейменнине, ĕçке ернĕ. Вара, вара... *(Рояль умне ларать, кĕвĕ калама пуçлать.)*

Умра – шап-шурă, шурă вĕççĕр уй,
Никам та тĕкĕнме те хăяйман хĕр евĕр
Черченкĕ тасаран таса пĕрремĕш юр.
Уйра – арпашăнчăк пĕртен-пĕр тарăн йĕр,
Пăлханчăк утăмсем – таптаннă юр илемсĕр.

**Сăвă йĕркисем юрра куçса янрама пуçлаççĕ.**

Вăл кайрĕ, кайрĕ те тек таврăнмĕ те урăх,
Юлашкинчен каласшăн пулнине вулатăп йĕрĕ тăрăх:
"Мĕн пулнă – пулнă, иртĕ пĕтĕмпех,
Мана чĕнме те кирлĕ мар текех.
Кирлех те мар-тăр куншăн çилленме,
Пулса юласчĕ çывăх çынсемех.
Асилӳпе асапланма та кирлĕ мар –
Пуриншĕн те каçар, каçар, каçар."
Умра – шап-шурă уй, таса черченкĕ юр.
Уйра – арпашăнчăк пĕртен-пĕр тăлăх йĕр.
Чунра – никам та тĕкĕнме те хăяйман юр евĕр хĕр.

МИККИ. *(чылай вăхăт шăп ларнă хыççăн).* Эпĕ сире, Маэстро, каçарăр та, ăнланаймастăп: вăл сире пăрахса кайнă, эсир ăна çавах юрататăр. Юррăрсем те пĕтĕмпех унăн ячĕпе. Эпĕ ун пек пултарайман пулăттăм.

МАЭСТРО. Турри упратăр сана, çамрăк çыннăм, çавнашкал шăпаран.

МИККИ. Эпĕ сирĕн юррăрсене итлетĕп те – ăна çывăх курнăнах туйăнать. Эпĕ ăна сăнарласа кăтартма та пултаратăп пулас. Вăл мана темле палланă сăнлă евĕрлĕрех хĕрарăма аса илтерет. Çапах та вăл сире пăрахса кайнине эпĕ ăнланассăм та, каçарассăм та çук. Ку тĕлĕшпе эпĕ Тайăпа пĕр шухăшлă.

МАЭСТРО *(картах туртăнса).* Тайăпа? Вăл, мĕн, сана каланă та-и?

МИККИ. Тая – тĕлĕнмелле хĕрарăм. Пирĕшти. Чăннипех те.

МАЭСТРО *(Миккине пӳлсе).* Вăл çапах та каласа кăтартнă?

МИККИ. Çук, паллах. Вăл унашкал йышши хĕрарăм мар. Ăслă, питĕ чунлăскер. Ахăртнех, пысăк талантсем пекех теплерен пĕрре-тĕр унашкаллисем. Хуть мĕн тесен те, сирĕн ăру пиртен тасарах та чунлăрах пулнă. Тая пек, Элеонора пек хĕрсем халĕ çук. Ăçтан пулар ĕнтĕ эпир Пушкин, Шопен, Бетховен, енчен вĕсенни пек вăйлă хайлавсем çырма хавхалантаракан, чунсене çунтарса кĕллентерме пултаракан Музăсем çук пулсассăн? Шел, паллах.

МАЭСТРО. Ха-ха-ха!.. Шерше ля фам! Тĕрĕсех пуль çав французсем – кирек

мĕнĕн сăлтавĕ те – хĕрарăм. Хĕрарăма шырамалла! Санăн пĕтĕмпех малашлăхраха, Микки. Тая та, Элеонора та... Эпĕ сана ăмсанма та хатĕр ку тĕлĕшпе: мĕн чухлĕ савма, юратма пултаратăн эсĕ, мĕн чухлĕ илемлĕ, хитре юрăсем çуралма пултаraççĕ санăн. Чăнах ăмсанмалла. Манăн вара нимĕн те каялла таврăнмасть, йăлтах иртнĕлĕхе юлать. Çакă кулянтарать те. Ха, мĕнлерех ватăлса кайнă-мĕн эпĕ. Тĕрĕснех калать пулас Владияр "Санăн роялÿ ватлăха сулăнас хăрушлăх пурри сисĕнме пуçларĕ пек" тесе. Нимĕн те тăваймăн. Сăвă çырасси çеç юлать.

Хурăн хуппи ялт! тунă пек
Хыпса çунчĕ яшлăхăм.
Çунса пĕтен вутпуççилле
Йăсăрланса сÿнет кун-çулăм.
Шел... Шел... Шел..

МИККИ. Каллех Владияр. Шупашкара килни манăн икă уйăх пек кăна, çак ятсăр пуçне урăххисене илтмен те пек. Пĕрехмай "Владияр" та "Владияр".

МАЭСТРО. Мĕн тăвăн? Кашни вăхăтăн, саманан – хăйĕн кумирĕсем. Вĕсен тавра çаврăнать тĕнче. Паллах, нихăшĕ те ĕмĕрлĕх мар. Тĕнче вăл çаврăнать, çаврăнать те тахăш самантра хăйĕн орбитинчен кăларса пеме те пултарать. Пурнăç саккунĕ. Халь шăпах Владияр саманчĕ.

МИККИ. Сирĕн вăхăт та, Маэстро. Халăх пĕрех Владияра сассишĕн çеç мар, ытларах юррисемшĕн юрататъ. Кăна эсир хăвăр та, эпĕ каламасăрах, аван пĕлетĕр. Çав илемлĕ, чунлă юрăсемсĕр Владияр та Владияр пулаймĕччĕ, эсир калакан орбитăна та лекеймĕччĕ. Тĕрĕсех вĕт?

МАЭСТРО. Эсĕ космонавтикăра кăштах тĕшмĕртейнĕ пулсанах, сана ăнлантарса пама çăмăлрахчĕ мана.

МИККИ. Консерваторишĕн каçару ыйтмалли çеç юлать манăн. Космонавтикăпа музыка тачă çыхăнса тăнине тавçăрсах илеймен-тĕр çав унта.

МАЭСТРО. Ракета тĕнче уçлăхне хăй тĕллĕн тухаймасть, ăна унта çитерекенни пур – ракетоноситель. Ракета орбитăна тухсанах вăл çунса каять. Урăх кирлĕ мар вăл. Ăнлантарма пултартăм-и кăштах?

МИККИ. Эсир, мĕн, сирĕн юррăрсем Владияра текех кирлĕ мар тесшĕн-и?

МАЭСТРО. Эпĕ, чăн та, хальлĕхе йăлтах çунса пĕтмен-тĕр-ха, çапах та Владиярăн тата та çÿлерех вĕçес тесессĕн тата çав вĕçеве нумайлăха тăсас тесессĕн, паллах ĕнтĕ, вăйлăрах ракетоноситель кирлĕ ăна. Вăл санпа манран лайăхрах чухлать. Юрă тĕнчи вăл çиелтен пăхма – йăлтăр-ялтăр. Илĕртÿллĕ. Чăннипе вара вăл – хăрушă тĕнче. Унта джунгли саккунĕсем: кам кама, хăшĕ маларах, хăшĕ шăнăрлăрах, йăрăрах та чĕрĕрех. Шоу-бизнес! Чăнласах та пасар: эпир санпа – таварне хатĕрлекенсем, Владияр – сутуçă вырăнне, халăхĕ, килĕшрĕ тĕк, туянать. Туянмасан... Артист шăпи – хут укçа вырăнĕнче кăна вăл. Паян сана халăх юрататъ, алă çинче çĕклесе çÿреме хатĕр, ыран, эсĕ йăлăхтарса çитернĕ-и е тепри тупăннă – пулнă-и эсĕ, пулман та-и...

МИККИ. Тупса пăхтăр-ха эппин Владияр сирĕнтен вăйлăрах ракетоноситель. Тупайĕ-и?

МАЭСТРО. Эпĕ ăна тупса патăм ĕнтĕ.

МИККИ. Вăл, паллах, эпĕ ĕнтĕ.

МАЭСТРО. О-хо! Эс хӑвна тивӗçлӗ тытма хӑват çитерни мана килӗшет. Кашни япалан хӑйӗн шайӗ пулмалла. Çав шайран чаксан сӑпайлӑх айванлӑха куçать. Ан мӗскӗнлен: мӗскӗн çыннӑн тӳпи ытла аял, лутра. Унта пысӑк ӗмӗт шӑнӑçаймасть, пысӑк ӗмӗт, пысӑк тӗллев пулмасан вара ӑçтан пысӑк япала тӑваян?

МИККИ *(вылянарах)*. Эпӗ пытармастӑп: Пушкин Державинран "Победителю ученику от побежденного учителя" тесе çырнӑ сӑнӳ керчӗк илме тивӗçнӗ пек манӑн та хамӑн кумиртан ирттерес килет.

МАЭСТРО *(хавхаланса)*. Эппин, санӑн юрруна итлетпӗр халӗ. Çӗнӗ юрруна! *(Залри халӑха калан̆ӑ пек)* Пурне те шӑпланма ыйтатӑп. Микки юрлать!

МИККИ *(Маэстро вӑййине тӑсса. Сцена çине тухса тӑнӑн, кӑшт курнӑçланарах)*. Тархасшӑн. Эпир хатӗр.

**Микки юрри.**

МАЭСТРО *(пӗр вӑхӑт шӑпӑрт ларать. Унтан хӑвӑрттӑн сиксе тӑрать. Залри халӑха)* Эпӗ алӑ çупнине илтместӗп. Астуса юлӑр: ку вӑл – Микки! Микки! Сире сахал мар çавнашкал самант парнелӗ вӑл. Сире сахал мар макӑртӗ, хавхалантарӗ – эпӗ шанатӑп, ӗненетӗп. *(Миккине)* Эсӗ мана каçар, Микки, анчах та хама килӗшнӗ юрӑ хыççӑн эпӗ калаçма пултараймастӑп. Ун пек самантсенче манӑн çав тери пӗччен пулас килет. Пӗччен.

**Микки шӑппӑн тӑрать. Алӑк патне утма пуçлать, сасартӑках чарӑнать те Маэстро енне çаврӑнать.**

МАЭСТРО. Çук, çук, ан шиклен. Эпӗ текех ӗçсе лартмӑп. Халӗ – пӗр тумлам та. Хамӑн чунпа, хамӑн кӑмӑл-туйӑмсемпе, хампа хам куçа-куçӑн пулас килет халӗ манӑн. Эсӗ мана ӑнланатӑн пулӗ тетӗп.

**Микки тухса каять. Маэстро рояль умне ларать. Калама пӑхать – пулмасть. Пӗр вӑхӑт пӳлӗм тӑрӑх кумать, стена çинчи сӑн ӳкерчӗксем умӗнче чарӑна-чарӑна тинкерет. Шӑп çакнашкал самантра телефон шӑнкӑртатать.**

МАЭСТРО. Алло. *(Шӑп. Хурав паракан пулмасть.)* Алло!.. *(Каллех чӗнмеççӗ.)* Нимӗн те илтӗнмест. Тепӗр хут шӑнкӑравлӑр. *(Телефон кӗпçине хума тӑрать, анчах тем ӑнкарса илнӗн, васкавлӑн)* Алло, алло!

**Телефонӑн кӗске янравӗсем. Пӗр вӑхӑт тӗнче тӑп хытнӑ пек. Унтан Маэстро хӑвӑрттӑн рояль патне ыткӑнать. Телефонӑн кӗске янравӗсем кӗвве куçса каяççӗ. Пӗтӗм пӳлӗм асам кӗвӗпе тулать. Маэстро каçӑхса вылять. Хваттер алӑкӗ уçӑлса хупӑннӑ сасӑ пулать.**

МАЭСТРО *(кӗвӗ каланӑ майӑнах, пуçне çӗклемесӗр)*. Тая, эсӗ-и? Итле, тӳрех отчет тӑватӑп: эсӗ пӗçернӗ яшкана тутанса хак параймарӑм-ха – вӑхӑт пулмарӗ. Микки килсе кайрӗ. Вӑл çӗнӗ юрӑ çырнӑ. Вӑйлӑ! Эпӗ кӑштах ӑмсанса та илтӗм. Эрех ӗçмен. Пӗр тумлам та. Ӗçес кӑмӑлӑм та çук. Тӗлӗнмелле, паян эпӗ хам та хам мар – тем пулса иртет манпа – ӑнланаймастӑп, ӑнланма тӑрӑшмастӑп та – мана паян питӗ-питӗ лайӑх. Çумаллисене кайран хамах çӑватӑп. Халь пӗртте вӑхӑт çук. Ман çӗнӗ юрӑ çуралать! Саламлама пултаратӑн.

**Элеонора кӗрет. Питӗ шӑппӑн. Маэстро сисмест, çаплах каçӑхсах кӗвӗ çырать.**

**Элеонора алӑк хашакки çумне таянать те кӗвӗ итлет. Тепӗр вӑхӑтран тухса кайма тӑрать. Маэстро Элеонора енне пӑхса илет. Асӑрхаман пекех малалла çырать. Унтан сасартӑках тӑп чарӑнать.**

МАЭСТРО. Элеонора?

ЭЛЕОНОРА. Чăрмантартăм.

МАЭСТРО. Çук, çук. Пачах та. *(Ал-хапăл сиксе тăрать.)* Каçар, иртсе ларма сĕнме те тăн çитмен. Йăлт çухалса кайрăм. Эс иртсе лар, иртсе лар. Эп... эп... чей лартса ярам. Эп кĕçех... *(Васкавлăн кухньăна иртет. Савăт-сапа сасси – тем ўкрĕ – Маэстро пăлханать.)*

ЭЛЕОНОРА. Эпĕ самантлăха çеç тесеччĕ. Владияршăн каçару ыйтасшăнччĕ. *(Кăшт тăхтанă хыççăн)* Хамшăн та.

МАЭСТРО *(кухньăран)*. Манăн хамăн каçару ыйтмалла. Хитре мар турăм ун чух. Барта. Аса илме те аван мар халь. Намăс.

**Элеонора пĕр вăхăт çапла хытса тăрсах пўлĕме тĕсет, унтан стена çинчи сăн ўкерчĕксем патне утса каять. Пăхать. Маэстро курăнать. Чарăнса Элеонорăна сăнать. Элеонора пĕр сăн ўкерчĕк патĕнчен теприн патне куçать. Сăмса тутри кăларса тусанне шăлать.**

ЭЛЕОНОРА (*те сăн ўкерчĕке, те Маэстрăна)*. Каçар мана. Каçар манăн айванлăха, ухмахлăха.

МАЭСТРО. Эпĕ хам айăплă. Хам вăйсăр пулнă.

ЭЛЕОНОРА. Эпĕ айăплăрах.

МАЭСТРО. Эпир манăçасшăнччĕ, йăлтах, мĕнпурне манасшăн пулнă. Путма пуçланă çыншăн вăл самантра улăм пĕрчи те пĕрене майлах. Чей хатĕр.

ЭЛЕОНОРА *(пўлĕме тепĕр хут тĕсесе)*. Тая килсех тăрать? Курăнать. Хĕр чухнех тирпейлĕхе, тасалăха юрататчĕ çав.

МАЭСТРО. Пулăшать. Эпĕ пурнăç çынни мар вĕт. Пулаймарăм. Вĕренеймерĕм.

ЭЛЕОНОРА. Эсĕ талант, Ваня. Пысăк талант. Санăн пурнăç – музыка. Шел, хаклама пĕлмен. Тивĕçлипе. Пултарулăхна та, хăвна та. Хаклама пĕлнĕ пулсанах пачах урăхла пулатчĕ вĕт халь. Пач урăх пурнăç. *(Сасартăк тапăлса)* Турăçăм! Мĕн туса хунă эпĕ! Мĕн-ма чарса тăман эсĕ ун чух мана? Мĕн-ма пăрăнса тăнă манран çав самантра? Хам айăплă. Турă мар! Хам айăплă! Каçар мана, Ваня! Каçар, каçар... *(Маэстро ури умне ўкет те йĕме пуçлать.)* Тавах сана юррусемшĕн, вĕсем маншăн – çăлăнăç, йăпану, вĕсем маншăн – санăн сывлăшу. Эп вĕсемпе сывлатăп, эп вĕсемпе пурнатăп. Эп иртнĕ пурнăçрах пурнатăп. Каçар, Ваня. *(Йывăррăн çĕкленет. Пўлĕме тепĕр хут пăхса çаврăнать.)* Турăçăм! Мĕнле пулнă, çаплах! Мĕнле пулнă, çаплах. Унчченхиллех! Нимĕн те пулман пек, пулса иртмен пек. Пирĕн хушăра та! Пурнăçра та! Ĕнерхиллех пек пĕтĕмпех. Йăлтах! Кĕçех пирĕн пĕчĕк Ваня урамран чупса кĕрессĕн туйăнса тăрать: "Анне, манăн хырăм выçнă!" Турăçăм! *(Элеонора тайкаланса алăк патнелле утса каять.)*

МАЭСТРО. Элеонора, тăхта. Тăхта! Тен...

ЭЛЕОНОРА. Çук, Ваня, çук. Ахăртнех, ĕнерхи хĕвеле тепĕр хут ĕнерхиллех пăхтараймăн. Эпĕ хамăн сан умăнти айăпăма туйса тăрса унччченхи майлах пурăнма вăй çитереймĕп. Эсĕ, пĕлетĕп, каçарма та пултарăн. Эсĕ вăйлă. Ирĕклĕ! Эпĕ хам хама каçарма пултараймастăп. Эсĕ – таса, эпĕ – вараланчăк. Тасалса çитмесĕр эпир пĕрле пулаяс çук. Çылăхăмсемшĕн мĕн пўрнине чăтмаллах манăн. *(Тухса каять.)*

**Виççĕмĕш курăну**

**Маэстро пурăнакан çурт картишĕ. Каç. Маэстро чӳречи çутă. Чӳречерен кĕвĕ сăрхăнать. Пĕр вăхăт янрать, унтан çухалать. Тепĕр самантран каллех янрама пуçлать. Картишне хаваслă, çиçсе тăракан сăнлă Миккипе Лада вылянса-ашкăнса пырса кĕреççĕ. Микки Ладăна çупăрлать. Ачашлану.**

МИККИ. Лада... Селĕм ят. Кĕвĕ пекех янăрать – Лада... Итле-ха, ăçтан шухăшласа хунă сана çакнашкал ят? Аçу-и? Лада... Лада... Хитре янрать. Санăн, мĕн, аçу "Жигули" машина туянма ĕмĕтленнĕ-им?

ЛАДА. Мĕншĕн "Жигули"? Унăн – "Опель". Чие тĕслĕскер.

МИККИ. Эсĕ çуралнă чухнех пулнă-и?

ЛАДА. Çук.

МИККИ. Эппин, вăл ун чухне "Жигули" çинчен ĕмĕтленнĕ. Сана çавăнпах Лада ят хунă. Логига!

ЛАДА. Темле "Жигулипе" ман ят хушшинче мĕнле çыхăну тупнă вара эсĕ?

МИККИ. Эсĕ, мĕн, пĕлместĕн-им? "Лада" вăл – "Жигули" моделĕ. Малашне эппин эпĕ сана "Жигули" тесе чĕнсен те вăл "Лада" тениех пулать. Ăнланмалла? Итле-ха, сцена çинчен вăйлă янрамалла: Жигули Лада! Сана мĕнле, килĕшет-и? Мана килĕшет.

ЛАДА. Эс, ачи, кăштах сӳтĕкрех мар-и?

МИККИ. Кăна тĕрĕс асăрхарăн эсĕ, паян эпĕ чăнласах та сӳтĕк. Пĕлетни, мĕншĕн? Паян эпĕ питĕ хитре, пи-и-тĕ интереслĕ хĕрачапа паллашнă, çавăнпа манăн халь пуçăм пĕтĕмпех сӳтĕлсе кайнă. Эппин, эпĕ чăннипех те сӳтĕк. Эсĕ – мана килĕшекен шикарлă хĕрача. Яту та килĕшет – Лада... Лада... Хисеплĕ дамăсемпе господасем! Сирĕн умăрта – Лада Новицкая! Кĕтсе илĕр!

**Лада "сцена çине тухать". Юрлать.**

МИККИ *(алă çупнă пек пулса)*. Браво! Браво! О-о! Пăх-ха, мĕн чухлĕ чечек! Мĕн тĕрли кăна çук! Пурне те çак чипер, селĕм хĕрача ури умне! *(Лада умне чĕркуçленсе ларать.)* Лада, эсĕ мана çав тери килĕшетĕн.

**Лада та чĕркуçленет. Пĕр вăхăт – кăмăллă ачашлану.**

ЛАДА. Эсĕ, Микки, чăнахах та сӳтĕкскер пулас. Ху сӳтĕк пулнисĕр пуçне ыттисене те сӳтĕлтерсе яма пултаратăн иккен. Эпĕ хĕрачи вообще-то серьезнăйрахчĕ хальччен – паллашнă-паллашман çынпа хама ытла ирĕкех яракан йышши марччĕ.

МИККИ. Эсĕ талантлă хĕрача! Эсĕ питĕ лайăх юрăçă пулатăн! Халăха килĕшмеллискер! Лайăх репертуар пулсан, паллах...

ЛАДА. Кĕвĕле эппин ман валли юрăсем, эс хăвна композитор терĕн вĕт. Ахальтен консерваторире тăн парса асапланман пуль вĕрентекенӳсем? Тӳрех асăрхаттаратăп, эпĕ пули-пулми юрăсем юрламастăп. Эсĕ ху мана килĕшетĕн пулсан та.

МИККИ. Эпĕ сана килĕшетĕп?

ЛАДА. Ну ĕнтĕ... хальлĕхе *(чĕрне вĕçне кăтартса)* çакăн чухлĕ килĕшетĕн. Унсăрăн эпĕ сана пĕрремĕш каçах чуп тутарттарас та çукчĕ.

МИККИ *(кӳреннĕ пек пулса)*. Çавăн чухлĕ çеç-и? Эпĕ вара сана *(аллисене сарса)* ак çапла килĕштертĕм. Лада, Ладушка, Жигуленок... *(Ыталать.)*

**Миккипе Лада каллех савăшаççĕ.**

ЛАДА *(сасартăк вĕçерĕнсе).* Паянлăха çитет. Çитет. Атту эпир, иксĕмĕр те сӳтĕлсех кайнăскерсем, йăлтах пăтранса кайма пултаратпăр. Ытти валли юлтăр. Çавăнпа эпĕ сана хама ăсатма та ыйтмастăп. Санпа халĕ питĕ асăрхануллă пулмалла. Эсĕ халĕ – ытлашшипех хулиган.

МИККИ. Паллă артист Москвин çинчен илтнĕ-и? "Кашни артист кăштах хулиган пулмалла", – тенĕ вăл. Пултарулăхпа ĕçлетĕн пулсан, эппин кăшт хулиган пулмаллах. Ăнлантăн-и? Картса хур.

ЛАДА. Эсĕ пысăк талант пуласшăн ĕнтĕ, çавăнпа ытлашшипех хулиган, çапла-и?

МИККИ. Пултару ĕçĕнче амбицисĕр мĕнле? Ыттисенчен кая пулас пур, мĕн тума сĕкĕнмелле унта? Урăх ĕçпе ĕçле.

ЛАДА. Сире консерваторире çапла вĕрентеççĕ-и?

МИККИ. Сана та вĕрентме пултаратăп.

ЛАДА. Кĕçĕртен эппин эсĕ манăн вĕрентекен пулатăн. Килĕшетĕн-и?

МИККИ. Эпĕ санăн савнă çынну пуласшăнччĕ, вĕрентекен çеç-мĕн. *(Ыталама тăрать.)*

ЛАДА *(шăнкăрав панă пек пулса).* Дзин-динь, дзин-динь! Урок вĕçленчĕ. Сывă пулăр. Ыранччен! Астăвăр, профессор юлташ, занятире çывăрса ан юлăр. Чипер, Микки. Ыранччен! *(Миккине йăпăрттăн чуп туса илет те утса каять. Кăштахран чарăнса)* Ята вара манăнне атте нимле "Жигулине" асăнса та мар, пач урăххишĕн çапла хунă. Илтнĕ-и "Лада" текен юрра? *(Юрлать: "Под железный звон кольчуги... Ладушка–Лада..." Çак юрра юрласах тухса каять.)*

**Микки Лада юрланă май шейк ташланă пек тăвать. Лада тухса кайсан пĕр вăхăт тин çеç иртнĕ саманта аса илсе киленет. Унтан сайра йывăççем хушшинчи вăрăм сак çине пырса ларать. Маэстро чӳречинчен кĕвĕ тепĕр хут янрама тытăнать. Микки кĕвве итлет.**

МИККИ. Маэстро вăл маэстрах çав. Эпĕ?.. Айванĕ... Хама хам... манăн юррăмсем революци тăвĕç тесе сĕмленнĕ. Çĕнĕ варкăш! Çĕнĕ сывлăш! Кулăшла та-çке. Кама кирлĕ вĕсем? Айван хĕрсене-и? Вĕсем валли çыракансем мансăрах нумай. Чăнласа ĕçлемелле. Чăнласа! *(Пауза. Унтан татăклăн)* Пулать. Пурпĕрех пулать! Манăн та пулатех! Хам ĕмĕтленнине тăвататăпах!

**Владияр пырса тухать. Кĕтмен тĕлпулу.**

ВЛАДИЯР. Тĕп геройсен çулĕсем хĕреслене пуçларĕç пулмалла. Пĕрремĕш хĕресленӳ. Эппин, чаршав уçăлчĕ. Салам, Микки... Маус. Ку эпĕ – Владияр. Паллашнă таччĕ пулас?

МИККИ *(вăрт çаврăнать.)* Мĕскер? *(Хăй тĕллĕн)* Хĕстер те вĕçтерчĕ халь эсĕ. Пит кирлĕччĕ.

ВЛАДИЯР *(аптрасарах).* Ăнланмарăм. Чăрмантартăм-им-мĕн? Элле, шăпах асамлă кĕвĕ çуралнă самантăн шăплăхне хускатрăм?

МИККИ *(çаплах хăйĕн шухăшĕнчен хăпаймасăр).* Темех мар. Сывă пулăр. *(Кайма тăрать.)*

ВЛАДИЯР. Тăхта, Микки. Сăмахламалли пур.

МИККИ. Мĕн çинчен?

ВЛАДИЯР. Мĕн çинчен пултăр ĕнтĕ? Паллах, ĕç пирки.

МИККИ. Ĕç пирки калаçма манăн халь кăмăлсем çукрах.

ВЛАДИЯР. Ăна куратăп-ха, çапах та калаçăвĕ хальтерех пулсан аванччĕ. Маншăнах та мар, ытларах хăвăншăн. Каярах эпĕ хулара пулмасса та пултарăп. Пĕр питĕ престижлă фестивале чĕнме кăмăл тунă пек ăнлантăм.

МИККИ. Ăнăçу сунатăп. *(Кайма тăрать.)*

ВЛАДИЯР. Фестивале эпĕ санăн юррупа кайма пултаратăп.

МИККИ. Манăн юрăпа? Ăнланмарăм.

ВЛАДИЯР. Мана санăн юррусем килĕшрĕç. Вĕсенчен хăшне-пĕрне хамăн репертуара кĕртме те кăмăл пур. Фестивальтен килсенех çĕнĕ программа хатĕрлеме пикенетĕп. Санăн юррусем унта тĕп вырăн йышăнасса та шанăç пур пек туйăнать.

МИККИ. Нимĕн те ăнланмастăп. Хамăн юрăсене эпĕ сире пĕрне те сĕнменччĕ пулас.

ВЛАДИЯР. Мĕнле калаççĕ-ха, страна знает своих героев. А пирĕн, юрăçсен, композитор мĕнле юрă кĕвĕленине çеç мар, мĕнпе мĕнле сывланине те пĕлсе-туйса тăмалла. Шел пулин те, пирĕн шăпа пĕтĕмпех композитор аллинче.

МИККИ. Сирĕн кун пирки пит кулянмаллиех çук пек. Сирĕн шăпăр лайăх алăра. Маэстро – Турă пÿрни.

ВЛАДИЯР. Маэстро, Маэстро... Пăхатăп та, эсĕ те ăна Турă вырăннех карта пуçланă курăнать. Анчах та... Пĕрехмай Турă мĕлки пек çеç çÿресен мĕлке кăна та пулса юлма пулать. Ман шутпа, кашниех Турă пулма тăрăшмалла. Уйрăмах Турри хăй пани пулсан. Вăл санăн пур. А Маэстро вăл, тăванăм, ĕнтĕ текех... Анăça сулăннă хĕвел пуль. Тен, анса та ларнă.

МИККИ. Мĕн калаçатăр эсир?

ВЛАДИЯР. Ĕçке ярăннă çын вăл – арпашăнчăк ăс-тăн, арканнă миме. Паллах, илемлĕ, хитре, селĕм юрăсем пур унăн. Тĕлĕнмелле те, мĕнле çырма пултарнă вăл вĕсене ÿсĕр пуçпа? Анчах... анчах конъюнктура улшăнмасăр тăма пултараймасть. Маэстро юррисемпе тепĕртакранах ялсем тăрăх çеç çÿресси юлать. Камшăн кăмăллă пултăр унашкал перспектива? Уйрăмах халь, çакнашкал çÿллĕшне хăпарса çитнĕ чух.

МИККИ. Ытлашши çÿле вĕçсе хăпарсан персе анма та тем мар теççĕ. Тата хĕвелĕ те çунтарса яма пултарать.

ВЛАДИЯР. Эпир ÿкместпĕр те, çунмастпăр та. Юнашар... Турă пур пулсан. *(Миккине хулпуççинчен лăпкама хăтланать – Микки пăрăнать.)*

МИККИ. Эсир... Маэстрона... Хăйĕн чи лайăх юррисене сире, урăххине мар, шăпах сире панă Маэстрона... ним вырăнне...

ВЛАДИЯР *(пÿлсе)*. Эсĕ, мĕн, айвана перетĕн-и? Курмарăн-им-мĕн, мĕн хăтланчĕ вăл иртнинче барта? Банкета пынă пулсан... Çамрăк çыннăм, эпĕ Маэстрона пĕрремĕш çул кăна пĕлместĕп, эпир унпа пĕрле вĕреннĕ, пĕр пÿлĕмре пурăннă.

МИККИ. Эппин, эсир вăл банкета пымасса та чухланă? Тен, концертра халăх умне тухма чĕнсе çавнашкал шăв-шав туни те ячĕшĕн çеç? Вăл сцена çине хăпармасса пĕле тăркачах...

ВЛАДИЯР. О-о, куратăп та, питĕ хĕрсе кайрăн-ха эсĕ. Çук, сцена çине эпĕ ăна чăнласа чунтан чĕннĕ. Халăха кăтартасшăнччĕ ăна. Вăл халăх тавне, халăх чысне тивĕç, паллах.

МИККИ. Сирĕнне те!

ВЛАДИЯР. Маншӑн ӗçленӗ пулсан... эпӗ ӑна чӑннипех те тав тунӑ пулӑттӑм. Даже ытларах та. Хам мӗн ӗçлесе илнӗ, мӗн тума пултарнӑ хам валли: мул-и, ырлӑх-и – пӗр хӗрхенмесӗр пайлашма хатӗр. Эпӗ ыткукар мар. Маншӑн мул та, укçа-тенкӗ те пысӑк пӗлтерӗшлӗ мар. Маншӑн хамӑн ят хаклӑрах. Мул-пурлӑхне эпӗ кирек хӑш самантра та тума пултаратӑп. Теприне валли те туса пама пултаратӑп. Сӑмах май, картса хур кӑна. Тен, сана çак самантра шӑпах кирлӗ ку. Вӑт çакнашкал условисемпе килӗшӳ туса пӗрле ӗçлеме сӗнетӗп те эпӗ сана. Пытармастӑп, санӑн юррусемпе эпӗ пач çӗнӗлле янраса кайнӑ пулӑттӑм. Шӑпах мана кирлӗскерсем вӗсем. Маэстро... Ун пирки калаçас пулсан... Çитет пулӗ ӗнтӗ пӗр вырӑнта тӑпӑртатса тӑрса. Пӗр çӗрте пылчӑк çӑрса тӑрсан вӑл çӑтса яма та пултарать. Халь самани çавнашкал. Эпӗ ӑнлантӑм санӑн кӑмӑлусене. Эсӗ, паллах, Маэстрона сутасшӑн мар. Вӑл вара сана сутрӗ.

МИККИ. Эппин, ракетоноситель – сирӗн идея? Орбита?.. Миçе кӗленчепе туянтӑр эсир мана?

ВЛАДИЯР. Мӗн калаçатӑн эсӗ? Мӗнле кӗленчесем?

МИККИ. Эсир питӗ лайӑх ӑнлантӑр. Манӑн сире валли юрӑ кӗвӗлеме мар, сирӗнпе калаçса текех çӑвар тутине те пӗтерес килмест. Шел, маларах ӑнкарса илмен кӑна. Питех те шел. *(Васкаса пӑрахса каять.)*

ВЛАДИЯР. Итле, йӗпе сӑмса! Санӑн Турру та – Маэстро – хӑй вӑхӑтӗнче ытлашшипех хӑюллӑччӗ! Паян ӑçта вӑл? Шӑпӑр шӑтӑкӗнче! Асту, çав шӑпах ан лектӗр!

**Владияр тарӑхӑвне шӑнараймасӑр уткалать. Унтан сак çине пырса ларать. Çак самантра Маэстро чӳречинчен каллех кӗвӗ янрама пуçлать.**

ВЛАДИЯР *(итлесе ларнӑ хыççӑн)*. Аптрамасть. Пӗтсех пӗтмен иккен-ха старик. Браклама васкас мар. Хитах пулма пултарать вӗт ку. *(Кӗвӗ манер ӗнӗрлеме пӑхать.)* Да-а... Халӑх юратать кун пеккине. *(Маэстро чӳречи еннелле пӑхса)* Мӗнех, Маэстро, ӗçле. Ӗçле! Эпир ӗçлекенсене юрататпӑр. Ха-ха-ха... *(Каллех кӗвӗпе пӗрле ӗнӗрлет.)*

**Элеонора пырса тухать. Ӑна тӳрех палласа илме те çук: тӗксӗмрех çи-пуçпа, куçлӑх тӑхӑннӑ. Владиярa асӑрхать те каялла çаврӑнать.**

ВЛАДИЯР *(самаях аптраса ӳкни палӑрать, тӗлӗнсе)*. Элеонора? Эсӗ-и? Ӑнланмарӑм.

**Элеонора пӗр сӑмах хушмасӑр пӑрахса кайма тӑрать. Владияр яртах сиксе тӑрать те Элеонорӑна хулран ярса тытать.**

ВЛАДИЯР. Тӑхта? Мӗне пӗлтерет ку?

ЭЛЕОНОРА. Яр! Ыраттаратӑн.

ВЛАДИЯР. Ӑнлантарса пама пултаратӑн-и эсӗ, мӗн тӑватӑн кунта çӗр хута? А-а... мана йӗрлетӗн?

**Элеонора кайма тӑрать. Владияр ӑна чарать.**

ВЛАДИЯР. Çав шая анса лартӑн-и ӗнтӗ? Мӗскӗн хӗрарӑм! Пӗлмен.

ЭЛЕОНОРА. Мӗскӗнпе пурӑнса ху та мӗскӗн пулатӑн.

ВЛАДИЯР. Мӗн, алкашпа пурнӑса алкаш пуласран хӑрасах манпа кайрӑн-им ун чух?

ЭЛЕОНОРА. Ан хӑй ун пирки çапла калама! Вӑл – таса çын.

ВЛАДИЯР. Эпӗ – вараланчӑк, çапла-и? Ха-ха-а...

ЭЛЕОНОРА. Турăçăм! Кампа аркатнă эпĕ хамăн пурнăçа. Камшăн?

ВЛАДИЯР. Мĕн ширанă, çавна тупнă. Таврăнма пултаратăн. Чим, тен, таврăннă та? Эп сисмен кăна. Тен, шăпах Маэстро патĕнчен эс?

ЭЛЕОНОРА. Мĕнле ăнланас килет, çапла ăнлан.

ВЛАДИЯР. Тен, ахальтенех мар чăнах та Маэстрăн юррисем пĕри тепринчен лайăхрах юлашки вăхăтра? Тен, каллех роман сирĕн? Лав стори?

ЭЛЕОНОРА. Ан кĕвĕç, сăлтавĕ çук. Ун умĕнчи çылăхăмсене пĕле тăркач таврăнас тесен те таврăнма намăс çитереймĕп. Питех шел. Эпĕ *(Маэстро чўречи енне пăхса)* ăна питĕ хĕрхенетĕп. Хаклатăп. Шел, кая юлса ăнлантăм çакна. *(Хыттăн туртăнать те вĕçерĕнсе пăрахса каять.)*

ВЛАДИЯР *(хăй тĕллĕн)*. Тĕрĕс калан. Эсĕ унта нихçан та таврăнас çук. Эппин Маэстро асапланать, чунне çунтарать. Эппин, ха-ха-ха, çĕнĕ илемлĕ, хитре, пурне те куççульлентерекен, макăртакан, йĕртерекен, пурин чунне те çатăрласа тытакан юрă çуралать. Юрăçа мĕн кирлĕ? Юрă! Пурне те куççульлентерекен, макăртакан, пурин чунне те çара алăпа çатăрласа тытакан юрă! *(Элеонора кайнă енне пăхса)* А сан пеккисем вĕсем кашни концертрах ытамĕ-ытамĕпе чечек йăтăрласа сцена çине йăтăнаççĕ. Юрла, Владияр! Хальлĕхе санăн вăхăт! *(Тухса каять.)*

## ИККĔМĔШ ПАЙ

### Пĕрремĕш курăну

**Маэстро пӳлĕмĕ. Хальхинче вăл самай урăхла пек – таса, тирпейлĕ. Хăшпĕр улшăну пулса иртни те палăрсах тăрать: япаласене вырăнсемпе куçарнă.**

**Маэстро – рояль умĕнче. Çĕнĕ кĕвĕ калать. Тая ăна киленсе итлет.**

МАЭСТРО *(кĕвĕ вĕçленнĕ хыççăн)*. Çапах та пĕтсех пĕтмен пулмалла эпĕ. Владияр манăн рояле ватлăх сĕмĕ çапнă пек калать те. Ватлăхăн вара хăйĕн илемĕ пур. Темле йăлтăр-ялтăр илем мар вăл, тулли пек, чăп-тулли пек туйăнакан илем. Стайлă, сумлă илем тенĕ пулăттăм. Лăпкă, таса илем.

ТАЯ. Кĕрхи пек илем.

МАЭСТРО. Кĕрхи пек илем... Питĕ те тĕрĕс палăртрăн пулас эсĕ, Тая.

ТАЯ. Эпĕ мар – Митта Ваçлейĕ. *(Сăвă калама пуçлать.)*

Кĕрхи сăнарăн пур ĕлккемлĕх,
Чуна кайса тивен илем.

**Маэстро та Тайăпа пĕрле сăвă йĕркисене аса илме тытăнать:**

Çунаççĕ çулçăсем хĕлхемлĕн,
Вĕçсе иртеççĕ кайăксем.

**Кĕвĕ янрама пуçлать те, сăвă юрра куçать. Иккĕн юрлаççĕ: арçынпа хĕрарăм. Маэстрăпа Тая шăпланса шухăша кайса итлеççĕ, пĕр хускалмасăр.**

Саламлă, савнăçлă, ĕлккемлĕ
Ик куç тулли кĕрхи илем...

**Маэстрăпа Тая хăйсем сисмесĕрех тенĕ пек тăчĕç, пĕр авăк куçран куçа пăхаççĕ. Шăп. Çак самантра Миккипе Лада хаваслăн, шавлăн вирхĕнсе кĕреççĕ. Маэстрăпа Тайăна курса тăпах чарăнаççĕ.**

ЛАДА *(шăхăрнă пек туса илет. Тăсарах).* Чăр-ман-тар-тăмăр пулас...

МИККИ. Kaçарăр.

МАЭСТРО *(хавхалануллăн).* Çук, çук, каçармастăп. Каçарма та шутламастăп. Мĕншĕн тесен эсир питех те вăхăтра çитрĕр. Шăпах вăхăтра! Мĕншĕн тесен, мĕншĕн тесен... а-а, ну... Ку... кăштахран валли пĕчĕк кăна сюрприз пекки пултăр, юрать-и? Эсир ирĕк парсассăн, эпĕ пĕр самантлăха çухаласшăн халĕ. Самантлăх çеç, эсир тăхтăр, эпĕ кĕçех. Тая, чей! Çук, "Шампански"! Паллах, "Шампански!" Кун пекки ман пурнăçра чылайранпа пулман. Çавăнпа – "Шампански!" *(Тепĕр пӳлĕме васкаса кĕрсе каять.)*

ТАЯ. Эсир иртĕр, иртĕр. Ларăр. Эпĕ кофе лартса ярам-ха. Микки, эс хăнана кичемленме ан пар.

ЛАДА *(реверанс пекки тăвать).* Лада.

ТАЯ. Эпĕ Тая пулатăп *(кухньăна кĕрсе каять.)*

ЛАДА *(пӳлĕме пăхса çаврăннă май).* Тая... Хитре ят. Таисия... Темле ностальгиллĕ ят. Уçăмлăн калама юраман вăрттăнлăх пур пек ят. Маэстрăн юррисене тивĕçлĕ хĕрарăм урăхла ятлă пулма та пултараймасть, паллах.

МИККИ. О-о! Фантазерка та-çке эсĕ. Пулас пултаруллă юрăçă çеç мар.

ЛАДА. А Маэстру санăн вара питех те странный çын пулас. Эпĕ ăна пачах та урăхла курнă. Пижон пек. Шукăль тумланнă. Çав тери вăрăм çӳç, мăн сухал, ну-у...чăн-чăн маэстро пек. Пурăнасса та... çав тери пуян хваттер тесе. Антиквариат унта, картинăсем... Супер аппаратура. Çавнашкал юрăсем çырса та çакнашкал хваттерте?.. Е унăн хула айккинче пĕр-пĕр коттедж пур, Микки? Паллах, пур. Çавнашкал юрăсем кунашкал хваттертех çырăнаяс çук ĕнтĕ.

МИККИ. Пурччĕ, пурччĕ, лăплансам. Бассейнпах. Пурччĕ те сутса ячĕ. Укçине Никарагуа ачисене пулăшма куçарчĕ.

ЛАДА. Никарагуа?.. Мĕншĕн вара уйрăмах унта?

МИККИ. Вăл Никарагуан хисеплĕ гражданинĕ. Тата унсăр пуçне Никарагуа ачисем çеç Лада валли хитре юрăсем çырма пултараççĕ терĕ.

ЛАДА. Каллех кулатăн манран. Эп санпа вара чăнласа калаçатăп. Все, санпа тек калаçмастăп.

МИККИ. Юрĕ ĕнтĕ, юрĕ. Эп шӳтлесшĕн çеç пултăм.

Микки Ладăна çупăрлама тăрать, шăпах çак самантра Тая пырса кĕрет.

ТАЯ. Ой-й, эп мансах кайнă-çке *(каялла кухньăна кĕрсе каять.)*

**Миккипе Лада кулса яраççĕ.**

МАЭСТРО *(пуçне алăкран кăларса).* Микки, сана самантлăха чĕнме юрамастчĕ-ши?

**Микки Маэстро пӳлĕмне кĕрсе каять, Тая кухньăран тухать. Таяпа Лада иккĕшех.**

ТАЯ. Çухалчĕç пирĕн арçынсем? Сана пĕчченех тăратса хăварчĕç эппин? Ку тĕлĕшпе кăнттамрах çав вĕсем. Иккĕшĕ те.

ЛАДА. Çук, çук, пĕчченлĕхе туймарăм та эпĕ. Темшĕн мана кунта хальччен пулнăнах туйăнса тăрать. Сирĕн питĕ кăмăллă биоэнергетикăлла атмосфера. Канăçлă. Лăпкă. Чăн та, малтанах эпĕ сире çав тери пуянлăхра пурăнатăр пулĕ тесе шутланăччĕ. Хăвăра та мăнкăмăллă та сивĕрех çынсем пулĕ тесе. Килме те шиклентерех тăнăччĕ, Микки çине тăрса хистенипе çеç. Пулкаласа курнă эпĕ пуян пысăк çынсем патĕнче. Сирĕн патра пач урăхла.

ТАЯ. Унăн мĕнпур пуянлăхĕ те – юррисем тата хăй. Укçа тытма пĕлмест вăл.

ЛАДА. Никарагуа ачисене пулăшать-и?

ТАЯ. Пысăк гонорарсене яланах унта парать. Чи талантлисем урăх ниçтан та мар, унтан кăна тухма пултараççĕ тесе шутлать. Тĕрĕсех-тĕр. Вăн, Микки...

ЛАДА. Микки Никарагуаран?

ТАЯ. Çапла. Вăл сана каламан-и вара? *(Лада тĕлĕннине кура тавçăрса илет.)* Авă мĕн пирки-çке эсĕ. Тăлăх ачасен интернатне çапла калаççĕ вĕсем.

ЛАДА. Микки, мĕн, хăр тăлăх-им?

ТАЯ. Çапларах ăраскаллă вăл. Маэстрăн хăйĕн те çавнашкалрах шăпа.

ЛАДА. Микки мана кун пирки каламан.

ТАЯ. Калас та çук. Мĕскĕнленме, хăйне шелленине килĕштермест вăл. Маэстрăран та пĕр пус та пулăшу илмест. Ку тĕлĕшпе кутăн вара. Çав тери кутăн.

ЛАДА. Сирĕн хăвăрăн ачăрсем?.. Урăх хулара-и?

ТАЯ. Манăн çук. Унăн вилнĕ. Пилĕк çул каялла. Пĕчĕклех. Машинăпа çапăнса. Маэстро хăй те аран çеç çăлăнса юлнă.

ЛАДА. Каçарăр, эпĕ пĕлмен.

ТАЯ. Ну, кофе сивĕнсе те кайрĕ ĕнтĕ манăн. Кусем çаплах пушанаймарĕç-няк. Пĕр ĕçлесе кайсан – çапла. Икшер кун пӳлĕмĕнчен тухмасăр ларма пултарать. Тĕнче пуррине манса каять.

ЛАДА. Эпĕ çавнашкал çынсен арăмĕсене ăмсанатăп: вĕсен куçĕ умĕнче шедевр çуралать. Эсир – телейлĕ.

ТАЯ. "Телейлĕ"... Эсĕ тĕрĕсех калатăн пулмалла, Лада, эпĕ чăнласах та телейлĕ.

ЛАДА. Телейлĕ пулмасăр!.. Пĕтĕм халăх кăмăлне çавăрма пултаракан юрăсем çыраканăн арăмĕ пулса та телейлĕ пулмасан...

ТАЯ. Эпĕ унăн арăмĕ мар.

ЛАДА. Арăмĕ мар?

ТАЯ. Микки каламан-и вара сана?

ЛАДА. Каламан. Эпир унпа çĕркаç кăна паллашнă. Пирĕн ĕнер училищĕре отчетлă концерт пулчĕ. Кайран вăл мана шыраса тупрĕ те: "Санăн сассу пĕр чаплă композитора питĕ кирлĕ", – терĕ. "Чаплă композиторĕ кам вăл? Эсĕ-и?" – терĕм те: "Эпĕ чаплă композитор пулнă тĕле, шел пулин те, эсĕ шăлсăр карчăк пулса тăран", – терĕ. Çавă çеç.

ТАЯ. Çук, эпĕ Маэстрăн арăмĕ те, савниĕ те мар. Тахçан унăн кӳрши пулнăскер çеç. Çамрăклăхра.

ЛАДА. Эсир ăна юрататăр-и?

ТАЯ. Ахăртнех, юратуран та пысăкрах ку.

ЛАДА. Каçарăр, эпĕ шутламасăр персе ятăм.

ТАЯ. Арçынсене кĕтсе илесси пулсах каймасть-тĕр пирĕн. Атьăр эппин иксĕмĕрех кофепе сăйланар. Пурнăç тени вăл, Лада, çав тери тĕлĕнмелле. Чылай чухне санпа хăвăнпа та канашласа тăрасшăн мар.

**Çак самантра Маэстрăн пӳлĕмĕн алăкĕ уçăлса каять те – çĕнтерӳçĕсен кĕввине каласа малтанах Микки курăнса каять, ун хыççăн – Маэстро. Вăл фракпа, "лĕпĕш" çакнă. Хăй именчĕкрех.**

МИККИ. Тая, ăçта санăн "Шампански"? Премьера! Çĕнĕ юрă! Тата пурнăçра пĕрремĕш хут хăйĕн юррине Маэстро хăй юрлать. Тархасшăн, Маэстро, рояль умне. Тараватпублика сире чăтăмсăррăн кĕтет.

**Маэстро çаплах именчĕклĕн, вăтанчăклăн куларах рояль умне ларать. Пĕр вăхăт шăп. Унтан сасартăках темле тарăн шухăша путнăн, пĕтĕм тĕнчене манăçнăн юрласа ярать.**

МАЭСТРО *(юрлать).*

Кĕрхи сăнарăн пур ĕлккемлĕх,
Чуна кайса тивен илем.
Çунаççĕ çулçăсем хĕлхемлĕн,
Вĕçсе иртеççĕ кайăксем.

Саламлă, савнăçлă, ĕлккемлĕ
Ик куç тулли кĕрхи илем...
Анчах те темшĕн, тем хĕрхеннĕн
Кăшт ассăн сывласа илен?..

Шавланă-иртнĕ çамрăк шухлăх
Темме çаплах аса килет?..
(Малта?.. Малта мĕн? – Шурă пушлăх
Тесе ак рифма ответлет.)

Кĕрхи сăнарăн пур ĕлккемлĕх,
Чуна кайса тивен илем.
Çунаççĕ çулçăсем хĕлхемлĕн,
Вĕçсе каяççĕ кайăксем.

**Юрă вĕçленчĕ. Шăп. Мĕн пурри, сывлăш таранах, тăп хытнăн. Çак шăплăхрах Микки "Шампански" уçать.**

МИККИ. Браво, Маэстро! Браво!

**Шаккаса ĕçеççĕ. Тин чун кĕнĕ пек шавлă пулса тăрать.**

МИККИ. Тая, ăнлантар тата ўкĕте кĕртсем Маэстрăна, ку юрра нимĕнле Владияр та мар, ку юрра Маэстрăн хăйĕн юрламалла.

МАЭСТРО. Микки, эсĕ йăнăшатăн, Владияр вăл Владияр.

МИККИ. Пулнă. Анчах та паянтан унăн хĕвелĕ анăç енне сулăнать. Мĕншĕн тесен... мĕншĕн тесен кĕçех çĕнĕ хĕвел шевлисем карăнма пуçламалла. Вăл, хиçеплĕ публика, паллаштарма ирĕк парсамăр, *(хыттăнраххăн)* – Лада Новицкая!

**Лада реверанс пекки тăвать.**

МАЭСТРО. Хавас, питех те хавас паллашма.

МИККИ. Маэстро, сирĕн юррăрсене малашне, ман шутăмпа, шăпах Лада юрласассăн, вĕсем тата та илĕртўллĕрех янраса каяссăн туйăнать. Владияртан çĕр хут мар пулсан, çичĕ хут. Чăнласа калатăп.

МАЭСТРО *(Миккине пўлсе).* Микки, манăн хаклă, кăмăллă Микки, ырă çыннăм, эсĕ яланлăх хăвна, паянхи çак самантри хăвна, упраса хăварма пултараятăн пулсан, пулатăн. Чăн-чăнни пулатăн! Эпĕ эсĕ пуласса шанатăп. Ĕненетĕп! Çавăнпа

юрататăп та сана. Лада пирки пĕрре те иккĕленместĕп. Эсĕ ăна ман пата илсе килтĕн пулсан, эппин вăл чăнласах та пултаруллă: хăвах пĕлетĕн, эпĕ сана хамран та ытларах шанатăп. Пулаççĕ юрăсем. Паллах, пулаççĕ! Лада валли те, Владияр валли те! Эпĕ халь хама çав тери лайăх та хавхалануллă туятăп. Нихçанхинчен те хавхаланулларах. Эпĕ паян çĕнĕрен çĕнелтĕм. Паянтан çĕнĕ тапхăр пуçланать пулас манăн. Кĕрхи илем евĕр тулли пурнăç. Халĕ эпĕ сире пурне те шăпланма ыйтатăп, Тая, сана уйрăмах тимлĕ итлеме.

ТАЯ. Ваня, эсĕ паян ытла та хавхаланса каймарăн-ши? Ман шутпа, ытлашши хĕрсе кайнă чух ытлашши пулма пултарать.

МАЭСТРО. Çук, паян ман куçăм уçăлчĕ, эпĕ паян пĕтĕмпех яр уççăн куратăп. Эпĕ, Тая, сана паянтан...

ТАЯ. Çук, çук... Ваня, тархасшăн... Кирлĕ мар...

**Электрошăнкăрав сасси. Таяпа Маэстро тăруках шăпланаççĕ.**

МИККИ. Эпĕ уçатăп.

**Шăп. Таяпа Маэстро куçĕсене тартаççĕ.**

МИККИ САССИ. Элеонора?.. Салам пултăр, салам. Иртĕр, иртĕр. Пирĕн кунта паян пысăк уяв: Маэстро çĕнĕ юрă çырнă. Тата мĕнлерех юрă! Эсир илтнĕ-и Маэстро юрланине? Унăн çав тери аван, питĕ туйăмлă пулса тухать.

ЭЛЕОНОРА САССИ. Каçарăр, чăрмантарас теменччĕ. Владияр кунта килес пек каланăччĕ те. Каçарăр. Маэстрăна ман ятран саламлăр: эпĕ халĕ питĕ васкатăп, çула май тенĕ пек çеç. Мана такси кĕтсе тăрать.

МИККИ САССИ. Хăвăр саламланă пулсан уншăн кăмăллăрах пулнă пулĕччĕ.

**Маэстро Миккипе Элеонора сассисем еннелле утать.**

МАЭСТРО. Элеонора?.. Эсĕ... ирт малалла.

**Элеонора пăлханни палăрать: тухса каймалла-и е малалла иртмелле-и – вăл иккĕленет. Унтан хăюсăррăн пĕр-ик утăм тăвать.**

ЭЛЕОНОРА. Чăрмантаратăп кăна пулĕ.

**Тая кухньăна кĕрсе каять. Элеонора ăна асăрхать те кайма тесе алăк еннелле çаврăнать.**

ЭЛЕОНОРА. Çапах та, эп каям-ха...

МИККИ. Элеонора, ниçта та каймастăр. *(Ăна хулĕнчен çавăтса малалла иртет.)* Плащăра та хывса хурăр *(Элеонорăна плащне хывма пулăшать, кайса çакать.)* Тархасшăн, ларăр. Маэстро, мĕскер эсир? Кил хуçи пек пулăр.

**Маэстро ку таранччен Элеонора çине куç илми пăхса тăнăскер ыйхăран вăраннă пек пулать.**

МАЭСТРО. Çапла, çапла... Акă, шампански, тархасшăн. *(Фужера шампански ярать, Элеонорăна пырса парать).*

ЭЛЕОНОРА. Санăн малашнехи çитĕнĕвўсемшĕн, Ваня!

МИККИ. Вăт ку тĕрĕс! Куншăн шаккасах ĕçмелле.

ЛАДА. Ура!

**Шаккаса ĕçеççĕ. Элеонора Тая кĕрсе кайнă кухня еннелле пăха-пăха илет. Хайне Маэстро умĕнче те, Тая умĕнче те айăплă туять вăл. Шăп.**

ЭЛЕОНОРА *(ура çине тăрать. Маэстрăна).* Халь чун лăпланнă пек. Санăн пĕтĕмпех йĕркеллĕ, шĕкĕр Турра. Эпĕ каям-ха...

**Алăк патнелле утать. Маэстрăпа Микки те ун хыççăн ăсатма утаççĕ. Уçăлса хупăннă алăк сасси. Маэстрăпа Микки каялла пӳлĕме таврăнаççĕ.**

МИККИ. Турăçăм, еплерех хĕрарăм... Хитре. Чиперскер. Кăмăлĕпе те... Мĕнлерех çын арăмĕ. Нимĕн те ăнланмастăп. Эсĕ те Владияра хисеплетĕн. Мĕн тупнă эсир унăн çумĕнче? Е пачах та çынсене чухламастăп эпĕ? Мĕншĕн, мĕн пирки йăнăшатăп эппин? Ăнлантарса пар-ха мана, Маэстро?

**Маэстро пăлханни сисĕнет. Тая çаплах курăнмасть.**

МАЭСТРО. Тепĕр чух, Микки, тепĕр чух. Юрать-и? Эпĕ самантлăха çухалам-ха. Лада, эсĕ хатĕрлен, кĕçех сана сăмах паратпăр. *(Хăйĕн пӳлĕмне кĕрсе каять).*

**Миккипе Лада иккĕшех.**

ЛАДА. Тин кăна çав тери шавлăччĕ, тăруках шăп. Эп нимĕн те ăнланмастăп.

МИККИ. Енчен те халĕ Маэстро умĕнче эсĕ манăн шанăçа тӳрре кăлармасан, эпĕ сана...эпĕ сана...

ЛАДА. ...кунта тек илсе килместĕн?

МИККИ. ...качча илместĕп.

ЛАДА. Мĕн?

МИККИ. Мĕн илтрĕн, çавă.

ЛАДА. Ой-ой-ой... Питех те чăрсăр-çке эсĕ: паллашни талăк çитмен, тӳрех качча. Эпĕ сана пĕр-пĕр интеллигентик кăна тесе. Крутой... Пĕр тесен эп сана Маэстро тусĕ пулнăшăнах качча тухас та çук. Маэстрăна – тархасшăн. Паян тесен паян. Сана вара эп пач пĕлместĕп. Маэстро мухтасса мухтать, паллах. Мĕншĕн – хальлĕхе ним те ăнланмастăп. Пĕр-пĕр юрруна кăтарт-ха, тен, эсĕ чăн та гений. Гение, паллах, никам та качча тухмасăр тăраймĕ. Ну, мĕн шăплантăн? Гений мар-им?

МИККИ. Шел пулин те.

ЛАДА. Микки, кала-ха, эпĕ сана килĕшетĕп-и? Ну, кăштах та пулин. Пĕр чĕптĕм. Пĕр пытармасăр каласан, манăн сана çав тери килĕшес килет. Эсĕ лайăх ача пек туйăнатăн.

**Маэстро тухать. Халĕ ĕнтĕ вăл фракпа мар, "лĕпĕшĕ" те çук.**

МАЭСТРО *(хăйне çĕкленӳллĕрех кăмăллă тытма тăрăшни палăрать).* Лада, эпир сана итлеме хатĕр. Чим-ха, Тая ăçта тата? Тая! Эпир сана кĕтетпĕр.

**Тая кĕрет. Кăмăлĕ пусăрăнчăкраххи палăрсах тăрать.**

**Микки рояль умне ларать. Ладăпа иккĕшĕ пăшăлтатса илеççĕ, ахăртнех, мĕнле юрă юрласси пирки пулас.**

ЛАДА. Эпĕ, паллах, пăлханатăп. Çавăнпа питĕ тимлесех итлеме сĕнместĕп. Юрать-и?

МАЭСТРО. Ан пăлхан, Лада, ан пăлхан.

**Микки рояль калама пуçлать. Рояль сасси оркестрпа хутăшса каять – Лада юрри.**

**Лада юрланă вăхăтра Владияр пырса кĕрет. Ăна нихăшĕ те асăрхаман пекех.**

**Юрă вĕçленсен Лада пĕр вăхăт пуçне усса тăрать, Микки Маэстро мĕн каласса кĕтет, хăй пăлханать пулас. Тая Ладăна çупăрласа саламлать.**

ВЛАДИЯР. Браво! Браво! *(Алă çупам пек пулса Лада патне пырать, аллинчен чуп тăвать.)*

ЛАДА. Владияр? *(Аллине картах туртса илет.)*

ВЛАДИЯР. Пирĕн çамрăк талантсем ӳсĕмсен çулĕпе çав тери пысăк утăмсемпе тата çав тери хăвăрт утаççĕ иккен. Маттур. Саламлатăп.

ЛАДА. Шутламан та эпĕ ку сăмахсене илтессе сиртен. Нихăçан та. Тĕрĕссипе çакнашкал тĕлпулăва та сунманччĕ.

ВЛАДИЯР. Ман шутпа тĕлпулусем пирĕн малашлăхра пайтах пек туйăнать. Ну, кун пирки каярах калаçăпăр. Акă, сире манăн визитка.

ЛАДА. Пур манра сирĕн телефон.

ВЛАДИЯР. Манăн халĕ урăх хваттер.

МИККИ *(тĕлĕнсе)*. Эсир Ладăна пĕлетĕр–и?

ВЛАДИЯР. Ах, Микки, Микки... Пирĕн хула вăл сан пеккисене çеç, тин килнĕскерсене кăна, пысăк пек туйăнать. Астăватни Есенина – "Здесь каждая собака знает мою легкую походку".

ЛАДА. Владияр хăй вăхăтĕнче пулăшман пулсан, эпĕ, ахăртнех, паян кунта пулас çукчĕ те пулĕ. Пирĕн училищĕне вĕренме кĕме конкурс çав тери пысăкчĕ, вăл вара комиссиреччĕ.

МИККИ. Санăнни пек пултарулăхпа–и? Эсĕ консерваторие ним мар шăхăрса кĕрсе каймалла.

ЛАДА. Эпĕ хăтланса пăхнă. Пĕр ватă профессор тени питĕ шăхăрма ыйтрĕ мана, эпĕ хирĕçлерĕм.

МАЭСТРО. Санпа паллашма тӳр килнĕшĕн эпĕ питĕ хавас, кăмăллă, Лада. Питĕ ырă самант парнелерĕн эсĕ мана халĕ. Пĕлетĕн-и, эсĕ мана хамăн пĕрремĕш юррăмсенчен пĕрне тавăрса патăн. Тĕрĕссипе, эпĕ ăна манăçа та кăларнă пулнă-мĕн.

ЛАДА. Вăл юрă сирĕн? Пирĕн поселокра чи юратниччĕ вăл. Эп ача чухне. Халĕ те юрлаççĕ.

ВЛАДИЯР. Эппин, вăл юрра хамăрăн пулас проекта кĕртнĕ тесе шутлăпăр. Куратăп, эсир кунта пĕр "Шампанскине" пушатнă та. Мĕн сăлтавпа – мана, паллах, ăна пĕлмешкĕн кирлех мар, халĕ вара теприне пушатма вăхăт пек туйăнать. *(Тайăна.)* Тая, эп унта пакет лартса хăварнăччĕ, илсе килсемĕр, тархасшăн. Çитес кунсенчен пĕринче фестивале тăратнă ĕçсен списокĕ пичетленмелле. Унта Маэстрăпа иксĕмĕрĕн пĕрлехи проект та пур. Ман шутпа пурте чиперех пулмалла. Комисси ĕçлет. Конкуренци тени ячĕшĕн çеç. Маэстрăпа камах тупăшайтăр ĕнтĕ?

МАЭСТРО *(темле сасартăк аванмарланса)*. Чим-ха, Владияр, чим...

ВЛАДИЯР. Маэстро валли эп кăна сюрприз ырăнне тăвасшăнччĕ те – чăтаймарăм: савăнăç çине савăнăç манăн ку кунсенче, туйăмсене çăварлăхласа ĕлкĕрейместĕп ниепле те. Çĕнĕ машина туянтăм вĕт-ха эпĕ тата.

ЛАДА. "Аудио"? "Вольво"?

ВЛАДИЯР. Лада, юлашки вăхăтра эпĕ кăштах лайăхрах машинăпа çӳремешкĕн тивĕç пулĕ.

ЛАДА. "Мерседес"?

ВЛАДИЯР. Çавăнпа та ку "Шампанские" эпĕ, тусăмсем, пирĕн Маэстро ячĕпе çĕклеме ыйтасшăн. Унăн çĕнтерĕвĕсемшĕн, унăн кăмăлĕшĕн, унăн телейĕшĕн. Пĕр пытармасăр калатăп, Маэстро пулмасан, ахăртнех, эпĕ нихăçан та çакнашкал телейлĕ пулса кураяс çукчĕ. Пĕлсех тăратăп, чылаях та вăхăт иртмĕ, çак сăмахсенех

çак сĕтел хушшинчех Миккин те калама вăхăт çитĕ. Вăл çитетех, эпĕ ăна туйса тăратăп. Унтан, Лада – санăн та. Эпир пурте – Маэстро çунат панă çынсем.

МАЭСТРО. Мĕн эс, Владияр, мĕн... Манра мар ĕçĕ. Кашни хăй ĕçĕнче талантлă пулнинче.

ВЛАДИЯР. Çук, Маэстро, талант пĕр-пĕччен пирĕн ĕçре палăрмасăрах çухалма пултарать. Юнашар тепĕр талант пулсан вара – çĕнтерӳ. Тав сана, Маэстро!

**Шаккаса ĕçеççĕ.**

ВЛАДИЯР. Халĕ вара пурте ман машинăна! Катаччи чупатпăр! Хулапа киленĕпĕр. Çав тери хитре вăл каçхине. Йĕри-тавра çаврăнăпăр. Пĕр урам, пĕр кĕтес хăварми.

ЛАДА. Ой, мĕн тери интереслĕ! "Мерседеспа"! Каçхи хула! Çутăсем!

ВЛАДИЯР. Паян манăн уяв. Поэт калашле, "Я сегодня в ударе чувств". Паян манăн пурне те уяв туса парас килет, савăнăç, хаваслăх парнелес килет. Шел, маларах пĕлмен паянхи кун çавнашкал çаврăнса килессе. Концерт йĕркелемеллеччĕ. Эпĕ паян нихçанхинчен те вăйлăрах юрламалла! Ну, кайрăмăр! Кайрăмăр!

ЛАДА. Микки! Маэстро! Тая!

МАЭСТРО. Эпĕ хаваспахчĕ... анчах та... каçару ыйтатăп. Тепĕр чух, юрать-и? Тепĕр чух...

ВЛАДИЯР. Маэстро!.. Чăннипе каласан, манăн сана уяв туса парас килет. Сана! Çитет упа пек кичемленсе пурăнма. Эсĕ пысăк уявсене тивĕç. Тулли пурнăça!

МАЭСТРО. Тавах, Владияр. Шел... эс мана каçар.

ЛАДА. Ну-у, Микки!.. Илĕртӳллĕ вĕт-ха.

МИККИ. Эпĕ хаваспах. Ярăнса курас пулать вĕт-ха пĕрре пурнăçра "Мерседеспа". Тен, хамăн та "Мерседес" туянас шухăш кĕрĕ. Кайрăмăр. *(Маэстрăпа Тайăна.)* Тавах сире. Эпĕ сирĕншĕн савăнатăп.

ВЛАДИЯР *(Тайăпа Маэстрăна).* Ну, мĕн тăвăн? Эпĕ питĕ шаннăччĕ. Шел, паллах. Тепĕр чух-тăк, тепĕр чух.

**Лада, Владияр, Микки тухса каяççĕ. Маэстрăпа Тая иккĕшех. Тая сĕтел пуçтарма пуçлать. Маэстро рояль умне ларать. "Кĕрхи илем" юррăн кĕввине калать.**

МАЭСТРО *(калама чарăнса).* Тая, паçăр эпĕ хамăн калассине калаймарăм.

ТАЯ *(çаплах сĕтел пуçтарать).* Кирлех мар-тăр, Ваня.

МАЭСТРО. Тая, çапах та...

ТАЯ. Хăвна валли тепĕр асап тупни çеç пулĕ. Санăн ахаль те пĕрре пур.

МАЭСТРО. Эпĕ нумай шухăшларăм. Вăл асап пулмасть текех. Пурнăçра пĕрре хăть çирĕп çын пек пулмаллах. Эпĕ ахаль те ытла мемме пулас. Çук, Тая, эпĕ татăклах шутларăм пулĕ тетĕп.

ТАЯ. Хăвна ху улталасшăн пулни çеç мар-и ку? Пĕлетĕн вĕт, эсĕ Владияр йышши мар. Çăмăллăн пурăнма пĕлместĕн.

МАЭСТРО. Эпĕ паян йăлтах ăнланса илтĕм: виçĕ çул хама хам улталаса пурăннă. Суя шанăçпа йăпатса. Эпĕ паянтан йăлтах урăх çын.

ТАЯ. Эпир тинех хамăра улăштараяс çук пулĕ ĕнтĕ. Мĕнле пулнă, çавăн пекех юлтăр... Вăл таврăнасшăн пулĕ те, вара... каллех...

МАЭСТРО. Тав-рăн-масть-ть...

ТАЯ. Çапах та "кирлĕ мар" тесе калаймастăн. Эппин, хăвна валли, ман валли тепĕр асап ширани çеç. Пытармастăп, кĕтнĕ эпĕ санран çак сăмахсене. Кĕтнĕ. Пĕр

çул çеç те мар. Кĕтсе илтĕм те ăнлантăм: эпĕ вĕсене санран ыйтса илетĕп. Кашни кун çакăнта килсе, санăн хваттерне тирпейлем пек пулса, саншăн пăшăрханнă пек туса. Ахăртнех, текех килсе çÿреме те, тен, кирлех мар.

МАЭСТРО. Тая-я! Мĕн калаçатăн эсĕ? Эсĕ маншăн – йăлтах, сансăр эпĕ хамăн пурнăçăм çинчен шухăшлама та пултараймастăп, пĕтмеллипех пĕтетĕп, эсĕ маншăн – чи хаклă, чи çывăх çын. Шел, эпир санпа пĕр-пĕрне чылайранпа пĕлнĕрен, тус-юлташла пулнăран кăна эпĕ çакна хальччен ăнланса илеймен.

ТАЯ. Тавах, Маэстро. Çапах та вăл таврăнать. Тав-рă-нать-ть. Кĕçех. Эпĕ кăна туятăп. *(Васкаса кухньăна кĕрсе çухалать.)*

**Маэстро пĕр вăхăт пуçне усса ларать. Шăппăн-шăппăн хуллен клавишсене пусма пуçлать. Тумлам тумланă пек е куççуль тумланă пек сасăсем.**

МАЭСТРО *(шухăшлăн)*. Вĕçсе иртеççĕ кайăксем... Вĕçсе иртеççĕ...

**Тая кухньăран тухать. Вăл йĕнĕ пулмалла.**

ТАЯ *(пусăрăнчăклăн)*. Апатне ăшăтмаллаччĕ пулĕ те – пĕрех çиес çук эсĕ халь. Кайран ăшăтăн. Чейне вĕретрĕм. Кофе ĕçме кирлех мар-тăр – çывăраймăн. Ыран сана телестудире кĕтеççĕ. Манса ан кай. Каç енне. Тăваттăсенче. Эпĕ кайрăм. Чипер. *(Тухса каять.)*

*Маэстро çаплах клавишсене пусать. Кăштахран "Кĕрхи илем" юррăн пĕр сыпăкĕ янăрама пуçлать.*

Шавланă-иртнĕ çамрăк шухлăх
Темме çаплах аса килет?..
(Малта?.. Малта мĕн? – Шурă пушлăх
Тесе ак рифма ответлет.)
Кĕрхи сăнарăн пур ĕлккемлĕх,
Чуна кайса тивен илем.
Çунаççĕ çулçăсем хĕлхемлĕн,
Вĕçсе иртеççĕ кайăксем.

**Юрă янăранă вăхăтра Маэстро сиксе тăрать, канăç тупаймасăр пÿлĕм тăрăх кумать. Бартан эрех кăларать. Юррăн вĕçнелли сăмахĕсем тĕттĕмлĕхре вăйланнăçемĕн вăйланса янăраççĕ. Унтан сасартăк пат таталать.**

МАЭСТРО САССИ *(хыттăн, шуйхануллăн)*. Пĕтертĕн эсĕ манăн пурнăçа! Тĕппипех пĕтертĕн! Кĕтместĕп эпĕ текех сана, Элеонора! Кайăксем вĕçсе иртрĕç текех!

**Кĕленче чăл-пар! ванса арканнă сасă Шăплăх.**

**Иккĕмĕш курăну**

**Çав каçхинех. Хула картишĕ. Тая иртсе пырать. Йывăç айĕнчи тенкел çинче ларакан хĕрарăм ăна тимлĕн сăнаса иртерет. Унтан çĕкленет. Ку – Элеонора.**

ЭЛЕОНОРА. Тăхтăр-ха.

**Тая илтмест курăнать, вăл шухăша путнă.**

ЭЛЕОНОРА *(хыттăнрах)*. Тая!

**Тая чарăнать.**

ЭЛЕОНОРА. Каçарăр, тархасшăн. Эпĕ нумай тытмăп, пĕр-ик сăмахлăх çеç.

ТАЯ *(пĕр вăхăт Элеонорăна тинкерсе пăхать. Унтан йÿççĕнреххĕн)*. "Пĕр-ик

сăмахлăх"... Мĕн сăмахламалли пур-ши ĕнтĕ пирĕн текех иксĕмĕрĕн? Kaçар. *(Кайма тăрать.)*

ЭЛЕОНОРА. Тăшмансем мар вĕт-ха эпир тепĕр тесен, Тая? Нивушлĕ самантлăх та ман валли тупма çук? Тахçан тус-юлташсемех пулнă. Пĕрле ӳснĕ, пĕрле пурăннă.

ТАЯ. Эпĕ уншăн питĕ ӳкĕнетĕп. Хам пурнăçра сана пачах пĕлмен пулсассăн маншăн чылай лайăхрах пулнă пулĕччĕ-тĕр.

ЭЛЕОНОРА. Тая, эсĕ хăв та пĕлетĕн, эпĕ ăна санран туртса илмен. Иксĕмĕртен пĕрне вăл хăй суйласа илнĕ. Тепĕр тесен, эсир вĕт ун чухне чăнласа çӳремен те. Кинона кайнă, театра – çавă çеç. Пĕрле выртса çывăрман. Ахалех çилĕ тытса пурăнатăн мана. Ахалех кураймастăн.

ТАЯ. Эпĕ сан пек ăслă та пултаруллă пулаймарăм çав. Кураймасса... Хăвах чухлатăн, эпĕ сана пачах урăххишĕн сивленĕ, сивлетĕп те. Эсĕ яланах лĕпĕш пулнă: ăçта çутăрах, ăçта ăшăрах, ăçта сана киленӳллĕрех, çавăнта вĕçнĕ. Ăна çавнашкал самантра, уйрăмах йывăр пулнă вăхăтра, асаплă вăхăтра пăрахса тухса кайнине эпĕ нихăçан та ăнланман та, ăнланма та пултараймастăп.

ЭЛЕОНОРА. Мана ун чухне тата та йывăртарах пулнă. Çав авари хыççăн, ывăлăмăрăн пурнăçĕ таталнă хыççăн, маншăн пурнăç пĕтĕмпех пĕтнĕччĕ. Тата вăл хăрушла ĕçке ерчĕ, чунĕ ыратнине эрехпе пайларĕ, эпĕ вара... Манăн та ун хыççăн ĕçке ермеллеччĕ-и? Чăтса пăхасчĕ хăвăн эпĕ çавăн чухне мĕн чăтнине, тен, ăнланнă та пулăттăн мана...

ТАЯ. Вăл та ырăран ĕçмен. Ачăр вилни, хăй те аран çеç çăлăнса юлайни... Мĕн, ăна çăмăл пулнă-им? Çав вăхăтрах сиснĕ те, пĕлнĕ эсĕ Владиярпа пурăннине, хăйне улталанине. Çемйи, пурнăçĕ арканасса...

ЭЛЕОНОРА. Эпир иксĕмĕр те ун чухне хамăр çине йăтăнса аннă хуйхăран çăлăнăç шыранă. Вăл – ĕçкĕре, эпĕ – Владиярта.

ТАЯ. Эсĕ хăвăн çăлăнăçна тупнă. Хăвăншăн ăçта мĕн лайăхрах пулма пултарассине, хăвна кирлине çамрăк чухнех чухласа тăраттăн, хăвăнне çĕнсе илме пĕлеттĕн. Ку тĕлĕшпе, пытармастăп, ăмсанаттăм та ун чухне. Халĕ вара, халĕ тата мĕн çитмест сана? Е, мĕн, Владияра ху текех кирлĕ мар пуласса ăнланса илтĕн те каллех çăлăнăç шыратăн?

ЭЛЕОНОРА. Эсĕ хăть мĕн шутлама пултаратăн, Тая, анчах та эпĕ нимĕнле çăлăнăç та шырамастăп. Çук. *(Хăй тĕллĕн.)* Манăн çăлăнăç тинех урăххинче çеç пулĕ. Пĕртен-пĕрре – урăх ниçта та эпĕ текех канăç тупаймăп. Эсĕ, паллах, мана ăнланас çук, итлес те çук. Анчах та, пĕлсем, унран кайнăранпах эпĕ асапланатăп, шухăшăмра ун патне таврăнатăп. Виçĕ çул. Кашни кун. Куçа хупатăп та, каллех çав телейпе юнашар. *(Сасартăк манăçлăхран тухнă евĕр.)* Kaçар, санăн чунна ыраттаратăп эпĕ. Хăй те кĕтсе пурăннă пек туйăннăран кăна каларăм. Юррисене те çав тунсăхпа çырнăн туйăннаран.

ТАЯ. Вĕсем унччен кĕвĕленĕскерсемех.

ЭЛЕОНОРА. Ахăртнех, ахăртнех... *(Каллех сасартăках.)* Эсир пĕрле-и? *(Çавăнтах тӳрех манăçнăн.)* Мĕн тума ыйтатăп-ха? "Унччен кĕвĕленĕскерсемех..." Вăхăт иртнĕçемĕн вĕсем те кивелĕç, унтан манăça тухĕç. Шăппăн, шăппăн... Паллах. Тая, телейлĕ çын эсĕ. Кĕвĕçсе-ăмсанса каламастăп. Эсĕ чăнласах та телейлĕ пулма тивĕç çын: телейне кĕтсе илме пĕлтĕн, вăй-хăват çитертĕн. Эпĕ вара, тĕрĕсне ка-

латăн-тăр, эпĕ – лĕпĕш пекскер кăна. Хам вĕçрĕм, хам шырарăм. Уйăрса илеймерĕм: хăшĕ телей, хăшĕ хурлăх çеç. Халĕ ăнланса илтĕм те – çунса кайнăскер кăна эпĕ. Пĕр япала пирки çеç ыйтасшăнччĕ санран, Тая, ак мĕнлерех калаçса кайрăм иккен. Халĕ ĕнтĕ ыйтни те вырăнсăр, ахăртнех: мĕн тума санăн чунна ытахаль шуйхантарас? Санăн умăнта ахаль те айăплă. Каçар мана, Тая, каçар. Пирĕн çулсем текех урлă пулас çук. Манăн çулăм пачах урăх еннелле.

**Элеонора васкаса тухса каять. Тая пĕр вăхăт аптраса тăрать. Унтан сасартăк темĕн шутласа илнĕн Элеонора хыççăн чупать.**

ТАЯ САССИ. Элеонора! Элеонора! *(Ку сасă пĕр авăк ахрăм евĕр янраса тăрать.)*

### Виççĕмĕш курăну

**Çав каçах. Тата тĕттĕмрех çеç. Хула картишĕ. Подъезд. Владиярпа Лада кĕреççĕ. Вĕсем самаях хаваслă.**

ЛАДА. Тĕлĕнмелле каç паян. Çав тери хитре. Лăпкă. Тӳлек. Шăп. Илĕртӳллĕ. Ыйхă килес те çук. Çывăрас та килмест. Ха, куçа хупатăп та – çаплах неон çутисем, каçхи урамсем, хунарсен çутинче темле саррăн курăнакан çăкасем мĕлтлетеççĕ.

ВЛАДИЯР. Килĕшрĕ-и сана манăн машина?

ЛАДА. Мана паян пурте килĕшет. Микки те. Маэстро та. Тая та. Маэстрăн çĕнĕ юрри те – пурте, пурте.

ВЛАДИЯР. Эпĕ?

ЛАДА. Эсĕ те, Владияр. Тахçан эпĕ сана хама улталанăшăн çав тери тарăхса курайми пулнăччĕ пулин те. Эпĕ сана кĕçĕр хам сисмесĕрех каçартăм. Мĕншĕн çапла тăруках? Айван вĕт-ха эпĕ, çаплах айван. Чăннех калать пулас атте "Эсĕ хăвăн усă чунлăхна пулах пурнăçна пĕтеретĕн" тесе. Пĕлетĕп, ăнланатăп, çапах та хама ирĕксĕрлеймеcтĕп. Неон çути... каçхи хула... – ман пуçăм çаврăнать е çĕр чăмăрĕ ытла та хăвăрт çаврăнать?

ВЛАДИЯР. Эппин тытас пулĕ сана, унсăрăн тĕпсĕр усăлăха шăхăрса вĕçсе анăн тата. *(Ладăна хăй çумне пăчăртать.)*

ЛАДА. Манăн паян чăнахах та вĕçсĕр усăлăха вĕçес килет: питĕ ырă, кăмăллă кун манăн.

ВЛАДИЯР. Паянтан санăн кашни куну çавнашкал пулма пултарать.

ЛАДА. Владияр, эсĕ сцена çинче кăна мар, хĕрсен умĕнче те питĕ лайăх "юрлама" пĕлетĕн – эпĕ ăна кăштах чухлатăп пек. Çапах та темшĕн манăн сана пĕрре те халь чарас килмест. Миккине çеç ахалех кӳрентертĕн эсĕ.

ВЛАДИЯР. Эпĕ мар, вăл хăй пуçларĕ. Тепĕр тесен çăвăр автансене килĕштерсех каймастăп ку чухне. Ху камне пĕлес пулать. Унашкалах ирĕклĕ тытма тивĕçлĕ пулмалла. Эпĕ çапах та вăл шайри кăна мар.

ЛАДА. Манăн та-и?

ВЛАДИЯР. Лада, сана Турă хăй пĕтĕмпех панă. Ирĕкне те, хитрелĕхне те. Эсĕ каплах пĕтĕм тĕнчене хăвна пăхăнтарма пултаратăн. *(Чуп тума тăрать.)*

ЛАДА. Маэстро вара Миккине питĕ пысăк хаклать.

ВЛАДИЯР. Вăл яланах çемçешке çын пулнă.

ЛАДА. Микки çапах та çав тери таса та пĕчĕк ача евĕр. Ачасене кӳрентерме те, кӳренме те юрамасть.

ВЛАДИЯР. Эсĕ Миккине юратса пăрахнă пулас. Вăл халĕ те пирĕн хушăра тăнăнах.

ЛАДА. Çук, эпĕ ăна юратма хăюлăх çитерейменĕп: унашкал таса çын мар, хăвах пĕлетĕн. Тепĕр тесен, эс пĕрех мана ăна юраттармастăн вĕт, хăçан та пулсан пĕрех Микки куçне уçатăн.

ВЛАДИЯР. Эсĕ мана çаплах çилленетĕн-и?

ЛАДА. Çук, çиленместĕп. Сана çиленни санăн машинуна çилленни пулĕччĕ. Вăл мана вара çав тери килĕшрĕ.

ВЛАДИЯР. Эппин эпĕ санăн кашни кунунхи ямшăку пулма хатĕр.

**Ладăна хăй çумне хыттăн пăчăртать, вăрăммăн чуп тăвать. Çав самантра Элеонора пырса тухать. Йывăç хыçне пытанать.**

ЛАДА. Тĕлĕнмелле... нихăçан та сунман сана тепĕр хут тĕл пулма, тарăхни çавнашкалах тăруках иртсе каясса, каллех чуп тума ирĕк парасса.

ВЛАДИЯР. Шăпа вăл, Лада, шăпа. Шăпаран вара тарма юрамасть. Тараймастăн та.

ЛАДА. Кĕçĕрлĕхе вара эпĕ санран таратăп, юрать-и?

ВЛАДИЯР. Мĕн эсĕ, Лада? Пăх-ха, мĕн тери лайăх каç. Эпир санпа çак каçа юмах тума пултаратпăр *(чуп тума хăтланать.)*

ЛАДА *(вĕçерĕнсе)*. Мĕншĕн пĕтĕмпех пĕр каçа чиксе тултарар? Вĕсем мĕн чухлĕ нумайрах, çавăн чухлĕ вăрăм пулĕ юмахĕ те. Ыранччен! Эпĕ шăнкăравлăп *(подъездран кĕрсе çухалать.)*

**Владияр пĕр авăк тăхтанă хыççăн кайма тăрать – Элеонора йывăç хыçĕнчен тухать.**

ВЛАДИЯР. Ăнланмарăм... Эсĕ-и, Элеонора?

ЭЛЕОНОРА. Эпĕ.

ВЛАДИЯР. Эсĕ, мĕн, мана йĕрлеме тухнă-и?

ЭЛЕОНОРА. Шăпа вăл, Владияр, шăпа. Шăпаран вара тарма юрамасть. Тараймастăн та.

ВЛАДИЯР. Эпĕ сана ăслă хĕрарăм тесеччĕ, Элеонора. Турăçăм!.. Мĕн тери пĕтнĕ çын. Мĕскĕн, айван... Ну, мĕнех, кăшкăр, çухăраш, харкаш, янраттар хулана! Ăна чĕнсе тухас-и? Намăслантар пире!

ЭЛЕОНОРА. Нишлĕ чун. Çак çынра эпĕ çăлăнăç шыранă, çак çынпа хамăн телее улăштарнă...

ВЛАДИЯР. Эпĕ сана илĕртмен, хĕсĕрлемен ун чухне. Ирĕксĕрлемен! Качча тухма та тархасламан. Пĕр-иккĕ çывăрса илни вăл ача вăййи кăна. Хăвăн ĕçке ернĕ упăшкупах юлма пултарнă. А тепĕр тесен, халĕ те таврăнма пултаран-ха. Кая юлман. Ав, мĕн чухлĕ юрă çырнă вăл сан çинчен. Лайăх юрăсем. Тен, пĕрле пулсан тата та лайăхрах юрăсем парнелĕр халăха. Е, мĕн, Тайăран шикленсе тăратăн-и, е чухăнлăха тепĕр хут таврăнас килмест? Паллах. Кĕтсе ил-ха алкашран хальхи пек сăтмах пурнăç. Чим-ха, ав, мĕншĕн иккен йĕрлесе çӳретĕн, кĕвĕçетĕн эсĕ мана. Çухатасран хăратăн. Мана çухатсан пĕтĕмпех пĕтет-çке санăн. Чап, хисеп, банкетсем...

ЭЛЕОНОРА. Турăçăм!.. Мĕнле хăятăн?! Кам туса панă сана ырлăхна? Кам санран, ăçтиçукран, çын тунă? Мĕн, манса та кайрăн-им, мĕнле чăматанпа пырса кĕтĕн

эсӗ пирӗн пата Красноярск хыҫҫӑн? Вӑл сана эрех илме панӑ укҫа юлашкисене пуҫтарса кӗпе туянтӑн – мӗн, асран тухса та ӳкрӗ-им?

ВЛАДИЯР. Аса ил тата санӑн ӗҫ укҫипе хамӑн пӗрремӗш юрра радио валли ҫырнине? *(Хӑй тӗллӗнрех пек.)* Чим, ытла та тӑрӑнма пуҫларӗ мар-и ман куҫа ку Маэстро? Маэстро юррисем, Маэстро туса панӑ, Маэстро ҫын тунӑ, Маэстро... Маэстро... *(Кӗтмен ҫӗртен ахӑлтатса кулма пуҫлать.)* Ха-ха-ха!.. Арӑм тени те манӑн Маэстрӑн арӑмӗ пулнӑскер!.. Анекдот! *(Ҫаплах урмӑшнӑн ахӑлтатса тухса каять.)*

ЭЛЕОНОРА. Мӗн туса хунӑ иккен эпӗ. Турӑҫӑм! Мӗн туса хунӑ! Ваня! Манӑн ырӑран та ырӑ ҫыннӑм! Каҫар эсӗ мана, каҫар. Мӗн-ма хальччен те шутласа илмен эпӗ, мӗн тери асап пулнӑ сана Владияра, хӑвӑншӑн чи тискер ҫынна, хӑвӑн юррусене, чи лайӑх юррусене пама. Вӑл лайӑххрах юрлама пултарнӑшӑн мар. Хӑвах унран чылай чунлӑрах юрлама пултаратӑн. Мана та лайӑххрах пулӗ тенӗ. Турӑҫӑм!.. Каҫар эсӗ мана, ухмаха, каҫар. Каҫар, Ваня, каҫар, каҫар... *(Тухса каять.)*

**Тӑваттӑмӗш курӑну**

**Маэстро хваттерӗ. Тӗттӗмре нимӗн те палӑрмасть. Кантӑкран ӳкекен хунар ҫутинче ҫеҫ пӳлӗмре кумакан Маэстрӑн ӗмӗлки курӑна-курӑна илет. Хушӑран стакана янӑ шыв шӑнкӑртатӑвӗ шӑплӑха татать.**

МАЭСТРО. Пӗтрӗ! Пӗтӗмпех пӗтрӗ! Эрех те! Пурнӑҫ та! Ман ӗҫсе лартас килет! Манӑн пурӑнас килет! *(Халтан кайнӑн.)* Пурӑнас килет... *(Татах та шӑппӑнрах.)* Анчах малта... Малта мӗн? "Шурӑ пушлӑх тесе ак рифма ответлет". Малта нимӗн те ҫук, шурӑ пушлӑх ҫеҫ. Шурӑ пушлӑх. Тата эпӗ. Шурӑ тумпа. Шурӑ музыка... Ҫук, ҫук, манӑн пурӑнас килет. Эпӗ халӗ пӗлетӗп: мӗнле пулма пултарать вӑл чӑн пурнӑҫ. Тулли! Савӑк! Эпӗ ӑна паян туйса илтӗм! Тая, илтетӗн-и, ан хирӗҫле, ан сивле! Манӑн пӗчӗк ача пек телейлӗ пулса курас килет! Элеонора... Элеонора ҫук вӑл текех, ҫук. Вӑл таврӑнмасть. Кайӑксем вӗҫсе иртнӗ. *(Пауза.)* Самантлӑх хӑть йалт манӑҫасчӗ. Ним курми, ним пӗлми, ним туйми. Владияр! Владияр! Ӑҫта эс халӗ? Санӑн эрехӳ кирлӗ мана! Ӗҫтерсе ларт мана! Пуҫа ҫухатасла ӗҫтер! Эпӗ сана хам юрлас юррӑма паратӑп!

**Электрошӑнкӑрав.**

МАЭСТРО. Ха-ха-ха!.. Вӗшле йытӑ темерӗн. *(Алӑк патне тайкаланса утать.)*

**Алӑк уҫӑлнӑ сасӑ.**

МАЭСТРО САССИ. Эсӗ?.. Эп сана кӗтмен. Таврӑнать теменччӗ. Эпӗ, ак... каллех ӳсӗр. Каллех. Ҫук, пулмасть манран ҫын пуласси. Эпӗ сана пӗрех телейлӗ тӑваймӑп. Эсӗ урӑх пурнӑҫа тивӗҫ. Эпӗ асапланма ҫуралнӑ. Тата ҫынсене асаплантарма. Каях. Ан шелле мана текех: пӗрех пӗтнӗ ҫын. Унччен хӑть тунсӑхпа ҫыраттӑм юрӑсене, халӗ манӑн нимпе ҫырмалли те ҫук. Пушӑлӑх пушӑ юрӑсем ҫеҫ ҫуратма пултарать. Тавах сана, пуриншӗн те тав. Каях.

**Пӳлӗме Тая кӗрет. Пӗр чӗнмесӗр. Кресло ҫине ларать.**

**Маэстро хирӗҫ вырнаҫать. Пӗр вӑхӑт шӑп. Маэстро айӑпа кӗнӗ ача пек ларать.**

МАЭСТРО. Мӗншӗн вӑрҫмастӑн, ятламастӑн? Е пӗрех усси ҫук тесе ним те шарламастӑн?

ТАЯ. Элеонорăна тĕл пултăм.

МАЭСТРО *(Тайăна хăвăрттăн пӳлсе)*. Вăл мана текех интереслентермест.

ТАЯ. Вăл питĕ шуйханчăк.

МАЭСТРО. Тая, эпĕ сана каларăм, вăл мана пачах интереслентермест.

ТАЯ. Эпĕ ăна унашкаллине нихăçан та курман. *(Маэстро тăрса чӳрече патне пырать.)* Вăл мана хăратмаллипех хăратса ӳкерчĕ, халĕ те лăпланса çитейместĕп. Шăнкăравламарĕ-и? Вăл темле усал шухăш тытнăн туйăнчĕ.

МАЭСТРО. Мĕнле усал шухăш?

ТАЯ. Сăнĕ питĕ шуйхануллăччĕ унăн. Хăйĕнпе темĕн туса ан хутăрах. *(Пауза.)* Шăнкăравламарĕ пулсан, эппин, чиперех пулĕ.

**Çав самантра – электрошăнкăрав. Тайăпа Маэстро тăп хытаççĕ. Шăнкăрав тепĕр хут янăрать. Вăрăмраххăн. Маэстро йывăррăн алăк патнелле утать.**

ТАЯ. Ырăпа вĕçленмест ку каç, хăвăртрах иртсе кайинччĕ. Ытла та савăнăçлă пулчĕ çав кунĕ. Тулли ялала тăкăнатех.

МИККИ САССИ. Маэстро! Эсĕ ылтăн çын! Тытса чуп тума хатĕр эпĕ çак тĕнчене вăл мана санпа тĕл пултарнăшăн. Эсĕ манăн чи хаклă çын. Малашне сана пичче тесе чĕнĕп, ирĕк паратăн-и? А Владияр вăл шăна пăхĕ çеç. Шăршлă каяш!

**Пӳлĕме иртеççĕ. Микки самаях хĕрĕнкĕ. Тайăна асăрхать.**

МИККИ. Тая?.. Эсĕ кунта-и?.. Эпĕ пĕлмен... пĕлмен... Эпĕ кайрăм. Каçарăр. *(Хăйне хăй.)* Мĕн, эп паян пурне те чăрмантаракан çын пек, пур çĕрте те ытлашши.

ТАЯ. Эсĕ кунтах юлатăн. Халех вырăн саратăп. *(Тепĕр пӳлĕме кĕрсе каять.)*

МИККИ. Çук, каятăп. Хам калас тенине каларăм. Владияр пирки. Халь каятăп та чиперех выртса çывăратăп. Эсир маншăн ан пăшăрханăр.

**Маэстро телефонпа шăнкăравлама тăрать – лере калаçаççĕ пулас. Каллех шăнкăравлать. Каллех. Унтан йывăррăн кресло çине пырса ларать. Унăн ӳсĕрри пачах палăрмасть.**

МИККИ. Эсир мана каçарăр. Тайăпа иксĕр умăрта эпĕ кунашкал курăнма питĕ аванмарланатăп. Владияра тарăхса ĕçрĕм.

МАЭСТРО. Микки, ырă çыннăм, эсĕ маншăн пăшăрханнишĕн тав сана. Анчах та Владиярпа иксĕмĕр хушăрине ăнланса илме сана хальлĕхе кăткăсрах пулĕ. Вăхăт çитĕ, хăвах ăнланăн. Мана та ан васкат, ху та тăхтасам кăштах. Сăмах татрăмăр-и?

МИККИ. Владияра паян эпĕ сирĕншĕн мар, хамшăн тарăхрăм. Хам унăн умĕнче вăйсăр пулнишĕн. Эпĕ тек ĕçместĕп, маншăн ан хăрăр.

**Тая курăнать.**

ТАЯ. Эсир, мĕн, тытăçсах ӳкрĕр-им?

МИККИ. Лада унпа кайрĕ.

**Электрошăнкăрав. Пурте алăк еннелле тинкереççĕ.**

ТАЯ. Кам-ши тата? Кайса уçам-и? *(Алăк патнелле утать.)* Тата кама сĕтĕрсе килчĕ-ши ку вĕçленме пĕлес çук каç?

МАЭСТРО. Тăхта, хам уçам. Хам уçап! *(Васкаса утса каять.)*

ТАЯ. Вăхăт нумая кайрĕ. Ытлашшипех ларса кайрăм пулмалла. *(Миккине)*. Санăн та, Микки, ман шутăмпа, канса илмелле. Лăпланмалла. Ыйхă вăл манăçтарать. Ир каçран ăслăрах. Ирхи шухăш урăрах. Канса ил. Эпĕ каям. *(Хăй тĕллĕн)*. Тем, пĕр канăç та çук ăшра. Вăркать.

**Маэстро Владиярпа таврӑнать. Владияр самаях хӗрӗнкӗ. Тайӑпа Миккине курса тӑпах чарӑнать.**

ВЛАДИЯР. О-о, кунта халӑх мансӑрах йышлӑ-ҫке. Эпӗ Маэстро пӗчченех тесе. Ну, мӗн пӑхатӑр? Мӗн тӑрӑнтӑр куҫӑрсемпе? Ҫапла, эпӗ ӳсӗр кӗҫӗр. Ӳсӗр. Сыпнӑ. Самаях. Тата та сыпатпӑр. А, мӗн? Манӑн та тепӗр чух ахаль кӑна ҫын пулса курас килмест-им? Ирӗклӗ, пӗтӗмпех йӳле ярса. Ҫак мӑя пӑвса тӑракан галстука хывса персе, кӗпене йӳле ярса. *(Галстукне салтса кӗсйине чикет, кӗпе тӳмисене вӗҫертет.)* Фу! Мӗнле лайӑх капла! Мӗнле ирӗклӗн сывлама пулать иккен. Маттур эсӗ, Маэстро, хӑвна ирӗке яма пултаратӑн. Хура халӑх кӗшӗлтетекен барта ларма пултаран, сыпса лартас тесессӗн – каллех ирӗклӗ! Кам мӗн шутлӗ сан ҫинчен, мӗнле куҫпа пӑхӗҫ, мӗн калӗҫ – саншӑн ку ним те мар, тытнӑ та сурса хунӑ. Ҫапла, эс ирӗклӗ, эпӗ ҫапах та...

МИККИ. Эсӗ те хӑвна ирӗке яма пултаратӑн.

ВЛАДИЯР. Ҫапла, паян эп ирӗклӗ. Ҫав тери ирӗклӗ! Кайфую!

МИККИ. Ытлашшипех.

ВЛАДИЯР *(сасартӑках тӑна кӗнӗ евӗр).* А-а-а, мӗн пирки-ҫке эсӗ мана тӗкетӗн. *(Маэстрӑпа Тайӑна)* Пӗчӗк ачанне юратнӑ теттине туртса илнӗ паян эпӗ... ха-ха-ха!... Ҫавӑнпа вӑл мана питӗ тарӑхнӑ. Пӑхӑр-ха, ав мӗнле урнӑ вӑкӑр пек пӑхать ман ҫине. О-о! Кӗҫ сиксе ларать, му-у-у!.. М-м-у-у!.. *(Миккине)* Эсӗ халӗ те ҫав Ладӑна пуҫунтан кӑларса пӑрахман-и? Ҫавӑн пек пулса иртнӗ хыҫҫӑн та? Ҫамрӑк ҫыннӑм! Эпир ирӗклӗх пирки калаҫатпӑр кунта. Ирӗклӗх ҫинчен! Чун ирӗклӗхӗ ҫинчен. Лада пек йӗпе ку... *(тӑруках чарӑнса. Тайӑна)* Каҫар, Тая, эсӗ пуррине мансах кайнӑ эпӗ. Лада пеккисем вӗсем нимле калаҫӑва та тивӗҫлӗ мар. Вӗсем пур – ҫуккӑ. Сан Ладу нихӑҫан та Тая пек пулаймасть. Пулма та тӑрӑшмасть. Элеоно... *(Шӑпланать.)* Ҫынна уйӑрса илме вӗренес пулать, ҫамрӑк ҫыннӑм. Кам – кам? Мӗн хак вӑл? Ладӑсен вӗсен чун ҫук. Ак кунта *(кӑкӑрне шаккать)* ним те ҫук, пушӑлӑх ҫеҫ. Вӗсем питӗ лайӑх пӗлеҫҫӗ хӑйсен *(уйӑрмах палӑртса)* мӗн пуррине. Унпа кампа хӑҫан мӗншӗн усӑ курмаллине. Вӑт ҫапла, Микки... Микки-маус. Шӑши чӗппи. Эс Лада хыҫҫӑн сӗлеке юхтарса чупма хатӗр, мана, хӑвна ырлӑх пурнӑҫ туса пама пултаракан ҫынна, ҫиллӳне шӑнараймастӑн. Манӑн хыҫран чупмалла санӑн, ҫав йӗпе ку... хыҫҫӑн мар.

МИККИ. Йӗксӗк! Ан хӑйнӑ пултӑр ун ҫинчен ҫапла калама. Вӑл урӑхла ҫын. Эсӗ унӑн чунне пӗлместӗн!

ВЛАДИЯР. Ӑна эсӗ лайӑхрах пӗлетӗн-и, эпӗ-и?

**Микки сиксе тӑрать те Владияра янахӗнчен чышкӑпа хытах ҫапать. Владияр сулӑнсах каять. Тайӑпа Маэстро вӗсем патне сиксе ӳкеҫҫӗ. Маэстро – Владияр патне, Тая Миккине лӑплантарать.**

ТАЯ. Лӑплан, лӑплан. Хам айван, паҫӑрах илсе тухса каймаллаччӗ иккен сана. Чухлаймарӑм. Сисрӗ ҫав, сисрӗ чун тем ырӑ мара. Ахальтен вӑркамарӗ. *(Миккине ҫавӑтса тухса каять.)*

МИККИ. Йӗксӗк! Чун пирки калаҫать. Мӗн чунӗ пур хӑйӗн? Чунсӑр! Маэстрӑна ӗмсе пурӑнать.

ВЛАДИЯР. Йӗпе сӑмса! Шӑрка! Ҫав Ладӑшӑн... Ҫав...

МАЭСТРО. Лада та пирӗн пекех ҫынах. Начар хӗрача мар. Пуласлӑхлӑ.

ВЛАДИЯР. Пуласлăхлă! Ха-ха-ха!... Пуласлăхĕ вĕсен – кампа çывăрнинчен. Ăна эпир санпа иксĕмĕр питĕ лайăх пĕлетпĕр. Çапла мар-и?

МАЭСТРО. Çапах та тискер çын эсĕ, Владияр. Шур костюмсемпе çӳрен те хури нумай санра. Лада, Микки... вĕсем вĕт ачасем. Айван тасалăх. Вĕсем тасан пурăнасшăн, тасан юратасшăн. Эпир санпа, вараланчăксем, вĕсене вараласшăн, хамăр пек тăвасшăн. Мĕн тума? Ĕлкĕреççĕ вараланма та, тасамарлăхне курса йăлăхма та. Пурăнчăкăр хальлĕхе, юратчăр пĕр-пĕрне. Эсĕ Лада пуçне те ахальтен пăтратман вĕт, ахальтен астарман? Ку тавăру Миккине, вăл сана хăйĕн юррисене паманшăн. Тен, манпа ытларах çывăхрах пулма тăрăшнăшăн та. Элеонорăна та эсĕ манран ытахальтен илсе кайман, эпĕ ăна пĕлетĕп. Вăл хăй вăхăтĕнче, эпир çамрăк чух, сана мар, мана суйласа илнĕшĕн.

ВЛАДИЯР. Ăна никам та астарса илсе тухса кайман. Вăл хăй суйланă хăйĕн шăпине. Кĕсри кĕçенмесĕр ăйăрĕ сикмест. Эпĕ шутласа кăларман.

МАЭСТРО. Эпĕ хамăн айăпа пĕлетĕп, çавăнпа Элеонорăпа çапла пулса тухнăшăн сана пачах та айăпламастăп. Унăн çулĕ çинче çав самантра урăххи мар, шăпах эсĕ, сан пек йĕксĕк чун пулнăшăн çеç ӳкĕнетĕп. Хĕрхенетĕп ăна.

ВЛАДИЯР. Ха-ха-ха!.. Вăл хĕрхенет! Лешĕн ӳкĕнесси çинчен пуçра шухăш та пулман. Пăхса ил ху çине, ху мĕнле пурăнни çине. Кама телейлĕ тума пултаракан çын эсĕ? Чылайранпа-и урăлса çитни? *(Кĕсйинчен эрех кăларать.)* Ак тыт, эс мухмăрлă пуль тесе чиксех килнĕччĕ.

МАЭСТРО. Хăрушă çын эсĕ, Владияр. Хăрушă! Нивушлĕ çавăн пек чунпа та пурăнма пулать?

ВЛАДИЯР. Элеонора çинчен-и эсĕ? Вăл сана кирлĕ-и? Кирлĕ пулсан, ил, мана текех кирлĕ мар.

МАЭСТРО. Саншăн çын çук, чун çук. Çын саншăн тетте вырăнне кăна: вылянвылян та пăрахан, тепринпе выляма пуçлан. Вăл йăлăхтарать те ăна та пăрахан. Микки, Элеонора, Лада, эпĕ, тепри, тепри!..

ВЛАДИЯР. Эсир тăмран йăвалалнă пукане çеç пулнăшăн эпĕ айăплă мар. Пулăр ман пек. Пурăнма пĕлекен, пурнăç тума пултаракан çын.

МАЭСТРО. Тухса кай! Пирĕн калаçу вĕçленчĕ. Эрехне илсе кай.

ВЛАДИЯР. Сана вăл кирлĕрех пуль тетĕп. Çапах та шел сана.

МАЭСТРО. Хăвна шелле! *(Кĕленчене тытать те вăркăнтарать.)* Сан эрехӳ мана текех кирлĕ пулмасть! Эсĕ мана йăлтах урăлтартăн. Тавах сана хăть куншăн. Чунтан.

ВЛАДИЯР *(йĕкĕлтешнĕ манер).* Малалла урăх пурнăç, урăх юрăсем? Анчах та пĕр анма пуçланă хĕвел тепĕр хут çĕкленме пултарать-и? Эсĕ ун пеккине курнă-и?

МАЭСТРО. Уйăх çути те çап-çутă пулма пултарать. Куç уçă пулсан. *(Алăка яри уçса ярать.)* Алăк уçă!

**Владияр тухса каять.**

МАЭСТРО. Владияр... Лада... Элеонора... Элеонора... Элеонора?.. *(Тăрать, телефон патне пырать. Çав самантра телефон шăнкăртатать. Маэстро тытма шикленсе тăрать. Тепĕр хут шăнкăрав. Тепĕр хут. Тепĕр хут. Маэстро тытать. Питĕ шăппăн, тăсарах.)* Ал-ло...

ЭЛЕОНОРА САССИ. Каçар... Шăнкăравламасăр чăтаймарăм. Пĕлетĕп, кирлĕ марччĕ...

МАЭСТРО. Элеонора... Сан шăнкăравна эпĕ яланах кĕтетĕп.

ЭЛЕОНОРА. Кирлĕ мар текех кĕтме...

МАЭСТРО. Сан сассу мана хăратать.

ЭЛЕОНОРА. Ан хăра, Ваня, пурте чиперех пулĕ.

МАЭСТРО. Эпĕ халех тухса пыратăп.

ЭЛЕОНОРА. Курнăҫни телефонпа калаҫнинчен йывăртарах пулĕ. Маншăн.

МАЭСТРО. Ҫук, эпĕ пыратăп. Пирĕн ҫапах та тĕл пулмалла. Паянах.

ЭЛЕОНОРА. Хăҫан та пулсан, Ваня. Хăҫан та пулсан... Вăхăт ҫитсен... А халĕ эпĕ санран ҫакна кăна ыйтасшăн: юрласам ман валли уйрăлу юррине.

МАЭСТРО. Халĕ? Атя ыран.

ЭЛЕОНОРА. Питĕ ыйтатăп. Мана ҫак самантра питĕ кирлĕ вăл. Чылай ҫăмăлрах пулĕччĕ. Тархасшăн, Ваня... Ыйтатăп.

**Маэстро вăйсăррăн рояль умне пырса ларать. Ҫавнашкалах вăйсăррăн клавишсене пусать. Юрă пуҫланать:**

Умра – шап-шурă, шурă вĕҫсĕр уй,
Никам та тĕкĕнме те хăяйман хĕр евĕр
Черченкĕ тасаран таса шап-шурă юр.
Уйра – арпашăнчăк пĕртен-пĕр тарăн йĕр,
Пăлханчăк утăмсем – таптаннă юр илемсĕр.
Вăл кайрĕ. Кайрĕ те тек таврăнмĕ те урăх,
Юлашкинчен каласшăн пулнине вулатăп йĕрĕ тăрăх:
"Мĕн пулнă – пулнă, иртĕ пĕтĕмпех...

**Юрă янăранă вăхăтрах Элеонора сасси илтĕнсе каять.**

ЭЛЕОНОРА САССИ *(вăйсăррăн).* Каҫар мана, Ваня... Пуриншĕн те... Ан айăпла...

**Малалла юрăпа хутăшса телефон пиклетни илтĕнме пуҫлать. Маэстро клавишсене пусма пăрахать, рояль ҫине ӳпĕнет. Юрă ҫаплах янăрать. Ҫутă сӳннĕҫемĕн вăйлансах пырать вăл. Тĕттĕмре янраса вĕҫленет.**

Мана чĕнме те кирлĕ мар текех.
Кирлех те мар-тăр куншăн ҫилленме,
Пулса юласчĕ ҫывăх ҫынсемех,
Асилӳпе асапланма та кирлĕ мар –
Пуриншĕн те каҫар, каҫар, каҫар..."

Умра – шап-шурă уй, таса черченкĕ уй.
Уйра – арпашăнчăк пĕртен-пĕр тăлăх йĕр.
Чунра – никам та тĕкĕнме те хăяйман юр евĕр хĕр.

В ĕ ҫ ĕ.

# Ентешĕсен хисепĕ

2012 çулта Тутарстан чăвашĕсен пурнăçĕнче паллă пулăмсем нумай пулчĕç. Вĕсенчен чи пĕлтерĕшли – тинех çыравçăсене тимлĕх уйăрни. Чӳк уйăхĕн пуçламăшĕнче Элкел тăрăхĕнчи Сиктĕрме-Хусанкайра (кунта Чăваш халăх сăвăçи Петĕр Хусанкай çуралнă) вырăнти чăваш çыравçисен семинарĕ иртрĕ. Çулла теччĕсем Кăнна Кушкинче хисеплĕ ентешĕн, Серте Мишшин 65 çулне паллă турĕç, чӳкĕн 25-мĕшĕнче Çарăмсан тăрăхĕнче тепĕр хисеплĕ ентеше, Чăваш халăх сăвăçне, драматурга, куçаруçăна Порфирий Васильевич Афанасьева 70 çул тултарнă ятпа чаплă уяв ирттерсе саламларĕç.

Порфирий Васильевич 1942 çулхи нарăсăн 20-мĕшĕнче Çарăмсан районĕнчи Çĕнĕ Йĕлмелĕ ялĕнче çуралнă. Ялти вăтам шкула пĕтерсен Хусанта тухса тăракан “Хĕрлĕ ялав” хаçат редакцийĕнче ĕçленĕ, 1960-1964 çулсенче Хусанти педагогика институтĕнче вĕреннĕ, диплом илсен тăван ялĕнче ачасене вырăс чĕлхипе литературине вĕрентнĕ. Ун хыççăн икĕ çул Çарăмсан район хаçачĕн тĕп редакторĕн çумĕ пулнă. 1967 çулта Шупашкара куçса кайнă. Унта малтанах “Коммунизм ялавĕ” (хальхи “Хыпар”) хаçатра ĕçленĕ, каярах “Хатĕр пул” журнал редакторĕ, Чăваш кĕнеке издательствин тĕп редакторĕ пулнă, пилĕк çул Чăваш çыравçисен пĕрлĕхне ертсе пынă. Ăна Чăваш Республикин Пичетпе информаци политикин министрĕн çумне те суйланă.

Порфирий Афанасьев поэзире те, драматургире те, куçару ĕçĕнче те питĕ ăнăçлă ĕçлекен çыравçă. Литературăри çитĕнĕвĕсемшĕн ăна “Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ” тата “Чăваш Республикин халăх поэчĕ” хисеплĕ ятсем панă. Вăл çавăн пекех Чăваш патшалăх премийĕн, Çеçпĕл Мишши, Трубина Марфи, Иван Яковлев, Фатих Карим ячĕллĕ литература премийĕсен лауреачĕ.

Паллăрах кĕнекисем: “Чун çути”, “Сан ятупа“, “Хĕвел хапхи“, “Тав“, “Юрату çĕршывĕ“ т. ыт. те.

Порфирий Васильевичăн юбилей каçне çуралса ӳснĕ Çĕнĕ Йĕлмелĕ ялĕнче мар, кӳршĕллĕ Кивĕ Йĕлмелĕнчи Культура суртĕнче паллă тума йышăннипе ентешĕсем малтанласа кăшт ӳпкелешсе: "Кӳршĕ киле туй кĕртнĕ пекех пулать-ха капла", – текелеме те пăхрĕç. Анчах йĕркелӳçĕсен йышăнăвĕн тĕп сăлтавĕ каярах паллă пулчĕ. Вăл кунти Культура çурчĕ çĕнĕ пулнипе кăна çыхăнман иккен, курав залĕ нумайрах çынна шăнăçтарма пултарассине шута илнĕ. Апла пулин те Кивĕ Йĕлмелĕ ялĕн 200 вырăнлă курав залĕнче те ура пусма вырăн пулмарĕ.

"Эх, ачасене кăтартмаллаччĕ Чăваш халăх поэтне”, – пăшăлтатрĕç залра ашшĕ-амăшĕсем пĕр-перинпе.

– Çын нумай пулнипе ачасене илсе килме хушмарĕç, – пăшăрханарах пĕлтерчĕç каярах. Тепĕр тесен, Кивĕ Йĕлмелĕ кăна мар, Çарăмсан тăрăхĕнчи кирек хăш чăваш ялĕ те çак уява хăй патĕнче хапăлласах ирт-

ЧЫС

тернĕ пулĕччĕ, мĕншĕн тесен ку тăрăхри кашни чăваш: "Порфирий Васильевич вăл пирĕн", – тет-çке. Çарăмсансем кăна-и? Кунти мĕнпур чăвашшăн вăл – хамăрăн. Çавăнпа ентешĕн юбилейне тăван çĕрĕнче те паллă тумасăр юлма ниепле те пултарайман Тутарстан.

– Лайăх юбиляр эсĕ, шутларăм та – 70 тултарнă кунранпа паян 9 уйăх, – шӳтлерĕ П.Афанасьевăн çывăх юлташĕ А.Трофимов академик. Çак чыса хисеплĕ ентешĕмĕр чăннипех те тивĕç, мĕншĕн тесен вăл пирĕн иккĕмĕш Хусанкай, Тутарстанран тухнă çыравçăсенчен Чăваш халăх поэчĕ ята тивĕçнĕ тăватă сăвăçран пĕри.

Халăх поэтне саламлама питĕ нумай çын пуçтарăннă. Хаклă хăнасем те йышлă: Çарăмсан район администрацийĕн пуçлăхĕ Н.Хамидуллин, унăн çумĕ М.Батыршина, Тутарстанри чăвашсен ертӳçи К.Яковлев, Пĕтĕм Раççейри "Раççей юрисчĕсен ассоциацийĕ" обществăлла организацин Тутарстанри уйрăмĕн ертӳçин çумĕ В.Паймухин, ТР ЧНК ертӳçин Кама леш енчи районсен полномочиллĕ представителĕ А.Молоствов генерал-майор, Хусанти П.Хусанкай ячĕллĕ чăваш обществăпа культура центрĕн пуçлăхĕ С.Степченко, Аксу, Элмет тăрăхĕсенчи чăваш наципе культура центрĕсен ертӳçисем А.Калуковпа И.Альмукова, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, Тутарстанра çуралса ӳснĕ чăвашсен Шупашкарти "Пăлхар" ентешлĕхĕн ертӳçи, "Тус" строительство компанийĕн генеральнăй директорĕ Н.Угаслов, унăн çумĕ В.Давыдов, искусствоведени докторĕ А.Трофимов академик, тĕрлĕ çĕрте пурăнакан тăванĕсем, пĕлĕшĕсем, ял-йышсем... Кашнийĕнех ентешĕ валли ăшă сăмах тупăнчĕ çав кун, паллах. Сцена çинче кăна та мар. Фойере библиотека йĕркеленĕ куравпа интересленсе паллашнă майăн Порфирий Васильевичпа пыра-пыра калаçрĕç, алă тытса саламларĕç.

Тăван çĕрне таврăннă поэта малтан чунĕшĕн пуринчен çывăхрах Çĕнĕ Йĕлмелĕ ялĕнчех кĕтсе илчĕç, шкулта, çуралнă çуртĕнче пулчĕç, масар çине кайса чи çывăх тăванĕсене те асăнчĕç. Кайран тин уяв Кивĕ Йĕлмелĕне куçрĕ. Уява çак икĕ ялăн "Пилеш" тата "Ивушки" ансамблĕсем авалхи йăлапа юрăсем юрласа çăкăр-тăварпа Культура çуртĕ умĕнче кĕтсе илнинчен пуçланчĕ.

Паллах, кун пек каçра сăвăçăн сăввисене вуламасăр, унăн сăввипе кĕвĕленĕ юрăсене юрламасăр, сăвăçа хăйне сăввисене калаттармасăр мĕнле пултăр-ха? Шупашкартан юбиляра саламлама ятарласа килнĕ Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамблĕн концерчĕ вара уява тата илемлĕрех турĕ.

– Тав сана, Порфирий Васильевич, наци аталанăвне, халăхсен туслăхне çирĕплетме тӳпе хывнăшăн, – терĕ Çарăмсан районĕн пуçлăхĕ Н.Хамидуллин. Паллă ентешĕмĕре чунтан хисепленине çирĕплетсе Нурхамет Нуруллович администраци ятĕнчен Порфирий Васильевича çитĕнекен ăрăва ăс-хакăл воспитанине парас енĕпе нумай тăрăшнăшăн Хисеп хучĕ парса чысларĕ тата сăвăçăн тăван тăрăхне ӳкернĕ пысăк картина парнелерĕ.

Вырăнти ял хутлăхĕн пуçлăхĕ И.Захаров вара ял хутлăхĕн ĕçтăвкомĕн йышăнăвĕпе Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи çĕнĕ урама Порфирий Васильевич Афанасьевăн ятне парасси çинчен пĕлтерчĕ. Çак йышăнăва ял çыннисем тăвăллăн алă çупса ырларĕç.

– Эпир – питĕ телейлĕ çынсем: пирĕн çакăн пек пултаруллă ентеш пур. Савăнатпăр. Порфирий Васильевич пек тӳрĕ те ырă кăмăллă çынсен 100 çултан кая мар пурăнмалла, вăл пирĕн легенда, – терĕ ТР ЧНК ертӳçи К.Яковлев. Хисеплĕ ентеше Тутарстан чăвашĕсен чи пысăк наградипе – Петĕр Хусанкай медалĕпе – наградăларĕ вăл.

Юбиляр çак каç тата тепĕр пысăк чыса тивĕçрĕ: ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ

Н.Угаслов паллă ентешĕмĕр ҫинчен нумай ырă сăмах каланă май Раҫҫей офицерĕсен "Сыны Отечества" обществăлла организацийĕн СССР летчик-космонавчĕн А.Г.Николаевăн медальне пачĕ.

Паллах, космонавт медальне те вăл ахальтен тивĕҫмен: пĕрремĕшĕнчен, Андриян Григорьевича вăл лайăх пĕлнĕ, иккĕмĕшĕнчен, Чăваш Республикинчи массăллă хыпар хатĕрĕсенче ĕҫленĕ чух космонавт тăван ене килнине ҫутатмашкăн яланах Порфирий Васильевича шаннă.

Хăйне ҫакăн пекех чысласса кĕтменччĕ, ахăртнех, поэтăмăр: тем пек тăрăшсан та савăнăҫ куҫҫульне пытараймарĕ. Тăван ҫынсен хисепĕ, тавĕ, чăнах та, пуринчен те хаклăрах, чуна ытларах ҫывăхрах ҫав.

Тăван литературăн ҫутă ҫăлтăрĕн, пултаруллă, хисеплĕ ентешĕн ятне яланлăхах асра хăварас тĕллевпе тата унăн пултарулăхне килес ҫĕнĕ ăрусем те тĕплĕн пĕлччĕр, унăн литературăри ҫулне такăрлатма хавхаланччăр тесе ҫĕнйĕлмелĕсем унăн тăван килҫуртĕнче музей йĕркелеме сĕнчĕҫ. Ҫак шухăша Тутарстан чăвашĕсем хыттăн алă ҫупса питĕ ырласа йышăнчĕҫ.

**Ирина КУЗЬМИНА, “Сувар” хаҫат корреспонденчĕ.**
**Хусан**

## Порфирий АФАНАСЬЕВ

# Ачалăх туртать-и кунта

### ТУТАРСТАН ЧĂВАШĔСЕН ГИМНĔ

Эпир Пăлхар ҫĕршывĕнче ҫуралнă,
Тĕп несĕлсем хăватлă пулнăран.
Вĕсен пилне ялан чунра усранă,
Нимле йывăрлăха та парăнман.

Хушса юрламалли:
Таймапуҫ авалхи Пăлхара,
Таймапуҫ Пӳлерпе Сăвара.
Ҫак ҫĕршыв – пирĕн савнă анне –
Пурнăҫ панă чăваш халăхне.

Ҫырансенчен пин-пин ҫăлкуҫ тапать-и,
Пин ҫăлтăр ялкăшать-и тӳпере, –
Тăван ҫĕршывăн иксĕлми хăвачĕ
Вăй-хал та ăс парса тăрать пире.

Хушса юрламалли.

Ҫут тĕнчере эпир кашни хăй тĕрлĕ –
Чăваш та вырăс, мăкшă та тутар...
Сыв пултăр ĕмĕр-ĕмĕр аслă пĕрлĕх! –
Ҫак туйăма ялан чунра упрар.

Хушса юрламалли:

Таймапуҫ авалхи Пăлхара,
Таймапуҫ Пӳлерпе Сăвара.
Ҫак ҫĕршыв – пирĕн савнă анне –
Пурнăҫ панă чăваш халăхне.

### ПИЛ ТЫМАРĔ

Ҫапах – шутлатăп та паян –
Эпир нуша кăна курман.
Пайтах тĕл пулнă ыррине те,
Атте-аннемĕр юррине те,
Чи хаклă тупрапа танах
Упранă хуп сăпкаранах.
Аннемĕр пилĕ – чун ăшши,
Аттен – чи ҫивĕч хĕҫ йышши.
Ачашлăха этем упратăр,
Ҫапах хăюллă пултăр, паттăр
Тесе чи ырă кăмăлтан
Пире ӳстернĕ ачаран.
Хăй вĕрентӳ – юрри-кĕвви,
Хăй вĕрентӳ – тĕрри-ҫĕвви.
Юмахăн тупсăмне каламĕҫ,

Вĕрен тесе пуçран шаккамĕç –
Йăла-йĕрке вăл ерипе
Ăша кĕрет çăл шывĕ пек.
Ай-хай юрри, чăваш юрри!
Ĕçре вăл – ĕçлĕ, йыхăруллă,
Кĕрекере – сăпайлă, сумлă,
Çемçе – çурхи уяв çитсен
Янрать юна пăлхатиччен.
Кашни ĕçре те уявра
Хăйне пĕр юрă чăвашра.
Шаккаççĕ тимĕр – юр юрлаççĕ,
Çапаççĕ свай – такмак калаççĕ,
Яраççĕ çĕрĕ сар хĕрсем –
Епле илемлĕ юррисем!
Ларма кайсан та ушкăнпа
Çипне арлаççĕ юрăпа.
Пур кăшарни юрри чăвашăн,
Пур çăварни юрри чăвашăн,
Салтак юрри те туй юрри...
Юрри ун – пурнăçăн çурри.

## ÇАРĂМСАНТА

Çарăмсанăн пĕр сыпкăм шывĕ,
Мĕн пулайтăр санран ырри.
Эй, атте-аннесен çĕршывĕ –
Çут тĕнчемĕрĕн чи варри!

Чи тĕпри, чи хакли. Чи сиплĕ,
Чи хĕвеллĕ тăван саркил,
Ăрăмла ывăлна ăшпиллĕн,
Каллех пар мана ыр пехил.

Çарăмсанăн пĕр сыпкăм шывĕ
Анне сĕчĕ пек çут шерпет,
Ӳт-пĕве, чĕрене ан сивĕт,
Чунăма, чĕлхеме çемçет.

Пар вăй-хал.
Пар юна вĕрилĕх.
Хама хам ача пек туям,
Тĕнчене, çынсене хĕрӳллĕн
Юратам,
юратам,
юратам.

## ХУСАНКАЯ

...Ас илтĕм эп паян Хусанкая
Чăваш та Хусанкай – синоним евĕр.
Таçти-таçти туссен çĕрне каям –
Пĕр кун иртмест ăна аса илмесĕр.

Те куç пăвма пĕлетчĕ Хусанкай,
Те чунĕнче асамлă вăй кĕрлетчĕ –
Виçсе, касса сăмах ваклана май
Çынна хăй тĕнчине тӳрех кĕртетчĕ.

Чăваш тĕнчиччĕ Хусанкай тĕнчи:
Сăпайлăх та ĕçченлĕх, тараватлăх,
Таçта çитсессĕн те – чăваш элчи,
Таçта пулсассăн та – виçеллĕ, ятлă!

Эп Хусанта тĕл пулнăччĕ ăна.
Поэт ун чух ман сăввăма вуларĕ.
Мĕн калĕ, тетĕп, Хусанкай мана? –
Ни ятламарĕ вăл, ни мухтамарĕ.

Тăратчĕ Муçаррис юнашарах –
Тутар пулин те – "хĕреснăй аттеччĕ",
Каларĕ Хусанкай: "Упра, Шараф,
Çак ачана... Эп хам та ун пекрехчĕ..."

Мĕн пулнă-ши пирте пĕрешкелли?
Сăн-пит-ши? Е лара-тăра пĕлменлĕх?
Татса калаймăп. Маншăн чи кирли –
Таса чунра та пултăрччĕ пĕрпеклĕх.

...Манпа паян Хусанкайпа Уяр.
Тĕтре çухалчĕ. Кун каллех хаваслă.
Хĕвел те тинĕс. Эпĕ пĕччен мар.
Чĕрем тулли – пулни, пурри, пуласлăх.

## ÇАРĂК ĔШНИ

Ĕшне çавракa пулнăран
Ят панă пуль – Çарак ĕшни.
Кунта тĕл пулатпăр ялан –
Тус-йыш, хурăнташ, чун савни.
Тĕнче çавракa пулнăран
Кунтах таврăнатпăр çуллен.
Ӳпке сывлаймасть пек кал-кал
Кăвайт тĕтĕмне çăтмасан,
Юнать пек пире тăван ял
Ак çак ĕшнене пымасан...
Ачалăх туртать-и кунта,
Аваллăх чĕнет-и пире.
Илетпĕр сĕткен тымартан,
Выртса чуп тăватпăр çĕре.
Куççуль пек таса çăлкуçа,
Таçта кайнă евĕр, юта,
Эпир пăрахмастпăр укçа,
Эпир таврăнатпăр кунтах.

# СУНТАЛ

ПУРНĂÇ

КУЛЬТУРА

ИСКУССТВО

АВТОГРАФ

# Раҫҫей Федерацийĕн наукăн тава тивĕҫлĕ деятелĕ
# Виталий Родионов



Эп ҫеҫпĕл мар, ун ĕмĕлки.
Тен, хамăн та тем пур-тăр...
ҫырас тени ман ĕмĕрхи —
Чĕлхесемĕр чĕрĕ пултăр!

Вит. Род.

# «Халăхăмăр, эсĕ çеç вилĕмсĕр пулсам!..»

"Паян кунччен пурăнса, çак çулсене çитсе пĕр япалана лайăх ăнлантăм, çын ӳт-кĕлеткипе кăна ватăлать, чунĕ вара чылай чухне çамрăк вăхăтĕнчиех юлать... – тет нумаях пулмасть 65 çул тултарнă Виталий Родионов профессор. – Тата... пурăннăçемĕн унăн асĕнчи кĕнеке хулăнлансах пырать."

Филологи докторĕ, литература тĕпчевçи, сăвăç хăйĕн пурнăç кĕнекин ачалăхри, çамрăклăхри страницисене уçса кăтартать "Тăван Атăл" журналăн çулталăка вĕçлекен кăларăмĕнче. Унăн аса илĕвĕн ярăмĕ Çĕнĕ çул парни пултăр журнал вулаканĕсемшĕн.

КĔСКЕН

*Виталий Григорьевич Родионов (литературăри хушма ячĕ – Сăвар Эртиван) 1947 çулхи юпа уйăхĕн 5-мĕшĕнче Вăрнар районĕнчи Хураçырма ялĕнче çуралнă. Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетĕнчен, А.М. Горький ячĕллĕ Тĕнче литературин институтĕнчи аспирантурăран вĕренсе тухнă. Йĕпреçпе Çĕрпӳ районĕсен хаçачĕсенче вăй хунă, Йĕпреçри ВЛКСМ райкомĕн иккĕмĕш секретарĕ пулнă, наукăпа тĕпчев институтĕнче (халĕ Чăваш патшалăх гуманитари институчĕ) чăваш литературипе фольклор пайĕнче ăслăлăхăн аслă сотрудникĕнче, пай пуçлăхĕнче нумай çул ĕçленĕ. 1994 çултанпа – Чăваш патшалăх университетĕнче малтанах чăваш литературин кафедрине ертсе пынă, хальхи вăхăтра чăваш филологипе культурин факультечĕн деканĕ. 14 çул ытла ку ĕçре.*

*300 ытла ăслăлăх ĕçĕсен, вĕренӳ пособийĕсен, брошюрăсен, "Вĕçев" (1974), "Тĕрлĕ тĕрĕллĕ тĕнчем" (2007), "Çырусем çӳретнĕ çыннăмсем", "Аслă халал" (2008) тата ытти кĕнеке авторĕ. Чăваш сăввин кун-çулне тĕплĕн тĕпчени, унăн уйрăмлăхĕпе илемлĕхне ăста куçпа курма пĕлни нумай чăваш çыравçин пултарулăхне тишкерме, ытти халăх культурипе, литературипе танлаштарса тĕпчеме пулăшать Виталий Родионова.*

*1973 çултанпа Раççей журналисчĕсен пĕрлĕхĕн, 1995 çултанпа Раççей писателĕсен пĕрлĕхĕн членĕ. Филологи ăслăлăхĕсен докторĕ (1993). 1997 çулта "Чăваш Республикин наукăн тава тивĕçлĕ деятелĕ" хисеплĕ ята, 2010 çулта Раççейĕнне тивĕçнĕ.*

## Халăхăмăр çăваçсенчен хунанă

VIII-XII ĕмĕрсенче Атăлçи Пăлхар патшалăхĕнчи йăх-ăрусем тĕрлĕ ятпа çӳренĕ: эскел, пӳлхер, сăвар, пĕленçер тата ыт. те. XIII ĕмĕр тĕлне вĕсем хăйсене пурте пӳлер теме пуçăннă, эппин, пĕр халăха чăмăртаннă. Ылтăн Урта вăхăтĕнче (XIII-XIV ĕмĕрсенче) пӳлер халăхĕ икке пайланса каять, мăсăльман тĕнне уякан хула пӳлерĕсем хăйсене пĕсĕрмен (мусульман), халăх тĕнне упракан çĕр ĕçченĕсем


3 çулта


Амăшĕпе


Шкул çулĕнче. 1950 çулсен вĕçĕ

вара çăваçă (çăва – çулла ваттисене асăнмалли вырăн тата -çă аффикс) тесе уйăрма пуçлаççĕ. Пĕрремĕшĕсем хăрпан пайрам (курбан байрам) ирттернĕ, иккĕмĕшĕсем çу (çимĕк), уй чӳкĕ йĕркелесе ваттисемпе Мăн Турра çырлахтарнă, вĕсенчен тăнăçлăхпа ырăлăх ыйтнă. XV ĕмĕрте пĕсĕрменсем кăнтăртан килнĕ тутарсемпе хутăшса хальхи Хусан тутарĕсем пулса тăнă. Вырăссемпе вăрçăллă-харçăллă пурăнма тивнĕрен вĕсем çăваçсене хăйсен майлă çавăрасшăн çуннă. Çапла вара Хусан ханлăхĕнчи чăвашсен е тутара тухса пĕтмелле, е тулăх хирсенчен сĕм вăрман хӳтлăхĕсене тарса çăлăнмалла пулнă. Тутар хунанă, чăваш вара вăрман ăшĕнчи йăваш халăх пулса юлнă…

## "Кушлавăш текен вун икĕ ял уйĕ..."



Студент вăхăтĕнчи тусĕсемпе.
Тăраççĕ: Антон Салмин профессор, Микул Ишимбай çыравçă. Юнашар – Сергей Полкачев журналист. 1970 ç.

Эпĕ çуралса çитĕннĕ Кушлавăш уйне XVI-XVII ĕмĕрсенче Çавал Атăла юхса кĕнĕ тăрăхра пурăнакан чăвашсем куçса килеççĕ. Çакăн çинчен мухтавлă ентешĕм Çемен Элкер хăйĕн "Кушлавăш уйĕ" очеркĕнче тĕплĕн çырса кăтартнă.

Манăн аттепе анне иккĕшĕ те – хураçырмасем (вăл ял хальхи Вăрнар районне кĕрет). Аттен кукашшĕ – Яков Данилов – вулăс старшининче ĕçленĕ, вăл таврари чи сумлă çынсенчен пĕри пулнă теççĕ. Куштанлăхĕ те çителĕклех пулнă-тăр унăн. Хаçат çырăнса илнĕ. Хам эпĕ сăнăмпа аттепе унăн амăшне (пирĕн енче ăна апай теççĕ) пăхнă.

Аннеме ялта Кайăкка тесе чĕнетчĕç, хут çинче Степанида тесе çырăнатчĕ. Вăл кăвак куçлăччĕ, ман пек кĕре (çырă) ӳтлĕ марччĕ, ăна Кивĕ Мĕлĕшрен качча килнĕ апайăшне хывнă тетчĕç. Кукамайăн амăшĕ Пысăк Упакассинчен качча килнĕ, унăн кукамăшĕ Уравăшра çуралнă. Çапла вара, аттепе анне енчи тымарăмсем манăн Кушлавăш уйĕнчи чылай ялтан тухаççĕ. Пурин те çаплах ĕнтĕ вăл. Ахальтен мар пулĕ манăн тăван енче ку таранччен çапларах йĕркесемпе пуçланакан юрра шăрантараççĕ:

Тăп-тăрă шывлă, улăх-çаранлă
Илĕртеççĕ уй-хирӳсем.
Ăçта кайсан та пирĕншĕн хаклă
Тăван ен, Кушлавăш уй.

## Асăмри ачалăхăм

Пирĕн ӳсĕме ялта "Гитлер юлашкисем" тетчĕç (вăрçă хыççăн çуралнăран çапла каланă-ши?). Эпĕ крахмал пуçтарман, çăпата сырман, пӳрнеме çурлапа кастарман. Ку енчен мана 50-мĕш çулсенчи ӳсĕме кĕртсен те йăнăш пулмĕ. Çав хушăрах манăн тантăшăмсен пурпĕр çитменни пур – атте ăшши. Атте тесе эпĕ кукаçине чĕннĕ, çавăнпа та питĕ çунсах асапланман, хама ыттисенчен катăкрах туйман. Астăватăп-ха аннемĕн пĕр юррине:

Вăрман хĕрринче куккурус,
Ялта ӳсет "Кăркурус".

Ку "Кăркурусĕ" кам пулнине çитĕнĕрехпе тин пĕлтĕм, эпĕ иккен вăл (Кĕркур ывăлĕ). Юрланă чухне пуçăма шăлса ачашлани халĕ те асăмра.



Ĕçтешĕсемпе: чăваш профессорĕ Геннадий Корнилов, мари профессорĕ Юрий Антуганов

Тепĕр самант. Эпир аннемпе Кушлавăш лавкки умне çитсе тăтăмăр.

– Камсем килеççĕ кусем? – çемçен ыйтать пирĕнтен алăк умĕнче тăракан пĕр арçын.

– Эсĕр пире паллас çук, – хуравларăм эпĕ, пĕр 4-5 çулсенчи шĕвĕркке.

Ман хăюлăхран тĕлĕнсе пурте кулса ячĕç. Çав арçын атте пулнине кайран тин пĕлтĕм. Ӳснĕ майăн чăрсăрлансах çитрĕм. Пĕррехинче атте çӳрекен велосипед кустăрмине пушатса ятăм. Çапла майпа аннешĕн тавăртăм-ши ĕнтĕ, ачапча? Каярах аттемпе йĕркеллех хутшăннă. "Костюм илсе паратăп", – тетчĕ – кĕтсе илеймерĕм. Çиллĕм çук çакăншăн.

Аса илӳ саманчĕ. Аннен упăшки (вăл вăрçă пуçланиччен Ершепуç ялне качча тухнă) тупăннă (арăмне юри вилнĕ хучĕ ярса парса улталанă, килне эпĕ çуралнă хыççăн тепĕр темиçе çултан тин таврăннă), аннемпе чӳрече умĕнче калаçса тăрать.

– Атя каялла, ачуна та йышăнатăп, – тилмĕрет салтак тумлă арçын.

– Çавăн пек ултава нихăçан та каçарассăм çук. Ывăлăма та эсĕ тăван ашшĕ пек йышăнаймăн, – татăклăн хуравларĕ аннем.

Каярах та качча илес текенсем пулчĕç – каймарĕ, мана ют çын хăйĕн пекех юратасса шанмарĕ ĕнтĕ.

Тăваттăмĕш самант. Кукаçисем патĕнче кĕр ĕçки кĕрлет. Анчахрах авланнă Минюк куккан хăйматлăх ашшĕ купăс (ăна вăл вăрçăранах илсе килнĕччĕ) калать. Ашшĕ каннă вăхăтра ăна пĕчĕк ывăлĕ (Асонов Куля) нăрлаттарать. Манăн та пусса пăхас килет купăс тӳмисене. Хайхи вăрçă-харçă пуçланчĕ, малтан анне хутшăнчĕ, кайран кукка... Çакăн хыççăн аннем мана тепĕр куннех купăс туянса пачĕ. Вĕрентĕм калама...

Пиллĕкмĕш самант. Эпир – кӳршĕ ачи-пăчи – пурте сăвă-калав ҫыратпăр, Элкер пек пулма тăрăшатпăр (кӳршĕре сăваҫ йăмăкĕн хĕрĕ пурăнатчĕ). Манăн иккĕмĕш кукка хайхи купăс хуҫин ачине каллех мухтарĕ, эпĕ ҫырнине вара тиркесе тăкрĕ. Кӳрентĕм тени ҫителĕксĕр, хама хам сăмах парса тупа турăм: "Ҫав ачасенчен лайăхрах ҫырмалла манăн". Ҫапла вара, хам шухăш-ĕмĕте пурнăҫлама ҫине тăрса, хама хистесе ĕҫлеме вĕрентĕм темелле. Мунчара сехечĕ-сехечĕпе купăс кĕввисем калама вĕренсе ларни те характера кĕрсе юлчĕ-тĕр. Ку ярăма илсе кăтартнă юрăн тепĕр ҫаврипе вĕҫлем:

Ҫакăнтах иртрĕ пирĕн ачалăх,
Юратуллă лăпкă каҫсем.
Ҫакăнта пĕрремĕш юрату та,
Куҫҫульлĕ уйрăлусем.

## Поэзи тĕнчинче

Юрă сăмахĕсем кĕвве пăхăнаççĕ те вĕсем унсăр илемлĕнех вуланмаççĕ ҫав. Хамăн чи малтанхи сăввăма (хамăнах-ши?) эпĕ пионера кĕнĕ чухне каласа панăччĕ, каярах хĕрсем патне те сăвăласа ҫырма ӳркенмен. Ун чухне ҫырусене (пуҫламăшĕпе вĕҫне те пулин) сăвăласа ҫыраттăмăрччĕ! Пулнă вĕт поэзи тата тăван чĕлхе чĕрĕлĕвĕ!

Вăрнар район хаҫатне тĕрлĕ хыпар пĕлтерсех тăраттăм, сăввăмсене вара пичетлеме васкамастчĕҫ. Вăрласа ҫырать тесе шутлатчĕҫ-ши? Хам ҫырма пултарнине ĕнентертĕм журналистсене, уйăх ҫине луноход ҫитерсен ҫав пулăм ҫинчен сăвă шăрҫаларăм. Тин ĕненчĕҫ апăршасем, вара пичетлеме пуҫларĕҫ. 1966 ҫулхи мартăн 13-мĕшĕнче "Хĕвел системи пухура" сăввăм хаҫатра малтанласа пичетленчĕ. 1967 ҫулта "Эпир – пĕр тĕпрен" сăввăм "Ялав" журналта кун ҫути курчĕ. Кĕрсе кайрăм вара поэзи тĕнчине. Мĕн 1977 ҫулччененех хама ҫав тĕнчере кăна пурăнма ҫуралнă ҫын пек туйса тăтăм. Йĕпреҫ тата Ҫĕрпӳ районĕсен хаҫачĕсенче вăй хутăм, айăплисен йышне лексе тăван ялти Культура ҫуртĕнче купăс туртса ҫӳрерĕм – чун лăпланмарĕ, темĕн ҫитмерĕ. Сăвă тĕнчи чуна ҫырлахтармарĕ. Чăваш патшалăх университетĕнче вĕреннĕ чухнех (1970-1975) поэзие тĕпчес ĕҫе кӳлĕнтĕм, П. Эйзинпа Г. Айхи сăввисене тишкертĕм. Экспериментсем ирттерме кăмăлланăран (эпĕ ҫĕнĕ жанр – поэзипе проза хутăшĕ – шутласа кăларнăччĕ, ăна *шăранчăк* тенĕччĕ) халăх сăввин тĕсĕсене тĕпчеме пуҫларăм. Ун чухне вĕрӳ-суру тата кĕлĕ сăмахĕсем ҫинчен калаҫма чаратчĕҫ те, вĕсене ҫав-ҫавах тĕпчесе малтан курс, кайран диплом ĕҫĕ ҫырма пултартăм, "Тăван Атăлта" кун ҫути кăтартрăм. Ку вăл хайне евĕр кĕрешӳ пулчĕ-тĕр.

Ҫав кĕрешӳн тăсăмĕ Г.Я. Хлебникова хӳтĕленипе ҫыхăннă. Ăна ун чухне хытах хĕстеретчĕҫ, "эстет" тесе вăрҫатчĕҫ. Эпир вăл ертсе пынипе венгри поэзийĕн каҫне йĕркелерĕмĕр, Г. Айхипе тĕл пултăмăр, хамăр укҫапа унăн ҫул ҫинчи тăкакĕсене (вăл самолетпа килсе кайнăччĕ) саплаштартăмăр.

Чăваш поэзийĕнче вăйланса пыракан ҫĕнĕ юхăма (П. Эйзин, Л. Мартьянова, А. Аттил) тĕпчеме тата кăштах та пулсан аталантарма тăрăшаттăмăр эпир ҫав 70-мĕш ҫулсенче. Ирĕклĕ сăвăпа хытах кăсăкланма тытăнтăм, чăвашлăх аварне

пуҫĕпех чăмрăм темелле. Мускава аспирантурăна кайнă чухне (1976) вара ҫапла йĕркесем шăрҫаларăм:

Чăваш елĕм, савнă чăваш ел,
уйрăлас самант та ҫитрĕ пулĕ,
илĕртсе ҫуталчĕ чукун ҫулĕ,
тен, тепри карттусĕпе те сулĕ,
тутăр ҫеҫ вĕлкĕшеймесĕр юлĕ...
Эсĕ уншăн пач та ан хĕрел.
Ху манпа пулаймăн. Ҫавă шел.

## Мускаври шухăшăмсем

1

Эпĕ Вьетнам ачипе Суанпа пурăнатăп. Вăл – художник, сăнсем ӳкерет. Поэт та, сăвăсем шăрҫалать. Тĕп ĕҫĕ – математик. ЭВМ валли программăсем тăвать.

– Суан, хăшне ытларах кăмăллатăн, поэзие, живопиҫе е математикăна?

– Пĕлместĕп. Виҫҫĕшĕнчен пĕри пулмасассăнах пурăнма йывăр. Хăшĕ кирлĕрехне вăхăт хăй кăтартать...

Тĕлĕнмелле, манран "Уру е аллу – хăшĕ кирлĕрех?" тесе ыйтсан мĕн каланă пулăттăм-ши?

Тăван килелле кайнă чухне ура кирлĕ. Тăванăма ҫупăрласа сывлăх сунма алă кирлĕ.

Хальхи Вьетнама ытларах наука специалисчĕ кирлĕ. Манăн халăха паян мĕн ытларах кирлĕ-ши? Эпĕ уншăн усăллă ĕҫ тăватăп-ши?

Акă эпĕ хамăн диссертаци ĕҫне сĕтел ҫине кăларса хуратăп та унта халăха кирлине шырама пуҫлатăп. Вун пĕрмĕш, ҫĕрмĕш, ик ҫĕрмĕш страницăсем... Ҫук, курмарăм унта халăха кирлине, халăха миҫе тенкĕлĕх тупăш кӳнине.

Чим-ха, халăхăма мĕн кирлине пĕлетĕп-ши-ха эпĕ? Вьетнам халăхне ирĕклĕх кирлĕ (Китай хăратать, унччен – Америка, Франци). Ирĕклĕхе илме ҫĕршыв тĕрекĕ кирлĕ. Суан ҫĕршыв экономикишĕн тăрăшакан ҫын.

Манăн халăх ирĕклĕ, экономика тĕреклĕ. Мĕн кирлĕ-ши халăхăма?

– Эсĕ хăш халăх ачи? – ыйтаҫҫĕ ҫынсем.

– Чăваш ачи.

– А, пĕлетĕп, Андриян Николаев янташĕ эппин...

Пĕр юлташ пурччĕ, историк. Вăл Чапаев чăваш пулнă тесе ĕнентересшĕн. Мĕн чухлĕ архив хучĕ сăвăрса тухрĕ пулĕ. Халĕ те тупаймарĕ-ха. Шанать тупасса. Эпĕ те шанатăп. Паянхи кунччен Чапаев чăваш тесе пурăнатăп. Ҫакă мана хăват парать. "Эсĕ хăш халăх ачи?" – тесе ыйтсассăн ҫирĕп хурав пама пулăшать.

– Эпĕ Николаевпа Чапаев янташĕ.

– Эпĕ Хусанкайăн тăван чĕлхипе калаҫатăп.

– Эпĕ Бичуринпа Егоров тухнă халăхран пулатăп.

Халăхăма хăйне, хăйĕн иксĕлми вăйне, хăй чухăн марне, мĕн авалтанпах пуян шухăш-кăмăллă, мал ĕмĕтлĕ халăх пулнине туйса илтерни те кирлĕ. Акă мĕн кирлĕ халăхăмăра паян.

Апла уншăн эпĕ те усăллă ҫынах пулĕ. Халăхăн иксĕлми поэзине тĕпчетĕп, унăн ылтăн-ахахне тусанран шăлса тасататăп.

Епле ҫуталать халăх поэзи-хĕвелĕ! Ҫĕр пин юрăллă халăхăмҫăм. Санăн ҫӳпҫӳнти сăмахлăх пуххине хам ĕмĕрĕмре тĕнчене кăтартма пултараясчĕ.

– Эсӗ хӑш халӑх ачи?

– Ҫӗр пин юрӑллӑ, ҫӗр пин тӗрӗллӗ тата ҫӗр пин сӑмахлӑ халӑх ачи!

2

Эпӗ атте сӑнлӑ. Хамӑр ялсем ҫапла калаҫҫӗ. Аттесен хурӑнташӗсем пурте тӑрӑхла питлӗ. Тӗлӗнеҫҫӗ вӗсенчен. Ялӗпех ҫаврака питлӗ, вӗсен пичӗ вара – тӑрӑхла. Ӑҫтан пырса лекнӗ-ши "тӑрӑхлисем" "ҫавракисем" хушшине?

Ача чухне кӳрентеретчӗҫ, "тӑрхала пит" тесе йӗкӗлтетчӗҫ.

Мӗншӗн пирӗн ялсен ҫавра питлӗ ҫеҫ пулмалла-ха?

Аннем пан улми пек ҫавра питлӗччӗ. Кӳршӗ ялсем те хитре тетчӗҫ ӑна.

Мӗншӗн чӑвашшӑн ҫавра пит илемлӗ, тӑрӑхли мар?

Эпӗ – чӑваш. Унта-кунта тухсан мана тутарпа пӑтраштараҫҫӗ, пӗри вара чукчӑсен паллӑ юрӑҫипе те танлаштарчӗ.

– Эпӗ – чӑвашран.

– Пӑлан мӑйраки тупса пар-ха эппин.

– Ҫӗпӗртен мар эпӗ, Атӑл хӗрринче пурӑнать манӑн халӑх.

Ҫук-ха, пирӗн сӑна ҫеҫ мар, хӑшӗсем пирӗн тӑван ҫӗрӗмӗр тӗлне те пӗлмеҫҫӗ иккен.

Урампа иртсе пыратӑп. Ҫавра питлӗ хӗр килет. Тинкеререх сӑнатӑп. Чӑваш хӗрӗ мар-ши? Сӑнӗ каснӑ-лартнӑ чӑвашӑн. Йӑнӑшрӑм иккен.

Пӗри мана чӑвашсен поэчӗ Тӑхти сӑнлӗ терӗ. Савӑнтӑм. Тепри мана азербайджансен чаплӑ юрӑҫи пек терӗ – кӳрентӗм. Эпӗ азербайджан мар, эпӗ – чӑваш.

Суан юлташӑм сӑнӑма ӳкерчӗ. Пӑхатӑп – ман вырӑнта Вьетнам ҫынни лара парать. Ку эпӗ мар тетӗп.

Суан кулать. "Эсӗ-ҫке", – тет.

– Кур-ха, ҫавра питлӗ ӳкернӗ мана, куҫӗ чалӑшрах, сӑмси тӑррине вара такам татса илнӗ пек.

Пите тӑрӑхлатрӗ. Куҫа тӳрлетрӗ. Сӑмсана вара ниепле те ӳкереймерӗ, вӑл лапчӑках юлчӗ.

– Европа сӑмси ытла та шӗвӗр-ҫке.

– Мана сирӗн лаптакрах пек туйӑнать.

Иксӗмӗр те тӗрӗс. Кашнин – хӑйӗн илемӗ. Мана сӑмсашӑн чӑваш мар темеҫҫӗ. Чӑвашӑн тӗрлӗ сӑмса. Ретӗн-ретӗн лартса тухсан икӗ енче тӳрри тата лапчӑкки пулмалла пек, ыттисем – вӗсен хушшинче. Европӑпа Ази сӑмсисем.

Мӑйӑх ҫитӗнтертӗм. Яла кайсан кашнинчех хырса пӑрахатӑп. "Мӑйӑхӗ пырӗ те, сухалӗ вара качакан та пур", – тесе шӳтлеҫҫӗ пирӗн ялта.

Чӑвашшӑн пит-куҫпа ӳт-тир сухаллӑ-ҫӑмлӑ пулни илемсӗр япала иккен.

Кавказ ачи вара пӗҫ ҫапсах тӗлӗнет:

– Епле вӑл чӑн-чӑн арҫынӑн сухал ан пултӑр?

– Эпӗ качака мар-ҫке, – тесе шӳтлетӗп.

– Сухал сайра пулни ырлӑх вӑл, – тет Суан. – Хырӑнса аппаланас хуйхӑ ҫук.

Тӗлӗнет кӑнтӑр ачи. Эпир унтан тӗлӗнетпӗр.

Куҫӑма аттенни пек теҫҫӗ. Хӑмӑр, хушӑран симӗс-хӑмӑр тӗс ҫапать.

Куҫу хӑмӑр тесе кулмастчӗҫ ача чухне. Кӑвакkинчен те кулмаҫҫӗ. Симӗссисенчен кулаттӑмӑр вара, "кушак куҫ" тесе йӗкӗлтеттӗмӗр. Тата "купӑста пуҫ" тесе витлеттӗмӗр. Хура е ҫырӑ ҫӳҫ килӗшӳллӗ пулнӑ.

Вырӑссем мана Ази ҫынни евӗрлӗ теҫҫӗ. Суан йышӑнмасть ҫакна, эсӗ Европа

çынни тет. Вырăссем тĕксĕм куçлă теççĕ. Суан çутă куçлă тесе ĕнентерет. Хăш расăран эпĕ, мĕн тĕслĕ манăн куç?

Манăн йысна, кăшт ÿсĕрĕлсен: "Эпир – славянсем", – тесе кăкăрне çапатчĕ.

Тĕпчевçĕсем чăваш тĕрĕк халăхĕ пулни çинчен калаççĕ. Пĕр юлташ вара, чăваш академи драма театрĕн артисчĕ, хăйĕн сăнĕ Ази çыннисенни евĕрлĕрехне Ылтăн Урта нÿкерĕсем (çар çыннисем) харсăр пулнипе çыхăнтарать.

Пĕлместпĕр-ха эпир халăхăмăр кунне-çулне, шывне-йĕрне. Унсăрăн сăнăмăр та курăнмĕ. Халăхăмăр сăнне историре шырамалла.

– Юлташ, эсир чăваш мар-и?

– Ăçтан пĕлтĕр?

– Ара, сăнранах паллă.

3

– Суан, эсир çĕр улми лартатăр-и килте?

– Çĕр улми-и? Мĕн тума? – тĕлĕнет юлташ.

– Ара, мĕн çисе пурăнатăр?

– Паллах, рис. Эсир те рис пулĕ?

– Мĕнле рис? – тĕлĕнетĕп эпĕ. – Çĕр улми çиетпĕр эпир. Риспа епле пурăнăн?

Иксĕмĕр пĕр-пĕрне ăнланма пултараймастпăр. Чăвашăн тĕп апачĕ – çĕр улми. Вьетнам çыннин – рис.

– Çăкăр та çиместĕр-и? – татах та тĕлĕнетĕп.

– Сахал çиетпĕр. Банан юрататпăр, пахча çимĕç.

– Бананне магазинтан илсе çиетĕр-и?

Суан манран шав тĕлĕнет. Вĕсен банан вăрмантах çитĕнет иккен. Суана чăвашра хăмла çитĕнни те кăсăклантарать.

– Мĕн тума кирлĕ вăл?

– Ара, сăра валли. Чăвашра хăмласăр кил çук.

– Пурин те пур-и?

– Пулмасăр, кăпăклă сăра – кĕр кĕреки илемĕ.

Уйрăмлăхсен вĕçĕ-хĕрри те çук иккен.

– Мĕншĕн уйрăмлăхсем çинчен, пĕрпеклĕхсем çинчен калаçар, – тет Суан.

– Чăваш кашни кун апат çиет, – пуçлатăп эпĕ.

– Вьетнам çынни те çаплах, – пуçне суллать тусăм.

– Чăваш апата хисеплет.

– Пирĕн те çавăн пекех.

Эпĕ çав хушăра ача чухнехине аса илтĕм. Сĕтел хушшинче ура сулласан аннÿ вилет тесе хăрататчĕç. Тĕк лараттăм. Çăкăра месерле хурсан вăл йĕрет тесе вĕрентетчĕç. Лăп кăна хураттăм. Çăкăр тĕпретсен çылăх пулать тетчĕç. Ун пирки кукамай юмах та каласа паратчĕ:

– Эрешмен çав çăкăр тĕпренчĕкне Турă патне илсе çитерет тет те элеклесе парать тет.

– Мĕн тесе? – ыйтатăп эпĕ.

– Çав ача çăкăра хисеплемест, ăна ÿлĕмрен çăкăр ан пар тесе.

Çавăн хыççăн эрешменсене юратми пулнăччĕ, вĕсене май килнĕ таран лапчăтма тăрăшаттăм. Элеклесрен, çăкăр çиеймесрен хăранă-ши?

– Суан, сирĕн патăрта эрешменсем пур-и? – кĕтмен çĕртен ыйтатăп эпĕ.

– Пур, – ăнланмасăртараххăн пăхать юлташăм ман çине.

– Юрататăр-и вĕсене?

– Çук. Çыртаççĕ вĕсем, ытларах джунглирисем.

Эпĕ кулатăп. Тата тепĕр пĕрпеклĕх тупрăмăр иккен.

4

Яка çÿреме юратмастăп. Тум вăл сăпайлă пултăр. "Саплăклă пулсан та таса пултăр", – тетчĕ кукамай.

Мăшăрăмпа сăмах пулчĕ. Вăл мана аялти çи-пуçа хура тĕслине туянма сĕнет.

– Апли хуралмасть-им вара? – тĕпчетĕп.

– Хурални курăнмасть-çке, çуса çитерейместĕп.

Ĕлĕк чăвашсем шурă тума кăмăлланă. Вырмана та çаплах тухнă. Тасалăха кăмăлламан пулсассăн ĕç тумне хурине тăхăннă пулĕччĕç те – апла туман çав.

Каçар, мăшăрăм. Эпĕ шурă кĕпе-йĕмех кăмăллатăп. Ун çинче çын тасалăхĕ ытларах курăнать. Эпир ачаран шурă тĕсе юратса ÿснĕ.

– Сирĕн патăрта çулла нускисĕр çÿреççĕ-и? – ыйтать Суан.

– Пушмака çара ура çине тăхăнмаççĕ ĕнтĕ.

– Пирĕн хуласенче çаплипех çÿреççĕ. Унсăрăн ура тарлать.

Ачалăхăма аса илтĕм. Çаруран, кĕске йĕм вĕççĕн çатлаттарса çÿреттĕмĕр. Халĕ вăл япала килĕшÿсĕртерех пулĕччĕ. Ялта Купăс старикки пурччĕ, вăл вара кăвак тĕслĕ пир йĕм тăхăнатчĕ. Ĕлĕк чăвашсем пурте çапла çÿренĕ иккен.

– Качча килнĕ çул вырмана та хушпу сырса кайнăччĕ, – каласа парать кукамай. Кĕçĕн çыннăн хушпусăр çÿреме юраман.

Тĕлĕнеттĕм çав йăларан. Халĕ те тĕлĕнетĕп. Тĕрĕссипе, пĕр-пĕр индеец хула çыннисенчен, хамăртан тĕлĕнет пулĕ, "Епле вĕсем çĕр çинче пушмакпа утса çÿреççĕ?" – тесе.

Çĕр кăпăшне халĕ те астăватăп. Хула асфальчĕ урана сăрлаттарать. Çынсем асăрхаман чухне тротуар çинчен кăшт пăрăнса газонпа та утма хăтланатăп. Чăваш ури кăпăш çĕре хăнăхнă çав.

– Ура тĕрекĕ чул çинче, – ĕнентересшĕн Кавказ каччи.

– Шывра тĕреклĕрех вăл, – ăнлантарать эстон яшĕ.

Эпĕ килĕшместĕп. Манăн ура тĕрекĕ кăпăш çĕр кăна пулма пултарать. Суан та çапла шутлать.

5

Диссертацине вуланă профессорсем ман çинчен ăслă ача ку тесе калаçаççĕ. Арăм вара урăхларах шутлать:

– Эсĕ çăкăр илсе килтĕн-и?

– Манса кайнă.

– Эх, шăтăк пуç! Эпĕ пулсан сана диссертаци çырма мар, лавккана кайма та шанас çук.

Ăслă-и эпĕ е чăнах "шăтăк пуç"? Пĕрех хут, кашни çын хăйне май ăслă та, ухмах та. Çапла шутласа илетĕп те пачах кулянмастăп.

– Ывăлăм, çаплах вĕренетĕн-и-ха? – терĕ пĕррехинче çул çинче тĕл пулнă шур сухал.

– Вĕренетĕп, мучи.

– Мĕн, аçу-аннÿ пурăнмалăх ăс параймарĕç-им?

Тен, мучи тĕрĕсне каларĕ-тĕр. Пăхатăп та, пурнăçа ашшĕ-амăшĕн йăвинче сунат-

ланнă хыççăн ниçтах та пĕлӳ илейменнисем те манран усăллăрах пулĕ. Уссине пĕлсех каймастăп та, манран лайăхрах пурăнни вара куç умĕнчех. Вăтăр урлă ярса пусрăм ĕнтĕ, ваттисем калашле, "килĕм-çуртăм хутаçра, ачам-пăчам кĕсьере". Ăслă-и эпĕ е ухмах?

Ăсĕ вăл вăррăн та пур-ха. Апла пулсан вăл еплереххи çинчен калаçмалла ĕнтĕ. Кĕсье вăррин ăсĕ вăрра тăрантарать, арăм манран кĕтекен ăс кил-йыша ырă тăвать. Профессорсем ырлакан ăс халăхăмăра çĕклеме пулăшĕ-ши?

Ăсăм-пуçăм мĕнпурĕ халăхшăн пултăр. Ан тив, эпĕ арăм сăмахне те манса каям, хваттерсĕр-мĕнсĕр пулам, ăсăм çеç халăхăмшăн юрăхлă пултăр.

– Мучи, атте-анне ăсĕ вăл хама пурăнмалăх çеç. Эпĕ вара ытларахне илесшĕн.

Ярăм вĕçĕнче çав çулсенче хайланă пĕр сăввăмри темиçе йĕркене илсе кăтартам:

Шăпаçăмран мĕнех кĕтетĕп,

Ыттисем пек ăплан та лар, –
"Хваттер те, мул та тĕллев мар,
Кил-йыш та тӳпе мар-ха", – тетĕп.

"Эпир вилсен, пиртен мĕн юлĕ,
Ламран лама мĕскер куçать?"
Чăнах та эп фанатик пулĕ, –
Пĕр шухăш çавăрать пуçа.

## Хальхи шухăш-кăмăлăм

Чĕрем тĕпĕнчи ĕмĕтĕме сăвăласах каласшăн эпĕ:

Çитеймен-тĕр шухăшăм
çавăрса хума,
ватăлмасăр пурăнатăп
теттĕм пуль хама.

Пĕр ларса шутлатăп та
паянхи куна –
юрату та, пурнăç та
вăхăтлăх кăна.

Иртсе кайнă хыççăн тин
çак кĕрет пуçа,
тĕлĕк курса пурăннăн
халь уçап куçа.

Кашни кун ман кĕрешӳ
теттĕм эпĕ те.
Ку мелпе пурнать чĕр чун,
пурнĕ упăте.

Çитĕнтерĕ кайăк та
чĕпĕ йăвара.
Çыннăн пурăннин пайти
çакă-ши вара?

Йăвана чĕп таврăнмасть,
çыншăн кил –
тĕппи.
Пирĕн çĕр çинчи пайта
урăхрах эппин.

Тăван кил, атте-анне
паччăр пире пил,
Халăхăмăрăн чĕлхи,
эс нихçан ан вил!
Çапла пултăрччĕ.

Пичете Надежда ОСИПОВА хатĕрленĕ



# Чăвашшăн тунсăхлакан узбек

Тĕл пулсассăн вăл яланах: «Салам!» – тет. «Салам, салам!» – хуравлатăп эпĕ йăл кулса. Эпир, пĕр кăкран тухнă икĕ наци çыннисем, чĕлхемĕрсенче пĕрешкел сăмахсем пулсан, пĕр-пĕрне çăмăллăнах ăнлансан питĕ хĕпĕртетпĕр. Абдували Ергашев – Чăваш Республикинчи узбексен культура центрĕн президенчĕ. Асăннă центра вĕсем 2007 çулта юпа уйăхĕн 29-мĕшĕнче йĕркеленĕ. Узбексем çинчен, тĕрĕсрех, Ташкент çинчен, эпир мĕн ачаранах илтсе ӳснĕ. Питĕ ăшă пӳлĕме е хваттере кĕрсен тӳрех: «Кунта – Ташкент!» – теççĕ.

Чăваш Енри узбексем Шупашкарти П.Хусанкай ячĕллĕ Культура керменĕнче пухăнаççĕ. Абдували Махмудович пĕлтернĕ тăрăх, Чăваш Енре халĕ 565 узбек пурăнать. Ытларах тĕп хулара, Çĕнĕ Шупашкарта, Канашра, Улатăрта, Çĕмĕрлере, Етĕрнере, Елчĕкпе Вăрнар районĕсенче тĕпленнĕ. Вĕсем Агрегат тата Трактор тăвакан заводсенче, суту-илӳре, узбек апат-çимĕçĕн кафисенче ĕçлеççĕ.

– Культура центрне эпир хамăр культурăна, йăла-йĕркене, чĕлхене упраса хăварас, пĕр-пĕринпе çыхăну тытас, йывăр самантсенче пулăшса, хавхалантарса пырас тĕллевпе йĕркелерĕмĕр. Пысăк уявсенче халăх яланах йышлă пухăнать. Кăçал Навруза (Çĕнĕ çула) уявлама 400 çын пуçтарăнчĕ. Тĕн уявĕсене те – Ураза байрампа Курбан байрама та – яланах палăртатпăр. Кафесенче пухăнатпăр, пĕр-пĕрне саламлатпăр, юрлатпăр, ташлатпăр, савăнатпăр, тăван чĕлхепе калаçса киленетпĕр, – каласа парать Абдували Махмудович.

Чăваш Республикин кунĕнче çулсеренех «Туслăх кăшăлĕ» концерта хутшăнаççĕ вĕсем. Хула кунĕнче те хăйсен пултарулăхĕпе паллаштараççĕ. 2008 çулта Залиф Биксалин пуçарăвĕпе ача-пăча ансамбльне йĕркеленĕ. Çавăн пекех аслисен пултарулăх ушкăнĕ те пур. Уйрăмах Олимназар Абдурахимов ăста юрлать. Вăл И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн медицина факультетĕнче 5-мĕш курсра вĕренет. Олимназар тутар юррисен фестивалĕсене те тăтăш хутшăнать.

Узбек çамрăкĕсем Шупашкарта ытларах Чăваш патшалăх университечĕн медицина тата экономика факультечĕсенче, Коопераци институтĕнче пĕлӳ илеççĕ. Вĕсем концертсемпе уявсене хастар хутшăнаççĕ, спортпа та туслă. «Пахтакор» футбол команди те йĕркеленĕ. Кураш (кĕрешӳ) те пур.

Чăваш Енри узбексем республикăри ытти культура центрĕсемпе, çавăн пекех ентешĕсен Хусанти, Чĕмпĕрти, Йошкар-Олари ушкăнĕсемпе те çыхăну тытаççĕ.

– Кĕçех узбек халăх эпосне «Алпамыша» (Улăп) чăвашла куçарса кăларатпăр. Кăçал нарăс уйăхĕн 11-мĕшĕнче Алишер Навои поэтăн çуралнă кунĕ тĕлне поэзипе музыка каçне ирттертĕмĕр. Унта ятарласа Узбекистанран паллă артистсем килчĕç. «Салют» культура керменне халăх лăк тулли пухăнчĕ. Эпĕ Раççейре пурăнакан узбексен диаспорине тата Узбекистанăн Никамапăхăнманлăх кунĕсене уявлама хутшăнтăм, – Культура центрĕн ĕçĕ-хĕлĕпе малалла паллаштарать Абдували Махмудович. Ачисене тăван чĕлхине, йăли-йĕркине тĕплĕнрех вĕрентме Шупашкарта вырсарни шкулне уçма палăртаççĕ вĕсем. Вĕрентекенне те тупнă ĕнтĕ. Узбек çамрăкĕсен пĕрлĕхне те йĕркелесшĕн.

Чăваш Енре узбексем хăйсене хăтлă туяççĕ. Маларах вара регистраци ыйтăвĕсемпе йывăрлăхсем пайтах пулнă. Абдували Ергашев ентешĕсене ĕçе вырнаçма чылай пулăшнă. Узбексем чăваш пикисене хаваспах качча илеççĕ-мĕн.

– Унашкал çирĕм çемьене пĕлетĕп, – терĕ Узбек культура центрĕн президенчĕ.

Сăмах май, çакна та пĕлтерем, Абдували чăвашла лайăх ăнланать, кăштах, хăй калашле, «хуллен-хуллен» калаçать те. Шупашкарта тĕпленнĕ шăллĕ Абдугами вара чăвашла питĕ хитре пуплет. Пирĕн чĕлхесенче пĕрешкел сăмах чылай-мĕн: олтен – ылтăн, айран – уйран, ота – атте, шурпа – шӳрпе, она - анне, той – туй, шайтан – шуйттан, салам – салам, теньга – тенкĕ, мазар – масар, апа – аппа тата ытти те. Узбексем, тутарсем пекех, чăваш чĕлхине питĕ хăвăрт вĕренеççĕ. Ку вăл пирĕн чĕлхесем тĕрĕк чĕлхисен йышне кĕнипе çыхăннă.

– Эпĕ Раççейри нумай хулара пулнă. Анчах Шупашкар пуринчен те ытларах кăмăла килчĕ. Таса, хитре, хăтлă хула. Чăвашсем узбексем пекех питĕ ырă кăмăллă. Хальччен никам та пĕр сивĕ сăмах та каламан.

Мускавран ман патăма юлташ килсе кайрĕ. Виçĕ кун пурăнчĕ. Халăх ăш пиллĕ пулнинчен, тараватлăхĕнчен питĕ тĕлĕнчĕ. «Пулăшу ыйтсан пулăшма васкаççĕ, ыйту парсан чарăнса тăрсах ăнлантараççĕ», – терĕ. Узбекистанран Чăваш Ене килекен çамрăксем вырăсла начар пĕлеççĕ, çавă тепĕр чухне чăрмав кӳрет, – пытармарĕ Абдували Махмудович.

Абдували Ергашев Таджикистанра çуралнă. Тюмень хулинче экономика енĕпе аслă пĕлӳ илнĕ.

– Хĕсметре Шупашкар йĕкĕчĕпе пĕрле пулнăччĕ. Туслă çыхăну çар хыççăн та тăсăлчĕ. Хăнана чĕнчĕ те – Шупашкар калама çук килĕшрĕ, вуннăмĕш çул ĕнтĕ кунта, – вăрттăнлăхне уçрĕ вăл.

Вĕсем мăшăрĕпе Зулайхăпа 5 ача çитĕнтереççĕ. 3 ывăлпа 2 хĕр: Мухаммаджон, Абдуллажон,Садокатхон, Хасан, Хадигабону. Аслă хĕрĕ, Садокатхон, Узбекистанра вĕренет. Зулайха – кил хуçи мăшăрĕ, ачисене лайăх воспитани парас тесе тимлет. Ергашевсем çитес вăхăтра çемье хутшăнасса, «çĕнĕ кайăк» вĕçсе килессе кĕтеççĕ.

– Узбексен çемйисем пысăк. Эпĕ хам 10 ачаллă çемьере çитĕннĕ. Вăл вăхăтра кашни хĕрарăм 10-15-шер пепке çурататчĕ. Халĕ 4-5 тĕпренчĕклĕ çемье ытларах. Манăн атте çĕр мамăкĕ çитĕнтерекен бригадăн бригадирĕнче ĕçленĕ. Хĕрарăмсем кил-тĕрĕшре тăрмашаççĕ, ача пăхаççĕ. Тĕрĕ тĕрлеме питĕ юратаççĕ. Тултарса та, хĕресле те тĕрлеççĕ. Сăмах май, манăн арăм та тĕрлет. Пĕве кĕнĕ хĕрсен алă, пит шăллисем, кĕпесем тĕрлесе пĕр сантăк (арча) тултармалла. Туй кунĕнче вĕсене пахалама стенасем çине çакаççĕ, – пĕлтерет Абдували Махмудович.

Узбек пикисене сантăксăр качча илмеççĕ-мĕн. Туйне вара икĕ кун тăваççĕ: малтан хĕрĕ патĕнче, иккĕмĕш кунĕнче – каччи патĕнче. Туй кунĕнче хĕр упраçăн наци тумне тăхăнмаллах. Енчен те вăл шурă кĕпепе, шурă пĕркенчĕкпе качча тухма кăмăл турĕ пулсан, туй хыççăн 30-40 кун узбек тумĕпе çӳрет. Çанăллă кĕске кĕпе, шăлавар, çиелтен халат тăхăнать. Пуçа тутăр çыхать, е тӳпеттей тăхăнать. Çиелтен явлăк уртса ярать.

Маларах хĕрарăмсем паранджапа çӳренĕ, пите лаша хĕлĕхĕнчен хатĕрленĕ сеткăпа – чачванпа – хупланă. Хĕрсемпе хĕрарăмсем пĕрремĕш ача çураличчен çӳçне вĕтĕ çивĕте (40-е яхăн) явнă. Ыттисем икшер çивĕт тунă. Ку йăла паянхи кунччченех упранса юлнă. Паранджана вара тахçанах пăрахăçланă.

Узбек апат-çимĕçĕсенчен чи паллли – плов. Тĕнчипех сарăлнă. Ăна халĕ тĕрлĕ какайран хатĕрлеççĕ. Чăн рецепчĕ мĕнлерех-ши? Тĕрĕс плова така какайĕпе çăвĕнчен хатĕрлеççĕ, ăна уйранпа сыпса çиеççĕ. Паян плов пĕçермелли рецепт çĕре яхăн пур иккен. Лагмана та (така какайĕпе килте хатĕрленĕ лапшаран янтăланă яшка), мант та (пысăк пельмень), самса та (виçĕ кĕтеслĕ кукăль) – вĕсене пĕлмен çын та çук пуль халь тĕнчере.

Абдували ял пурнăçне кăмăллать, хула çумĕнче çурт туянма ĕмĕтленет.

– Канмалли кунсенче хулара мĕн туса ларас? Сурăхсемпе такасем усрас, пахча çимĕç ӳстерес килет, – тет. Хăйсен патĕнчи сурăхсене (вĕсем кунтисенчен чылай пысăкрах имĕш) илсе килесшĕн. – Пирĕн халăхра çакăн пек каларăш пур: аслаçу, мăн аслаçу ĕçне малалла тăсмасан пуян пулаймастăн. Манăн асаттен, Сайхон байăн (бай – пуян çын), 8000 сурăх тата ылтăн нумай пулнă. Вĕсене 40 кĕтӳç ятарласа хăнăхтарнă йытăсемпе пăхнă. Асатте питĕ ырă кăмăллă пулнă, чухăнсене яланах пулăшнă. Пĕрре вăл пĕр тăлăха хăйĕн укçипе авлантарнă, туй туса панă. Çав каччă каярах комсомола кĕрет, районта ĕçлеме пуçлать. Колхозсем йĕркеленĕ вăхăтра асаттене кулак тесе Çĕпĕре ăсатма палăртаççĕ. Çакна эрне маларах пĕлнĕ комсомолец çĕрле асатте патне килет те: «Эс мана ырă турăн, эпĕ те пулăшам сана. Кирек ăçта тарма пултаратăн, вăхăт пур-ха», –

тет. Асатте Таджикистан урлă Афганистана çитесшĕн пулнă. Ăна Таджикистан çĕрĕнче тытаççĕ. Пурлăхне йалтах туртса илеççĕ. Хайне хĕрĕх кунлăха хупса лартаççĕ. Тăванĕсенчен пĕри ăна пурлăхне совет влаçне хай ирĕкĕпе пама килĕшни çинчен çыртарать. Асанне 2 хурчуно (хутаç) ылтăн пытарса хăварнă пулнă. Асатте унпа лайăх ашак туянать. Юлнă ылтăна илет те Сауд Аравине çула тухать. Унта тепĕр икĕ çултан çĕре кĕрет. Хальхи вăхăтра ялта пурăнакан кашни узбек 30-40-шер сурăх тытать.

Узбексем чăвашсен шărттанĕ евĕрлĕ çиме те хатĕрлеççĕ. Сурăх хырăмлăхне шăмă çумĕнчи какая уйăрса тултараççĕ, тĕрлĕ специ хушса кăмакара пĕçереççĕ. Ĕлĕк, холодильниксем пулман вăхăтра, узбексем уçласа ӳкернĕ çăва тăвар хушса лайăх çуса тасатнă така хырăмлăх ăшне хурса усранă. Хĕллеччен аванах упраннă вăл.

– Кашни çемье çакнашкал 10 хырăмлăх хатĕрленĕ, – йăли-йĕркипе паллаштарать çĕнĕ пĕлĕшĕм.

Узбексен ваттисен сăмахĕсем питĕ пĕлтерĕшлĕ: юнашар пурăнакан çын аякри тăванран та çывăхрах, тăшман килни качча кайнă хĕрӳ каялла таврăннинчен лайăхрах. Качча тухнă хĕр каялла таврăнни пысăк намăс шутланать узбексен. Çавăнпа уйрăлакан мăшăр питĕ сахал вĕсен. Чăвашсен вара «Чăваш кучченеçĕ – çуллă шăрттан, узбекăн – плов» каларăш пур.

– Тухăç халăхĕн питĕ ырă йăла пур. Кĕçĕн ывăл яланах ашшĕ-амăшĕпе пурăнма тĕп киле юлать. Тĕпкĕчĕн ăнсăртран ĕçпе аякка каймалла пулсан ашшĕ-амăшне пăхма вăл вăталăх пиччĕшне хăварать. Кĕçĕннисем яланах асслисене хисеплеççĕ, ватăсене уйрăмах сума сăваççĕ. Мучисене хисеплесе чĕннĕ чухне – «баба», ватă хĕрарăмсене чĕннĕ чухне «апа» сăмах хушаççĕ. Тăванлăх, туслăх туйăмĕ те вăйлă. Çемьере яланах арçын хуçа.

– Хĕр качча кайиччен – ашшĕн, çемьелленсен упăшкин ирĕкĕнче, – каласа парать Абдували Махмудович.

– Ачăрсене шкулта кӳрентермеççĕ-и урăх наци тесе? – пĕлес килчĕ манăн.

– Çук, кӳрентермеççĕ. Те хайсем лайăх вĕсем? Мухтаççĕ. Кĕçĕн хĕр – отличница. Чăвашла вырăслинчен лайăх пĕлеççĕ. «5» паллăсем кăна илеççĕ. Шупашкарти 61-мĕш шкула çӳреççĕ. Темиçе çул каялла «Пике» фабрикăра ĕçленĕ чухне Узбекистана командировкăна ятарчĕç. Уйăх пурăнма тиветчĕ унта. Çемье вара – Шупашкартаччĕ. Чăваш Еншĕн питĕ тунсăхлаттăмччĕ. Халĕ те тăван çĕре тăвансене курма кайсан часрах каялла таврăнас иклет.

Абдували каланă тăрăх, «гуль» (роза чечекĕ) узбек чĕлхинче «кĕлчечек» тени пулать. «Гуль» сăмахпа çыхăннă ят чылай: Гульхем, Гульнихай, Гульшак, Барчин-гуль, Гульбахар... Мана та вăл малашне «Гульчечек» теес кăмăл пур тесе каларĕ. Мĕнех, килĕшет тĕк – мĕншĕн хирĕçлес?

**Роза ВЛАСОВА**

# Ӳнер

## Анатолий Миттов



Автопортрет



Акаҫă. Аттене асанса. 1967 ҫ.



Ялта. 1967–1968 çç.



«Чăваш аваллăхĕ» ярăмран. 1963 ç.





**«Асран кайми аки-сухи» ярӑмран. 1964–1965 çç.**



Чуччу. 1969 ç.



Вăйă карти. 1965 ç.

# ÇĔНĔ КĔНЕКЕ – ÇĔНĔ ТĔНЧЕ




**Корней ЧУКОВСКИЙ**

Паллă поэтăн юмахĕсене темиçе ăру вуласа ÿснĕ. Вĕсем çăмăллăн асра юлнипе ача-пăчана илĕртеççĕ. Çавăнпа та çав юмахсене нумай-нумай чĕлхене куçарнă. Халĕ «Муха-Цокотуха» текеннине чăвашла та вулама пулать. Ăна Петĕр Çăлкуç «Шăна мыскари» ятпа ăста куçарнă.




**Юрий СЕМЕНТЕР**

Кĕнеке Чăваш Республикин территорийĕнче тĕл пулакан вĕçен кайăксем çинчен каласа парать. С.Кангина ÿкерчĕкĕсем тăрăх ачасем вĕсене палласа илме вĕренĕç. Сăвăсем çумне хушса çырни çунатлă туссем çинчен ытларах пĕлме пулăшĕ. Йăвисене ăçта тата мĕнле тăваççĕ, мĕнпе тăранса пурăнаççĕ – пĕлес текеншĕн пурте интереслĕ.



**Анатолий СМОЛИН**

«Асамлă азбука» – «Озорная азбука». Икĕ ятпа тухнă ку кĕнеке. Авторĕ ăна чăвашла-вырăсла çырнă. Тин кăна вулама вĕренекенсене питĕ пулăшаççĕ кунта кĕнĕ тăватшар йĕркесем. Ытарлă сăмахсемпе тупмалли юмахсем те ача-пăча шухăшлавне аталантараççĕ.




**Александр ИЛЬИН**

Кĕнекери сăвăсем тăван тавралăх илемне курма вĕрентеççĕ, чĕр чунсем çинчен ытларах пĕлме пулăшаççĕ. Алăк умне ĕне килнĕ – кĕртмелле, пахчара кишĕр, хăяр шăтнă – шăвармалла, хур-кăвакал чĕп кăларнă – пăхмалла... Ача-пăча валли ĕç тем чухлех ялта. Кĕнекери геройсем – ĕçчен ачасем.








## Хĕл Мучи парать инструкци

Хăвăрах аван пĕлетĕр, эпĕ Çĕнĕ çулта кашни çын патне çитетĕп. Уява кĕтсе илнĕ чухне асăрханулла пулма ыйтатăп, хăрушсăрлăх инструктажне ирттеретĕп.

Çĕнĕ çул кĕрекинче инкек-синкек ан пултăр тесен манăн канашсемпе усă курма сĕнетĕп.

Çĕнĕ çул кĕрекинче йĕрсĕр-мĕнсĕр çухаласран акă мĕн тумалла: сĕтел хушшине, черкке умне вырнаçса лариччен хут çине хăвăр хушаматăра, ятăра çырса хурăр, адреспа телефон номерне кăтартма ан манăр. Ăнсăртран ӳсĕрле урăх çурта е хваттере çаклансан эсир кам пулнине палăртма май пултăр.

Кĕрекере кампа юнашар ларни те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Спецназ салтакĕ çумĕнче бронежилет тăхăнма ан манăр, çамрăк артистка çывăхне çаклансан – майка та ытлашши.

Тусăмсем! Манăн каламалли тата нумай, анчах хам та уява васкатăп. Ыттине тĕл пулсан пĕлтерĕп.

**Хĕл Мучи**

## Тивĕçтермен ĕç

Çĕнĕ çул умĕн. Кивĕ хваттер. Стенасем çинчи обой çурăлса аннă. Чĕрик-мĕрик тăвакан диван çинче пĕр артист выртать. Ĕçсĕр аптăраса. Çĕнĕ çула паллă тума унăн укçи-тенки те çук. Кĕтмен çĕртен телефон шăнкăртатать.

– Хисеплĕ актер, сирĕн кинора ӳкерĕнес килмест-и? – илтĕнет кăмăллă сасă.

– Кам шăнкăравлать?

– Голливудран. Кунне çур пин доллар тӳлеме шантаратпăр, – пулчĕ хурав.

– Ӳкерӳ хăçан пуçланмалла? – кăсăкланать артист.

– Декабрĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа январĕн 8-мĕшĕччен.

– Çук, килĕшместĕп. Ку вăхăтра манăн елкăра савăнмалла.

**«Тăван Атăл», «Капкăн» çырăнсан**

# ШӲТЛЕСЕ ТЕ ЙӖПЛЕСЕ





## Ҫывӑрса юлнӑ

Арҫын, диван ҫинче ҫывӑрнӑскер, вӑранса пуҫне ҫӗклет.

– Арӑм, паян мӗн кун? – ыйтать ыйхӑллӑ куҫне сӑтӑркаласа.

– Январӗн 2-мӗшӗ.

– Мӗскер? Пӗрремӗш число сиксе юлнӑ-им?

## Ҫӗнтерне

– Аялти хутра пурӑнакан кӳрше пианинине суттартӑм-суттартӑмах.

– Мӗнле майпа?

– Вӑл кӗвӗ калама пуҫласанах ҫемйипе ташша яраттӑмӑр та...

## Тав тунӑ

Ҫӗнӗ ҫул бал-маскарачӗ пырать. Ташлакансем лӑк тулли. Музыка шӑплансанах каччӑ пӗр хӗре калать:

– Манпа ташланӑшӑн пысӑк тав.

– Ташланӑшӑн? – тӗлӗнет лешӗ. – Эпӗ ташлама шутламан та. Тӗркӗш вырӑнта тӑма меллӗрех вырӑн тупас тесе ун-кун пускаларӑм ҫеҫ.




**тунсӑхламӑн, тусӑм, нихӑҫан!**

# Анастасия СЕНЬКОВА

## ÇУМ КУРĂК

Эпир, асаннепе иксĕмĕр, паян кунĕпех пахчара ĕçлерĕмĕр: йăрансене çум курăкран тасатрăмăр, хĕвел каç енне сулăнсан шăвартăмăр. Малтан хăяра, унтан – кишĕре, кайран – купăстана. Ешĕл калчасем савăннипе йăлтăр та ял-тăр çиçме пуçларĕç. Юратаççĕ иккен вĕсем шыва кĕме. Чечексене те манса хăвармарăмăр. Манăн пĕчĕк витрере шыв кăштах юлчĕ те – тата мĕн шăвар-малла-ши тесе эпĕ пахчари пĕтĕм ӳсен-тăрана пăхса çаврăнтăм. Улмуççи айĕнче пĕр симĕс калчана асăрхарăм. Хăр тăлăххăн ларать вăл. Хăй питĕ пĕчĕкскер, имшеркке. Мана питĕ шел пулса кайрĕ ăна: ыттисене шăварнă та, вĕсем пурте яш кăна ӳссе каяççĕ ĕнтĕ, вăл çеç яланлăхах пĕчĕккĕ тăрса юлать. Çавăнпа эпĕ ăна кашни кунах шăварма шутларăм. Вара вăл кашни кун ӳсме пуçларĕ. Çавăншăн эпĕ ăна мухтасах тăтăм:

– Атя ӳс. Çӳллĕ пул, патвар пул. Иксĕмĕр пĕрле ӳсĕпĕр. Эсĕ хитре чечек пул, эпĕ ырă çын пулам.

Кăштахран пирĕн пахчари ӳсен-тăрансем пурте çитĕнсе кайрĕç. Кишĕр йă-ранĕ халь аякран симĕс тӳшек евĕрех курăнать, манăн ун çине выртса пăхас та килет, купăстасем пĕчĕк чышкă пек чăмăртанчĕç, чечексем те çеçкене ларчĕç. Улмуççи айĕнчи манăн çум курăк сап-сарă çеçке çурчĕ. Пĕрре ăна асанне асăр-харĕ те тĕлĕнсех кайрĕ:

– Пăх-ха, ку хыт хура шăвармасăрах еплерех çитĕнсе кайнă, чип-чипер че-чек пулса тăнă. Халь тин тăпăлтарса пăрахма та шел. Атя, лартăрах ĕнтĕ, ешертĕр, пахчана илем кӳтĕр, ытла та хитре-çке, – терĕ.

Эпĕ савăнтăм – манăн тăрăшни сая каймарĕ.

Çум курăк та ырă кăмăлпа пăхса тăрсан илем пулма пултарать иккен. Усăллă пулса çитĕнет. Манăн кӳршĕ Федя кăшт усалрах ача, тепĕр чух вăл мана кӳрен-терме те пăхать, анчах та юратса çитĕнтерсен вăл та лайăх çынах пулма пул-тарать – кăна эпĕ халь пĕлетĕп.

## ЧĂВАШ КĔПИ

Пирĕн пата хăнана Уля аппа килнĕ. Вăл – асаннен йăмăкĕ, пиртен 130 çух-рăмри Чĕмпĕр тăрăхĕнчи Вешкайн текен салара пурăнать. Уля аппа хăйне валли кĕпе çĕлеттересшĕн. Асанне ку енĕпе пултаруллă – алли пырать. Тата унăн çĕвĕ машини те пур. Ялти хĕрарăмсем (эпĕ вĕсене хăшне аппа, хăшне инке тетĕп) час-часах мĕн те пулин çĕлеттерме пыраççĕ. Уля аппана мĕн те пулин мар, чăн-чăн чăваш кĕпи кирлĕ. Килте тĕртнĕ пиртен çĕленĕскер. Улача теççĕ ăна. Асанне хĕл каçа темиçе пир тăрăхĕ те тĕртет кантăр сӳсне арласа хĕрлĕ, хура сăрăсемпе пĕветнĕ çипрен. Эпĕ хам та тĕртсе курнă. Мана килĕшет. Чăн

та, ăсине асанне пекех хăвăрт вылянтараймастăп ёнтĕ. Тата хĕççине туртма та вăй çитсех каяймасть-ха хальлĕхе манăн. Çипписем пĕр-пĕрин çумне тăчă çыпçăнмасан пир юхса тăрать. Ку асанне сăмахĕ.

– Пĕр кĕпе пур-ха манăн чăвашли, туйсене, çăнăхтана, хутран-ситрен салара ирттерекен уявсене тăхăнатăп, анчах тахçанхи те – хĕр чухнехиех – пĕчĕкленсе кайрĕ. Хам та тулса кайрăм ватлăх енне, – тет Уля аппа. Çавăнтах лăстăр-лăстăр силленсе илет.

– Салара пурăнатăр та-ха эсир, унта пурнăç ямăт пулĕ ёнтĕ. Пирĕн тăрăха куçса кил, кунта самăрланаймастăн. Уттине çулмалла, вуттине хатĕрлемелле, выльăхĕ-чĕрлĕхĕпе канăç çук – çиччас хухан, – чăх-чăх кулать асанне. Унтан вăл çĕнĕ кĕпене, çĕлесе пĕтернĕпе пĕрехскере, Уля аппана тыттарать.

– Атя, пăх-ха, майлах пулчĕ-и?

Уля аппа чаршав хыçне иртет те кĕçех çĕнĕ кĕпепе хĕвел пек çиçсе тухать.

– Питĕ те шеп пек, – тет куçкĕски умне пырса çавăрăнкаласа илнĕ хыççăн. – Ха, хама хам та палламалла мар капла. Çын сăнĕ кĕрсех кайрĕ. Чăваш кĕпи йăлт улăштарса ярать çав – асăрханă эп. Майра кĕпипе çӳренĕ чухнех – чисти арçури. Нимле чару çук. Чĕлхи те ытлашши ирĕкре, намăсне туймастăн. Асарписер çӳретĕп – аван та мар.

– Эс вырăссем хушшинче пурăнатăн. Çавăнпа ирĕклĕ ёнтĕ. Кампа пурăнатăн, çавăн пек пулатăн вĕт, – тет асанне.

– Вăл та пулĕ. Пулĕ. Çапах та тум çынна пĕрех хăйне май çавăрать. Чăваш кĕпи тăхăнсанах, ак, эпĕ – сăпайран сăпай. Каккуй усал калаçма халь? Йăлт хытса ларатăп. Намăс çуралать.

Уля аппа чăнах та харсăр çын. Йăпăр-япăр. Именсе-вăтанса тăмасть вăл, тепĕр чух чĕлхи, чăн та, чараксăр унăн, усал сăмахпах лаçлаттарса хума пултарать. Эпĕ илтнĕ. Асанне пирĕн – питĕ лăпкăскер. Ятлас чухне те "Ах, ачам..." кăна тет. Вăл яланах чăваш кĕпипе çӳрет çав – икĕ аркăллипе. Манăн та халĕ тăхăнса курас килсе кайрĕ улача кĕпе – эпĕ мĕнле пулса тăрăттăм-ши? Çавăн пек шухăшларăм те тӳрех пĕрле вылякан Федяна аса илтĕм. Вăл тепĕр чух Уля аппаран чылай ытларах калаçать лайăх мар сăмахсемпе. Чарусăр питĕ. Вĕренме те тăрăшмасть. Вăт ăна чăваш кĕпи тăхăнтартмалла. Вара пире тек кӳрентерес çук. Федя валли улачи нумай та кирлĕ мар ёнтĕ. Асанне манăн питĕ ырă çын – тен, çĕлесе те парĕ.



## ЧĂХ

Кунĕпех какаклатса çӳрерĕ пирĕн чăпар чăх паян. Эпĕ вăл асаннене кӳреннĕ пулĕ тенĕччĕ: ирхине хăтăрса илчĕ те ăна пахчана кĕрсе ĕнер çеç кишĕр вăрри акнă йăрана тустарнăшăн.

Хăш чухне хам та эпĕ кӳреннĕ пек йăлăнтарса çӳретĕп. Ним çукшăнах тĕрĕс мар айăплансăн туйăнать те.

Пирĕн чăх вара çăмарта тума хатĕрленни çинчен систерес тесе какаклатнă иккен. Вăл лупас çинчен вĕçсе ансанах асанне ăна вир кĕрпи сапса пачĕ, мухтарĕ:

– Маттур-ха эс пирĕн, çăмарта тумасăр пĕр кун ирттерместĕн, çемьене тăрантаратăн, сана лайăхрах, тутлăрах çитерес пулать, – терĕ.

Халĕ эпĕ хам та асаннене кӳренместĕп: пĕлетĕп те-ха, тĕрĕспе ятлакалать вăл мана хам тепĕр чухне ытлашши чарусăрланнăшăн. Çавăнпа эпĕ те çемье валли мĕн пĕр-пĕр ырă тума пултаратăп-ши тесе шухăшласа çӳретĕп.

## МЕЧĔК

Атте хуларан ман валли футбол мечĕкĕ туянса килнĕ. Чăн-чăнни. Телевизорпа кăтартакан футбол вăййисенчи пеккинех. "Асаннӳне пахча çумлама пулăшнăшăн", – терĕ. Эпĕ савăнтăм. Ялта нихăш ачан та çукчĕ-ха кун пекки. Халь эпĕ чи кирлĕ çын пулса тăратăп ĕнтĕ урамра. Кӳршĕ Федя та текех мана кӳрентерме хăяймĕ. Хăтланса пăхтăр-ха – эпĕ ăна мечĕкпе выляттармастăп. Мечĕке велосипед насусĕпе сывлăш тултартăм та тӳрех урама чупас тенĕччĕ, чӳречерен пăхрăм та – Федя тата унăн тусĕсем – Çӳлтикасри Гришапа Славик – хирĕçри Миккуль тетесен вутă купи умĕнче çĕр касмалла выляççĕ. Çĕççе çĕре тăрăнтараççĕ те пĕр-пĕрин пайне касса илеççĕ – хăшĕ маларах пурин çĕрне те "çисе" ярать. Гришапа Славик Федяран та чарусăртарах. Вĕсемпе футболла выляма пуçласан мечĕке мана тыттарас та çук. Кăмăл пăсăлчĕ, çавăнпа диван çине лартăм та хуйхăрса та илтĕм. Вара пӳртрех мечĕке стена енне тапа пуçларăм. Малтан питĕ асăрханкаланăччĕ, кайран тахăш самантра хĕрсе кайнă та телевизорпа кăтартакан Рональдо пек (Португали футболисчĕ вăл, аттепе иксĕмĕр питĕ килĕштеретпĕр ăна) вирлĕн тапрăм та – мечĕк стенана çапăнчĕ, унтан алăк янахне пырса тăрăнчĕ, унтан комод çинчи чечек вазине лаçлаттарчĕ. Вăл урайне ӳкрĕ те чăл-пар ванса кайрĕ. Эпĕ хăраса кайрăм – мана лекетех ĕнтĕ!

Кĕленче ванчăкĕсене пуçтарнă самантра асаннепе атте пырса кĕчĕç. Вазăна эпĕ мар, кушак ăнсăртран йăвантарса яни çинчен калама та хатĕрленнĕччĕ эпĕ, анчах атте тӳрех тавçăрса илнине чухларăм та шарламарăм. Хамăн айăпа йышăнмах тиврĕ.

Атте диван çинче пĕр вăхăт чĕнмесĕр шухăша кайнăн ларчĕ, унтан мана хăйпе юнашар лартрĕ.

– Хăвна айăплă тесе шутлатăн? – пулчĕ унăн пĕрремĕш сăмахĕ.

– Айăплă, – пуçа çĕклемесĕр аран сăрхăнтарса кăлартăм эпĕ.



– Хам тĕрĕс мар турăм пулмалла. Мечĕкне туяннă чух суйламаллаччĕ çав манăн. Кăна мар, урăххине илмеллеччĕ. Йăнăшрăм, – терĕ хăйпе хăй сăмахланăн.

Атте тӳрех хăтăрса пăрахать пулĕ тенĕччĕ эпĕ. Вăл ятламанни мана анратса ячĕ. Асанне те ун енне питĕ тĕлĕнсе пăхрĕ.

– Эсĕ айăплă мар. Мечĕк хăй, – терĕ атте каллех лăпкăн.

– Мĕнле эпĕ айăплă мар? – пуçа ялтах

çĕклерĕм. – Эпĕ ватнă вĕт вазăна. Уншăн пахчана асаннепе мар, йăлт хам пĕччен çумласа тухатăп. Ак халь тухап та тӳрех çумлама пуçлатăп. – Диван çинчен тăрасшăн пултăм эпĕ – атте хулран тытса каялла лартрĕ.

– Çумлама ĕлкĕрĕн-ха, атя-ха малтан шутласа пăхар, мĕнле айăплама пултаратпăр эпир мечĕке. Мĕн тăвăпăр унпа? Эсĕ мĕн сĕнетĕн?

– Мечĕк мĕншĕн айăплă пултăр вара вăл? Эпĕ тапнă вĕт.

– Эсĕ вазăна ватас тесе тапман вĕт-ха?

– Çук. Эпĕ мечĕке стена çине тапнă. Стенаран вăл алăк янахне пырса çапăнчĕ, кайран тин – вазăна.

– Куратăн-и, айăплисем кунта миçен? Стена, алăк янахĕ. Вĕсене, паллах, нимĕн те тăваймастпăр эпир, эппин, мечĕкех айăп хума тивет. Вăл ваза енне мар, урăх çĕре те сикме пултарнă-çке-ха. Çавăнпа мечĕкех айăпламалла пулса тухать. Ман шутпа, ăна шăтармалла та кăларса пăрахмалла.

– Мĕнле кăларса пăрахмалла? – яштах сиксе тăтăм эпĕ. – Вăл вĕр çĕнĕ вĕт.

– Çĕнни çĕнĕ-ха та... Хăвах куран, хăйне епле чарусăр тытать. Хамăр киле илсе килтĕмĕр кăна – вазăна ватса та хунă. Ыран тата мĕн çĕмĕрĕ? Кăтартрĕ вăл хăйне мĕнле иккенне – шанма çук ăна.

– Тек ватмасть, эпĕ унпа урамра кăна вылятăп малашне. Питĕ асăрханса. Шăтарма кирлĕ мар! – Куççуль пăчăртанса тухассăнах куçран.

– Эсĕ унăн хутне кĕретĕн-ха апла? Вăл малашне нимĕн те ватмассине шантаратăн пулсан, тен, хальлĕхе шăтармăпăр та-и. Çапах та вăл хăй тĕрĕс мар тунине туймалăх, айăпне каçарттармалăх пĕр эрне чăланта выртттăр. Шухăшлатăр: мĕн тума юрать, мĕн тума юрамасть. Ку уншăн урок пултăр. Килĕшрĕмĕр-и? – аллине тăсрĕ атте.

Питĕ шел пулса кайрĕ мечĕке, çапах та аттен тăсса панă аллине тытмах тиврĕ.

Чăлан умĕнчен иртсе çӳренĕ май мана кашнинчех намăс пулса каять мечĕк умĕнче, мĕншĕн тесен унăн мана пула пĕр эрне – çичĕ кун! – тĕттĕм чăланта хăр тăлăххăн выртма тивет. Урамра хаваслăн, савăнăçлăн сиккелес чух. Çавăнпа эпĕ выляма хальлĕхе урама тухмастăп. Кунĕ-кунĕпе асаннене пахча çумлама пулăшатăп.

## «ИККĔ» ПАЛЛĂ

Ку инкек пĕр кĕтмен çĕртен йăтăнса анчĕ. Иккĕмĕш урокра. Маргарита Васильевна иртнĕ арифметика урокĕнче çеç-ха мана А пунктран тухнă арçын ача Б пункта мĕн вăхăтра утса çитесси çинчен задача шутлаттарнăччĕ те паянах доска умне чĕнсе кăлармасть пулĕ тенĕччĕ – класра эпĕ кăна мар-иç, тепĕр 20 ача, çавăнпа арифметика кĕнекине уçса та пăхмарăм каçхине. Ытти чух е анне, е атте тĕрĕслетчĕç урока мĕнле хатĕрленнине – ĕнер вĕсем Маша аппан (аннен йăмăкĕ вăл, кӳршĕ ялта пурăнать) çуралнă кунне уявлама кайрĕç, асанне тĕпелте хĕлле валли пан улми джемĕ пĕçерчĕ – унăн пĕр вăхăт та çукчĕ, асатте вара мана шанать: "Пире валли мар, хăвăн валли вĕренетĕн, мĕн сана хистемелли? Çын пулассу килет – вĕрен, çын пулас килмесен – ирĕксĕрлеме те кирлĕ мар", – тет çеç вăл. Ĕнер манăн çын пулас килмерĕ. Çавăнпа шкултан

килсенех "Тăван сăмах" кĕнекери калава вăш-ваш вулам пекки турăм та – тӳрех урама. Вара тăраниччен футболла вылянă, кайран – компьютерпа. Атту ытти чух кĕске вăхăта çеç ирĕк параççĕ. "Мĕн санăн паян кăмпӳтăру ку вăхăт çунать?" – ыйтрĕ те асанне, эпĕ ăна: "Питĕ кăткăс урок панă пире, компсăр тума çук", – терĕм те – вăл пырса та пăхмарĕ. Пĕрех нимĕн те чухламасть вĕт компра.



Маргарита Васильевна ман çинчен, тен, аса та илместчĕ пулĕ умри парта хушшинче ларакан Кузьмин Толик задачăна тӳрех шутласа панă пулсан. Вăл сăмах та чĕнеймерĕ. Мĕнех калайтăр ĕнтĕ вăл? Ĕнер пирĕнпе пĕрлех футбол мечĕкне хăваланă, вĕренсе ларма вăйĕ те юлман-тăр унăн, вăл ахаль те хытанкка. "Толике кам пулăшма хатĕр?" – класа пăхса çаврăнчĕ те Маргарита Васильевна ман тĕлте чарăнчĕ. "Атя, Лазарев, тух доска умне, ĕнер питĕ чипер каласа панăччĕ эсĕ", – терĕ. Ирĕксĕрех иртме тиврĕ доска патне. Кăштах мăк-мак тукаларăм та шăплантăм. "Лар. Сана та "иккĕ". Шаннăччĕ. Тӳрре кăлармарăн", – пулчĕ задача тупсăмĕ.

Толике питĕ тарăхрăм – "иккине" ăна пула илтĕм-çке. Манăн вара начар паллă илме юрамастчĕ: ку чĕрĕке ăнăçлă вĕçлесен атте Рональдăнни пек футболка туянса паратăп тенĕччĕ.

Толике эпĕ ĕнерех тарăхнăччĕ – вăл пирĕн хапхана виçĕ гол çапса кĕртрĕ. Кайран каппайланса йĕкĕлтешме пуçларĕ. Çавăнпа парта хушшине кĕрсе ларнă чухне ăна çурăмĕнчен ыраттармаллах чышрăм. Вăл çаврăнчĕ те мана арифметика кĕнекипе çапрĕ. Мĕнле чăтса тăрăн-ха ун пек мăшкăла? Эпир чутах тытăçса ӳкеттĕмĕр. Маргарита Васильевна ăна та, мана та дневнике икĕ "иккĕ" лартса пачĕ: пĕри урока хатĕрленсе килменшĕн, тепри – тытăçнăшăн.

Шкултан таврăнсанах дневника асаннен арчи айне чиксе хутăм. Аттепе аннене ăна Маргарита Васильевна класĕпех пуçтарса илнĕ терĕм. Журнала лартнă паллăсене куçарма.

Асанне урай çунă чухне тупнă-мĕн.

– Санăн дневнику санран лайăхрах туять иккен намăса. Манăн арча айнех кĕрсе пытаннă, – терĕ вăл чеен куларах.

Манăн пит пĕçерсе кайрĕ.

– Юрĕ, хальлĕхе аçупа аннӳне кăтартмăпăр, иксĕмĕр вара çапла калаçса татăлăпăр: пикенсе вĕренен те "иккӳсене" тӳрлетен. Тăрăшсан пултараканччĕха эсĕ, – терĕ.

Эпĕ асанне калана пекех турăм. Тăрăшса вĕрентĕм.

– Пар-ха дневникна, – ыйтрĕ Маргарита Васильевна эпĕ харăсах икĕ "пиллĕк" илнĕ хыççăн. Ластик илчĕ те хăй унччен лартса панă "иккĕсене" хуратрĕ те хучĕ. Вĕсене вăл кăранташпа кăна çырнă иккен. Юрать çакна асăрхаман эпĕ, атту хуратса тата та пысăкрах айăпа кĕреттĕм. – Асаннӳне салам кала, вăл санăн питĕ ăслă çын, – терĕ юлашкинчен. Хăй вăрттăн кулса илнĕн туйăнчĕ.

Манăн асанне, чăнах та, питĕ ырă та ăслăскер, эпĕ ăна яланах итлетĕп халĕ.

ÇУЛ ÇӰРЕВ

**Рита АРТИ**

# Пальма, хăйăр та тĕве чăваш хĕрĕн асĕнче – Хĕрлĕ тинĕс хĕрринче урăхла иккен тĕнче

## Хургада



Пирĕн гидсем текста сăвă пек вĕренеççĕ, кунта вара кашни хăй мĕн пĕлнине каласа кăтартать-ши? Хургада историйĕпе тĕрлĕ гид тĕрлĕрен паллаштарать (вĕсем пурте тĕрлĕ чĕлхе пĕлеççĕ, аслă пĕлӳ илнĕ. Пирĕнпе вырăсла хутшăнчĕç). Пĕрне ĕненес тĕк, хула 10-15 çул каялла йĕркеленнĕ-мĕн, тепри унтанпа 45 çул иртнине ĕнентерет. Апла-и, капла-и – çакă паллă: малтан çак вырăнта пулăçсен Эс-Саккал поселокĕсĕр пуçне нимĕн те пулман, пуш хир кăна сарăлса выртнă. Ку вырăн çинчен тĕнче британсенчен пĕлнĕ – лешсем нефть шыранă. Халĕ туристсен хулине çаврăннă хула çинчен пит нумаях çырас килмест – информаци Интернетра та нумай. Хамăр курни-илтнипе кăна паллаштарасшăн. Нефть чăнласах пуррине çирĕплетеççĕ вырăнтисем, анчах халĕ ăна уçлама  май çук ĕнтĕ – вăл тинĕс хĕррипе вырнаçнă 200-е яхăн отель айне юлнă. Кунта кунсерен тенĕ пек пĕр хăна çурчĕ хута каять, çыран хĕррипе татах та çине-çинех çурт çĕкленет. Юлашки вăхăтри лару-тăрупа та кăсăклантăмăр. Мубарак пирки никам та пĕр ыpă сăмах та каламасть, ахальтен мар-тăр революци çĕклесех кăларса сирпĕтнĕ ăна вырăнтан (сăмах май, президента та, унăн ывăлĕсене те 10-шар çул ытла ирĕклĕхсĕр хăварнă). Анчах

*Пуçламăшĕ иртнĕ номерте*

Хургадăна вăй хума килекенсем патшалăх экс-ертўçине ĕçпе тивĕçтернĕшĕн тав тума манмаççĕ – çĕршывра туризм бизнесĕ шăпах Мубарак тăрăшнипе вăйлă аталаннă-мĕн. (Сăмахран, гидсем, сезона кура, 1000-2000 доллар ĕçлесе илеççĕ. Уйăхра). Шкулта тўлевсĕр вĕренессине те вăлах пурнăçа кĕртнĕ. Хургада нумай район çине пайланнă: Мубарак-1, Мубарак-2... Мубарак-7 таран. Апла тăк çак çынна ватлăх çулĕсенче мĕншĕн тĕрмене хупса хунă? Çĕршывра коррупцие тарăн тымар яма май панăшăн.

Туризмпа çыхăннă ĕçре арçынсем кăна вăй хураççĕ. Хĕрарăмсене ют çĕршыв çыннисен курма юрамасть-шим? Çук иккен, унпа çыхăнман ку. Араб арçыннисем Хургадăна... шапашкăна çўреççĕ, пирĕннисем Мускава çул хывнă пек. Хăйсем патĕнче вара шалу питех те пĕчĕк. Гидсенчен пĕри Каирта та шалу 200 доллартан (пурин те мар, паллах) иртменнине каласа кăтартрĕ. Çакă та – пурнăç шайĕ пĕчĕк пулни – революцин пĕр сăлтавĕ-мĕн.

Çанталăк чăтма çук шăрăх. Эпир шăпах вăхăтра çитнĕ – икĕ эрне маларах кăна 46 градус пулнă-мĕн. Халĕ кăшт чакнă – 30 ытларах. "Хĕллене" юратмаççĕ вырăнтисем – 20 градус ăшăра шăнаççĕ вĕсем. Вырăссемшĕн вара ку çанталăк чух кăна – тинĕсре шăмпăлтатаççĕ çеç. Юлашки хут кунта "чăн-чăн" çумăр 1997 çулта çунă. Ун хыççăн темиçе çултан 10 минута яхăн шĕпĕртетсе кайнă. Пальмăсемпе куçа шартаракан илемлĕ чечексем, тĕмсем мĕнле çитĕнеççĕ эппин? Йăлт шăварса тăраççĕ. Хаксем – кайса ўкмелле... пĕчĕк. 200 пин тенкĕпе икĕ пўлĕмлĕ хваттер туянма пулать. Чăн та, бассейнсăр çуртра. Халĕ çĕклекен кашни çурт картишĕнче – вĕсем пилĕк хутлă, кашнинех лифт вырнаçтарнă – бассейн пур. Ун пеккинче хваттер 500-600 пин тенкĕпе туянма пулать. Хĕсĕк урамсем машинăпа тулса ларнă. Çул-йĕр правилисене никам та пăхăнмасть, кам мĕнле пĕлет – çавăн пек çўрет. Çакă, паллах, руль умĕнчисене те, çураннисене те вĕчĕрхентерет. Укçаллăраххисем Германире кăларакан "урхамахсене" кăмăлласçĕ: БМВ, Ауди, Мерседес... Маларах пирĕн машинăсене те туяннă. Анчах кунта кондиционерсăр май çук, "Жигули" çапла хаклансах каять. Вăл укçапа, паллах, ют çĕршывра кăларнине суйлать ăслă-пуçлă çын. Унсăр пуçне маларах "Жигули" кăларнă Александрийăри завод хупăннă.

Юлашки вăхăтра Хургадăна вырăссем ытларах та ытларах кăмăлласçĕ. Пахча çимĕçĕ, улма-çырла, пулă тавраш ĕ – тĕлĕнмелле йўнĕ. Бензин, шыв, электроэнерги хакĕ пирĕн патринчен темиçе хут пĕчĕкрех. Климат вара – нимĕнле санатори те кирлĕ мар. Раççейре тивĕçлĕ канăва тухнисем хваттерĕсене сутса кунта куçасси вăй илсе пырать. Пирĕн пенсипе унта шик! шăхăрса пурăнма пулать-ха та. Хулари 330 пин çынран 50 пин ытларахăшĕ Раççейрен куçса пынă. Гидсенчен пĕрне ĕненес тĕк – Хургадăра вырăссен 3 шкулĕ уçăлнă. "Кам каларĕ кăна сире? – эпир информацие тĕрĕслес шухăшпа тепĕр гидран ыйтсан унăн тĕлĕннипе куçĕ чарăлчĕ. – Пĕрре пуррине пĕлетĕп".

Темĕн те пĕлес килни таçта та илсе çитерчĕ, темĕн те кăтартрĕ. Кăсăклану туйăмне пула гидсене те канăç кăтартмарăмăр ахăртнех...

## Пуш хирте те пурнăç пур

...Пĕр хĕрарăм Египета хĕрĕпе канма кайнă. Хула урамĕпе киленсе çўренĕ



май хайхисене пӗр бедуин асӑрхать. "Хӗрне мана качча пар", – нумай шухӑшласа тӑмасӑр пырать вӗсем патне арҫын. "Парӑп-ха та, – ҫухалса каймасть амӑшӗ, – анчах та эсӗ мӗн сӗнме пултаран? Хӗр ахаль ӳсмен вӗт". "Тӗве кӑна". "Миҫе тӗве паратӑн-ха?" – Хӗрарӑмӑн шӳтлес туйӑм ҫухалмасть курӑнать. "Вуннӑ". Ҫапла "ал ҫапаҫҫӗ". Ирхине хӗрарӑм вӑранса каять. Пӑхать – хӗрӗ ҫук. "Ирех ӑҫта кайнӑ-ши апӑрша?" – Чӳрече енне мӑкӑртатса утать амӑшӗ. Ура-малла тинкерет те – балкон айӗнче вунӑ тӗве тӑра парать!!!

Юрӗ, ку, ахӑртнех, шӳт. Анчах та Египета ҫитсе тӗве утланса чупмасӑр киле таврӑнӑпӑр-и вара? Бедуинсем – пуш хирте куҫса ҫӳрекен ҫынсем – мӗнле пурӑннине те хамӑр куҫпа курас килет. Чӑн та, Египетра курмалли татах та нумай-ха та... Чи малтан, паллах, пирамидӑсем патне чун туртать. Авалхи цивилизаци тӗп хулине Александрийӑна ҫитмесӗр те камӑн чунӗ чӑттӑр? Тепӗр тесен, Иерусалим та инҫе мар – унта вара Турӑ ҫынсене уйрӑмах ҫывӑх теҫҫӗ: кӗлӗ тунине хӑвӑртрах илтсе пурнӑҫлать-мӗн. Анчах та пур тӗлӗнтермӗше те пӗрре килсех курса тухма пулать-и вара? Унсӑр пуҫне журналист шалӑвӗпе ют ҫӗршыв урлӑ та пирлӗ касса ҫӳреймӗн. Ҫапла вара пӗр саслӑн йышӑнтӑмӑр: бедуинсене курма каятпӑр. Пирамидӑсем патне тепрехинче ҫитӗпӗр.

## Куҫа курӑнать...

...Арави пуш хирӗ вӗҫсӗр-хӗрсӗр тӑсӑлать. Куҫ ытамлама пултарнӑ анлӑшӗнче талккӑшӗпех – хӑйӑр та чул купи. Тинӗс шайӗнчен 300 метр ҫӳллӗрех. Сывлама йывӑрланать. Ҫакӑнта та ҫынсем пурӑнаҫҫӗ вӗт. Ҫулне мӗнле пӗлсе ҫӳреҫҫӗ? "Авӑ, шыв куратӑр-и?" – тӗллесе кӑтартать гид. Пире ҫула тухнӑ чух-

не пӗрле шыв илме асăрхаттарнă та, типсе ҫитнипе касăхмастпăр, ҫапах та алă тăснă енне тинкеретпӗр – шыв! Хăйăр купи варринче – шыв... Мӗнле шалалла сăрхăнса кӗмест вăл? Акă ун патнех ҫитсе чарăнчӗ автобус. Пире тухма чӗнеҫҫӗ. Анчах та ăҫта паҫăрхи шыв кӳлленчӗкӗ? Пуш хирте куҫа ҫапла курăнать-мӗн. Мираж...

Пире кашнине квадроцикл ҫине лартаҫҫӗ, руле пăркалама вӗрентеҫҫӗ те шелсӗр ҫунтаракан хӗвел питтинче бедуинсен ялне васкатпăр. Айккинелле пăрăнма юрамасть – ҫӗтсе каясси часах. Нумаях пулмасть ҫапла ҫула тухнă пӗр ушкăн хăйăр купи хыҫӗнчен ҫын тухнине асăрханă. Бедуинсен пурнăҫӗпе кăсăкланакан турист ыттисенчен ҫӗтсе юлнă иккен. Икӗ кун аташса ҫӳренӗскер шăпах ҫынсен тӗлне тухнă тата. Те шӳтлет гид, те чăнне калать, анчах унăн сăмахӗсем ахаль иртмеҫҫӗ – хӗвел кăвар пек ҫунтарнине, куҫ хăйăрпа хупланнине пăхмасăр ыттисенчен юлас мар тесе квадроциклсене ӗрӗхтеретпӗр кăна! Пуҫа яваланă арафаткăсем вӗҫсе юлӗҫ, тупата...

## Эп ҫак яла ял темен...

Вырăна ҫитсен малтанах пирӗн гид, Света, бедуинсем ҫинчен каласа кăтартать. Вырăсла аванах калаҫать те, хăйӗнпе ҫывăхрах паллаштарма та ыйтатпăр. Пилӗк ҫул каялла кунта куҫса килнӗ – арабпа ҫемье ҫавăрнă. 120 тăваткăл метр лаптăкăш ҫурт ҫӗклеҫҫӗ. Упăшкин ашшӗ-амăшӗн – 200 тăваткăл метр.

Ял тени бедуинсен пирӗн ăнлавпа пачах та килӗшсе тăмасть: унта пӗр кил вырнаҫнă, кайсан-кайсан – тепӗр ҫурт. Ҫурт теме те ҫук-ха ăна: сарай пекки тунă та хăмăшран виткелесе янă. Ял тени 1-1,5 ҫухрăма тăсăлать. Ҫуртсене ҫăл тавра вырнаҫтарнă. Пуш хирте ăҫтан ҫăл тупаҫҫӗ-и? Тӗвене пилӗк кун шыв ӗҫтермесӗр тăвар кăна ҫуллаттараҫҫӗ те килтен кăларса яраҫҫӗ, хăйсем ун хыҫҫăн пыраҫҫӗ. Тӗве ăҫта ларать – ҫавăнта чаваҫҫӗ. Ҫăлри шыв пӗтсен ҫӗннине шыраҫҫӗ. Пӗр тӗве ҫапла йăлăхсах ҫитнӗ тет. Вăл, мӗн, кунта ҫынсем валли шыв шырамалли аппарат-им? Тытать те ларать. Вăл ларнă вырăна чавса пăхать хуҫа – шыв ҫук. "Тахҫанах уяв пулманччӗ-ха", – хӗпӗртет хуҫа.

Ҫакна палăртмалла – бедуинсем какай ҫименпе пӗрех. Вӗсен апачӗ – тӗве сӗтӗнчен хатӗрленӗ юр-вар тата ҫăкăр, макарон (ăна хуларан илсе килеҫҫӗ). Какай – уявра кăна: тӗве пуссан. Анчах та ҫӳлерех ҫырса кăтартни – каллех шӳт иккен: тӗве шыв шырама тухса кайсан нихăҫан та йăнăшмасть. Ҫак чӗр чун хуҫишӗн – пур енчен те пулăшуҫă. Каҫхине тӗвесене ял йӗри-тавра тăратаҫҫӗ – ҫӗленрен сыхлама. Наркăмăш сапаканскерсем кăнтăрла ҫынсемшӗн хăрушă мар: шăтăк-ҫурăкран ҫӗрле кăна шуса тухаҫҫӗ. Сăхса ӗлкӗриччен тӗве ăна таптаса та пăрахать иккен (вăл ҫапла таран ҫивӗч тесе кам шухăшлама пултарнă?) Мăйракаллă ҫӗлен (чи хăрушши, наркăмăшӗ туххăмрах вӗлерет) ҫеҫ унăн ури айне пулмасть – тӗве ҫывăхне те, унăн ҫулӗ ҫине те пачах тухмасть иккен вăл.

## 20 долларпа – ҫурт

Ял ҫăлран 3 ҫухрăмра вырнаҫнă. Света ăнлантарнă тăрăх, ятарласа ҫапла тăваҫҫӗ: хӗрарăм кунӗпе шыв ытла нумай йăтма ан пултартăр тесе. Пӗҫерме, чей вӗретме, тасатма-тирпейлеме ҫапла кунне 30 литр ҫӗклеме вăй ҫитет вара

лешĕн. Çак вăхăтра арçын... чей ĕçсе, чĕлĕм туртса ларать. Кун пек самантра ăна чăрмантарма, ыттисен умĕнче упăшки çине сас хăпартма юрамасть хĕрарăмăн. Арçын тӳрех виçĕ хут: "Талак!" – тесе кăшкăрма пултарать. Арăмĕнчен уйрăлнине пĕлтерет ку. "Пирĕн арçынсем кăшкăрса пăхчăр-ха арăмне, тӳрех алла çатма ярса илет хĕрарăм", – култарма чарăнмасть Света. Кунта вара уйрăлнă хĕрарăм е ашшĕн килне таврăнать, е çурт туянса пурăнма пуçлать. Укçи пур: ара, упăшки парнеленĕ ылтăна вăл яланах пĕрле чиксе çӳрет. Тепĕр тесен, бедуинсен çурчĕ 20 доллартан хаклă мар. Ачисене ӳстерме пулăшать арçын. Хĕрарăмăн тепре качча тухма ирĕк çук. Вĕриленнĕ упăшки хăй мĕн туса хунине ăнланса илсен арăмĕпех тепĕр хут çемье çавăрма пултарать, анчах лешĕн малтан унăн çывăх çыннине – ашшĕне е пиччĕшне – качча тухса уйрăлмалла. "Эх, алăран алла кайрĕ ĕнтĕ вара хĕрарăм..." – Светăна пире култарма ятарласах хушнă-ши?..

## Качча тухас текенсен мĕн пĕлмелле?

Бедуин хĕрĕ качча тухасси – уйрăм калаçу. Асăннăччĕ – авланас каччă хĕршĕн хулăм укçи ырăнне тĕве сĕнет. Чи нумаййи – 15. Пĕрин хакĕ – 90-100 пин доллар. Анчах та пуш хирте куçса çӳрекенсем мĕнле пĕлеççĕ хĕрсем çинчен? 13 çула çитнĕ пике пиçсе çитнĕ шутланать. Ашшĕ ун питне паранджапа хуплать те çурт тăррине... ялав тухса çакать – çак килте хĕр пуррине пĕлтерет ку, уншăн 15 тĕве ыйтаççĕ. Вăхăт иртет – хĕр шыраса килекен çук. Арçын ялава урăх тĕслипе улăштарать. Унăн хакĕ вунă тĕвене юлнине пĕлтерет ку. Евчĕсем çаплах курăнмаççĕ-ха – ашшĕ ялава татах улăштарать: ĕнтĕ хĕре 5 тĕвепех параççĕ... Юлашкинчен çурт тăрринче хура ялав курăнса каять – хĕрне качча илекен тупăнсан ашшĕ... хăй тĕве парать.

Паранджапа хупланнă хĕре мĕнле пăхса илмелле-ха? Бедуинсем куç чун тĕкĕрĕ пулнине ĕненеççĕ. Унсăр пуçне хĕрĕн аллине тинкереççĕ – ĕçпе пиçĕхни тӳрех курăнать. Тата ура тунине куçпа хыпалаççĕ – туллиреххи ытларах килĕшет. Тĕрĕссипе, пĕр ял çамрăкĕсем ытларах хăйсен хушшинче мăшăрланаççĕ, çавна пула юлашки вăхăтра альбиноссем, алăсăр-урасăр ача нумай çуралать. Вĕсем нумай пурăнаймаççĕ, вилеççĕ. Анчах çын пурнăçран уйрăлнишĕн хурланмаççĕ бедуинсем. Юна çĕнетес тĕлĕшпе вырăс хĕрне те качча илме хирĕç мар ырăнтисем – кăвак куçлисем ытларах килĕшеççĕ-мĕн. "Пепкемсене тĕрĕстĕкел илсе таврăнасчĕ киле", – кăна илтсен шартах сикетĕп эпĕ. Ара, виçĕ хĕрпе кайнă вĕт. "Пикӳсен чĕрнисене пăх-ха, – кулать Света. – Кама кирлĕ вĕсем кунта?" Хĕрĕмсем чĕрнисене тем тăршшĕ ӳстерсе хĕп-хĕрлĕ лакпа сăрланăшăн тăван килтен пин-пин çухрăмра та пулин савăнатăп...

Сăрланасси бадавийăсемшĕн те – бедуин хĕрĕсемшĕн – ют мар-ха. Туй умĕн вĕсем кĕлеткисене хнапа сăрласа илемлетеççĕ. Вĕсемшĕн чап-чап уйăхĕ ӳт çинчи хна тĕсĕ кайса пĕтиччен тăсăлать. Хуçалăхри ĕçсене çак тапхăрта йăлтах çамрăк упăшка пурнăçлать: пĕçерет, тасатать, вырьăха пăхать... Анчах арăмĕн кĕлетки çинчи сăрă мĕнле кайса пĕтет – чап-чап уйăхĕ те вĕçленет. "Тату тумашкăн вĕрентмелле вĕсене", – шăл йĕреççĕ пирĕннисем. Çапах та кунти хĕрсем пит айван тесе шухăшлама кирлĕ мар. Сăмахран, качча тухас

хӗрӗн сывлăхне пулас хуняма мăйăр каттарса та тӗрӗслет. Катрăн-и – апла маттур, кин пулма юрăхлă. Шăлусене катса пӗтертӗн, мăйăр вара парăнмарӗ-и – апла тăк унăн ывăлне урăх хӗр кирлӗ. Çапла пулмасăр! Хӗрӗсем те аптрамаççӗ-мӗн: вӗсем çăварне малтанах катнă мăйăр чикеççӗ, унăн ванчăкӗсене пулас хунямăшне кăларса кăтартаççӗ. Вăл панине-и? Çăтса кăна яраççӗ. Качча каяс килсен темӗн те тăвăн çав...

## Ачашланма май çук

Арçынпа хӗрарăмăн савăшас умӗн юрату вăйии выляма майӗ çук – ачисемпе пӗрлех выртса тăраççӗ вӗт. Çавăнпа ачашлăх валли те, çурта çутса туйăмсене хӗртмелӗх те вырăн çук – хăмăш хыпса илсен мӗн тумалла? Çурт çунса каять вӗт! Пит ачашланса савăшас текеннисем ту хысакӗсен хушшине тараççӗ. Анчах та çӗрле унта çӗленсем сунара тухнине шута илсен...

Паллă ӗнтӗ, бедуинсем хутла пӗлмеççӗ. Ялта кам хăçан çуралнине шейх шута илсе тăрать. Унăн – темиçе арăм. Шейх тавар патне хулана çӳрет, пурин валли те туянса таврăнать. Ялти йӗркене те вăлах тытса пырать. Ĕçе пайласа пурнăçлаççӗ: пӗр йăхран тухнисем ӗмӗр тăршшӗпех ту хысакӗсен хушшинче сиплӗ курăк пухаççӗ, теприсем – çӗлен наркăмăшне, виççӗмӗшсем пахча çимӗç ӳстереççӗ. Çапла, пуш хир те çимӗç кӳрет вӗсене. Сăмах май, Египетра ял хуçалăхӗ аван аталаннă. Анчах та Нил юхан шывӗн хӗрринче пӗтӗм çимӗçӗн 5 процентне кăна туса илеççӗ. Паллах, çӗршыв халăхне тăрантарма çитмест çакă. Ыттине ют çӗртен кӳрсе килеççӗ-ши? Çук иккен – пуш хирте, хăйăр çинчех ӳстереççӗ! "Кунта килнӗ май симӗс вырăнсем асăрхамарăр-им?" – те каллех шӳтлет шăл йӗрме юратакан Светлана, те чăнах калать. Ман куç тӗлне, чăн та, ту хысакӗ çумӗнче тăлăххăн ӳсекен пӗр йывăç кăна пулчӗ...

## Укçа мӗн тума кирлӗ?

Ялтан таврăннă май Светлана панă ыйту хуравне шырарăмăр пурте – мӗн тума кирлӗ бедуинсене укçа? Çӗлен наркăмăшӗ питӗ хаклă. Хӗр ӳстерекеннисен те хулăм укçи самай пухăнать. Кăшт ура çине тăнисем хулара отель те уçаççӗ, чаплă машинăсем те пур вӗсен. Анчах укçаллисем те пуш хирте пурăнаççӗ, тӗве утланса чупаççӗ. Апла мӗн тума кирлӗ вӗсене укçа? Светлана çак ыйту хуравне пилӗк çул шыранине палăртрӗ. Эпир пӗрре кайса курнипех унăн хуравне ăçтан тупар ӗнтӗ?

## Юрату – Африкăра та юрату

"Мӗскер эсир бедуинсемпе кăна кăсăкланатăр? – терӗ черетлӗ экскурсире черетлӗ гид – Ибрагим. – Египетăн йӗркеллӗ арçыннисем пирки нимӗн те пӗлес килмест-им? Манăн, сăмахран, тӗве çук, апла мӗн, авланмалла та мар-им? Арабсен хăйсен йӗрке. Сăмахран, авланас каччăн хӗре 150 пин тенкӗлӗх (пирӗн укçана куçарсан) ылтăн туянса парнелемелле. Унсăр пуçне унăн хваттер пулмалла. Çывăрмалли пӳлӗмпе зала упăшка "тумлантарать", кухньăна – арăм тăванӗсем пулăшнипе".

Ытти мăсăльмансен пекех араб арçыннисен те темиçе арăмпа пурăнма ирӗк



пур. Анчах эволюци унта та çитнĕ-мĕн: иккĕмĕш арăма киле араб пĕрремĕш мăшăрĕ ача çуратаймасан кăна илсе пырать. "Мĕн тумалла-ха кун пек чухне манăн?" – шăпланнă вырăссене куçран пăхать Ибрагим. Паллă: пирĕннисем алăран çавăтаççĕ те кăларса яраççĕ. Çуратайманнисенчен кăна мар, ачисене алимент тӳлессинчен тарса çӳрекен – лавĕ-лавĕпе. "Урама кăларса яраймастăн вĕт, – араб пирĕн шухăша вулать тейĕн. – Хăш-пĕр çуртăн тăрри çуккине асăрханă-и тата эсир? – малалла калаçать вăл. – Кил хуçин ĕçе вĕçлемешкĕн укçи-тенки çитменнипе çыхăнман ку, çемьере татах та ывăл ӳснине кăна пĕлтерет. Налук тӳлессинчен сыхланса пирĕн патра кашни ывăлĕ валли уйрăм çурт тумаççĕ, çӳлелле кăна çĕкленеççĕ. Пĕрремĕш ывăлне авлантарсан, сăмахран, иккĕмĕш хутне хăпартаççĕ, çемьере татах та кин хутшăнсан виççĕмĕш хут çĕкленет. Çапла майпа кашни çамрăк çемье валлиех вырăн çитет. Пысăк йыш пĕрлех пурăнать. Пирĕн патра çемье йăлисене çирĕп пăхăнасси йăлана кĕнĕ. Паллах, çамрăксем инçетри хуласенче тĕпленни те пулать. Çапах та ашшĕ-амăшĕ патне вĕсен тăтăшах килсе çӳремелле".

Пире вара Ибрагим маларах пуçланă ыйту канăç памасть: юрату мĕнле-ха, юрату? "Авланма шухăш тытсан эпĕ çакăн пирки малтан çывăх çынсене калатăп. Вара анне ман валли хĕр шырама пуçлать. Тупрĕ тейĕпĕр. Эпир вĕсен килне каятпăр. Арçынсем хĕрарăмсенчен уйрăм вырнаçаççĕ. Пĕр вăхăтран анне хайхи куçланă хĕре илсе кĕреççĕ. Вăл е ман çума вырнаçать, е – хирĕç. Эпир пĕр-пĕрне сăнатпăр. Пĕр 15 минутран ашшĕ пуçне сĕлтет те, хĕр тăрса тухса каять. Эпир те, каччă енчисем, кĕçех ура çине тăратпăр. Хĕр мана килĕшрĕ пулсан эпĕ сĕтел çине ылтăн çĕрĕ е укçа хурса хăваратăп, килĕшмесен – нимĕн чĕнмесĕр тухса каятăп. Мана никам та хистемест. Чуна вăркатнă пикепе пĕр уйăх питĕ туслăн хутшăнатпăр. Çук, савăшу пирки сăмах та пулма пултараймасть – хĕрлĕх модăра-ха кунта. Пĕр чĕлхе тупсан туй пирки сăмах тататпăр.

250 хăнана яхăн чĕнетпĕр унта, икĕ кун савăнатпăр. Çакăн хыççăн çамрăк мăшăрăн пĕр уйăх килтен тухма юрамасть, çав шутра – хăнана кайма та. Тата çывăхрах хутшăнмалла. Туй ирттерме Египет çамрăкĕсене икĕ уйăх отпуск параççĕ".

## Египет майри

Араб хĕрарăмĕсем пирки хамăр йăнăш пĕтĕмлетнине палăртнăччĕ ĕнтĕ – кунта вĕсем те арçынсемпе танах вăй хураççĕ. Пичĕсене паранджапа хупласси те аваллăхра юлнă. Чăн та, арçынсем шурă çи-пуçпа çӳреççĕ, хĕрарăмсем – хулăн та хура тĕслипе. Çӳхи тата шурри витĕр кĕлетке палăрать-мĕн. Ку вара чиперуксене хăйсене те килĕшмест (пирĕннисем май пур таран уçма тăрăшнă вăхăтра араб чиперккисем "çимĕçĕсене" вăрттăнлăхра тытнине ырламалла кăнатăр: уççăн курăнманни арçынсене тата ытларах астарнине психологсем те палăртаççĕ-çке). Хулара пурнăç тата хăвăртрах аталаннине хамăр куçпа курса ĕнентĕмĕр. Хургада урамĕпе пынă май пĕр чиперук куç тĕлне пулчĕ. Пичĕ уçă, кĕлеткине шалпар та хура, анчах та хăйне питех те килĕшекен илĕртӳллĕ тумпа витнĕ. Кĕпине айккинчен çурса янă (пирĕннисем ун пеккине "глубокий разрез" теççĕ), уринче вара çип-çинçе те тем çӳллĕш кĕлеллĕ пушмак! "Вăт ку Египет майри!" – ахлатрĕç арçынсем...

## Ирхи пăшăрхану каçчен тĕтре пек сирĕлет

"Малтан Финляндие кайса çырла пухса укçа тума вĕрентрĕн, халĕ Египетра йăлт йӳнĕ тесе астаратăн", – шӳтлеççĕ ĕçре хĕрсем. Анчах кашни шӳтрех мĕн чухлĕ те пулин чăнлăх пур вĕт-ха. Унта вăй хуракан вырăссенчен кашнинченех ыйтса пĕлтĕмĕр – мĕнле майпа çакăнта çити килсе ĕç тупнă-ха?

"Турцие канма кайнăччĕ те, аниматорсен ĕçне курса анне мана: "Эсĕ лайăхрах та пултаратăн", – тесе хĕртсе ячĕ, – каласа кăтартать Мускав хĕрĕ Полина, журналистика факультетĕнче ăс пухаканскер (чăн та, икĕ çуллăха – академи курсĕсенче). Канса пĕтереймерĕмĕр – ĕçлеме юлмашкăн сĕнчĕç. Килĕшрĕм. Çул укçине, кунта пурăннине, çинине ĕç сĕнекен саплаштарать. Турцире, Египетри Шарм-эль-Шейхра вăй хутăм, халĕ – кунта. 600 доллар тӳлеççĕ. Нумай-и е сахал-и çакă – хăвăр шухăшлăр: Мускавра ку укçа икĕ хутчен ресторана кайса килме çитет". Хĕр тулăх пурнăçа кăмăллани сисĕнчĕ. Шупашкарта эпир пилĕк пинпе те уйăх пурăнма пултаратпăр, чăн та, ресторансен тĕлне те пĕлместпĕр...

Украинăран килнĕ Аньăн – хăйĕн историйĕ. Египета чирсем хăшкăлтарсах çитернипе çула тухнă-мĕн. Пĕрре каннă, тепре... Чирсем парăнма пуçланине сиссен кунтах куççах килнĕ. Украинăра медик профессине вĕреннĕскер Хургадăра косметолог пӳлĕмĕ уçнă. Шик! шăхăрса пурăнмалăх ĕçлесе илет. Сăмахран, 200 тăваткăл метр лаптăкăшлă хваттере тара илнĕ... Чăн та, халĕ пĕччен мар ĕнтĕ – вырăнти арабпа çемье çавăрнă. "Ачасем хальлĕхе аннепе Украинăра пурăнаççĕ. Шкул хыççăн ăçта каяссине: унта юлĕç-и, кунта килĕç-и – хăйсем татса парĕç. Упăшка вара – адвокат, Англире вĕреннĕ", – пирĕн чиперуксем хăй çине çӳлтен аялалла пăхма хăтланнине курса хушса хурать Аня.

Куçса килсенех çур çул тамăкри пек пурăннине пытармасть хĕрарăм: чĕлхе пĕлмен,

никама та палламан, хырăмлăх чирĕсемпе нушаланаканскер лавккара ним туянма аптранă: унти апат-çимĕç пăрăçлă-çке, ун пеккине çиеймĕн... Халĕ вырăссемпе хутшă-нать ĕнтĕ, анчах та вĕсенчен айккинерех пулмаллине те пытармасть...

Аньăпа ыттисенчен чи малтан паллашнине кура нумаях пулмасть Египетра пулса иртнĕ шăв-шавпа та кăсăклантăмăр. "Хургадăран тухса каяс шухăш та пулман, – палăртрĕ вăл. – Пăлханун чи хăрушă тапхăрĕсенче вырăнти арçын-семпе яшсем урама тухса хĕрарăмсемпе ачасене хӳтĕлерĕç: вырăс-и эсĕ, араб-и – никама та кӳрентерме памарĕç. Лару-тăру хĕрсех çитнĕ вырăнтан чи малтан пире илсе тухрĕç. Вăт çакăнта хамăрăн чиперуксемшĕн пит хĕретме тиврĕ. Араб арçыннисем хăйсен пурнăçĕсене шеллемесĕр малтан пире авто-буса лартса ăсатма тăрăшрĕç, пирĕннисем вара мăкăртатса илчĕç: "Хыçалти ларкăч çинче сиккелесе пымалла-и-ха пирĕн?"

Ку тăрăхра ĕмĕт хăвăртрах пурнăçа кĕнине сăнанине Аня та палăртрĕ. Тинĕс хĕрринче пиçĕхсе выртнă вăхăтра çакăнта пурăнма юласси çинчен ĕмĕтленме пуçланă кăна вăл – каç пулсан ĕç сĕнекен тупăннă та... "Темĕнле, Турă çывăх-нерех-ши кунта? – кулать Аня. – Кăнттаммăн каласан, ирхине кăна пуçна майкă-ча чикес килет, каç еннелле лару-тăру пачах тепĕр енне улшăнать. Чи нумаййи – икĕ-виçĕ кунран".

"Хургада тăрăх кăна Египет пирки пĕтĕмлетме кирлĕ мар, – Аня хăй çуралнă тăрăха хӳтĕлет тейĕн! – Çул айккипе çӳп-çап нумай выртать тетĕр-и? Раççейре те çавах – йывăç-тĕм хыçĕнче курăнмасть кăна. Кунта йăлт хăйăр-ха та, йăлтах ывăç тупанĕ çинчи пек. Çуртсенче каçхине çутă çутмаççĕ-и? – кулать пирĕнтен вăл. – Электричество перекетленипе пачах та çыхăнман ку. Вырăссем хваттер-ĕсенче кондиционер лартаççĕ, вырăнтисем чӳречисене çат карсан кăна çутă çутаççĕ – çакă вĕсене шăрăхран хăтăлма пулăшать. Шалу пурăнма çитет тĕк мĕншĕн тата гидра та вăй хуратăп тетĕр-и? Ара, ача-пăча анне патĕнче. Ĕç хыççăн килте мĕн туса ларас? Укçа камшăн та пулин ытлашши пулнă-им?"

Ясирăн вара лару-тăру – пачах тепĕр май: араб вырăс хĕрне качча илнĕ. Кан-ма килнĕскерне-и? Çук, каччă вырăс чĕлхине Архангельскра 9 уйăх вĕреннĕ-мĕн, пулас мăшăрĕпе унта паллашнă. Чăн та, ашшĕ-амăшĕ хĕрне инçе çĕре кăларса яма малтан шарт та март хирĕçленĕ, халĕ çулталăкра 3-4 хутчен те хаваспах канма килеççĕ. Ачапа ларакан арăмĕ – медик, анчах та Египет вырăс тухтăрĕсен дипломĕсене шута хумасть. Хăйсен çамрăкĕсен те шурă халатлисен профессине вĕренес тесен шкултах хастарлăхпа палăрмалла: чи маттуррисене кăна йышă-наççĕ çак факультета – экзаменра чи сахалли те 100-тен... 98 балл пухмалла!

"Вырăссене юрататпăр эпир, – шап-шурă шăлĕсене çиçтерет Ясир. – Чи мал-тан – эсир пире Суэцк каналне тума пулăшнăшăн. Иккĕмĕшĕ – плотинăшăн. Виççĕмĕшĕ – хĕç-пăшалпа тивĕçтернĕшĕн. Тăваттăмĕшне каламасăрах ăнла-натăр пулĕ – туризма аталантарнăшăн. Чăн та, çĕршывра пăлхану пуçлансан Раççей туроператорĕсем Египета çул хупрĕç. Сирĕннисем вара кунта пурпĕр килетчĕç – Турци урлă... Халĕ Египетра вырăссем никамран ытла канаççĕ. Чи малтан турбизнеса аталантарма кам пулăшнине пĕлетĕр-и? Французсем. Ан-чах та Египета итальянсем "уçсан" французсем тарчĕç, – чĕлхене хăйне май хуçкалать Ясир. – Иккĕмĕшсене вара нимĕçсем хăваласа ячĕç. Юлашкисен çулне вара, паллах, вырăссем хупрĕç".

## "Мамучка"

Вулакана тата мӗн кӑсӑкли каласа кӑтартас-ши тесе вӗттӗн ҫырса тултарнӑ блокнотӑма унталла та кунталла уҫкалатӑп. Акӑ, "мамучка" тени куҫ тӗлне ҫакланчӗ. Аниматор каччӑсен ушкӑнӗ хӗрӗмсемпе паллашас тӗллевпе (ара, ҫамрӑксем пӗр-пӗрин патне туртӑнаҫҫӗ ҫав ӗнтӗ) пычӗҫ те эпӗ калаҫӑва пит хутшӑнманнине кура ман енне пуҫӗсене сӗлтрӗҫ: "Юлташӑр мӗншӗн шӑппӑн ларать?" Эпӗ юлташ кӑна мар, амӑшӗ те пулнине пӗлсен чӑрсӑртараххисен пичӗсем хӗрелчӗҫ, куҫӗсем чарӑлчӗҫ: "Мамучка?!" Ҫапла тинӗс хӗрринче вунӑ кун янӑрарӗ ҫак сӑмах, ҫамрӑк арабсем манпа тӗл пулмассерен сывлӑх сунас вырӑнне алӑ сулса саламларӗҫ: "О, мамучка!" Каярахпа ҫакӑ палӑрчӗ – вӗсем амӑшӗсене питӗ хисеплеҫҫӗ-мӗн. Тинӗс хӗррине юлташӗсемпе кӑна мар, ачисемпе пыракан хӗрарӑмсем – пушшех те хисепре.

## Мӗн ҫинине кӑтарт, эсӗ кам пулнине калӑп

Тем пысӑкӑш ресторанра мӗнле халӑх ҫынни кӑна апатланмасть-ши? Кам мӗнле апат суйланине кура ӑҫтан килнине палӑртма хӗн мар. Акӑ, хӗрсем ирхине пӑтӑ, чӑмӑрла пӗҫернӗ е ӑшаланӑ ҫӑмарта йӑтса килеҫҫӗ – паллах, вырӑссем. Пӗр кӗтесре мӗн тӗрлӗ кукӑль ҫук-ши? Ахаль те йӑрӑсах мар кӗлеткене упраса эпӗ унталла ҫывхармастӑм та. Ара, отпуск хыҫҫӑн ӗҫе мӗн тӑхӑнса тухас капла? Хӑшӗ-пӗрин сӗтелӗ вара булка таврашӗпе тулсах ларатчӗ. Кока-кола йӑтнӑ хӗрарӑмсемпе арҫынсем, пикесемпе яшсем тулли кӗлеткисене силлесе иртсе каятчӗҫ те ҫав сӗтелсен хушшине вырнаҫатчӗҫ. "Анне, мӗн тӗлӗнетӗн? Тӳрех паллӑ вӗт-ха – американсем", – эпӗ тӗлӗнерех пӑхнине кура ҫутта кӑларчӗҫ мана ачамсем...

## Хӑнара лайӑх та...

Ҫӗр ҫинчи ҫӑтмах пек туйӑннӑ вырӑн та йӑлӑхтарать иккен. Кунӗпе хӗвел, тинӗс, пальма... Ялан пӗр ӳкерчӗк. Киле каяс вӑхӑт ҫитсен хаваспах пуҫтартӑмӑр чӑматансене. Анчах вырӑс "ҫӗрӗ" Египетрах пуҫланчӗ. Пӗр самолетпа вӗҫме хатӗрленекенсене темиҫе отельрен пуҫтарса тухакан автобуса кӗтсе халтан кайрӑмӑр. Кӳршӗ хӑна ҫуртӗнче каннӑ вырӑссен икӗ йӗкӗчӗ, качча тухас хӗр пек, час тапранса тухайман-мӗн. Иккӗшӗ те ӳсӗр. Черетлӗ чарӑнура каллех вӗсене кӗтсе лартӑмӑр – автобусран тухса таҫта кайса ҫухалчӗҫ. Гид пӑлханни сисӗнчӗ – самолетран юлма пултаратпӑр вӗт. Хайхисене каярахпа асӑрхаттарма пӑхрӗ те, каччӑсем пӳрнисене кӑна чармакларӗҫ: "Эсӗ хӑвӑн тивӗҫне пурнӑҫла, эпир вара кунта канма килнӗ!" Чарма пӑхнӑ савнийӗн ҫӑварне тӳрех хупларӗ каччӑсенчен пӗри: "Эпӗ юлташпа калаҫнӑ ҫӗре эсӗ, хӗрарӑм, мӗн тесе хутшӑнатӑн?" Икӗ-виҫӗ хутлӑ усал сӑмахсем янӑрама пуҫласан чӑтаймарӑм, кунта ыттисем те пуррине аса илтертӗм. Аранах кӑшт тамалчӗҫ хайхисем. Чӑн та, ман хута кӗрсе сӑмах хушакан тупӑнмарӗ автобусра...

Самолетра ку ӳкерчӗк малалла тӑсӑлчӗ. Хайхи йӗкӗтсем, тав Турра, салонра пирӗнтен чылай аяккарах вырнаҫрӗҫ-ха, хальхинче эпир Мускава ҫывхарнине... экипаж аса илтерчӗ. Египета вӗҫнӗ чух питӗ кӑмӑллӑ стюардессӑсем ҫакланнӑччӗ. Канфет та валеҫрӗҫ (кӑмӑл пӑтраннине ирттерме чухах), сӗткен те



тĕрлине сĕнчĕç. Каялла илсе таврăнаканнисем вара пылак пирки манчĕç (эпĕ, çул çинче аптраканскер, ытларах илмешкĕн шухăшланăччĕ шăпах. Шел, пулмарĕ). Çынсем "мульти" йышши сĕткенпе кăсăклансан: "Çук, паллах", – касса татрĕ стюардесса. Шупашкартан пире илме пыракан машинăна аэропортра çур кун кĕтсе ларни те кăмăла çĕклемерĕ, паллах. Шăрăх çĕртен килнĕскерсем курткăсемпе хупланса ларсан та ниепле те ăшăнса çитейместпĕр вĕт... Тăван хула енне тапранса Мускав урамĕсенче хĕрлĕ те сарă тумлă йывăçсене курсан кăна тинех чун кĕчĕ. Киле, хăвăртрах киле çитесчĕ!..

ХЫÇÇĂМАХ. Хĕрлĕ тинĕс хĕрринче ĕмĕтленни хăвăртах пурнăçа кĕрет тени – пуш сăмах мар иккен. "Çитес çул татах та аяккарах кайса курмалăх май пултăрччĕ, ма шалăва ÿстермеççĕ-ши?" – çĕмĕрнĕччĕ пуçа хĕвел питтинче аяка апла та капла çавăркаласа выртнă май. Мĕн тетĕр? Çак ырă хыпарпа кĕтсе илчĕç ĕçре. Çын ăмсанмалăхах ÿсмен те ĕç укçи, юрĕ ĕнтĕ, ячĕ лайăх.

"Эпир Хургадăра хваттер туянмах шухăшларăмăр", – çитрĕ хыпар отельре пирĕнпе юнашар пÿлĕмре пурăннă Тверь арçыннипе хĕрарăмĕнчен. Савăнтăмăр. Кам пĕлет, тен, пурăна киле эпир те куççах кайăпăр тинĕс хĕррине? Ав, хĕрĕмсем патне тăтăшах смс килет арабсенчен: ĕçлемешкĕн пыма чĕнеççĕ.

Шел, пăшăрхантараканни те тупăнчĕ çак кунсенче. Архангельск майри Ясира пăрахса килне пуçĕпех таврăннă-мĕн (çыхăну тытсах тăратпăр та, çак хыпара пирĕнпе пайларĕ арçын). Питĕ шăрăх вăхăтра арăмĕ икшер уйăх Раççейре пурăнни çинчен каланăччĕ-ха вăл, халĕ тата тем киксе тухнă ĕнтĕ? Çемьере ача ÿсет те, ăна ашшĕсĕр хăварасшăн мар курăнать арçын. Хĕлле, туристсен йышĕ кăшт чаксан, мăшăрĕ патне çула тухасшăн Ясир, Çĕнĕ çула Архангельскра кĕтсе илесшĕн...

Мĕнех, лайăх шухăшпа вĕçлер çул çÿрев историне. Хальлĕхе вара çанă тавăрар та черетлĕ тинĕс хĕррине çула тухмашкăн... нухрат пухма пуçлар.

*Автор сăн ÿкерчĕкĕсем*

## ТĔРĔ ПУЛТĂР ПАРНЕ






2

# 2012 çулта пичетленнĕ хайлавсем

## ТĂВАН АТĂЛ

| ПРОЗА, ДРАМАТУРГИ | Журнал №-сем |
|---|---|
| Агивер Хветĕр. Ыврăç тăпра | 11 |
| Гордеев Денис. Укçа кимми. Повесть | 4 |
| Елтов Виталий. Кĕтмен туй. Повесть | 7 |
| Емельянов Анатолий. Икĕ шăпа. Калав | 1 |
| Иовлев Валерий. Ыйткалакан. Киноповесть | 11 |
| Ишимбай Микул. Ачалăхран çитнĕ ахрăм. Повесть | 5 |
| Ишимбай Микул. Йӳçĕ телей. Калав | 9 |
| Кабаков Геннадий. Пурнăç хакĕ. Калав | 6 |
| Казанов Аркадий. Юр çийĕнчи типĕ чечек. Повесть | 12 |
| Карпов Владислав. Кулăшла калавсем (Каçхи мыскара; Кушак кулли; Шукăль Шуркка; Кăвак куçлăх) | 9 |
| Константинов Валентин. Хĕрлĕ автан ташлаттарнă ӳкерчĕк. Повесть | 6 |
| Кошкин-Кервен Василий. Икĕ калав. (Каçхи кĕлле каяс умĕн; Çăла пăрахнă çивĕч çĕçĕ) | 1 |
| Краснов Георгий. Хĕрлĕ тюльпан. Повесть | 2 |
| Кузьмин Владимир. Чĕрĕлĕх тункатисем. Калав | 8 |
| Максимов Геннадий. Атăлти хĕрессем. Повесть (1-мĕш пайĕ) | 10 |
| Муравьев Валерий. Кашамансен каçĕ. Детектив | 3 |
| Мустаева Елена. Виçĕ калав (Ĕненӳ; Кӳршĕ Мархва; Шак-шак-шак) | 4 |
| Николаев Владислав. Мерчен телей чурисем. Драма | 11 |
| Павловская Ангелина. Сапаскар хĕрĕ. Повесть | 7 |
| Петровская Нелли. Чыс. Повесть | 8,9 |
| Русаков Аркадий. Тыткăнра. Детектив | 5 |
| Таллеров Лаврентий. Ял хыпарĕсем. Повесть | 3 |
| Тарасов Арсений, Туркай Ольга. Вĕçсе иртеççĕ кайăксем. Драма | 12 |
| Филиппова Лидия. Икĕ новелла. (Аннесем кăна ăнланĕç; Улмуççи тек çеçкене ларман...) | 10 |
| Хмыт Анатолий. Леш тĕнчерен. Роман. (Вĕçĕ) | 1 |

| ПОЭЗИ | |
|---|---|
| Айдаш Юрий. «Паян – классикăлла хĕл кунĕ...» | 12 |
| Айхи Геннадий. Хусан, Ăслăлăх сачĕ. Сăвă | 9 |
| Андреев Михаил. Кĕр каçĕ асра паянччен. Сăвăсем | 11 |
| Антонов Василий. Пире вăй парĕ пĕрлĕх. Сăвăсем | 5 |
| Асамат Светлана. Чăваш тумĕ - халăх мулĕ. Сăвă | 6 |

| | |
|---|---|
| Афанасьев Порфирий. Çумра ытарайми туссем. Сăвăсем | 2 |
| Афанасьев Порфирий. Ачалăх туртать- кунта. Сăвăсем | 12 |
| Борлен Борис. Чун ăшши çитмест пире. Сăвăсем | 10 |
| Воробьев Алексей. Тăпра хăвачĕ юнăмра. Сăвăсем | 10 |
| Дворов Николай. Хавхаланмасăр чунăм чăтаймасть. Сăвăсем | 12 |
| Дмитриев Аристарх. Швеци поэчĕсен сасси | 6 |
| Исмуков Николай. Ыталаса илес килес куна. Сăвăсем | 3 |
| Карим Мустай. Сăвăсем | 8 |
| Карягина Марина. Тĕнче пăтравĕ – тарасам çинче. Сăвăсем | 12 |
| Кибеч Анатолий. Ташлать чăваш кăвар çинче. Сăвăсем | 8 |
| Кошкин-Кервен Василий. Алтăр Çăлтăр. Сăвă | 8 |
| Кошкин-Кервен Василий. Çĕнĕ çул çуни. Сăвă | 12 |
| Матвеева Галина. Чăваш. Поэма | 10 |
| Пулар Микул. Çырăнать йĕркем халь шăкăр... Сăвăсем | 2 |
| Растворцев Андрей. Ĕмĕрхи çулăм умĕнче. Сăвăсем | 1 |
| Регистан Гарольд. Шуршăлта çуралнă шухăш-кăмăл | 8 |
| Родионов Виталий. Ахаль-и-мĕн чăваш вăл çăра юнлă? Сăвăсем | 10 |
| Савельев-Сас Александр. Пуçăма таятăп ăшшăн. Сăвăсем | 9 |
| Смолин Анатолий. Эй, чăнлăх чанĕ... Сăвăсем | 4 |
| Смолина Людмила. Пурăнмашкăн эп васкарăм. Сăвăсем | 1 |
| Çăлкуç Петĕр. Сăвăсем | 5 |
| Çеçпĕл Мишши. Куçăм умĕнче Чăваш çĕрĕ. Сăвăсем | 11 |
| Тарават Валентина. Сăвăсем | 4 |
| Теветкел Николай. Сонетсем. Сăвăсем | 7 |
| Теветкел Николай. Вилĕмсĕр вĕçев. Сăвă | 8 |
| Ухсай Яков. Андриян Николаева. Сăвă | 8 |
| Федорова Любовь. Çитмĕл те çичĕ тĕс. Сăвăсем | 3 |
| Хусанкай Петĕр. Космонавт амăшне. Сăвă | 8 |
| Челпир Геннадий. Сăвăсем | 6 |
| Шемекеев Виталий. Куçсем çын ыйтнине кураççĕ. Сăвăсем | 2 |
| Шурçăл Лидия. Сăвăсем | 6 |
| Элментей Энтри. Асам унки. Сонет кăшăлĕ | 4 |
| Энтип Василий. Ăсталăх тӳпинчен... Сăвăсем | 1 |

ТĔПЧЕВ, ТИШКЕРӲ

| | |
|---|---|
| Абрамов Валентин. Чăваш прозин 2011 çулхи каçалăкĕнче шухăша кайни | 5 |
| Артемьев Юрий. Уçă çырăвăн сыватакан сипечĕ | 1 |
| Артемьев Юрий. "Çил арманĕ çине сикрĕм" | 2 |
| Артемьев Юрий. Чăн поэт | 3 |
| Артемьев Юрий. Хальхи кунсем капла-ха, килес кунсем мĕнле-ши? | 5 |
| Иванова Елена. Алексей Воробьев сăвăç пурнăçĕн чăнлăхĕпе илемлĕ сăнарлăхăн çыхăнăвĕсем | 10 |
| Кошкин-Кервен Василий. "Нарспи" поэмăри кăмăл-сипет ыйтăвĕ | 7 |
| Федоров Георгий. Çĕр çăлкуçлă чун юрри | 2 |

Яковлев Юрий. "Мухтав та чап илес шутпа кĕмерĕм поэзин аслă уй-хирне..." 6

ЮБИЛЕЙ. АСА ИЛŸ. АСТĂВĂМ
Абрамов Валентин. Камитсем халăха савăнтараççĕ (Анатолий Чебанов çуралнăранпа – 75 çул) 2
Алендей Василий. Манăçа тухми тусăм (Куçма Чулкаç çуралнăранпа – 95 çул) 6
Атаманова Елена. Юламанăн Шурсухалĕ (Александр Савельев-Сас çуралнăранпа – 80 çул) 9
Бурнаевский Валентин. Хусанкай, Алка тата ыттисем... 11
Гордеев Денис. Çывăх юлташа аса илнĕ май (Виталий Шемекеев çуралнăранпа – 75 çул) 4
Ефимова Александра. Степан Аслан пултарулăхĕ çинчен (Çыравçă çуралнăранпа – 95 çул) 11
Енĕш Виталий. Калама та çук ырă-çке Таçук... 12
Иванов Ипполит, Станислав Убасси. Ял пурнăçне лайăх пĕлнĕ (Анатолий Емельянов çуралнăранпа – 80 çул) 1
Игнатьева Ирина. Поэт несĕлĕсем, шăпи, элчелĕ... 6
Исемпи Альбина. Тарăн тымар (Сергей Полкачев çуралнăранпа – 60 çул) 9
Ишентей Николай. Униче картинчи кĕмĕл сас... (Федор Павлов çуралнăранпа – 120 çул) 9
Карпов Владислав. Уйкас ялĕн Кĕлпики (Елена Шорникова çуралнăранпа – 100 çул) 5
Кервен Василий, Теветкел Николай. "Чыс" повеçĕн сикчевлĕ çул-йĕрĕ 8
Кириллова Надежда. Куççуль витĕр кулма (Кирилл Кириллов çуралнăранпе – 50 çул) 1
Кириллов Геннадий. "Ĕмĕр пурăнассишĕн..." (Ефим Никитин (Кĕлпук мучи) çуралнăранпа – 100 çул) 3
Кошкин-Кервен Василий. "Арапуçăн çĕрĕ хĕсĕр мар" (Николай Исмуков çуралнăранпа – 70 çул) 3
Кошкин-Кервен Василий. "Ман хамăн пурăнас йĕрке..." (Петĕр Çăлкуç çуралнăранпа – 60 çул) 5
Кузьмина Ирина. Ентешĕсен хисепĕ (Порфирий Афанасьев çуралнăранпа – 70 çул) 12
Лисина Ева. Г.Айхине аса илсе 2
Малов Аркадий. Илле Тукташпа пĕрле 7
Никитин Ефим. Пурнăç çулĕ такăр мар 3,4,5
Портнов Константин. Тăвалла пулсан та малалла (Г.Н.Волков академика аса илсе) 11
Сементер Юрий. Пичетлĕ хут (Валентин Бурнаевский çуралнăранпа – 85 çул) 11

Силэм Юлия. Пĕртен-пĕр тĕлпулу
(Александра Лазарева çуралнăранпа – 95 çул) 5
Скворцов Григорий. Тĕпчевĕсем кивелмен (Тимухха Хĕветĕрĕ çуралнăранпа – 125 çул) 3
Тарасов Арсений. Ăна аса илсен чун çуталать
(Кирилл Кириллов çуралнăранпа – 50 çул) 1
Уткин Геннадий. Праски инке ашшĕ. (Анатолий Чебанова асăнса) 2
Юман Анатолий. Аса илӳсем
("Отецă" (Н.Евствфьев); "Классик" (К.Чулкаç);
"Ман çĕршыв суранĕ" (В. Урдаш); Алексей Талвир) 10

ШУХĂШ
Андреева Антонина. Йăнăшсене çырса иличчен... 11
Артемьев Юрий. Манкрут çинчен шухăшланă май 6
Виноградов Юрий. Орфографи: таврăну саманчĕ иртсе кайрĕ 6
Гордеев Денис. Тĕрĕс калаçар та тĕрĕс çырар-ха 3
Енĕш Виталий. Камсем пăсаççĕ чĕлхемĕре? 6
Лисина Ева. Библи вакланă сăмахсене йышăнмасть,
е "сăх сăх" тени мĕн вăл 2
Максимов Геннадий. Вăхăт çитĕ... 11
Матвеева Галина. "Чĕлхемĕре çăлатпăрах!" 3
Фомина Вера. Чан çапма вăхăт мар-и? 5
Яковлев Юрий. Наци ыйтăвĕ тата шӳт 9
Яковлев Юрий. С.Ялавинăн "Çул çинче" калавĕ 12

ЭТКЕР
Аслан Степан. Чиперкке. Калав.
Çыравçă хăй çинчен; Çыравçăна аса илнинчен 11
Лазарева Александра. Тăван çăлкуç. Калав 5
Львов Петр. "68-ра шыратăп". Калав 9
Митти Георг. Ямбсем. Сăвăсем
Петров-Тинехпи Михаил. Хусан тутарĕсем –
Атăлçи пăлхарĕсен тăхăмĕсем 9
Эллиев Ехрем. Шанмалăх пур-и? Уçă çыру - чăваш писателĕсем патне вулакантан 1
Ялавин Сергей. Çул çинче. Калав 12

СУНТАЛ
АВТОГРАФ
**(Ярăма Надежда Осипова ертсе пырать)**
ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Ева Лисина:
Тăван чĕлхе тухья мар, арчара упраймăн 1
Чăваш халăх поэчĕ Порфирий Афанасьев:
Çынлăхпа чунлăха çухатас марччĕ 2

Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ Раиса Полякова:
Юратнă ĕçпе пурăнакансем телейлĕ теççĕ 3
РФ профессилле аслă пĕлĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ Юрий Артемьев:
Чун-кăмăл апатне техĕмлĕ пĕçересчĕ 4
ЧР тава тивĕçлĕ художникĕ Петр Пупин:
Кашни ĕçĕн хăйĕн философийĕ пур 5
Казах культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Иосиф Трер:
Театр вăл – вăй(ă). (Татьяна Ильина калаçнă) 6
Чăваш халăх артисчĕ Иван Христофоров:
Кĕвви те, сăмахĕсем те чĕрене пыччăр 7
Виталий Адюков юрăçă: Юрă çын чунĕшĕн асамлă эмел пултăр 8
РФ Патшалăх премийĕн лауреачĕ Николай Казаков:
Виçĕ нота çырăнсан та чун çĕкленет 9
XXX-мĕш Олимп вăййисен бронза призерĕ Татьяна Архипова:
Кашни çитĕнӳ атте-анне пехилĕпе тата тарпа туптанать 10
Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ Геннадий Кириллов:
Кашни сăнар чуна çывăх, пукани те хаклă 11
Виталий Родионов профессор:
Халăхăмăр, эсĕ çеç вилĕмсĕр пулсам! 12

ӲНЕР
Алексеев Георгий 8
Васильев Сергей 7
Емельянов Виталий 3
Карачарсков Николай 10
Матросов Юрий 2
Миттов Анатолий 12
Петров Петр 11
Романов Вячеслав 6
Сахарова Елена 4
Сымкин Петр 5
Фомиряков Георгий

ÇЕМЬЕ ВУЛАВĔ
Зайцев Алексей. Пĕррехинче, утă уйăхĕнче... Калав 6
Кадкин Лев. Виçĕ калав
(Кăшелейкка хĕрринче; Кукăр ура кăвакал; Хĕрлемес) 9
Казанов Аркадий. Икĕ калав (Сивĕ пӳрт; Ан макăр, Хветура) 8
Кириллова Валентина. Калавсем (Анне чĕри;
Амăшне кĕтсе илĕç-ши?; Çулсем иртсен те лăпланмасть чĕре) 4
Кириллова Валентина. Виçĕ калав
(Савăнăç куççулĕ; Чăн-чăн юлташ; "Ывăлун ачи, пăхса ӳстер...") 11
Кожевникова Алина. Амăшне çухатнă хыççăн. Калав 2
Константинов Валентин. Тăвайкки. Калав 10

Лисина Ева. Çăкăр чӗлли. Калав 1
Никонорова Анна. Утмăлтурат. Калав 1
Петров Василий. Вата улмуçси. Калав 7
Сарине Лидия. Пӗр палатăра. Калав 12
Тарават Валентина. Виçӗ калав
(Аншарли; Итлемерӗм аннене; Чарусăр чӗре) 3
Эльмен Улькка. Ватăлсан. Калав 2

АЧАСЕМ ВАЛЛИ
Афанасьев Егор. Сăвăсем. 10
Исемпи Альбина. Калавсем (Ай-ай-ай, ку-ку!; Çăлтăр пуç;
Шурă "пушмаклă" Улайкка; Анне ăшшиллӗ Кӗлнисса) 2
Ишентей Николай. Калавсем (Шăллăма утма вӗрентни;
Тетте Пакша; Йăлтăркка калушпа типтерлӗ Алюш) 6
Павлов-Вэскер Сергей. Шупашкар кулачӗ. Калав 11
Серебрякова Надежда. Виçӗ ылтăн çăмарта.
Туркка халăх юмахӗ 8
Садал Светлана. Калавсем (Хуран кукли;
Сире Шупашкар хапхинчен кӗртеççӗ-и?; Кӗтӗве хирӗç тухсан) 5
Силпи Надежда сăввисемпе кӗвӗленӗ юрăсем 9
Сорокина Людмила. Сăвăсем 4
Степанов Владимир. Эксклюзивлă сăвăм. Калав 7
Степанов Илья, Федоров Владимир кӗвӗленӗ юрăсем 3
Сенькова Анастасия. Кӗске калавсем 12
Ытарай Николай. Юмахсем (Юр мучи; Эх-хе-хей; Хыткай; Юркăш) 1

КАШНИ ÇЫН – ХĂЙ ТӖНЧЕ
Власова Роза. "Хапхапа чăлан алăкӗ çине ӳкереттӗм" 1
Кошкин-Кервен Василий. Артистсене турттарнă ямшăк 9
Кошкин-Кервен Василий. "Çул хыççăн çул, юлташăм, иртӗ..." 11
Петрова Валентина. Чăваш чунлă ертӳçӗ 8
Тарасов Арсений. Тăван ялшăн савăнатăп 5
Фуфаева Ирина. Илеме иленнӗ ертӳçӗ
(Аркадий Айдак 75 çул тултарнă май) 6
Янгер Николай. Тараватлăн кӗтет униче... 10

ЁМӖР САККИ
Власова Роза. "Кăвак тӳпе, хура çӗр, çăлтăрсемпе хӗвел те..." 2
Власова Роза. Варкăш çил эсӗ (Чăваш халăх артисчӗ
Светлана Михайлова-Ефимова çуралнăранпа – 85 çул) 3
Кошкин-Кервен Василий. Самана çынни (Чăваш халăх художникӗ
Владимир Агеев çуралнăранпа – 80 çул) 4
Уткин Геннадий. Улпут Ехвинӗн пурнăçӗпе вилӗмӗ 7

Ырьят Анатолий. Чĕмпĕр тăрăхĕн хастарĕ
(Анатолий Юман çуралнăранпа – 80 çул) 10
Яковлев Юрий. "Пуçхĕрлĕ тăрăр!"
(Петĕр Ялкир çуралнăранпа – 90 çул 2

ЧУН КИЛЕНĔÇĔ
Багадерова Валентина. "Ĕмĕт-шухăша пурнăçа кĕртме Турă çул уçса
парать..." (Валентина Телей юрăç çинчен) 3
Кошкин Василий. Кил илемĕ – килĕшӳ
(Виталий Енĕш çыравçă кил-йышĕ çинчен) 8
Николаева Елена. "Сăввăмсем – çĕр çитмĕл туйăм сассисем"
(Юрий Сементер поэт çинчен) 7

ЧĂВАШ ЮРРИ–ЧĔРЕ СУРИ
Кошкин-Кервен Василий. Юрăпа юрама юратать.
(Юрий Кудаков çуралнăранпа - 70 çул). Хура хурăн. Юрă 10
Сенькова Анастасия. "Ах, аннеçĕм, анне" 1
Урташ Валентин, Сергеев Александр.
Кăмăлăрсем ылтăн пулнăран. Юрă 4

"КАПКĂН" КĔТЕСĔ
Алендей Василий. Çул çӳревçĕ-кутамкка 8
Казанов Аркадий. Пурăнма пĕлет; Уй урлă куç. Калавсем 11
Казанов Аркадий. Икĕ калав 9
Карай Николай. Паллашу 5
Левтина Марье. Эрне кун – уяв кун 6
Мальцев Геннадий. Меслет 7
Маяксем Леонид. Чăваш шăпчăкĕ 1
Маяксем Леонид. Ват хусах юрри 6
Сарине Лидия. Арçынсене юратмалла. Калав 3
Суйманов Н. Пыйтă ĕçсĕр юлни. Памфлет 10
Чепунов Роман. Кĕрӳпе хуняма. Калав 2
Цветкова Галина. Варвари 4

СТАТЬЯСЕМ. ТĔРЛĔРЕН
Алмантай Владимир. Мурза йăхĕ 7,8,9
Аксар Сантăр. Чăнлăх, чун, илем – тĕп виçесем 7
Арти Рита. Пальма, хăйăр та тĕве – чăваш хĕрĕн асĕнче 11,12
Багадерова Валентина. Вулавăш вучахĕ сӳнмест-ха 11
Власова Роза. Музей алăкĕ уçăлĕ-ши? 4
Кĕнеке - халăхсен туслăхĕн кĕперĕ. 4
Кошкин Василий. Хисеп туса, сума суса (Александр
Артемьева асăнса) 9
Чăваш халăх кун-çулĕн хăш-пĕр саманчĕсем 10
Чĕлхе – халăх пуянлăхĕ, унпа уйрăм çынсен хуçаланмалла мар
("Çавра сĕтел") 4
Яковлев Юрий. "Юратупа илем ачисене пурăнма вырăн хатĕрлесчĕ!.." 3




1-МӖШ ХУТ ПЛАНӖ




2-МӖШ ХУТ ПЛАНӖ




«Сунтал» (Ялав) Чӑваш Республикин информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министерстви пулӑшнипе тухса тӑрать.

# ТĂВАН АТĂЛ

ЛИТЕРАТУРĂПА
КУЛЬТУРА
ТАТА ИСКУССТВО
ЖУРНАЛĔ

2012 ▪ 12

Индекс 11529
Хакĕ ирĕклĕ